

# АЧА-ПĂЧА БИБЛИЙĔ

# АЧА-ПӐЧА БИБЛИЙӖ

**Библи куҫарӑвӗн институчӗ**
**Мускав 2005**

*Шупашкар тата Чӑваш Митрополичӗ Варнава пиллӗхӗпе*

# АЧА-ПӐЧА БИБЛИЙӖ

## Ӳкерчӗклӗ Библи калавӗсем

Пухса хатӗрлекенӗсем: Борислав Арапович тата Вера Маттелмяки
Куҫаруҫи: Петр Яковлев
Турсӑмахлӑх редакторӗсем: Наталья Манзиенко тата Наталья Мовлева
Сӑмахлӑх редакторӗ: Аристарх Дмитриев

ISBN 5-93943-076-7

Ӳкерчӗксемпе усӑ курма ирӗк панӑ:
© Standard Publishing. Used by permission.
© United Bible Societies, 1994.
© 1999 Corel Corporation, DR7-280G586302.
© Palphot, Herzlia, Israel.
© Pictorial Archive Near Eastern History, est., Israel.
All rights reserved.

©Библи куҫарӑвӗн институчӗ, Мускав 2005

# К ЧИТАТЕЛЯМ

Бывают в жизни каждого человека, и взрослого и совсем юного, моменты, когда он особо нуждается в поддержке. Часто это связано с испытанием, которое посылает ему Господь, а иногда – с необходимостью принять правильное и ответственное решение, сделать верный выбор. И не всегда даже у самых близких людей находятся слова, способные утешить маленького человека, поддержать его. И вот Слово Божие помогает в таких обстоятельствах не только обрести внутреннее равновесие, но и почувствовать, что Господь рядом, найти силы противостоять злу, устоять в искушениях. Хочется верить, что *Библия для детей* многим поможет сделать *первый шаг* в деле изучения Священного Писания, за которым последуют *другие шаги*, более *взрослые*, которые сделают чтение Библии делом всей жизни, а саму жизнь осмысленным исполнением Заповедей Божиих.



*ПАТРИАРХ МОСКОВСКИЙ И ВСЕЯ РУСИ*

# ДОРОГИЕ БРАТЬЯ И СЕСТРЫ!

Вы держите в руках издание *Библии для детей*, которая впервые выходит на родном для чувашского народа языке. Признавая некоторые несовершенства в переводе на чувашский язык для понимания детей, все же хочется отметить, что Священное Писание становится доступней для всех читателей – как взрослых, так и подрастающего поколения.

Невзирая ни на какие трудности, библейская работа будет вестись и дальше – для постепенного очищения перевода от присущих ему некоторых погрешностей.

Примите, дорогие братья и сестры, этот плод усилий переводчиков, и пусть издание *Библии для детей* найдет достойное место в городских и сельских школах, библиотеках, приходах, а также в домах наших верующих, и принесет в сердца юных читателей свет веры, мира и любви.



*МИТРОПОЛИТ ЧЕБОКСАРСКИЙ И ЧУВАШСКИЙ*

# УМСӐМАХ

Хаклӑ вулакансем!

Сирӗн аллӑрта – *Ача-пӑча Библийӗн* чӑвашла куҫарнӑ кӑларӑмӗ. 1983-мӗш ҫулта ҫак кӗнекен пӗрремӗш кӑларӑмӗ вырӑсла тухнӑ. Ҫав вӑхӑтранпа ӑна 28 чӗлхене куҫарса пичетленӗ, кӗнекен пӗтӗмӗшле тиражӗ вара ҫичӗ миллион ҫурӑ экземпляра яхӑн.

Малтанах *Ача-пӑча Библине* ятарласа ҫамрӑк вулакансем валли тесе хатӗрленӗччӗ, анчах та ӑна ҫитӗннисем те кӑмӑлласах вуланине пӗлтӗмӗр. Ҫавӑнпа та 1990-мӗш ҫултан пуҫласа тӗрлӗ ҫулхи вулакансем валли ҫӗнӗ хушӑмсем кӗртрӗмӗр. Христос Ҫурални икӗ пин ҫул ҫитнине халалланӑ вырӑсла юбилей кӑларӑмӗ валли пӗтӗм текста ҫӗнӗрен редакцилерӗмӗр. Чӑвашла куҫарӑва ҫак ҫӗнӗрен редакциленӗ *Ача-пӑча Библийӗ* тӑрӑх тунӑ.

Библи калавӗсене вулама пуҫличчен Библи ҫинчен кӑштах каласа хӑварар-ха. Библие час-часах кӗнекесен Кӗнеки теҫҫӗ. Мӗншӗн-ши?

Чи малтан, тӗп шухӑшӑмӑра палӑртар: Библи ахаль кӗнеке кӑна мар. Вӑл – ҫынсене каланӑ Турӑ Сӑмахӗ, ҫавӑнпа та Библие Сӑваплӑ Ҫырни теҫҫӗ. Паллах, кунашкал калани Библие ҫырас ӗҫе ҫын хутшӑнман тенине пӗлтермест. Ӑна Турӑ Сывлӑшӗн хӑвачӗпе хавхаланнӑ пророксем, псалом хывакансем, апостолсем ҫырнӑ... Ҫавӑнпа та халӗ, Библие вуласан, эпир Турӑ уҫса панӑ вӑрттӑнлӑха кӑна мар, тахҫан пурӑннӑ ҫынсен сассине те илтетпӗр. Вӗсем Турӑ уҫса панӑ Сӑмаха ӑша хывнӑ, пире валли упраса хӑварма пултарнӑ. Библире хатӗр хуравсем ҫук, анчах та унта ҫынпа Турӑ хушшинчи хутшӑнусем ҫинчен чи кирлине каланӑ. Турӑран пӑрӑннӑ ҫын мӗнле ҫул-йӗрпе Турӑ патне тавӑрӑнма пултарасси ҫинчен те Библире ҫырнӑ.

Иккӗмӗшӗнчен, пӗтӗм тӗнчере Библие ытти кирек епле кӗнекерен те ытларах вулаҫҫӗ, куҫараҫҫӗ. Кӗнеке пичетлемелли станок шухӑшласа кӑларсанах унпа чи малтан Библие пичетленӗ. Халӗ ӗнтӗ тӗнчере сайра пӗр инҫет кӗтессенче кӑна Библи ҫинчен пачах та нимӗн те илтмен ҫынсене тӗл пулайӑн. Библие

пĕтĕмĕшле е пайăн-пайăн питĕ нумай чĕлхене куçарнă. Христиансем Библире хăйсен ĕненĕвĕн çăлкуçне тупаççĕ, чун-чĕмпе епле пурăнмаллине те Библирен вĕренеççĕ. Ĕненмен çынсем те Библи сюжечĕсемпе тата сăнарĕсемпе усă кураççĕ. Кирек епле музейра та эпир Библи темисемпе ăсталанă ӳкерчĕксем, скульптурăсем куратпăр. Вĕсенче Авраама, Давида, Таса Хĕре Марияна, Христоса сăнарласа кăтартнă. Библирен пирĕн тăван чĕлхемĕре чылай сăмах кĕрсе юлнă: ангел, пророк, чиркӳ, хĕрес т. ытт. те.

Виççĕмĕшĕнчен, чăн та, кĕнекесен Кĕнеки – Библи – тĕрлĕ вăхăтра çырнă темиçе теçетке кĕнекерен тăрать. Калăпăшĕпе вара Библи тан мар икĕ пая пайланать – Авалхи Килĕшӳ тата Çĕнĕ Килĕшӳ.

Авалхи Килĕшӳ кĕнекисене Христос Çураличчен чылай малтан авалхи еврейла, хăш-пĕр пайĕсене арамейла çырнă. Авалхи Килĕшӳ çут тĕнче пуçланса кайнинченех тытăнать. Унта Турă тĕнчене тата этеме епле пултарни çинчен, этем Турăран пăрănса кайса хăйĕн пурăнăçне Унсăрах майлаштарса пырасшăн пулни çинчен каласа кăтартнă. Çапах та Турă çынсене юратма та, вĕсемшĕн тăрăшма та пăрахман. Хăйне тархасласа чĕннине Вăл ялана илтнĕ. Çĕр çинче пурăнакан мĕн пур халăхран Вăл пĕрне – Израиль халăхне – суйласа илнĕ те унпа килĕшӳ тунă. Турă суйласа илнĕ халăхăн историйĕ Авалхи Килĕшĕвĕн тĕп теми пулса тăрать те.

Авалхи Килĕшĕве тĕрлĕрен кĕнекесем кĕреççĕ. Пĕрисенче Израиль историйĕ çинчен, унти çулпуççемпе пророксем çинчен, ытти халăхсемпе авалхи паллă ĕçсем çинчен каласа панă. Унашкаллисене историллĕ кĕнекесем теççĕ. Теприсенче – пророксен кĕнекисенче – пророксем хĕрӳллĕн питлени тата малашлăхра мĕн пуласса пĕлтерни тĕп вырăн йышăнать. Пророксем халăха Турă умĕнчи шанчăклăха упраса хăвармашкăн чĕннĕ, малашлăхра пулса иртес тĕлĕнмелле ĕç-пуççем çинчен каланă. Авалхи Килĕшӳре сăвăлла çырнă кĕнекесем те пур, тĕслĕхрен, кĕлĕ юррисен кĕнеки Псалтирь. Хăш-пĕр кĕнекесенче, сăмахран, Ытару кĕнекинче, эпир авалхи ăсчахсем каланисемпе паллашатпăр.

Авалхи Килĕшĕве темиçе ĕмĕр хушши тĕрлĕ автор çырнăран унти кĕнекесем чылай чухне пĕр-пĕринчен уйăрăлса тăраççĕ.

Апла пулин те вĕсене пĕр тĕп шухăш шăнăрласа тăрать: çын хăй Турăран пăрăнас темесен, Турă çынна нихăçан та пăрахмасть.

Çĕнĕ Килĕшĕве Христос Çуралнă хыççăн, пĕрремĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче çырнă. Çĕнĕ Килĕшӳри ĕç-пуççемпе танлашма пултараканни унччен те, ун хыççăн та пулман. Унта Турă Ывăлĕ Иисус Христос çурални çинчен, Турăшăн ĕçлени çинчен, Вăл вилни тата чĕрĕлсе тăни çинчен, Вăл никĕсленĕ Чиркĕвĕн малтанхи утăмĕсем çинчен çырса кăтартнă. Çак ĕçсен тĕп пĕлтерĕшĕ пирки Иоанн евангелист çапла каланă: «Тĕнчене питĕ юратнăран Турă Хăйĕн пĕртен-пĕр Тăван Ывăлне панă. Çакна Вăл ĕненекенĕсем ан пĕтчĕр тесе, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулччăр тесе тунă» *(Иоанн 3:16)*.

Çакăн çинчен пĕлтерекен хыпар чăн-чăн Ырă Хыпар пулнă. Грек чĕлхинчи «Евангелие» сăмах Ырă Хыпар тени пулать. Çĕнĕ Килĕшĕвĕн малтанхи тăватă кĕнекине çапла ят панă та. Пĕтĕм тĕнчери христиансемшĕн вĕсем тĕп кĕнекесем пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсенче Иисус Христосăн çĕр çинчи пурăнăçĕ çинчен çырса кăтартнă, Унăн вĕрентĕвĕ çинчен каласа панă. Вĕсене Матфей, Марк, Лука тата Иоанн евангелистсем çырнă. Тепĕр кĕнекине те, Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ ятлине, Лука çырнă. Унта малтанхи христиансем çинчен çырса пĕлтернĕ. Тĕрлĕ хуласемпе çĕр-шывсенче Христоса ĕненессин вăрлăхне акса, вĕсем пĕтĕм тĕнчери Чиркĕве епле йĕркелесе яни çинчен каласа панă.

Унсăр пуçне Çĕнĕ Килĕшĕве Павел апостолпа ытти хăш-пĕр апостолсем малтанхи христиансем патне янă Çырусем кĕреççĕ (апостолсем – Иисус Христосăн вĕренекенĕсем, вĕсене Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳремешкĕн Вăл Хăй янă). Çав çырусенче ĕненӳ пирки ăс парса вĕрентнисем, христианинăн епле пурăнмалли пирки ӳкĕтлесе каланисем пур. Паянхи кун та, икĕ пин çула яхăн иртсессĕн те, Çырусем пĕртте кивелмен, хальхи самана çыннисен вĕсене вуласа вĕренмелли нумай.

Çĕнĕ Килĕшĕвĕн юлашки кĕнеки, Иоанн Турсăмахçăна Малашнехи Уçăлни (грекла «Апокалипсис»), – пророкла кĕнеке. Унта вăхăтсем вĕçленесси, çак тĕнче пĕтесси пирки каланă. Ку кĕнеке шанчăк парать: çынсене тем тĕрлĕ инкек-синкек килсе

тухсан та, пĕррехинче вăл вĕçленет. Çак тĕнче пĕтет, ун вырăнне лайăхрах та ĕмĕрлĕх тĕнче килет. Вăл тĕнчене Библире «çĕнĕ тӳпепе çĕнĕ çĕр» тенĕ *(Малашнехи Уçăлни 21:1)*.

*Ача-пăча Библийĕ* ятлă кĕнекемĕрте суйласа илнĕ Библи тексчĕсене хамăр сăмахпа каласа пани те, тӳрремĕн илсе панă цитатăсем те тĕл пулаççĕ. Сăваплă Çырнинчен цитата илнĕ е каласа панă вырăнсене кашни сыпăк хыççăнах е скобкăра кăтартнă.

Тӳрех каламалла: çак кĕнекене хатĕрленĕ чухне нумай ыйтусене татса памалла пулчĕ. Библин хăш тексчĕсене суйласа илмелле? Хăш вырăнсене кĕскетмелле, хăшĕсене туллин илсе памалла? Пирĕн ĕçĕмĕр ăнăçлă пулса тухрĕ-и е ăнăçлă мар-и – ăна вулакан хак парĕ. Кирек епле пулсан та, ку кăларăм вăл – тулли Библи пуянлăхĕн пĕр тĕпренчĕкĕ çеç. Пĕтĕм пуянлăхне вара эсир тулли Библие вуласассăн пĕлĕр. Чăвашла куçарнă *Ача-пăча Библийĕ* вулакансемшĕн Турă Сăмахĕн çулĕ çинчи малтанхи утăм пуласса, нумайăшĕ çав çулпа ĕмĕр тăршшĕпех утасса шанатпăр.

*БИБЛИ КУÇАРĂВĔН ИНСТИТУТĔНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕМ*

# АВАЛХИ КИЛЁШЎ́

## ТӖНЧЕНЕ ПУЛТАРНИ

Ҫăлтăрпа пӗлӗт, чечекпе йывăҫ, вӗҫен кайăкпа тискер кайăк тата эпир хамăр – ҫынсем – епле пулса кайнă-ши тесе кашни ҫынах шухăшлать. Чăн та, епле пулса кайнă-ши ҫак тӗнче? Хăйне хăех нимӗн те пулса каймасть. Пирӗн йӗри-таврари ҫураҫуллă та илемлӗ тӗнче хăйӗн аслă та ăслă Пултараканӗ ҫинчен пӗлтерет. Турă Хăйӗн Сăмахӗпе тӗнчене епле пултарни ҫинчен Библире ҫырса кăтартнă.

Чăн малтанах Турă тӳпепе ҫӗре пултарнă.

Ҫӗр пичӗ палăрăмсăр та пуш-пушă пулнă, тӗпсӗрлӗх ҫийӗнче тӗттӗмлӗх тăнă; шыв ҫийӗн Турă Сывлăшӗ вăркăшнă.

Ҫутă пултăр, тенӗ Турă. Вара ҫутă пулса тăнă.

Турă ҫутă аваннине курнă та Турă ҫутта тӗттӗмрен уйăрнă.

Вара Турă ҫутта кун тесе, тӗттӗме каҫ тесе ят панă. Каҫ пулнă та, ир пулнă: пӗрремӗш кун иртнӗ.

Шыв хушшинче хутлăх пултăр, вăл шыва уйăрса тătăр, тенӗ унтан Турă.

Ҫапла Турă хутлăха пултарнă, хутлăх айӗнчи шыва хутлăх ҫийӗнчи шывран уйăрнă. Ҫапла пулнă та.

Хутлăха Турă тӳпе тесе ят панă. Каҫ пулнă та, ир пулнă: иккӗмӗш кун иртнӗ.

Тӳпе айӗнчи шыв пӗр ҫӗре пухăнтăр та шыв айӗнчен тип ҫӗр тухтăр, тенӗ унтан Турă. Ҫапла пулнă та.

Тип ҫӗре Турă ҫӗр тесе ят панă, тӳпе айӗнчи шывсене тинӗссем тенӗ. Турă пăхнă та ку аваннине курнă.

Ҫӗр ешертӗр – вăрлăхлă курăк, вăрлăхлă ҫимӗҫ паракан йывăҫ-тӗмӗ ӳстӗр, тенӗ Турă. Ҫапла пулнă та.

Ҫӗр ешерме пуҫланă: вăрлăхлă курăк, вăрлăхлă ҫимӗҫ паракан йывăҫ-тӗмӗ ӳстернӗ. Турă пăхнă та ку аваннине курнă.

Каҫ пулнă та, ир пулнă: виҫҫӗмӗш кун иртнӗ.

*ПУЛТАРНИ 1:1–13*



# ТĔНЧЕНЕ ПУЛТАРНИ
## *(малалли)*

Куна каçран уйăрмашкăн, вăхăт шутне – кунсемпе çулсене – пĕлмешкĕн тӳпере çутăсем пулччăр, тенĕ Турă.

Çĕре çутатмашкăн вĕсем тӳпе хутлăхĕнчи çутаткăçсем пулччăр, тенĕ Турă. Çапла пулнă та.

Турă икĕ пысăк çутаткăç пултарнă: чи пысăк çутаткăçне куна тытса тăмашкăн тунă, пĕчĕкрех çутаткăçне тата çăлтăрсене вара каçа тытса тăмашкăн тунă.

Çĕре çутатма, кунпа каçа тытса тăма тата çутта тĕттĕмрен уйăрма Турă вĕсене тӳпене вырнаçтарнă. Турă пăхнă та ку аваннине курнă.

Каç пулнă та, ир пулнă: тăваттăмĕш кун иртнĕ.

Шывра чĕр чунсем пулса кайччăр; çĕр çийĕн, тӳпере, кайăксем вĕçчĕр, тенĕ Турă.

Вара Турă пулăсене тата шыври ытти ишен-шăван чĕр чунсене, тĕрлĕ вĕçен кайăксене пултарнă. Турă пăхнă та ку аваннине курнă.

Унтан Турă вĕсене пурне те пиллесе çапла каланă: хунăр та ĕрчĕр, тинĕсри шывсенче лăк тулли кĕшĕлтетĕр, çĕр çинче вара вĕçен кайăксем ĕрчеччĕр.

Каç пулнă та, ир пулнă: пиллĕкмĕш кун иртнĕ.

Çĕр тĕрлĕрен чĕрĕ чунсене: выльăх-чĕрлĕхе те, вĕтĕр-шакăр чĕр чунсене те, тискер кайăксене те кăлартăр, тенĕ Турă. Çапла пулнă та.

Вара Турă тĕрлĕ йышши тискер кайăксене те, выльăх-чĕрлĕхе те, ытти вĕтĕр-шакăр чĕр чунсене те пултарнă. Турă пăхнă та ку аваннине курнă.

Хăватлă Пултаракан сăмахĕпе пултарăннă çĕр, канăçса, ытарми илемленнĕ. Анчах та пултармалли татах та пулнă-ха. Çак илемлĕ çĕр çинче пурăнтăр тесе, хăйне Пултараканĕпе çыхăну тытсах тăтăр тесе, Турă этеме пултарма шухăшланă.

*ПУЛТАРНИ 1:14–25*



## МАЛТАНХИ ЭТЕМСЕНЕ ПУЛТАРНИ

Турă вара çапла каланă: Хамăр сăнарлă та Хамăр евĕрлĕ этеме пултарар.

Этем тинĕсри пулăсемпе, тӳпери вĕçен кайăксемпе, выльăх-чĕрлĕхпе, пĕтĕм çĕрпе тата çĕр çинчи пĕтĕм чĕр чунпа хуçалантăр.

Унтан Турă Хăйĕн сăнарĕллĕ те Хăйĕн евĕрлĕ этеме пултарнă, арçынпа хĕрарăма пултарнă.

Вара Турă вĕсене çапла каласа пилленĕ: йышланăр та ĕрчĕр, çĕр талккăшĕпех сарăлса кайса çĕрпе хуçаланăр; тинĕс пуллисен те, тӳпери вĕçен кайăксен те, пĕтĕм çĕр çинчи чĕр чунсен те хуçи пулăр. Çĕр çинчи мĕн пур ӳсен-тăрана та, йывăç çинчи улма-çырлана та сире тăранса пурăнмашкăн паратăп. Çĕр çинчи тискер кайăка, тӳпери вĕçен кайăка, çĕр çинчи пĕтĕм чĕр чуна тăранса пурăнмашкăн мĕн пур ӳсен-тăрана паратăп, тенĕ Турă. Çапла пулнă та.

Турă пăхнă та Хăй пултарни йăлтах аваннине курнă.

Каç пулнă та, ир пулнă: улттăмĕш кун иртнĕ.

Тӳпепе çĕре тата унта мĕн пуррине çапла туса çитернĕ. Çиччĕмĕш кунне, Хăйĕн ĕçĕсене йăлтах туса пĕтернĕ хыççăн, Вăл каннă.

Турă çынсене хитре те телейлĕ пултарнă. Вĕсем хăйсене Пултаракана та, пĕр-пĕрне те питĕ юратнă. Арçынĕ Адам ятлă, хĕрарăмĕ Ева ятлă пулнă.

Хăй пултарнă çĕршĕн тăрăшса пурăнччăр тесе Турă ăна вĕсене панă. Хĕвел тухăçĕнче, Едемра, Хуçа Турă рай пахчи лартса ӳстернĕ те Адампа Евăна çавăнта пурăнмалла тунă. Турă вĕсене çак йывăç пахчине пăхса-упраса тăма хушнă.

*ПУЛТАРНИ 1:26–31; 2:7–22*



## АДАМПА ЕВӐНА РАЙРАН ХӐВАЛАСА ЯНИ

Анчах та пӗррехинче Адампа Ева Турра итлемен. Вӑл вара вӗсене райран хӑваласа янӑ. Ку ӗҫ ҫапла пулса иртнӗ.

Хуҫа Турӑ вӗсене сад пахчинчи пур йывӑҫ ҫимӗҫне те ҫиме ирӗк панӑ, пӗр йывӑҫӑн ҫимӗҫне ҫеҫ ҫиме чарнӑ. Ҫав йывӑҫ ырӑпа усал пӗлӗвӗн йывӑҫҫи ятлӑ пулнӑ. Чарнине итлемесен сирӗн вилмелле пулӗ, тенӗ Турӑ.

Сатана – Турра хирӗҫ тӑракан сывлӑш – Адампа Евӑна пӗтерме шут тытнӑ. Пӗррехинче вӑл Ева патне ҫӗлен пек пулса шуса пынӑ та ҫапла каланӑ: «„Рай пахчинчи нихӑш йывӑҫ ҫимӗҫне те ан ҫийӗр“, – тесе сире Турӑ чӑнахах та каларӗ-и?» «Рай варринче ӳсекен пӗр йывӑҫ ҫимӗҫӗсӗр пуҫне пире ыттисене пурне те ҫиме юрать, – тавӑрнӑ Ева. – Ҫавна ҫисессӗнех е сӗртӗнсессӗнех сирӗн вилмелле пулӗ тесе Турӑ пире чарнӑччӗ». «Ҫук, ҫук, эсир вилмӗр, – тенӗ ҫӗлен. – Эсир ҫав ҫимӗҫсене ҫисе пӑхнӑ кун сирӗн куҫӑрсем уҫӑласса, вара эсир ырӑпа усала пӗлекен турӑсем пек пуласса Турӑ пӗлсе тӑрать».

Вара Ева йывӑҫӑн ҫимӗҫӗсем ҫиме аваннине, тулашӗнчен илемлӗ пулнине курнӑ. Вӗсем, пӗлӳ пама шантарса, чуна хӑйсем патне туртнӑ. Вӑл йывӑҫ ҫинчен ҫимӗҫ татса илсе ҫинӗ, унтан ӑна упӑшкине, Адама, ҫитернӗ. Адам ӑна ҫисе янӑ. Турӑ вара Адама ҫапла каланӑ: «Эсӗ арӑмна итлесе Эпӗ сире ҫиме чарнӑ йывӑҫӑн ҫимӗҫне ҫирӗн, сана пула ҫӗр ылханлӑ юлӗ. Санӑн ӗмӗр тӑршшӗпех ҫӗр ҫинче тертленсе ӗҫлемелле пулӗ. Ҫӗртен пулнӑскер, эсӗ каялла ҫӗре кӗриччenех ҫӑкӑршӑн тар тӑкса ӗҫлесе пурӑнӑн; эсӗ, тусанран пулнӑскер, каллех тусан пулӑн». Хуҫа Турӑ Адампа Евӑна рай пахчинчен хӑваласа янӑ, вӗсем унта тек тавӑрӑнайман.

Ҫапла ҫылӑха кӗнӗ малтанхи этемсем.

*ПУЛТАРНИ 3:1–23*



## КАИНПА АВЕЛЬ

Адампа Евăн икĕ ывăл пулнă. Пĕри, Авель ятли, сурăх кĕтнĕ, пиччĕшĕ вара, Каин, çĕр ĕçĕпе пурăннă.

Пĕррехинче Каин хăй туса илнĕ тырпулăн пĕр пайне Турра парне кӳнĕ. Вара Авель те Турра парне кӳме хăй кĕтĕвĕнчи малтан пăранланă путексене илсе пынă. Авельпе унăн парнине Турă кăмăлласа йышăннă, Каинпа унăн парнине вара йышăнман. Çилленнипе Каинăн сăн-пичĕ улшăнсах кайнă. Вара Турă Каина çапла каланă: «Эсĕ мĕншĕн çиллентĕн, мĕншĕн сăнран улшăнтăн? Ыррине тăватăн пулсан, пуçна çĕклесе çӳре. Усал тăватăн пулсан, çылăх алăк умĕнчех выртать. Çылăх сана хăй патнех туртать, анчах эсĕ ху унпа хуçа пул». Анчах та Каин шăллĕне кĕвĕçме пăрахман, çав кĕвĕç туйăма ăшра пытарса пурăннă. Пĕррехинче, иккĕшĕ те хирте пулнă чухне, Каин Авеле тапăннă та ăна вĕлернĕ. Çĕр пичĕ Авель юнĕпе хĕрелнĕ.

Турă Каина çак çылăхшăн айăпланă: çĕрĕ-шывĕнчен хăваласа ярса, тĕнче тăрăх çапкаланса çӳремелле тунă.

*ПУЛТАРНИ 4:2–12*



## ШЫВ ИЛНИ. НОЙ КАРАПĔ

Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртнĕ, çĕр çинче Адампа Ева йăхĕнчи çынсем йышланса кайнă. Вĕсенчен чылайăшĕ малтанах Турăран хăранă, Турăшăн тăрăшнă. Анчах та пурăна киле çынсем Турă ирĕкĕнчен туха пуçланă. Пĕртен-пĕр çын кăна, Ной ятлăскер, хăйне Пултаракана чунĕпе парăнса, Унăн ирĕкне пăхăнса пурăннă. Каярахпа Петр апостол ун пирки «чăнлăх вĕрентӳçи» тесе каланă *(Петр янă 2-мĕш Çыру 2:5)*. Ной чун-чĕринче Турă Сывлăшĕ пулнă.

Çынсем çĕр çинче питĕ пăсăлса кайнине, вĕсен шухăш-кăмăлĕсем усал еннелле туртăннине, никам та тӳрĕ пурăнăçпа пурăнманнине Хуçа Турă курнă. Вара Турă çапла каланă: «Хам пултарнă этемсене çĕр çийĕнчен пĕтерем, мĕншĕн тесен вĕсене пултарнăшăн Эпĕ ӳкĕнетĕп ĕнтĕ».

Ной кăна Турă умĕнче тӳрĕ пурăннă. Турă вара Ноя каланă: «Çĕр çинче пурăнакансене пурне те пĕтерĕп, çĕр пичĕ вĕсен усал ĕçĕсемпе тулса ларчĕ ĕнтĕ. Эсĕ хăвна валли гофер йывăççинчен карап ăстала, ăшĕнче пӳлмексем ту; карапа шалтан та, тултан та сăмалала. Акă эпĕ çĕр çинчи мĕн пур чĕрĕ чуна пĕтерме шыв илтерĕп. Анчах та Эпĕ санпа килĕшӳ тăватăп. Вара эсĕ ывăлусемпе, арăмупа тата кинӳсемпе карап çине лар».

*ПУЛТАРНИ 6:5–18*



## ШЫВ ИЛМЕ ПУÇЛАНИ

Хăйне Турă мĕн хушнине Ной пĕтĕмпех тунă. Пысăк карап хатĕрлесе çитерсен, Турă Ноя çапла каланă: «Пĕтĕм кил-йышупа карап çине лар, мĕншĕн тесен мĕн пур çынсенчен пĕр эсĕ кăна Ман умра тӳрĕ пурăнтăн. Хăвпа пĕрле тĕрлĕ таса чĕр чун – аçине те, амине те – çичшер мăшăр ил. Тĕрлĕ таса мар чĕр чун – аçине те, амине те – икшер мăшăр ил. Çĕр çинче йăхĕсене хăвармашкăн тата çичшер мăшăр вĕçен кайăк ил: аçине те, амине те. Тепĕр çичĕ кунран Эпĕ çĕр çине хĕрĕх кун та хĕрĕх каç çумăр çутарăп, Хам пултарнине йăлтах çĕр питĕнчен пĕтерĕп».

Ной пĕтĕмпех Хуçа Турă хушнă пек тунă. Вăл арăмĕпе тата ывăлĕ-кинĕсемпе пĕрле карап çине ларнă. Ной хăйпе пĕрле тата çичшер мăшăр таса чĕр чун, икшер мăшăр таса мар чĕр чун илнĕ. Пурте кĕрсе-вырнаçса пĕтсен, Турă Хăй карап алăкне тулашĕнчен хупнă. Тепĕр çичĕ кунран шалкăм çумăр çума пуçланă. Вăл пĕр чарăнмасăр хĕрĕх кун та хĕрĕх каç тăкнă. Шыв хăпарса пынипе карап та çĕкленсе шыв çийĕнче ишсе çӳренĕ. Шыв питĕ вăйлă хăпарнăран çӳллĕ тусем те шыв айне пулса курăнми пулнă. Çĕр çинчи пĕтĕм чĕрри вилсе пĕтнĕ: çынсем те, выльăх-чĕрлĕх те, чĕр чунсем те, вĕçен кайăк та – пурте çĕр питĕнчен çухалнă. Нойпа карап çинчисем кăна чĕрĕ юлнă.

*ПУЛТАРНИ 7:1–23*



## ШЫВ ИЛМЕ ЧАРĂННИ

Çĕр аллă кун хушши çĕре шыв илнĕ. Турă Нойпа карап çинчи чĕр чунсем çинчен аса илнĕ. Вара Турă çĕр çине çил янă, çумăр чарăннă та, майĕпен шыв чака пуçланă. Ной карапĕ Арарат тăвĕ тĕлĕнче чарăннă. Тепĕр хĕрĕх кун иртсен, çĕр çинче шыв чакнипе чакманнине пĕлес тесе, Ной карап чӳречине уçнă та çăхан кăларса янă. Çĕр типсе çитменрен çăханĕ пĕр вĕçсе кайса, пĕр тавăрăнса явăнса çӳренĕ. Унтан Ной кăвакарчăн вĕçтерсе янă. Анчах та çĕре çаплах шыв хупласа тăнăран кăвакарчăн ун патне карап çине тавăрăннă. Татах тепĕр çичĕ кунран Ной каллех карап çинчен кăвакарчăн вĕçтерсе янă. Вара олив йывăççин ешĕл туратне хыпнă кăвакарчăн ун патне каç пуласпа каялла вĕçсе пынă. Çапла майпа Ной çĕре шыв илме пăрахнине пĕлнĕ.

Ной тата тепĕр çичĕ кун кĕтнĕ, унтан каллех кăвакарчăн вĕçтерсе янă. Кăвакарчăнĕ тек ун патне тавăрăнман. Вара Ной карап хупкăчне уçнă та çĕр пичĕ типсе çитнине курнă. Турă Ноя çапла каланă: «Арăмупа, ывăлусемпе тата кинӳсемпе пĕрле карап çинчен ан. Хăвпа пĕрле илнĕ мĕн пур чĕр чуна карап çинчен кăлар, вĕсем çĕр пичĕпех саланса йышланччăр та ĕрчеччĕр».

*ПУЛТАРНИ 7:24 – 8:17*



## АСАМАТ КĔПЕРĔ
## ТАТА ТУРĂ ЭТЕМПЕ ТУНĂ КИЛĔШӲ

Нойпа кил-йышĕ карап çинчен аннă, чĕр чунĕсемпе вĕçен кайăкĕсене пурне те кăларса янă. Вара чĕр чунсем те, вĕçен кайăксем те çĕр пичĕпех саланса кайнă.

Ной Турра парне кӳмелли вырăн чултан купаланă. Унтан вăл пур тĕрлĕ таса чĕр чунсене, вĕçен кайăксене Турра парне кӳнĕ. Ной кӳнĕ парне Хуçа Турра юрăхлă пулнă, вара Турă çапла каланă: «Ӳлĕмрен этеме пула çĕре ылханмăп. Шухăш-ĕмĕчĕпе этем мĕн çамрăкранах усал еннелле туртăнать пулин те, текех Эпĕ çĕр çинчи мĕн пур чĕррине пĕтермĕп. Малашне тек акапа вырма, сивĕпе шăрăх, çупа хĕл, кунпа каç нихăçан та пĕтсе лармĕ».

«Акă Эпĕ сирĕнпе, сирĕн хыççăн килекен ăрусемпе тата пысăк карап çинчен тухнă пĕтĕм чĕр чунсемпе çакнашкал килĕшӳ тăватăп, – тенĕ Турă Нойпа унăн ывăлĕсене пиллесе. – Ӳлĕмрен нимĕнле чĕрĕ чуна та шыв илтерсе пĕтермĕп, текех çĕре пушатса хăвармалла шыв илмĕ. Тӳпери асамат кĕперĕ вара Манпа тата çĕр çинче пурăнакансемпе тунă килĕшӳ палли пулĕ. Эпĕ çĕр çине çумăр пĕлĕчĕ ярсан асамат кĕперĕ курăнĕ те, Эпĕ çĕр çинче пурăнакан пур тĕрлĕ чĕрĕ чунпа тунă ĕмĕрлĕх килĕшĕвĕме аса илĕп».

*ПУЛТАРНИ 8:18–22; 9:8–17*



## ВАВИЛОН БАШНИ

Ной ывăлĕсен йăх-несĕлĕ йышлă пулнă, шыв илнĕ хыççăн çĕр çинчи пур халăх та çавсенчен пулса кайнă. Анчах шыв илнĕ хыççăн та çынсем лайăхланман.

Ун чухне пĕтĕм çĕр çинче пĕр чĕлхе пулнă, пурте çав чĕлхепе калаçнă. Пĕррехинче çынсем пĕрле пуçтарăннă та çапла шухăш тытнă: «Атьăр хамăра валли хула тăвар, тӳпене çити башня туса лартар. Пĕтĕм çĕр пичĕпе йĕрсĕр-мĕнсĕрех сапаланса каяс мар тесе, мухтавлă ят хăварар». Вара çынсем тăвакан хулапа башньăна курма Хуçа Турă аннă. «Пурте вĕсем пĕр халăх, пурин те пĕр чĕлхе, çавăнпа та тытнă шухăша вĕсем пăрахас çук. Вĕсем пĕр-пĕрин калаçăвне ан ăнланччăр тесе, анса вĕсен чĕлхине уйăрса пăтраштарса ярар», — тенĕ Вăл. Унтанпа çав вырăна Вавилон теççĕ, тепĕр майлă вăл «пăтрашу» тени пулать.

Турă çынсене пĕтĕм çĕр пичĕпех салатса янă, вĕсем хăйсен хулине туса пĕтереймен.

*ПУЛТАРНИ 11:1–9*



## АВРААМ

Çак ӳкерчӗкре эсир Аврама куратӑр. Авраам тесе Турӑ ӑна каярахпа ят хунӑ, куçарсассӑн вӑл «нумай халӑхсен ашшӗ» тени пулать. Авраам Турра виçесӗр шаннӑ, Ӑна чун-чӗрипе парӑнса, пӑхӑнса пурӑннӑ. Турӑ ӑна Хӑйӗн тусӗ тесе чӗннӗ. Çырнинче Иисус Христос Хуçамӑр пире те çапла калать: «Манӑн пил-хушусене пурнӑçласа пырсан эсир Манӑн тусӑмсем пулатӑр» *(Иоанн пӗлтернӗ Ырӑ Хыпар 15:14)*.

Пӗррехинче Турӑ Авраама çапла хушнӑ: «Хӑвӑн çӗрӳ-шывунтан, тӑванусенчен, аçу килӗнчен уйӑрӑлса Эпӗ кӑтартнӑ çӗре тухса кай. Эпӗ санран аслӑ халӑх пуçарса ярӑп, сана пиллӗп, сана мухтавлӑ тӑвӑп. Эсӗ пуриншӗн те пиллӗхлӗ пулӑн. Сана ырӑлакансене Эпӗ пиллӗп, хурлакансене – ылханӑп. Эсӗ çӗр çинчи пур халӑхшӑн та пиллӗхлӗ пулӑн».

Авраам вара Хуçа Турӑ каланӑ пек тунӑ. Вӑл хӑйпе пӗрле арӑмне Сарӑна, пӗртӑванӗн ывӑлне Лота тата пухнӑ пурлӑхӗпе тарçӑ-тӗрçине илнӗ те Турӑ хӑйне кӑтартнӑ Ханаан çӗрне тухса кайнӑ.

Вӗсем Ханаан çӗрне çитсен Море юманлӑхӗ текен вырӑнта Авраама Турӑ курӑннӑ. «Çак çӗре Эпӗ санӑн йӑх-тӑхӑмна паратӑп», – тенӗ вара ӑна Турӑ.

*ПУЛТАРНИ 12:1–7*



## АВРААМПА ЛОТ

Авраам тата унпа пĕрле пулнисем хăйсене Хуçа Турă кăтартнă Ханаан çĕрĕпе пынă. Çапла вĕсем Вефиль тăрăхне çитсе чарăннă.

Авраам питĕ пуян пулнă. Унăн ылтăн-кĕмĕл те, выльăх-чĕрлĕх те нумай пулнă. Пĕртăванĕн ывăлĕ Лот та путек-сурăхпа ĕне-выльăх нумай усранă, унăн хăйĕн чатăрĕсем те пулнă. Мулĕ нумайланса пынăран вăхăт иртнĕçемĕн Авраампа Лота пĕрле пурăнма çĕр çитми пулнă. Часах тата вĕсен кĕтӳçисем пĕр-пĕринпе харкашса кайнă. Вара Авраам Лота çапла каланă: «Иксĕмĕр хушăра та, кĕтӳçĕсем хушшинче те харкашу ан пултăр; эпир тăвансем-çке-ха. Ирĕклĕ çĕр çителĕклех – уйăрălса тух. Эсĕ сулахаялла кайсан, эпĕ сылтăмалла кайăп. Эсĕ сылтăмалла кайсан, эпĕ сулахаялла кайăп».

Лот таврари çĕрсене пăхса çаврăннă. Вăл Иордан айлăмĕ питĕ пулăхлине, унта нӳрĕк çителĕклине асăрханă. Çак вырăна суйласа илсе, вăл Авраамран уйăрăлнă та чатăрĕсене Содом хулине çитиех лартса тухнă. Çак тăрăхри çынсем питĕ усал пулнă, Хуçа Турă умĕнче нумай-нумай çылăха кĕнĕ.

*ПУЛТАРНИ 13:1–18*



## ТУРĂ АВРААМА СĂМАХ ПАНИ

Лот уйăрăлса пурăнма пуçланă хыççăн Турă Авраама çапла каланă: «Çурçĕрелле те, кăнтăралла та, хĕвел тухăçнелле те, хĕвел анăçнелле те – йĕри-тавраллах пăх-ха. Çак ху куракан пĕтĕм çĕре Эпĕ сана, санăн йăх-тăхăмна ĕмĕрлĕхех паратăп. Сан йăхна Эпĕ хăйăр пĕрчисем пек йышлă тăвăп. Кам та пулин тĕнчере хăйăр пĕрчисене шутласа тухайсан тин санăн йăхун йышне те шутласа тухайĕç».

Авраам вара Мамре юманлăхĕ таврашне пурăнма куçнă. Унта вăл Хуçа Турра парне кӳмелли вырăн хатĕрленĕ.

Нумаях та вăхăт иртмен, Турă каллех Авраама курăнса каланă: «Эпĕ санăн хӳтлĕхӳ, сана парас парнем питĕ пысăк». «Эй, Патша Хуçамăр! – тенĕ Турра Авраам. – Эсĕ мана мĕн парайăн? Ачам-пăчам çук. Эсĕ манăн йăхăма тăсăлмалла тумарăн, çавăнпа та еткерĕм тарçăна кăна юлĕ». «Еткер илес çынну вăл мар, – тавăрнă Хуçа Турă çак сăмахсене илтсессĕн, – еткер илекенни хăвăн ачу пулĕ». Унтан Вăл Авраама чатăртан илсе тухнă та çапла каланă: «Тӳпене пăх-ха; шутласа кăларайсан, миçе çăлтăрне шутласа тух. Санăн йăху та çавăн чухлех пулĕ».

Авраам Хуçа Турă сăмахĕсене ĕненнĕ, çавăншăн Турă ăна сăваплисен шутне кĕртнĕ.

Унтан Турă Авраама каланă: «Арăмна, Сарăна, текех ун пек ан чĕн, унăн ячĕ Сарра пултăр. Эпĕ ăна пиллетĕп, вăл сана ывăл ача çуратса парĕ. Эпĕ ăна пиллетĕп, çĕр çинчи нумай халăх унран пулса кайĕ, унăн тăхăмĕсем халăхсен патшисем пулĕç».

*ПУЛТАРНИ 13:14–16; 15:1–6; 17:15–16*



## ТУРĂ ЯНĂ ВИÇĔ АНГЕЛ АВРААМ ПАТĔНЧЕ

Пĕррехинче, кăнтăрлахи шăрăхра, Авраам хăйĕн чатăрне кĕмелли вырăнта ларнă. Сасартăк вăл хăйĕн умĕнче виçĕ çулçӳревçĕне курах каять. Кусем Хуçа Турă янă ангелсем пулнине Авраам ăнланса илнĕ. Вăл ангелсене хапăл тунă, вĕсен умне ĕçме-çиме лартнă. Ĕçсе çинĕ хыççăн çавсенчен пĕри Авраама каланă: «Эпĕ сан патна тепĕр çул шăпах çак вăхăтра килĕп, ун чухне арăму, Сарра, ывăл ача çуратĕ». Çак сăмахсене Сарра та илтнĕ, вара вăл хăй ăшĕнче кула-кула: «Манăн, ватă хĕрарăмăн, унашкал йăпанăçпа киленесси пулĕ-ши?» – тенĕ.

Анчах та Турă Авраама çапла каланă: «Сарра мĕншĕн кулса ячĕ-ха? Турăшăн мĕн те пулин йывăрри пур-и вара? Палăртнă вăхăтра, тепĕр çулхине, Эпĕ сан патна килĕп, Саррăн ун чухне ывăл ача пулĕ».

Палăртса хунă вăхăтра Хуçа Турă Хăйĕн сăмахне пурнăçланă, мĕншĕн тесен панă сăмаха Вăл яланах тытать, тата Турă тума пултарайманни нимĕн те çук.

*ПУЛТАРНИ 18:1–19; 21:1–3*



## СОДОМПА ГОМОРРА ХУЛИСЕМ ПЁТНИ

Содом, Гоморра, Адма тата Севоим ятлă тăватă хула пĕлĕт çинчен çунă вут-çулăмра пĕтнĕ. Çак хула çыннисене аскăнланса пурăннăран тата ытти пысăк çылăхсем тунăран Хуçа Туррăн çилли çитнĕ. Содом хулин пĕтмелле пулассине Турă Авраама пĕлтернĕ. Авраам çылăхлă хулана хĕрхенсе каçарма Турра тархасланă. Вара Хуçа Турă çак хулара тӳрĕ пурăнакан пĕр вунă çын та пулин тупăнсан, хулана пĕтермĕп тесе Авраама шантарнă. Анчах та Содомра тӳрĕ пурăнакан вунă çын та тупăнман.

Вара акă мĕн пулса иртнĕ. Содом хулинче арăмĕпе тата икĕ хĕрĕпе пĕрле Лот ятлă сăваплă çын пурăннă. Турă çак хулана çын сăнарĕллĕ икĕ ангел янă. Каç пулса килнĕ. Кусем ангел пулнине пĕлмесĕрех тараватлă кăмăллă Лот вĕсене çĕр выртма кĕртнĕ.

Вĕсем çывăрма выртиччене хулан тĕрлĕ кĕтесĕсенчен пухăннă Содом çыннисем – çамрăккисем те, ваттисем те – Лот çуртне çавăрса илнĕ. Вĕсем Лота чĕнсе кăларса çапла каланă: «Сан патна çĕр выртма кĕнĕ çынсем ăçта? Вĕсене пирĕн пата илсе тух!» Хăй хыççăн алăка питĕрсе илсе, Лот вĕсем патне тухнă. «Тăвансем, – тенĕ вăл, – çак çынсене усал ан тăвăр, вĕсем ман кил хӳтлĕхне килнĕ вĕт-ха». «Эс ху ют çĕртен килнĕскер, – тенĕ лешсем, – тата пире тем тăнлантарасшăн-и? Халĕ ĕнтĕ сана хăвна вĕсене мăшкăллас тенинчен те ытларах мăшкăллăпăр». Вара, алăка çĕмĕрес шутпа, Содом çыннисем Лот патне çывхарнă. Анчах ангелсем, Лота пӳрте кĕртсе, алăкне питĕрсе хунă. Пӳрт алăкĕ умĕнче тăраканнисене вара, çамрăкки-ваттипех, суккăрлатса лартнă. «Эпир ку вырăна пĕтерĕпĕр, – тенĕ ангелсем Лота, – мĕншĕн тесен кунта пурăнакансен усаллăхĕ виçесĕр пулнине Хуçамăр курать». Унтан вĕсем Лотпа арăмне, икĕ хĕрне алăран çавăтса хуларан илсе тухнă. «Пĕтес мар тесен, хыçалалла çавăрăнса пăхмасăрах тусем çине тар», – тенĕ Лота пĕр ангелĕ.

Лот Сигор хулине çитнĕ чухне хĕвел те тухнă ĕнтĕ. Çав вăхăтра Турă Содомпа Гоморра çине пĕлĕтрен вутлă çумăр çутарнă. Çак хуласене, хула таврашĕнчи вырăнсене, хула çыннисене пурне те, мĕн пур йывăç-курăка та Турă тĕппипех пĕтернĕ. Лот хыççăн пыракан арăмĕ хыçалалла çавăрăнса пăхнă та – çавăнтах тăвар юпа пулса тăнă.

*ПУЛТАРНИ 19:1–26; САККУНА АСТУТАРНИ 29:23*



## АВРААМ ИСААКА ТУРРА ПАРНЕ КӲРЕТ

Авраам патне Туррӑн виҫӗ ангелӗ пырса кайни ҫулталӑк иртсен, Сарра ывӑл ача ҫуратнӑ. Авраам ӑна Исаак ятлӑ хунӑ.

Исаак пӗве кӗрсенех Турӑ Авраамӑн ӗненӗвӗпе шанчӑклӑхне тӗрӗслесе пӑхма шухӑшланӑ. Турӑ Авраама ҫапла каланӑ: «Хӑвӑн пӗртен-пӗр савнӑ ывӑлна Исаака хӑвпа пӗрле ил те Мориа ҫӗрне кай. Унта Эпӗ сана кӑтартнӑ пӗр ту ҫинче ӑна пӗтӗмӗшпе ҫунтарса парне кӳр».

Турӑ хушнине пурнӑҫлама Авраама питӗ йывӑр пулнӑ. Анчах вӑл Хуҫа Турра пӗр сӑмах та каласа хирӗҫлемен. Авраам ирпе ирех тӑнӑ та пӗтӗмӗшпе ҫунтарса парнелемешкӗн вутӑ касса ашак ҫине тиенӗ, икӗ тарҫине тата Исаака пӗрле илсе Хуҫа Турӑ кӑтартнӑ ҫӗрелле ҫул тытнӑ.

Исаак, хӑйӗн ашшӗ Турра мӗнле парне кӳрессе пӗлменскер, унран ыйтнӑ: «Аттем! Вут чӗртмелли те, вутти те пур, пӗтӗмӗшпе ҫунтарса парне кӳмелли путекӗ ӑҫта?» «Ывӑлӑм, – тенӗ Авраам, – Турӑ Хӑйне парне кӳмелли путеке Хӑех суйласа илӗ».

Турӑ кӑтартнӑ вырӑна ҫитсессӗн Авраам тарҫисене аялта хӑварнӑ та хӑй, Исаакпа пӗрле, ту ҫине улӑхса парне вырӑнӗ хатӗрленӗ. Унтан вутӑ хунӑ та парне вырӑнӗ ҫине Исаака ҫыхса вырттарнӑ. Ҫав самантра Турӑ Хӑйӗн ангелӗ урлӑ тӳперен: «Авраам! Авраам! – тесе чӗннӗ. – Ачу ҫине аллуна ан ҫӗкле, ӑна нимӗн те ан ту. Мӗншӗн тесен эсӗ Турӑран хӑранине Эпӗ халӗ пӗлетӗп, эсӗ Маншӑн пӗртен-пӗр ывӑлна та хӗрхенмерӗн. Эпӗ сана пиллетӗп, санӑн ӑрӑвна йышлантарӑп, тӑхӑмусен йышӗ тӳпери ҫӑлтӑрсем чухлӗ, тинӗс хӗрринчи хӑйӑр пӗрчисем чухлӗ пулӗ. Эсӗ Манӑн сӑмахӑмран иртмен пирки санӑн ӑрӑву урлӑ ҫӗр ҫинчи пур халӑх та пиллӗхлӗ пулӗ».

*ПУЛТАРНИ 22:1–18*



## РЕВЕККА

Вăхăт иртнĕçемĕн Авраам ватăлнă, Исаак ар çулне çитнĕ. Пĕррехинче Авраам хăйĕн шанчăклă тарçине чĕнсе илнĕ те хăй çуралнă çĕр-шыва, Месопотамине, кайса Исаак валли арăм тупса килме хушнă. Вара тарçă Авраам пиччĕшĕ Нахор пурăнакан Месопотамири хулана тухса кайнă.

Унта çитсессĕн вăл Турă Исаака пӳрнĕ хĕрпе тĕл пултартăрччĕ тесе кĕлтунă. «Турă Хуçамăр! – тенĕ тарçă. – Эсĕ вăл хĕре паян мана хирĕç кăларсам, манăн хуçама, Авраама, ырăлăх тусам. Акă эпĕ хула хĕрĕсем шыв ăсма анакан çăл умĕнче тăратăп. „Кăкшăмна тайăлтар-ха, шыв ĕçем“, – тенине хирĕç: „Ĕçсем, эпĕ сан тĕвӳсене те шăварăп“, – тесе хуравлакан хĕр Хăвăн чуру Исаак валли суйласа хунăскер пулĕ. Манăн хуçама Эсĕ ырăлăх тунине эпĕ çакăнтан пĕлĕп».

Вăл çапла каласа та пĕтереймен, çăл патне Ревекка ятлă пĕр чипер хĕр аннă. Вăл кăкшăмне тултарнă та каялла кайма тухнă. Хайхи Авраам тарçи ун патне чупса пынă та каланă: «Кăкшăмунтан мана кăштах шыв ĕçтер-ха». «Ĕçсем, ырă çыннăм», – тенĕ хĕр. Вара çапла каланă: «Эпĕ санăн тĕвӳсене тăраниччен шăвармалăх та шыв ăсам-ха». Хăйĕн тĕвисем валли хĕр епле шыв ăснине тарçă пĕр чĕнмесĕр тĕлĕнсе пăхса тăнă, вăл хăйĕн çулне Хуçа Турă пилленипе пиллеменнине пĕлесшĕн пулнă. Вара унтан çапла ыйтнă: «Кала-ха мана, эсĕ кам хĕрĕ? Аçу килĕнче çĕр выртмалăх вырăн пулĕ-и?» Ревекка ăна хăй Авраам пиччĕшĕн Нахорăн Вафуил ятлă ывăлĕн хĕрĕ пулнине пĕлтернĕ. Çакна илтсен тарçă, хăйне тӳрех Авраам пиччĕшĕн килне илсе пынăшăн, Турра ӳксе пуççапсах мухтанă.

Вафуил килне пырсан тарçă пурне те Авраам хăйне çуралнă çĕр-шывне, тăванĕсем патне пĕртен-пĕр ывăлĕ валли арăм шырама епле яни çинчен каласа кăтартнă. Ашшĕ-амăшĕ вара хĕре чĕнсе илсе çапла ыйтнă: «Эсĕ çак çынпа кайма килĕшетĕн-и?» Ревекка кайма килĕшнĕ. Кил-йышĕпех пĕри те хирĕç пулман, вара вĕсем хĕрне пиллесе çула ăсатнă.

*ПУЛТАРНИ 24:1–60*



## ИСААКПА РЕВЕККА

Кайсан-кайсан тĕвесем çине утланнă Ревеккăпа Авраам тарçи тинех хăйсене Исаак кĕтекен çĕр-шыва çитнĕ.

Каç пулттипе Исаак хире тухнă та çывхарса килекен тĕвесене, тĕве çинче ларса пыракан хĕре асăрханă. «Кам ку?» — ыйтнă тарçăран хĕр. «Вăл манăн хуçа», — тенĕ лешĕ. Унтан тарçă Исаака мĕн-мĕн пулса иртни çинчен тĕппипех каласа панă.

Исаакпа Ревекка пĕрлешнĕ. Хуçа Турă вĕсене икĕ ывăл парнеленĕ, ачасене Исавпа Иаков ятлă хунă. Йĕкĕрешсем пулин те, Исав Иаковран кăшт маларах çуралнă, çавăнпа малтанхи ачи шутланнă.

Ачасем ӳссе çитĕннĕ. Исав ăста сунарçă, уй-хир çынни пулнă; Иаков вара киле юрататакан йăваш çын пулнă. Исав тытнă кайăк ашне Исаак кăмăлланă, çавăнпа вăл Исава юратнă. Ревекка вара ытларах Иакова юратнă.

*ПУЛТАРНИ 24:63–67; 25:24–28*



## ИАКОВ АШШĔНЧЕН ПИЛ ИЛЕТ

Ватлăхра Исаак суккăрлана пуçланă. Хăй виличчен вăл малтанхи ывăлне Исава пил парса хăварас тенĕ. Исаак ăна чĕнтернĕ те кайăк ашĕнчен хăй юратакан апат хатĕрлеме ыйтнă. Ун хыççăн ашшĕ ывăлне пил пама пулнă.

Ревекка çакна илтнĕ те йăлтах Иакова каласа кăтартнă. Ашшĕн пилне вăл Исава мар, Иакова илтересшĕн пулнă. Çавăнпа вăл Исаака улталама шут тытнă. Вара, Исав сунара кайсан, Ревекка Иакова кĕтӳрен икĕ качака путекки тытса килме хушнă, вĕсенчен Исаака юратнă апатне пĕçерсе панă. Унтан вăл Исавăн уяв тумтирне Иакова тăхăнтартнă. Исав çăмламас пулнăран, суккăр ашшĕ хыпашласа ан пĕлтĕр тесе, Иаковăн аллипе мăйне путек тирĕпе чĕркесе çыхнă.

Ревекка хатĕрленĕ апата çĕклесе, Иаков хăйĕн ашшĕ патне кĕнĕ те çапла каланă: «Атте! Эсĕ мĕн хушнине пĕтĕмпех турăм. Халĕ ĕнтĕ чунтан пиллемешкĕн эпĕ тытнă кайăк апатне çисем». «Ывăлăм, çывăхарах кил-ха, хыпашласа пăхам, эсĕ Исавах-и?» – тенĕ ăна ашшĕ.

Иаков патнерех пырсан, Исаак ăна хыпашласа пăхнă та: «Сасси – Иаков сасси, анчах та алли – Исав алли», – тенĕ. Аллине путек тирĕпе чĕркенĕ пирки Иаковăн алли пĕртăванĕн пекех çăмлă пулнă, çавăнпа ашшĕ ăна паллайман. Унтан ашшĕ çиме ыйтнă. Çисе тăрансан вăл ывăлне пил сăмахĕ каланă.

Çапла улталаса Исав илес пиле Иаков илнĕ. Çакăншăн Исав хăйĕн пĕртăванне питĕ курайми пулнă, ăна вĕлерме шут тытнă.

*ПУЛТАРНИ 27:1–41*



## ИАКОВ ТӖЛӖКӖ

Хӑйӗн юратнӑ ывӑлне Иакова Исав вӗлерессипе хӑратать текен сӑмах Ревекка хӑлхине кӗнӗ. Ҫав сӑмаха вӑл Иакова пӗлтернӗ. Вара Исавӑн ҫилли иртиччен ӑна хӑйӗн тӑван пиччӗшӗ Лаван патне Месопотамине тарма, унта пӗр вӑхӑт пурӑнма канаш панӑ.

Иаков ҫула тухиччен Исаак ӑна чӗнсе илсе хӑйсем пурӑнакан Ханаанран мар, амӑшӗ ҫуралнӑ Месопотамирен хӗр илме хушнӑ. Унтан вӑл ывӑлне ҫапла пил панӑ: «Хӑватлӑ Турӑ сана пиллетӗр, санпа пӗрле сан йӑхна та Авраам аттемӗн пиллӗхне патӑр: Турӑ Авраама парнеленӗ, ху кайма тухнӑ ҫӗр-шыва санӑн еткерлӗхе илмелле пултӑр». Вара Иаков Месопотамине тухса кайнӑ.

Ҫул ҫинче ӗнтӗ чылай кун иртнӗ. Пӗррехинче Иаковӑн уйрах ҫӗр каҫма тивнӗ. Вӑл пуҫелӗк вырӑнне чул хунӑ та ҫывӑрма выртнӑ. Турӑ ӑна тӗлӗнмелле тӗлӗк кӑтартнӑ. Тӗлӗкре вӑл тӳпене ҫитекен пусма курнӑ, Турӑ ангелӗсем ҫав пусма тӑрӑх анса хӑпарнӑ. Пусман ҫӳлти вӗҫӗнче Турӑ тӑнӑ. Вӑл Иакова ҫапла каланӑ: «Эпӗ Хуҫӑр, Авраам аслаҫун Турри, Исаакӑн Турри. Эсӗ выртакан ҫӗре эпӗ сана, санӑн йӑхна паратӑп. Эпӗ санпа пӗрле; эсӗ кирек ӑҫта кайсан та, сана пур ҫӗрте те упрӑп».

Иаков ыйхинчен вӑранса каланӑ: «Ку вырӑнта чӑн та Хуҫа Турӑ пур иккен, эпӗ ҫавна та пӗлмен! Ку Турӑ ҫурчӗ, тӳпе хапхи». Унтан вӑл ҫӗрле пуҫелӗклӗх хунӑ чулне илнӗ те ҫав вырӑна чулпа паллӑ тунӑ. Вара вӑл Хуҫа Турра ҫапла сӑмах панӑ: «Турӑ манпа пӗрле пулса ҫул-йӗрӗмре упраса хӑварсан, ҫиме ҫӑкӑр тата тӑхӑнма тумтир парсан, аттем килне канӑҫлӑн таврӑнмалла тусан, Хуҫа Турӑ манӑн Туррӑм пулас пулсан, эпӗ паллӑ тумашкӑн лартнӑ чул Туррӑн сӑваплӑ вырӑнӗ пулӗ. Эй, Турӑҫӑм! Эсӗ мана мӗн панинчен вуннӑмӗш пайне Сана парне кӳрӗп».

*ПУЛТАРНИ 27:41–46; 28:1–5, 10–22*



## ИАКОВ РАХИЛЬПЕ ТӖЛ ПУЛНИ

Иаков малалла, Месопотаминелле, ҫул тытнӑ. Пырсан-пырсан вӑл ешӗл улӑх-ҫаранлӑ вырӑна ҫитсе тухнӑ. Ҫӑл патне ҫитсен вӑл чарӑннӑ. Ҫӑл анине пысӑк чулпа хупланӑ пулнӑ. Кӗтӳҫӗсем, кӗтӗвӗсене шӑварма хӑваласа пырсан, чулне йӑвантарса ҫӑл анине уҫнӑ, кайран каллех хупласа хӑварнӑ.

Ҫӑл ҫывӑхӗнче шӑварма илсе пынӑ виҫӗ сурӑх кӗтӗвӗ пулнӑ. Иаков кӗтӳҫӗсенчен: «Эсир Нахор ывӑлне Лавана пӗлетӗр-и?» – тесе ыйтнӑ. «Пӗлетпӗр. Авӑ унӑн хӗрӗ Рахиль сурӑхсем хӑваласа килет», – тенӗ лешсем. Вӑл вӑхӑтра ашшӗн сурӑхӗсене кӗтекен Рахиль кӗтӗвне ҫӑл патне хӑваласа пынӑ. Унӑн ашшӗ, Лаван, Иаков амӑшӗн пӗртӑванӗ пулнӑ.

Рахиле курсан, Иаков ҫӑл анинчи чула йӑвантарса сурӑхӗсене шӑварнӑ. Унтан вӑл Рахиле чуптунӑ та савӑннипе куҫҫульленсех кайнӑ. Иаков Рахиле хӑй унӑн ашшӗн тӑванӗ пулнине пӗлтернӗ. Ҫакна илтсен Рахиль часрах килне чупнӑ, ашшӗне каласа панӑ. Иаков ҫинчен илтсен Лаван ӑна хирӗҫ чупса тухнӑ, ыталаса чуптунӑ та пӳрте илсе кӗнӗ.

Иаков хӑй тӑванӗ патӗнчех юлнӑ, Лаванӑн сурӑхӗсене кӗтсе пурӑннӑ. Ашшӗ Рахиле качча патӑр тесе, вӑл ҫичӗ ҫул кӗтӳҫӗре ҫӳренӗ. Рахиле пит юратнӑран Иаковшӑн ҫичӗ ҫул та темиҫе кун пек ҫеҫ туйӑннӑ. Лаван ӑна хӑйӗн икӗ хӗрне те – Лияпа Рахиле – качча панӑ. Унта, Месопотамире, Иаковӑн вун пӗр ывӑлпа пӗр хӗр ҫуралнӑ, каярахпа Ханаанра тата тепӗр ывӑл ҫуралнӑ.

Иаков питӗ пуйса кайнӑ. Вӑл арӑмӗсемпе тата ачи-пӑчисемпе пӗрле чатӑрта пурӑннӑ. Унӑн арҫын чурасемпе хӗрарӑм чурасем те, тӗрлӗрен выльӑх-чӗрлӗх те – сурӑхсем, тӗвесем, ашаксем – нумай пулнӑ.

*ПУЛТАРНИ 29:1–28*



## ИАКОВ ТУРĂПА КĔРЕШЕТ

Пĕррехинче Турă Иакова Месопотамирен хăйĕн тăван Ханаан çĕр-шывне таврăнма хушнă. Иаков арăмĕсемпе ачи-пăчисене, мĕн пур пуянлăхне пĕрле илсе çула тухнă. Исавăн çилли иртнипе иртменнине пĕлеймен пирки, ăна лăплантарас тесе, вăл ун валли питĕ нумай парне парса çынсем янă.

Тăван çĕр-шывне каякан Иаков караванĕн пĕр юхан шыв урлă каçмалла пулнă. Ăшăх вырăн тупса Иаков хăйĕн тăванĕсене пурне те тепĕр енне каçарнă, хăй çав çыранрах юлнă. Çавăнта унпа Такам кĕрешме пуçланă, тул çутăличченех кĕрешнĕ, Иаковăн пĕççине амантнă. Тул çутăлнă чухне Вăл Иакова çапла каланă: «Вĕçертсе яр Мана, ĕнтĕ шурăмпуçĕ те килчĕ». «Хама пил памасăр Сана вĕçертместĕпех», – тенĕ вара Иаков. «Эсĕ мĕн ятлă?» – тесе ыйтнă Хайхи. «Иаков», – таврăнă вăл. Унпа Кĕрешекенĕ вара çапла каланă: «Паянтан пуçласа эсĕ Иаков ятлă мар, Израиль ятлă пулăн, мĕншĕн тесен эсĕ Турăпа кĕрешрĕн, çынсем айне те пулмăн».

Иаков та Унран: «Хăвăн ятна кала-ха», – тесе ыйтнă. Хурав вырăнне Хайхи: «Эсĕ Манăн ятăма мĕншĕн ыйтатăн?» – тенĕ çеç, Хăйĕн ятне каламан. Унтан Вăл Иакова пилленĕ.

*ПУЛТАРНИ 32:9–31*



## ИАКОВПА ИСАВ ÇУРАÇНИ

Иаков, Ханаан çĕрнелле çывхарса пынă май, хăйне хирĕç Исавпа тепĕр тăват çĕр çын пынине курнă. Вара вăл маларах тухнă та тăванне çĕре ӳксе çичĕ хут пуççапнă. Исав ăна хирĕç чупса пынă та ыталаса илнĕ, унтан иккĕшĕ те йĕрсе янă. Кĕçех арăмĕсемпе ачисем тата хĕрарăм тарçисем те çитсе Исава пуççапнă.

«Мана валли эсĕ мĕншĕн питĕ нумай парне парса янă?» – тесе ыйтнă Иаковран Исав. «Санăн кăмăлна çемçетес шухăшпа», – тавăрнă Иаков. «Тăванăм, ман хамăнах пурте çителĕклех, – тенĕ Исав, – хăвăнни хăвăнтах пултăр». «Çук, çук, – хирĕçленĕ Иаков, – санăн ырă кăмăлна курма тӳр килчĕ пулсан, парнеме те хапăлласа йышăнсамччĕ, мĕншĕн тесен Турă мана хĕрхенсе нумай пачĕ». Вара вăл Исава хăйĕн парнисене илме ӳкĕте кĕртнĕ-кĕртнех.

Кайран Исав килне тавăрăннă, Иаков вара Ханаан çĕрĕнчи Сихем хули çывăхĕнче пурăнма пуçланă. Вăл пĕр пай çĕр сутăн илсе унта хăйĕн чатăрне лартнă. Çавăнтах вăл Хуçа Турра парне кӳмелли вырăн тунă.

Çапла майпа Иаковăн хăйĕн пĕртăванĕсенчен Месопотамине тарнă чухне курнă тĕлĕнмелле тĕлĕкĕ чăна килнĕ. Тĕлĕкре Турă ăна пил панă пулнă. Хуçа Турă, Хăйĕн сăмахне тытса, ăна ĕнтĕ пĕтĕмпех панă. Иаков та çавăншăн Турра тав тума манман.

*ПУЛТАРНИ 33:1–20*



## ИОСИФ – ИАКОВĂН ЮРАТНĂ ЫВĂЛĔ

Çапла ĕнтĕ Иаков каллех Ханаан çĕрĕнче пурăнма пуçланă. Кунта Рахиль тата тепĕр ывăл çуратнă, ăна Вениамин ятлă хунă. Иаковăн пурĕ вун икĕ ывăл (Рувим, Симеон, Левий, Иуда, Дан, Неффалим, Гад, Асир, Иссахар, Завулон, Иосиф, кĕçĕнни Вениамин) тата Дина ятлă хĕр пулнă. Ватлăх кунĕнче çуралнă ывăлĕ пулнăран Иаков Иосифа пуринчен те ытла юратнă.

Вун çиччĕри Иосиф, пиччĕшĕсемпе пĕрле, сурăх кĕтĕвĕсене кĕтсе çӳренĕ. Пиччĕшĕсем мĕн те пулин аван марри тусассăнах Иосиф ун çинчен часрах ашшĕне каласа кăтартнă. Иаков пĕррехинче Иосифа тĕрлĕ тĕслĕ капăр тумтир парнеленĕ. Ашшĕ ăна хăйсенчен ытларах юратнине ăнланса илсен, пĕртăванĕсем Иосифа курайми пулнă.

*ПУЛТАРНИ 37:1–4*



## ИОСИФ ТЁЛЁКЁСЕМ

Пёррехинче Иосиф тёлёк курнӑ та ӑна пиччӗшӗсене каласа кӑтартнӑ. «Эпӗ курнӑ тӗлӗке итлӗр-ха, – тенӗ вӑл пиччӗшӗсене. – Акӑ эпир хир варринче кӗлте ҫыхатпӑр пек. Акӑ ман кӗлте ҫӗкленчӗ те тӑрса ларчӗ. Акӑ сирӗн кӗлтесем йӗри-тавра карталанса тӑчӗҫ те ман кӗлтене пуҫҫапрӗҫ».

«Эсӗ пирӗн пуҫлӑх пуласшӑн-им? Пирӗнпе хуҫаланасшӑн-им?» – тенӗ ӑна пиччӗшӗсем. Вӗсем ӑна тата ытларах курайми пулнӑ.

Иосиф тепӗр тӗлӗк курнӑ, ӑна та пиччӗшӗсене каласа кӑтартнӑ. «Тата мана ҫапла тӗлӗк курӑнчӗ, – тенӗ вӑл. – Акӑ мана хӗвелпе уйӑх тата вун пӗр ҫӑлтӑр пуҫҫапрӗҫ пек».

Ку тӗлӗке вӑл пиччӗшӗсене кӑна мар, ашшӗне те каласа панӑ. «Мӗне пӗлтерекен тӗлӗк курнӑ эсӗ? Манӑн та, аннӳн те, пӗртӑванусен те сана пырса пуҫҫапмалла пулӗ тесшӗн-им?» – хӑтӑрса тӑкнӑ ӑна ашшӗ.

Пиччӗшӗсем ӑна ҫилленсе ҫӳренӗ, ашшӗ вара ун сӑмахне асӑнчен яман.

Пӗррехинче Иосиф пиччӗшӗсем килтен аякра кӗтӳ кӗтнӗ. Ҫавӑн чухне Иаков вӗсене кайса курма, сывлӑхӗсем еплереххине пӗлме тата вӗсенчен хыпар илсе килме Иосифа янӑ. Иосиф хавасланса ҫула тухнӑ.

Пиччӗшӗсене вӑл хирте нумай ҫӗтсе ҫӳренӗ хыҫҫӑн тин шыраса тупнӑ. Пиччӗшӗсем ӑна аякранах асӑрханӑ. Иосиф хӑйсем патне пынине курсан вӗсем ӑна вӗлерме шутланӑ. «Авӑ тӗлӗк куракан килет, – тенӗ вӗсем тарӑхса. – Атьӑр ӑна вӗлерсе пӗр-пӗр шӑтӑка пӑрахар. Кайран ӑна тискер кайӑк туртса ҫурнӑ тесе калӑпӑр. Унӑн тӗлӗкӗсем епле чӑна килессине курӑпӑр-ха вара», – тенӗ пиччӗшӗсем.

*ПУЛТАРНИ 37:5–20*



## ПИЧЧЁШЁСЕМ ИОСИФА ЧУРАЛĂХА СУТСА ЯРАҪҪĔ

Иосифа хирĕҫ усал шухăш тытнине пĕлсен, Рувим ятлă чи аслă пиччĕшĕ Иосифа хăтарса ашшĕ патне яма шут тытнă. Ҫавăнпа вăл Иосифа вĕлерер мар тесе пĕртăванĕсене ӳкĕтлеме пуҫланă, шăтăка пăрахнипех ҫырлахма тархасланă. Ҫапла Рувим пĕртăванĕсене ӳкĕте кĕртнĕ. Вара, Иосиф хăйĕн пиччĕшĕсем патне ҫитсессĕн, вĕсем ун ҫиййĕнчи капăр тумтирне хывса илнĕ те хăйне таран шăтăка пăрахнă.

Сасартăк вĕсем Галаадран Египета таварпа каякан купсасен караванне асăрханă. Пиччĕшĕсенчен пĕри, Иуда ятли, Иосифа купсасене сутса яма сĕннĕ. Ку шухăш пурне те килĕшнĕ. Вара, караван хăйсем тĕлне ҫитсен, пиччĕшĕсем шăллĕне сутса янă.

Купсасем Иосифа Египета илсе кайнă. Пиччĕшĕсем вара, качака путекки пусса, ун юнĕпе Иосифăн тумтирне варалансă. Кайран юнлă тумтире ашшĕ патне илсе пынă та ҫапла каланă: «Эпир акă мĕн тупрăмăр. Пăх-ха, ҫакă ывăлун тумтирĕ мар-и?» Иаков тумтире палласа илнĕ. «Ку — ывăлăм тумтирĕ! Иосифа тискер кайăк ҫисе янă, туртса ҫурнă пулинех!» — тесе кăшкăрса янă кулянинипе ашшĕ. Ывăлĕсем хăйне улталанине пĕлмесĕр, юратнă ывăлĕшĕн хуйхăрса вăл лăпланайми йĕнĕ.

*ПУЛТАРНИ 37:21–35*



## ИОСИФ – ПАТША ÇУМĔНЧИ УЛПУТĂН КИЛ-ÇУРТНЕ ПĂХСА ТĂРАКАНĔ

Египета çитсен, купсасем Иосифа патша çумĕнчи улпута, фараон сыхлавçисен пуçлăхне, чуралăха сутнă. Хăйне нихăçан та манманнине кура Турă Иосифа пулăшсах тăнă. Çавăнпа чуралăхра та, кирек епле ĕç тума тăрсан та, Иосифăн ĕçĕсем ăнса пынă.

Иосифăн ĕçĕсене Турă ăнтарса пынине унăн хуçи Потифар асăрханă. Вара вăл Иосифа хăйĕн кил-çуртне тата пĕтĕм пурлăхне пăхса тăмашкăн шанса панă. Иосиф пиркиех Турă патша çумĕнчи çак улпутăн кил-çуртне пилленĕ. Иосиф кил-çуртпа пурлăха питĕ пĕлсе пăхса тăнăран унăн пуçлăхĕ нимĕнле хуйхă-суйхăсăрах пурăннă.

Сăнĕ-кĕлеткипе Иосиф ытармалла мар каччă пулнă. Хайхи Потифар арăмĕ ăна куç хывнă. Ют халăх çынни пулнăран çак арăм Хуçа Турра та, Унăн пил-хушăвĕсене те пĕлмен, çавăнпа вăл Иосифа аскăнла ĕç тумашкăн илĕрте пуçланă. Анчах Иосиф килĕшмен, вăл хăйĕн хуçин арăмне çапла каланă: «Хуçам хăйĕн мĕн пуррине йăлтах ман аллăма пачĕ. Эсĕ – унăн арăмĕ. Сансăр пуçне мана нимĕнле чару та çук. Епле-ха эпĕ Турă умĕнче çавнашкал пысăк çылăха кĕрем?»

Хăйĕнпе савăшма килĕшменшĕн Потифар арăмĕ Иосифа тавăрма шухăш тытнă. Вăл хăйĕн упăшкине Иосиф пирки çапла элек панă: «Эсĕ килĕмĕре илсе килнĕ еврей чура ман патăма мăшкăллама кĕчĕ. Анчах эпĕ йĕрсе-кăшкăрса янине илтсен, вăл, тумтирне ман аллăмра хăварсах, тухса тарчĕ». Çак сăмахсене илтсен Иосифăн хуçи питĕ тарăхса кайнă та Иосифа тĕрмене хуптарнă. Çав тĕрмере патша хуптарнă çынсем ларнă.

*ПУЛТАРНИ 39:1–20*



## ИОСИФ ТӖРМЕРЕ ЛАРНИ

Анчах та Хуҫа Турӑ тӗрмере те Иосифа пӑрахман, ӑна пулӑшса тӑнӑ. Тӗрме пуҫлӑхӗн кӑмӑлне Турӑ Иосиф майлӑ ҫаврӑнӑ та, лешӗ Иосифа тӗрмере ларакансем хушшинче асли туса хунӑ. Пӗтӗм ӗҫне Иосиф туса тӑнӑран тӗрме пуҫлӑхӗ хӑй питӗ канас пурӑннӑ. Иосиф вара Турра шаннӑ, ҫавӑнпа Турӑ унӑн кирек епле ӗҫне те ӑнтарса пынӑ.

Иосиф ларакан тӗрмене патшан тепӗр икӗ тарҫине хупнӑ. Вӗсенчен пӗри патша сӗтелӗ ҫине хӗрлӗ эрех парса тӑракан пулнӑ, ӑна эрех паракан тенӗ. Тепри патша сӗтелӗ ҫине апат-ҫимӗҫ хатӗрлекенӗ пулнӑ, ӑна ҫӑкӑр паракан тенӗ. Тӗрмене вӗсене патша умӗнче айӑпа кӗнӗрен лартнӑ.

Пӗррехинче эрех паракампа ҫӑкӑр паракана тӗлӗксем курӑннӑ, анчах вӗсем ҫак тӗлӗксем мӗне пӗлтернине ниепле те ӑнланайман. «Ӑнлантарса парасси Турӑран мар-им вара? Тӗлӗкӗрсене мана каласа парӑр-ха», – тенӗ вӗсене Иосиф. Курнӑ тӗлӗкне малтан эрех паракан каласа кӑтартнӑ. Ӑна виҫӗ туратлӑ иҫӗм ҫырли курӑннӑ. Унтан вӑл ҫеҫкене ларнӑ пек, ҫырлисем пиҫсе ҫитнӗ пек. Вӑл ҫырлана татса сӗткенне юхтарнӑ пек те ӑна куркана ярса фараона панӑ пек.

Ку тӗлӗк мӗне пӗлтернине Иосиф тӳрех ӑнлантарса панӑ: «Виҫӗ турат виҫӗ куна пӗлтерет. Виҫӗ кунран фараон сана каялла ху ӗҫленӗ вырӑна тавӑрӗ. Эсӗ каллех эрех паракан пулӑн, патшана хӗрлӗ эрех курки тыттарӑн. Ҫавӑн чухне эсӗ мана аса илсем, ҫакӑнтан хӑтарсам».

Унтан хӑйӗн тӗлӗкне ҫӑкӑр паракан каласа кӑтартнӑ. Ӑна хӑйӗн пуҫӗ ҫинче виҫӗ ҫатан карҫинкка ларнӑ пек курӑннӑ. Ҫиелти карҫинккара патша апат-ҫимӗҫӗ тӑп-тулли пулнӑ пек, ӑна вӗҫен кайӑксем сӑха-сӑха каяҫҫӗ пек.

Итлесе пӗтерсен, Иосиф ӑна ҫапла каланӑ: «Виҫӗ карҫинкка виҫӗ куна пӗлтерет. Тепӗр виҫӗ кунран фараон сана чӗнсе илтерӗ те йывӑҫ ҫине ҫактарӗ. Вара вӗҫен кайӑксем санӑн ӳтне сӑха-сӑха кайӗҫ».

Тепӗр виҫӗ кунран Турӑ Иосифа уҫса пани пӗтӗмпех пурнӑҫланнӑ. Анчах эрех паракан Иосифа аса та илмен.

*ПУЛТАРНИ 39:21–23; 40:1–22*



## ИОСИФ ФАРАОН ТӖЛӖКӖСЕНЕ ӐНЛАНТАРСА ПАРАТЬ

Пӗррехинче фараон тӗлӗк курнӑ: вӑл юхан шыв хӗрринче тӑрать пек. Сасартӑк шывран ҫичӗ самӑр ӗне тухнӑ пек те хӑмӑшлӑхра ҫисе ҫӳреме пуҫланӑ пек. Унтан шывран ҫичӗ ырхан ӗне тухнӑ пек, ырханнисем самӑррисене ҫисе янӑ пек. Фараон ҫавӑнтах вӑранса кайнӑ. Тепре тӗлӗре пуҫласан, ӑна урӑх тӗлӗк курӑннӑ. Пӗр хӑмӑлтан тулли те аван ҫичӗ пучах ӳснӗ пек. Анчах та вӗсемпе юнашарах ҫилпе типсе кайнӑ ҫичӗ выҫӑ пучах ӳссе тухаҫҫӗ пек те тулли пучахӗсене ҫисе яраҫҫӗ пек.

Вӑрансан фараон кунашкал тӗлӗксем курӑннӑран шикленсе ӳкнӗ. Вӑл Египетри мӗн пур ӑсчахсене чӗнтернӗ те вӗсене тӗлӗкӗсене каласа кӑтартнӑ. Анчах ку тӗлӗксем мӗне пӗлтернине пӗри те ӑнлантарса парайман.

Ҫавӑн чухне эрех паракан тарҫӑ Иосиф ятлӑ еврей каччине аса илнӗ. Вара тӗрмере ларнӑ чухне хӑйне тата ҫӑкӑр паракана курӑннӑ тӗлӗксене Иосиф ӑнлантарса панине, ун сӑмахӗсем чӑна килнине фараона каласа кӑтартнӑ. Фараон тӳрех Иосиф патне ҫынсем янӑ, ӑна илсе пырсассӑнах ҫапла каланӑ: «Эпӗ сан ҫинчен тӗлӗк ӑнлантарма пӗлет тенине илтрӗм». «Ӑна эпӗ мар, Турӑ Хӑй ӑнлантарса парать», – тавӑрнӑ Иосиф. Фараон ӑна икӗ тӗлӗкне те каласа кӑтартнӑ. «Турӑ фараона Хӑй мӗн тӑвассине пӗлтернӗ, – тенӗ Иосиф. – Ҫичӗ самӑр ӗнепе ҫичӗ тулли пучах вӑл – Египетра ҫичӗ ҫул хушши тырӑ вӑйлӑ пуласса пӗлтерет. Ҫичӗ ырхан ӗнепе ҫичӗ выҫӑ пучах вара – ҫав тырпуллӑ ҫичӗ ҫул хыҫҫӑн тепӗр ҫичӗ ҫул выҫлӑх пуласса пӗлтерет. Фараона пӗр пӗлтерӗшлӗ тӗлӗк икӗ хут курӑнни ҫакӑ чӑнах та Турӑ сӑмахӗ иккенне, ҫакна Турӑ часах пурнӑҫласса пӗлтерет».

Ӑнса килекен ҫичӗ ҫул хушшинче тырӑ-пулӑ пухса хумашкӑн Иосиф фараона Египет ҫӗрӗн пуҫлӑхне пӗр-пӗр ӑслӑ ҫынна лартма канаш панӑ.

*ПУЛТАРНИ 41:1–36*



## ИОСИФ – ПӖТӖМ ЕГИПЕТ ПУҪЛӐХӖ

Тӗлӗкӗсене ҫапла ӑнлантарни фараон кӑмӑлне килнӗ. «Эпир Иосиф пек ҫын, Турӑ Сывлӑшӗллӗ ҫын, урӑх тупайӑпӑр-и?» – тенӗ вӑл тарҫисене. Унтан вӑл Иосифа ҫапла каланӑ: «Ҫакна пурне те сана Турӑ пӗлтернӗ, ҫавӑнпа сан пек ӑслӑ-тӑнлӑ ҫын тупаяс ҫук. Эсӗ манӑн кил-ҫуртӑмра пуҫлӑх пулӑн, санӑн сӑмахна пӗтӗм халӑхӑм итлесе тӑрӗ. Эпӗ сана пӗтӗм Египет ҫӗрне тытса тӑракан пуҫлӑх тӑвӑп, патша пулнӑран санран аслӑраххи эпӗ кӑна пулӑп».

Вара фараон, хӑйӗн аллинчи ҫӗррине хывса, ӑна Иосиф пӳрнине тӑхӑнтартнӑ. Вӑл унӑн мӑйне ылтӑн вӑчӑра ҫакса янӑ, ҫине хаклӑ йышши тумтир тӑхӑнтартнӑ. Иосифа пӗтӗм халӑх саламлатӑр тесе, фараон ӑна хӑйӗн кӳмеллӗ тепӗр урапипе пӗтӗм Египет тӑрӑх илсе тухма хушнӑ.

Ҫапла Иосиф чаплӑ пуҫлӑха тухнӑ. Вӑл тӳрех хӑйӗн тивӗҫӗсене тума тытӑннӑ. Выҫлӑх ҫулӗсем ҫитсен Египет халӑхӗ вилсе ан пӗттӗр тесе, тырӑ ӑнса пулнӑ ҫулсенче пӳлме тулли тырӑ-пулӑ пухса хатӗрлесе хунӑ.

*ПУЛТАРНИ 41:37–48*



# ÇИЧӖ ВЫÇЛĂХ ÇУЛ

Тепӗр çичӗ çултан пӗтӗм çӗр çинче выçлăх пуçланнă. Унччен Иосиф Египетри мӗн пур хуласенче управлăха пит нумай тырă-пулă пухса хума ӗлкӗрнӗ. Çавăнпа та Египета Иосифран тырă илме тӗрлӗ çӗр-шывсенчен çынсем пыра пуçланă.

Египетра тырă пуррине Иаков та пӗлнӗ. Вара вăл тырă туянма унта хăйӗн вунă ывăлне янă, кӗçӗн ывăлне кăна, Вениамина, килтех хăварнă.

Египет çӗрӗнче Иосиф пуçлăх пулнă пирки пӗтӗм халăха тырă сутаканни те вăлах пулнă. Хайхи пӗртăванӗсем Египета çитнӗ те, çӗре çити пуç тайса, ăна тырă сутма тархасланă. Иосиф вӗсене палласа илнӗ, анчах лешсем ăна паллайман. Хăйсен пӗртăванне укçалла сутса янăранпа вӗсем шăллӗ çинчен нимӗн те илтмен, вăл пуçлăха тухни çинчен те пӗлмен.

Иосиф вӗсене палламăш пулнă та Египет çӗрӗн хӳтлӗхсӗр енӗсене шыраса çӳрекен вăрттăн сăнавçăсем тесе айăплама пуçланă. Пӗртăванӗсем хăйсем тӳрӗ çынсем, пурте пӗр çын ачисем пулнине, чи кӗçӗнни кăна килте юлнине каласа ӗнентерме тăрăшнă. Иосиф вӗсене хупса, хуралласа усрама хушнă. Тепӗр виçӗ кунран тин вăл пӗртăванӗсене çапла каланă: «Эсир тӳрӗ çынсем пулсан, сирӗнтен пӗри кунта юлтăр, ыттисем выçăпа аптăранă кил-йышӗсене тырă леçсе паччăр. Хăвăр сăмахăра тӳрре кăларас тесен, ку çӗр-шыва усал шухăшпа килменнине ӗнентерес тесен, шăллăра ман патăма илсе килӗр».

Çак сăмахсене илтсен пӗртăвансем хăйсем хушшинче çапла калаçнă: «Тăванăмăра сутса çылăха кӗнӗшӗнех пире çапла айăплав пулчӗ пуль. Вăл пире тархасланă чух эпир унăн чунӗ асапланнине куртăмăр, çапах ăна хӗрхенмерӗмӗр. Çавăншăнах пире çак инкек çитрӗ пуль». Хăйсен сăмахӗсене Иосиф ăнланнине вӗсем пӗлмен, мӗншӗн тесен вӗсем Иосифпа куçаруçă пулăшнипе калаçнă пулнă. Иосиф вара, вӗсен сăмахӗсене илтсен, тепӗр пӳлӗме тухнă та йӗрсе янă. Кайран вăл таварăннă та вӗсенчен пӗрне, Симеона, Египетра тытса хăварма хушнă. Миххисене тырă тултарнă хыççăн ыттисене Иосиф киле яма ирӗк панă.

*ПУЛТАРНИ 41:54–57; 42:1–25*



## ИОСИФ ВӐРТТӐНЛӐХА УҪНИ

Киле таварӑнсан Иосифӑн пӗртӑванӗсем хӑйсемпе мӗн-мӗн пулса иртнине ашшӗне каласа панӑ. Иаков вӗсене ватлӑхӗнчи пӗртен-пӗр йӑпанӑҫне, кӗҫӗн ывӑлне Вениамина, Египета ямастӑп тесе татӑклӑнах калать.

Анчах та тепӗртакран хайхи Египетран илсе килнӗ тырӑ та пӗтсе ҫитнӗ. «Татах кайӑр, хамӑр валли кӑштах тырӑ илсе килӗр», – тенӗ Иаков хӑйӗн ывӑлӗсене. Ывӑлӗсем ашшӗне Египет ҫӗрӗн пуҫлӑхӗ хӑйсене шӑллӗсӗр пыма та хушманни ҫинчен каланӑ. Вениамина вӗсемпе пӗрле яма Иаков чылайччен килӗшмен. Анчах та выҫлӑх аптӑратсах ҫитернӗ. «Хӑватлӑ Турӑ сире ҫав ҫынран ырӑлӑх тупма патӑрччӗ. Вӑл сире те, унта хӑварнӑ пӗртӑванӑра та, Вениамина та тавӑрӑнмалла тутӑрччӗ», – тесе пиллесе ҫула ӑсатнӑ вара ашшӗ ывӑлӗсене.

Ҫапла пӗртӑвансем Вениаминпа пӗрле Египета ҫитнӗ. Вениамина курсан Иосиф тепӗр пӳлӗме кайсах йӗнӗ. Унтан куҫҫульне шӑлса тасатса пӗртӑванӗсене хӑналамашкӑн тарҫисене чаплӑ апат-ҫимӗҫ хатӗрлеме хушнӑ. Египет пуҫлӑхӗ хӑйсене мӗншӗн ҫапла чысланине ӑнланманнипе пӗртӑвансем аптӑрасах кайнӑ. Юлашкинчен Иосиф чӑтса тӑрайман, йӗре-йӗре пӗртӑванӗсене ҫапла каланӑ: «Эпӗ – Иосиф. Аттем сывах-и-ха?» Ҫакна илтсен пӑлханса кайнӑ тӑванӗсем ним тавӑрса калама та пултарайман. «Ҫывӑхарах килӗр-ха», – тенӗ вара Иосиф вӗсене. Вӗсем ҫывхарсассӑн тӑванӗсене вӑл ҫапла каланӑ: «Эпӗ – Иосиф, эсир Египета сутса янӑ пӗртӑванӑр. Халӗ вара эсир ан кулянӑр, мана кунта сутса янӑшӑн хӑвӑра ан ӳпкелӗр. Мана Турӑ Египета сирӗн пурӑнӑҫӑра упраса хӑварма ячӗ. Ӗнтӗ мана кунта эсир мар, Турӑ ячӗ. Вӑл мана фараон ашшӗ пекех туса хучӗ, унӑн пӗтӗм кил-йышӗн хуҫи тата Египет ҫӗрӗн пуҫлӑхӗ турӗ. Часрах аттем патне кайса ҫак сӑмахсене пӗлтерӗр: „Санӑн ывӑлу Иосиф ҫапла калать: Турӑ мана пӗтӗм Египет пуҫлӑхӗ турӗ. Хӑвӑртрах ман патӑма кил, эпӗ сана тӑрантарса пурӑнӑп, мӗншӗн тесен выҫлӑх тата пилӗк ҫула пымалла“». Ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн Иосиф Вениамина ыталаса илнӗ те йӗрсе янӑ. Унтан ытти пӗртӑванӗсене те ытала-ытала чуптунӑ.

*ПУЛТАРНИ 42:36–38; 43:1–34; 45:1–15*



## ИОСИФ ХӐЙӖН АШШӖПЕ ТӖЛ ПУЛНИ

Иосиф патне пӗртӑванӗсем килнӗ тенине фараон та илтнӗ. Вӑл вара пӗртӑвансемпе ашшӗне, ачи-пӑчисене валли ҫул ҫине апат-ҫимӗҫ, ҫи-пуҫ, чаплӑ урапасем пама хушнӑ. Фараон вӗсене пурне те Египета куҫса пыма чӗннӗ.

Тавӑрӑнсассӑн пӗртӑвансем Иакова Иосиф ҫинчен пӗтӗмпех каласа кӑтартнӑ. Хӑйӗн савнӑ ывӑлӗ сывах пулнине илтсен, унпа курнӑҫма пултарасса пӗлсен, Иаков чун-чӗререн савӑннӑ. Вара ывӑлне курмашкӑн Египета кайма шут тытнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑнах Турӑ Иакова тӗлӗкре курӑнса ҫапла каланӑ: «Эпӗ – Турӑ, санӑн аҫун Турри. Египета кайма ан хӑра, мӗншӗн тесен унта Эпӗ сан ӑрӑвӑнтан аслӑ халӑх тӑвӑп. Эпӗ Египета санпа пырӑп, каялла та сана Хамах илсе тухӑп».

Иаков хӑйӗн мӗн пур ачисемпе, мӑнукӗсемпе пуҫтарӑннӑ та, пӗтӗм пурлӑхне илсе, Египета тухса кайнӑ. Чаплӑ урапине кӳлсе, вӗсене хирӗҫ Иосиф тухнӑ. Ашшӗпе тӗл пулсан вӑл савӑннипе чылайччен йӗнӗ.

Фараон, Иосиф патне тӑванӗсем килсе ҫитнине пӗлсен, Иосифа хӑй патне чӗнтернӗ те ҫапла каланӑ: «Акӑ аҫу та, тӑванусем те сан патна килсе ҫитрӗҫ. Пӗтӗм Египет ҫӗрӗ санӑн умӑнта, эсӗ вӗсене чи лайӑх ҫӗрсене уйӑрса пар».

Иосиф хӑйӗн тӑванӗсене Египетри чи лайӑх ҫӗрсене панӑ, вӗсене тырӑ-пулӑпа тивӗҫтерсе, ҫитменнине ҫитерсе тӑнӑ.

Иаков Ханаан ҫӗрне тавӑрӑнман, Египетрах юлнӑ. Вилес умӗн вӑл Иосифӑн икӗ ывӑлне, Манассияпа Ефрема, унтан хӑйӗн ытти ывӑлӗсене те пилленӗ. Хӑй каласа хӑварнӑ пекех, ывӑлӗсем Иаков вилсен ӑна Ханаан ҫӗрне илсе кайнӑ. Вара мӑн аслашшӗ-асламӑшӗсемпе юнашар, Авраампа Саррӑна, Исаакпа Ревеккӑна пытарнӑ Махпела хирӗнчи ҫӗр хӑвӑлне пытарнӑ.

*ПУЛТАРНИ 45 – 50*



## ИЗРАИЛЬ ХАЛĂХĔ ЕГИПЕТРА ЧУРАЛĂХРА ПУРĂННИ

Унтанпа чылай çул иртнĕ. Ĕнтĕ Иаков та, ывăлĕсем те тахçанах вилнĕ.

Иаков Месопотамирен Ханаан çĕрне каякан çул çинче Турăпа кĕрешнĕ чухне Хуçа Турă ăна пиллесе çĕнĕ ят панă – Израиль. Еврейларан куçарсассăн ку «Турăпа кĕрешнĕскер» тени пулать. Çавăнпа Иаков тăхăмне – еврей халăхне – паян кунчченех Израиль теççĕ.

Вăхăт иртнĕçемĕн Египетра урăх фараон патшана ларнă. Вăл ăслă Иосиф çинчен те, унăн ырă ĕçĕсем çинчен те нимĕн те пĕлмен. Çак фараон Израиль халăхĕ питĕ йышланса, вăйланса кайнине курнă. Вара вăл хăйĕн халăхне çапла каланă: «Атьăр Израиль çыннисене хирĕç мĕн те пулин шутласа кăларар. Унсăрăн, вăрçă тухас-тăвас пулсассăн, вĕсем пирĕн тăшмансене майлă пулĕç те пире хирĕç тăрĕç, пирĕн çĕр-шывран тухса кайĕç».

Израиль çыннисене йывăр ĕçпе хавшатмашкăн фараон вĕсене ĕçлеттерекен пуçлăхсем суйласа лартнă. Анчах та хĕсĕрленĕçемĕн Израиль халăхĕ хунасах, йышлансах пынă. Çавăнпа Египет çыннисем Израиль çыннисене тата ытларах пусахласа ĕçлеттернĕ, вĕсен пурăнăçне чăтмалла мар туса çитернĕ.

Анчах та Турă, Хăйĕн халăхĕ асапланса пурăннине курса, çав халăха хăтарма çăлакан янă.

*ТУХНИ 1:6–14*



## КАРÇИНККАРИ АЧА

Израиль халăхĕ йывăр ĕçпе те хавшаманнине, тата ытларах йышланса та вăйланса пынине фараон та пĕлнĕ. Вара вăл еврей хĕрарăмĕнчен çуралнă ывăл ачасене пурне те юхан шыва пăрахма хушнă.

Пĕр еврей хĕрарăмĕ ывăл ача çуратнă пулнă. Хĕрарăм ачине виçĕ уйăх хушши пытарса усранă. Текех пытарса хăварма май çуккине кура вăл пĕр карçинкка илнĕ те ăна сăмалаланă. Унтан ачине карçинккана вырттарнă та Нил çыранĕнчи хăмăшлăха пытарса хунă. Ачана мĕн пулассине аякран аппăшĕ сăнаса тăнă.

*ТУХНИ 1:22 – 2:4*



## МОИСЕЙ ФАРАОН ХӖРӖ ПАТӖНЧЕ

Ҫав вăхăтра фараон хӗрӗ хăйӗн хӗр тарҫисемпе шыва кӗме аннă. Сасартăк вăл хăмăшлăхри карҫинккана асăрханă та пӗр чурине ҫав карҫинккана илсе пыма хушнă.

Карҫинккана уҫса пăхсан фараон хӗрӗ унта ача йӗрсе выртнине курать. Ку еврей ачи иккенне вăл ăнланса илнӗ пулин те, хайхискер хӗрхеннипе ăна усрава илме шухăшлать.

Ҫав хушăрах ачан аппăшӗ пынă та патша хӗрӗнчен: «Ачана кăкăр ҫитерекен хӗрарăм кирлӗ мар-и?» — тесе ыйтнă. Фараон хӗрӗ ачана кăкăр ҫитерекен кирлӗ тенине илтсенех вăл амăшне чӗнсе пынă. Патша хӗрӗ вара ăна: «Ҫак ачана ил те мана ӳстерсе пар, уншăн эпӗ сана тӳлӗп», — тенӗ. Хӗрарăм пӗчӗк ывăлне илнӗ те ăна пăхма пуҫланă. Ача ӳснӗ. Хӗрарăм ăна фараон хӗрӗ патне илсе пынă, ҫак ача фараон хӗрӗшӗн ывăлӗ вырăннех пулнă. Фараон хӗрӗ ăна Моисей ятлă хунă.

Моисей фараон керменӗнче ӳснӗ. Хăйне Египет йăли-йӗркипе пăхса ӳстернӗ пулин те, еврей ачи пулнине вăл нихăҫан та манман. Ҫитӗнсе ҫитсессӗн вăл еврейсем хушшине лекнӗ те Израиль халăхӗ хăрушă пусмăрта пурăннине курнă. Пӗррехинче Моисей Египет ҫынни еврея хӗненине асăрханă. Тарăхса кайнипе Моисей Египет ҫыннине вӗлерсе хăйăр ăшне пытарса хунă.

Тепӗр кунне Моисей икӗ еврей харкашнине курнă. «Эсӗ мӗншӗн йăхташна хӗнетӗн?» — тесе ыйтнă вăл пӗринчен. «Пире суд тума сана кам ирӗк панă? — тавăрнă лешӗ. — Египет ҫыннине вӗлернӗ пек, эсӗ мана та вӗлерессшӗн мар пулӗ те?» Вара Моисей хăраса кайса: «Ку ӗҫ ҫинчен пӗлеҫҫӗ иккен», — тесе шухăшланă. Ҫав ӗҫ ҫинчен калаҫни фараон хăлхине те кӗнӗ, вара вăл Моисея вӗлерттересшӗн пулнă, анчах та Моисей Мадиам ҫӗрне тухса тарма ӗлкӗрнӗ. Унта вăл Иофор ятлă священника тӗл пулнă та унăн ҫемйинчех пурăнма юлнă. Иофор священник Моисея хăйӗн Сепфора ятлă хӗрне качча панă.

*ТУХНИ 2 – 3*



## ÇУНАКАН КӐ̆КЕН ТӖММИ

Моисей чылай çул хушши хăйĕн хуньăшĕн Иофорăн сурăхĕсене кĕтсе çӳренĕ. Пĕррехинче вăл кĕтĕвне аякка, пуш хире хăваласа кайнă та Туррăн Хорив ятлă тăвĕ патне пырса çитнĕ. Унта ăна çунакан кӳкен тĕмми ăшĕнчи вут-çулăмра Турă ангелĕ курăннă. Моисей пăхать – кӳкен тĕмми çулăмпах çунать, çапах та çунса пĕтмест. «Ку тĕлĕнмелле курăнăва патне кайсах пăхам-ха, – тенĕ Моисей, – мĕншĕн вăл тĕмĕ çунса пĕтмест».

Çывăхарах пырсассăн Моисей çунакан тĕмĕ ăшĕнчен хăйне Хуçа Турă чĕннине илтнĕ. «Моисей! Моисей! – тенĕ Вăл. – Кунта ан çывхар. Урунти пушмакна хывса пăрах, мĕншĕн тесен эсĕ тăракан вырăн – сăваплă çĕр. Эпĕ санăн аçун Турри, Авраам Турри, Исаак Турри, Иаков Турри». Турă çине пăхма хăранăран Моисей хăйĕн пит-куçне хупланă.

Хуçа Турă ăна çапла каланă: «Эпĕ Хамăн халăхăм Египетра асапланнине куртăм, фараон лартнă пуçлăхсем ăна мĕнле йĕртнине илтрĕм. Эпĕ унăн хĕн-хурне пĕлетĕп. Ăна Египет çыннисен аллинчен хăтарма, çав çĕртен пылпа çу юхса выртакан паха та анлă çĕре илсе тухма каятăп. Акă Израиль ывăлĕсем йĕни Ман патăма çитрĕ ĕнтĕ, вĕсене Египет çыннисем епле пусмăрланине куратăп. Ĕнтĕ кай: Эпĕ сана фараон патне яратăп. Манăн халăхăма, Израиль çыннисене, Египетран илсе тух».

Анчах та Моисей иккĕленнĕ. Кунашкал пысăк ĕçе тумашкăн вăл хăйне тивĕçсĕр тесе шутланă. «Фараон патне кайса Израиль çыннисене Египетран илсе тухма камах вара эпĕ?» – тенĕ Турра Моисей. Анчах та Турă ăна çапла тавăрнă: «Эпĕ санпала пулăп».

*ТУХНИ 3:1–12*



## МОИСЕЙПА ААРОН ЕГИПЕТ ПАТШИ ПАТӖНЧЕ

Турӑ Хӑйӗн халӑхне ирӗке кӑлармa хушса хӑйне фараон патне ярасса пӗлсессӗн Моисей ҫапла каланӑ: «Эй, Турӑҫӑм! Эпӗ селӗп, калаҫма та ӑста мар. Ман вырӑна кама та пулин урӑххине яр». «Санӑн Аарон пиччӳ ҫук-им? – тенӗ ҫавӑн чухне Хуҫа Турӑ. – Эпӗ вӑл хитре калаҫма пултарнине пӗлетӗп. Эпӗ сире мӗн каламаллине, мӗн тумаллине вӗрентсе тӑрӑп. Сан вырӑнна халӑхпа калаҫаканӗ вӑл пулӗ. Ҫапла вӑл сан чӗлхӳ-ҫӑвару пулӗ, эсӗ уншӑн турӑ вырӑннех пулӑн».

Ҫакӑн хыҫҫӑн Моисейпа Аарон Египет патши патне пынӑ та: «Израиль Турри, Хуҫамӑр, ҫапла калать: Ман халӑхӑма ирӗке яр, вӑл пуш хирте Маншӑн уяв тутӑр, Мана парне кӳтӗр», – тенӗ. Анчах фараон каланӑ: «Ӑна итлесе Израиль ҫыннисене ирӗке ямашкӑн Хуҫамӑр текенни Камах вара Вӑл? Эпӗ нимӗнле Хуҫамӑра та пӗлместӗп, Израиль ҫыннисене те ямастӑп. Мӗншӗн эсир, Моисейпа Аарон, халӑха ӗҫлеме чӑрмантарса ҫӳретӗр? Кайӑр, хӑвӑр ӗҫӗре тӑвӑр». Вара фараон Израиль ҫыннисене тата хаярраӑнрах хӗсӗрлеме тытӑннӑ, вӗсене тата ытларах ӗҫлеттерме пуҫлӑхсене хушнӑ.

Фараон куҫӗ умӗнчех Хуҫа Турӑ нумай хӑватсемпе паллӑсем кӑтартнӑ. Анчах та хытӑ чӗреллӗ фараон Израиль халӑхне ярасшӑн пулман.

Вара Хуҫа Турӑ Египет халӑхне тӑхӑр тӗрлӗ асап курмалла тунӑ: Нил шывӗ юн пулса тӑнӑ, Египет ҫӗрне пӗтӗмпех шапасем хупласа илнӗ, тусан пӗрчисем ӳпресем пулса тӑнӑ, Египет ҫӗрӗнче шӑна ӗрчесе кайнӑ, ҫынсемпе выльӑх-чӗрлӗхе икӗ хӑрушӑ чир – юхан-суран тата ҫӑпан – ернӗ, пӑр ҫапса кайнӑ, пӗтӗм Египет ҫӗрне хӗрлӗ шӑрчӑк сырса илнӗ те ешерекен мӗн пур йывӑҫ-курӑка ҫисе янӑ, унтан вара пӗтӗм Египет ҫӗрӗнче сӗм-тӗттӗм пулса ларнӑ. Анчах та фараон пушшех хаярланса кайнӑ. Турӑ янӑ асапсене хӑй ыттисемпе пӗрлех тӳснӗ пулин те, Израиль халӑхне Египетран кайма ирӗк паман. Вара Моисейпа Аарон ӑна юлашки, вуннӑмӗш, асап ҫитессипе хӑратма пуҫланӑ.

*ТУХНИ 4 – 10*



## ПАСХА ПУТЕККИН ЮНӖ

Туррӑн тӗрлӗрен аслӑ хӑвачӗсене, Турӑ тавӑрнине курма-тӳсме тивнӗ пулин те, фараон чун-чӗри ҫемҫелмен. Вара Моисей каланӑ: «Хуҫа Турӑ ҫапла калать: „Ҫур ҫӗр ҫитсен Эпӗ Египет тӑрӑх тухӑп. Вара престол ҫинче ларакан фараонӑн малтанхи ывӑлӗнчен пуҫласа ал арманӗ ҫавӑрса ларакан хӗрарӑм чуран малтанхи ывӑлӗ таранччenex – Египет ҫӗрӗнчи кашни ҫемьерех малтан ҫуралнӑ ывӑл ачасем – вилсе пӗтӗҫ. Малтан ҫӑвӑрланӑ пур выльӑх-чӗрлӗх те вилсе пӗтӗ“».

Пӗтӗм Израиль ҫыннисене вара Турӑ Моисей урлӑ ҫапла пӗлтернӗ: ҫав каҫ кашни ҫемьерех пӗр сывӑ, кӑлтӑксӑр путек пусмалла. Вут ҫинче пӗҫернӗ путек ашне Израиль ҫыннисен ҫав каҫ тутлӑлла (йӳҫӗтмесӗр пӗҫернӗ) ҫӑкӑрпа тата йӳҫӗ курӑксемпе ҫимелле. Турӑ еврей ҫемйисене кил-ҫуртӑн алӑк янахӗсемпе урлавӗсене пуснӑ путек юнӗпе сӗрсе тухма хушнӑ. Хуҫа Турӑ ҫапла каланӑ: «Эсир пурӑнакан кил-ҫурт ҫине сӗрнӗ юн Мана валли тунӑ паллӑ пултӑр. Эпӗ юн курӑп та сирӗн тӗлӗртен иртсе кайӑп. Эпӗ Египет ҫӗрне тавӑру янӑ чухне вара сире инкек тивмӗ».

Израиль ҫыннисем Турӑ хушнине пурнӑҫланӑ. Каҫхине Египет ҫыннисем яланхиллех ҫывӑрма выртнӑ. Ҫур ҫӗр ҫитсен вара вӗсен малтан ҫуралнӑ ывӑлӗсем пурте вилнӗ. Ҫӗр варринче пурте вӑраннӑ: фараон хӑй те, тарҫисем те, пӗтӗм Египет халӑхӗ те. Египет ҫӗрӗнче талккӑшӗпех хыттӑн ӳлесе йӗни илтӗнсе тӑнӑ, мӗншӗн тесен вилӗм кӗмен пӗр кил те юлман.

Ҫавӑнтанпа Турӑ Израиль халӑхне «Пасха» ятлӑ уяв туса панӑ. «Пасха» сӑмах (еврейла «песах») «юнашар иртни» тенине пӗлтерет – Турӑ Египет ҫыннисене тавӑру янӑ чухне еврей кил-ҫурчӗсене кӗмен, юнашар иртсе кайнӑ. Хӑйсем ҫӑлӑнса юлнине астуса, Израиль ҫыннисен ҫуллен ҫак уявра путек пусса тутлӑлла пӗҫернӗ ҫӑкӑрпа ҫимелле.

*ТУХНИ 11; 12:1–17, 30*



## ТУРĂ ИЗРАИЛЬ ХАЛĂХНЕ ЕГИПЕТРАН ИЛСЕ ТУХАТЬ

Çав каçах фараон Моисейпа Аарона чĕнтерсе илнĕ те çапла каланă: «Пуçтарăнăр та пирĕн çĕр-шывран тухса кайăр: хăвăр та, пĕтĕм Израиль халăхĕ те. Хăвăр каланă пек, Хуçа Турра кайса пуççапăр. Хăвăр каланă пек, вак выльăх-чĕрлĕхĕре те, шултрине те илĕр. Кайăр та мана пиллĕх парăр».

«Капла эпир пурте вилсе пĕтетпĕр», – тесе, Египет çыннисем еврейсене хăвăртрах тухса кайма хистенĕ.

Вара Израиль çыннисем Египет чиккинелле тухса кайнă: ачасемсĕр пуçне улт çĕр пине яхăн арçын çуран пынă. Израиль çыннисемпе пĕрле тĕрлĕ халăх çыннисем те питĕ нумайăн пынă. Израиль çыннисем унтан пысăк кĕтӳ хăваласа тухнă, кĕтӳре вак выльăх-чĕрлĕх те, шултри те пулнă.

Египетран илсе тухнă чустаран вĕсем тутлăлла пашалу пĕçернĕ: Египетран васкаса тухса каймалла пулнă пирки вĕсен çул çине урăх апат хатĕрлемелĕх те вăхăт çитмен.

Израиль халăхĕ Египетра пурĕ тăват çĕр вăтăр çул хушши пураннă.

Турă Израиль халăхне пуш хирти çулпа Хĕрлĕ тинĕс патнелле ертсе кайнă. Хăйĕн халăхне ăçта илсе каймаллине пĕртен-пĕр Хуçа Турă кăна пĕлнĕ. Çавăнпа та Турă вĕсем умĕнче çул кăтартса кăнтăрла пĕлĕт юпа ăшĕнче, çĕрле вара вут юпа ăшĕнче çутатса пынă. Пĕлĕт юпа чарăнсассăн Израиль çыннисем чатăр лартса каннă. Пĕлĕт юпа куçа пуçласассăн вара вĕсем каллех çула тухнă. Кăнтăрлахи пĕлĕт юпапа çĕрлехи вут юпа Турă халăхĕн куçĕнчен нихăçан та çухалман.

*ТУХНИ 12:31–40; 13:20–22*



## ИЗРАИЛЬ ХАЛĂХĔ ХĔРЛĔ ТИНĔС УРЛĂ КАÇНИ

Израиль çыннисем Египетран хăйсен Туррине парне кӳмешкĕн кăна кайман, вĕсем пуçĕпех тухса тарнă текен хыпара фараон илтнĕ. Вăл вара мĕн пур юланучĕсемпе, вăрçă кӳмисемпе, пĕтĕм çарĕпе вĕсене хыçран хăвалама тытăннă.

Израиль çыннисем Хĕрлĕ тинĕс хĕррине тухсан, малалла çул пĕтсен, вĕсене Египет çыннисем хăвалаupdatedса çите пуçланă. Умри тинĕсе тата хыçри Египет çыннисене курсан еврейсем хăйсене пуш хирте вилмешкĕн Египетран илсе тухрăн-им тесе, Моисея ӳпкелеме тытăннă. Анчах та Моисей вĕсене çапла каланă: «Ан хăрăр! Кăмăлăрсене çирĕплетĕр, вара эсир Хуçамăр хăвăра çăлăнăç янине курăр. Халĕ хăвăра йĕрлекен Египет çыннисене эсир тек нихăçан та курмăр. Лăпланăр, сирĕншĕн Турă кĕрешĕ».

Турă Моисея аллине тинĕс еннелле тăстарнă. Моисей аллине тăссанах Хуçа Турă хĕвел тухăç енчен вăйлă çил кăларса тинĕс хумĕсене хăвала пуçланă, çапла майпа çĕр каçа шыв икĕ еннелле сарăлнă та Израиль халăхĕ умĕнчи тинĕс типĕ çĕр пулса тăнă. Вара Израиль халăхĕ тинĕс варринчи типĕ çĕрпе каçа пуçланă, тинĕс шывĕ икĕ енчен те хӳме пек тăнă.

*ТУХНИ 14:5–22*



## ЕГИПЕТ ÇАРĔ ХĔРЛĔ ТИНĔСРЕ ПĔТНИ

Египет çыннисем, еврейсене хăваласа, шыв сирĕлнипе пулнă тинĕс тĕпне кĕнĕ. Ирхине Хуçа Турă хайхисен çар кӳмисене пута-пута лармалла тунă, çавăнпа вĕсем кӳмисене аран-аран сĕтĕркелесе пынă. Египет çарĕ йăлтах арпашăнса кайнă. Çакна курсан Египет çыннисем пĕр-пĕрин хушшинче калаçа пуçланă: «Израиль çыннисенчен тарар, мĕншĕн тесен пире хирĕç вĕсемшĕн Турă кĕрешет».

Турă халăхĕ тинĕс тĕпĕпе каçса пĕтсен Турă Моисея каланă: «Аллуна тинĕс еннелле тăс, Египет çыннисем, вĕсен çар урапthese юланучĕсем шыв айне пулччăр». Моисей Турă хушнă пек тунă, вара тинĕсе шыв тавăрăннă та, Египет çыннисем шыв айне пулса путса вилнĕ.

Çапла майпа Хуçа Турă çав кун Хăйĕн халăхне хăтарнă. Еврейсем Египет çыннисене çĕнтерме пултарнă Туррăн аслă хăватне курнă. Халăх Турăран хăраса ӳкнĕ, вара Хуçа Турра та, Унăн чурине Моисея та ĕненме пуçланă.

Вара Моисейпа пĕтĕм халăх аслă Хăтаракана мухтаса çакăн пек чаплă юрă юрланă:

Хуçа Турă – манăн çирĕплĕхĕмпе чапăм,
Вăл мана çăлса хăварчĕ.
Вăл – манăн Туррăм, Ăна аслăласа мухтатăп.
Эй, Турăçăм, Санăн аллу хăватпа чапа тухрĕ,
Эй, Турăçăм, Санăн аллу тăшмана тĕп турĕ.
Хăвăн мухтавлăхун аслăлăхĕпе
Эсĕ Хăвна хирĕç пăлхав çĕклекенсене аяла турăн.
Эй, Турăçăм, кам танлашайĕ Санпала турăсем хушшинче?
Эй, Турăçăм, хăватсем Тăвакан, Сан евĕрли урăх кам пулайтăр?
Санăн сăваплăху аслă, мухтаву хăрататать.
Хуçа Туррăмăр ĕмĕр-ĕмĕр Патша пулĕ.

*ТУХНИ 14:23–31; 15:1–18*



## ТӲПЕРЕН ÇУНĂ МАННĂ

Израиль çыннисен Синай пуш хирĕ урлă каçас çулĕ вăрăм пулнă, Хуçа Турă вĕсене ертсе пынă. Анчах та пĕтĕм халăх Моисейпа Аарона ӳпкелеме пуçланă. Çак пуш хирте выçса виличчен пирĕн Египетра Турă алли тивнипе вилмеллеччĕ, тенĕ вĕсем.

Вара Моисей халăха çапла каланă: «Хуçамăр эсир Ăна ӳпкеленине илтрĕ. Эпир мĕн? Эсир пире мар, Хуçа Туррăмăра ӳпкелетĕр». «Эпĕ Израиль çыннисен ӳпкевне илтрĕм, – тенĕ Турă Моисея. – Вĕсене çапла кала: „Кĕçĕрех сирĕн аш пулĕ, ирхине вара тăраниччenex çăкăр çийĕр. Çапла майпа Эпĕ сирĕн Хуçăр, сирĕн Туррăр иккенне пĕлĕр“».

Каçалапа питĕ нумай путене вĕçсе килнĕ те Израиль çыннисен тапăрĕ çине анса ларнă. Вĕсене çăмăллăнах тытма май пулнă, çапла çынсем вĕсен тутлă ашне тăраниччenex çинĕ. Ирхине çынсем тапăр тавра сывлăм ӳкнине асăрханă. Сывлăм типсен çĕр çинче пас евĕрлĕ кĕрпе тăрса юлнă. Ку вăл Турă Хăйĕн халăхĕ валли тӳперен çутарнă çăкăр пулнă. Израиль çыннисем çав çăкăра «маннă» тенĕ. Тути унăн пыллă пашалу евĕрлĕ пулнă. Хуçа Турă çав маннăна кашнинех хăй пĕр кунта çисе ямалăх пухма хушнă. Кам çав апата пĕр кунлăхран ытларах пуçтарнă, çĕр каçиччен апат юлашки пăсăлса кайнă. Эрне кун вара Турă маннăна икĕ кунлăх пухма хушнă, мĕншĕн тесен Хуçа Турă шăмат куна канăçлăх кунĕ тунă, вăл кун никамăн та нимĕн те тума юраман. Эрне кун икĕ кунлăх пухнă маннă кăна пăсăлман.

*ТУХНИ 16:1–31*



## МОИСЕЙ ТУ ЧУЛЁНЧЕН ШЫВ КӐЛАРАТЬ

Израиль çыннисем Рефидим текен вырӑна çитсен, унта ёçме шыв çуккипе аптӑранӑ. Халӑх тарӑхса Моисейран шыв ыйта пуçланӑ. «Мӗншӗн эсир мана тарӑхатӑр, ӳпкелетӗр? Мӗншӗн Хуçамӑра тӗрӗслетӗр?» – тавӑрнӑ вӗсене Моисей. Унтан вӑл Турӑран пулӑшу ыйтса кӗлтума тытӑннӑ. Вара Хуçа Турӑ ӑна туяпа ту чулне çапма хушнӑ. Хӑйне Турӑ хушнӑ пек тусан, ту чулӗнчен шыв юхса тухнӑ, вара пӗтӗм халӑх ӗçсе тӑраннӑ.

Израиль çыннисем унта Турра ӳпкеленӗрен, «Турӑ пирӗнпе-и е пирӗнпе мар?» – тесе тарӑхса Турра тӗрӗсленӗрен Моисей çав вырӑна «Масса тата Мерива» тесе ят панӑ. Еврейларан куçарсассӑн вӑл «тӗрӗслени тата ӳпкелешни» тени пулать.

*ТУХНИ 17:1–7*



## ВУНӐ ПИЛ-ХУШУ

Моисей Турӑ суйласа илнӗ ҫын пулнӑ. Шанчӑклӑ та Хӑйне итлекенскер пулнӑран Хуҫа Турӑ халӑхпа ун урлӑ калаҫнӑ.

Израиль ҫыннисем Синай тӑвӗ патӗнче тапӑра тӑрсассӑн, Моисей ту ҫине хӑпарнӑ. Ҫавӑнта Хуҫа Турӑ ӑна ҫыруллӑ чул хӑмасем панӑ. Вӗсем ҫине вунӑ пил-хушу ҫырнӑ пулнӑ, Турӑ халӑхӗн ҫав пил-хушусене пӑхӑнса пурӑнмалла:

Эпӗ – Хуҫу, сана Египет ҫӗрӗнчен, чуралӑхран илсе тухнӑ Турру. Мансӑр пуҫне санӑн урӑх турӑсем ан пулччӑр.

Хӑвна валли тӳперине, ҫӗр ҫинчине, шыв айӗнчине сӑнарлакан пуҫҫапмалли нимӗнле кӗлетке те ан ту. Вӗсене ан кӗлту, ан пуҫҫап.

Хуҫун, хӑвӑн Туррун, ятне пули-пулми ан асӑн. Хӑйӗн ятне пули-пулми асӑнакана Турӑ айӑпламасӑр хӑвармӗ.

Шӑмат кун – сӑваплӑ кун пулнине асрах тыт. Ултӑ кун ӗҫле, хӑвӑн мӗн пур ӗҫӳсене ту, анчах та ҫиччӗмӗшӗ – шӑмат кун – хӑвӑн Хуҫа Туррушӑн пултӑр.

Аҫу-аннӳне хисепле, вара Хуҫу, хӑвӑн Турру, сана панӑ ҫӗр ҫинчи кун-ҫулу вӑрӑм килӗ.

Ан вӗлер.

Ан аскӑнлан.

Ан вӑрла.

Ҫывӑх ҫынну ҫинчен суя суйса ан кӑтарт.

Ҫывӑх ҫыннун кил-ҫуртне те, арӑмне те ан хапсӑн. Унӑн арҫын чурине те, хӗрарӑм чурине те, вӑкӑрне те, ашакне те – ҫывӑх ҫыннун мӗн пуррине нимӗнне те – ан хапсӑн.

*ТУХНИ 20*



## ЫЛТӐН ПӐРУ КӖЛЕТКИ

Турӑ Синай тӑвӗ ҫинче нумай кун хушши Моисейпа калаҫнӑ. Моисей ту ҫинчен вӑрахчен анманнине кура Израиль ҫыннисем Аарон патне пырса ҫапла каланӑ: «Пире малалла ертсе каякан турӑ туса пар-ха, мӗншӗн тесен хамӑра Египетран илсе тухнӑ Моисея мӗн пулнине пӗлместпӗр». «Хӑвӑр хӑлхӑрсенчи ылтӑн алкасене кӑларса мана илсе килсе парӑр-ха», – тенӗ вара Аарон вӗсене. Лешсем ӑна алкисене илсе пырса парсан, Аарон алкасене шӑратса ылтӑн пӑру кӗлетки ӑсталанӑ, ӑна каскӑчпа якатнӑ. Израиль ҫыннисем пӑру кӗлеткине курнӑ та кӑшкӑрсах янӑ: «Эй, Израиль халӑхӗ, акӑ сана Египет ҫӗрӗнчен илсе тухнӑ турру!» Тепӗр кунне вӗсем ирех тӑрса пӑру кӗлеткине парнесем кӳнӗ, ҫав кӗлеткене вӗсем турӑ тенӗ. Унтан халӑх ӗҫсе ҫинӗ те вӑйӑ выляса савӑнма тытӑннӑ.

Вара Хуҫа Турӑ ту ҫинче Моисея ҫапла каланӑ: «Ту ҫинчен хӑвӑртрах ан, мӗншӗн тесессӗн эсӗ Египет ҫӗрӗнчен илсе тухнӑ халӑху пӑсӑлса кайрӗ. Эпӗ кӑтартнӑ ҫултан вӗсем ытла та час пӑрӑнса кайрӗҫ». Турӑ ҫак хытӑ чунлӑ та чарусӑр халӑха пӗтересшӗн пулнӑ, анчах та Моисей Ӑна тархаслама пуҫланӑ. «Эй, Турӑҫӑм, – тенӗ вӑл, – Эсӗ Египет ҫӗрӗнчен хӑватлӑ вӑйпа, тӗреклӗ аллупа илсе тухнӑ халӑху ҫине Санӑн ҫиллӳ тулса ан ҫиттӗрччӗ. Ахальлӗн Египет ҫыннисем: „Вӑл вӗсене тусем хушшине вӗлерме, ҫӗр питӗнчен пӗтерме илсе тухрӗ“, – тейӗҫ. Ҫиллӳне хӗрхенӳпе ылмаштарсам, Хӑвӑн халӑхна ан пӗтерсем».

Моисей тархасланине Хуҫа Турӑ илтнӗ, вара Хӑй халӑхне пӗтерес шухӑша улӑштарнӑ.

Тарӑхса кайнипе Моисей аллинчи ҫыруллӑ чул хӑмасене ҫӗр ҫине ҫапса аркатнӑ. Унтан вӑл ылтӑн пӑру кӗлеткине илнӗ те ӑна вутра ҫунтарса, кӗллентерсе, кӗлне шывпа хутӑштарнӑ, Израиль ҫыннисене ҫав шыва хистесех ӗҫтернӗ.

*ТУХНИ 32:1–20*



## ПУХУ ЧАТĂРĔ

Израиль çыннисен тапăрĕнчен аяккарахра Моисей чатăр карнă, ăна вăл пуху чатăрĕ тесе ят панă. Хуçа Турăпа тĕл пулас текенсем пурте унта тăтăшах пуçтаранннă.

Моисей чатăрне кайма тухсанах пĕтĕм халăх ура çине тăнă, пурте, хăйсен чатăрĕсен чаршав алăкĕ умне тăрса, Моисей чатăра кĕрсе кайиччченех ун хыçĕнчен пăхса тăнă. Моисей хăйĕн чатăрне кĕрсессĕн, тӳперен пĕлĕт юпа анса, чатăра кĕмелли вырăнта чарăннă. Çав вăхăтра Турă Моисейпа калаçнă. Чатăр умĕнче тăракан пĕлĕт юпана пĕтĕм халăх пăхса тăнă, кашни, хăй чатăрĕн чаршав алăкĕ умĕнче тăрса, пуççапнă.

Турă Моисейпа куçа-куçăн, Хăйĕн тусĕпе калаçнă пекех, калаçнă. Моисей тапăра тавăрăнсан вара, ăна пулăшакан çамрăк, Навин ывăлĕ Иисус, чатăртан пĕртте кайман.

*ТУХНИ 33:7–11*



## КĔЛĔ ЧАТĂРĔ ТУМА ПАРНЕСЕМ КӲНИ

Пĕррехинче Турă Моисей урлă Хăйĕн халăхне тепĕр кĕлĕ чатăрĕ лартма хушнă. Çав чатăрта Израиль çыннисен Турра парне кӳмелле пулнă, унта Вăл Хăй яланах пуласса пĕлтернĕ.

Вара Моисей Израилĕн мĕн пур ывăлĕсене пухса çапла каланă: «Хуçамăр акă мĕн тума хушрĕ: кашни хăй пултарнă таран Турра парне кӳтĕр — ылтăн, кĕмĕл, пăхăр; сенкер, тĕксĕм хĕрлĕ, йăмăх хĕрлĕ тĕслĕ çăм; паха пирпе качака çăмĕ; хĕретсе е сенкерлетсе тутарнă сурăх тирĕ, акаци йывăçĕ, çутаткăça ямалли çу, сĕрмелли тата тĕтĕрмелли çу валлилĕх ырă шăршăллă сухăр-курăк, оникс чулĕ, священниксен тумтирне капăрлатмалли хаклă йышши чулсем. Кашниех килтĕр те Хуçамăр кĕлĕ çурчĕ валли мĕн тума хушнине пултарнă таран тутăр».

Моисей сăмахĕсене итлесе пĕтерсен Израиль çыннисем мĕн кирлине йăлтах çĕклесе пыма тытăннă. Чĕри хушнипе, кăмăлĕ туртнипе çынсем пуху чатăрĕ лартмашкăн, унта мĕн кирлине тумашкăн, сăваплă тумтир çĕлемешкĕн мĕн-мĕн кирлине илсе пырса Турра парнеленĕ. Арçынĕ те, хĕрарăмĕ те — кам Турра ылтăн парне кӳрес тенĕ, пурте — çĕрĕсем, алкасем, куçлă çĕрĕсемпе эрешлĕ çакăсем, тĕрлĕ ылтăн япаласем иле-иле пынă. Камăн сенкер, тĕксĕм е йăмăх хĕрлĕ тĕслĕ çăм, паха пирпе качака çăмĕ, хĕретсе е сенкерлетсе тутарнă сурăх тирĕ пулнă, çавсем пурте илсе пынă. Чылайăшĕ Турра ылтăнпа кĕмĕл парне кӳнĕ. Акаци йывăçĕ пуррисем ăна кĕлĕ çурчĕ тума йăтса пынă.

*ТУХНИ 35:4–29*



## КĔЛĔ ЧАТĂРНЕ СĂВАПЛАСА ТАСАТНИ

Кĕлĕ чатăрĕ тавра картиш пулнă, унăн тăршшĕ 50 метр, сарлакăшĕ 25 метр пулнă. Картишне пăхăрлатнă юпасем çине чаршав карса çавăрнă. Кĕлĕ чатăрĕ хăй тăваткĕтеслĕх евĕрлĕ пулнă, тăршшĕ унăн 15 метра яхăн, сарлакăшĕ 5 метр, çӳллĕшĕ 5 метр пулнă. Кĕмелли чаршавне хĕвел тухăç енчен карнă.

Кĕлĕ чатăрĕн ăш-чикки икĕ пӳлĕмлĕ пулнă. Пĕр пӳлĕмĕ, таса вырăн текенни, пысăкрах пулнă, унта ырă шăршăллă япаласем çунтарса тĕтĕрмелли ылтăнран тунă парне вырăнĕ пулнă. Парне вырăнĕпе юнашар ылтăн сĕтел ларнă, ун çине вун икĕ çăкăр хунă. Çак çăкăрсене сĕнӳ çăкăрĕсем е таса çăкăрсем тенĕ. Çав пӳлĕмрех çичĕ лампадăллă ылтăн çутаткăç пулнă. Тепĕр пӳлĕмне, шалтине, малтинчен чаршав карса уйăрнă. Унта ылтăнран тунă килĕшӳ арчи ларнă, арча çине икĕ ангел сăнарне тунă. Çав арчара килĕшӳ сăмахĕн чул хăмисем — Вунă пил-хушу çырнă хăмасем — упраннă. Пил-хушу арчи лараканнине Тасаран таса пӳлĕм тенĕ.

Таса вырăн текен пӳлĕме священниксене кăна кĕме юранă, Тасаран таса ятлине вара аслă священник çулталăкра пĕр хут кăна кĕме пултарнă.

Кĕлĕ чатăрне туса пĕтерсессĕн Моисей чатăра тата унта ĕçлес священниксене сăвапласа тасатнă. Çавăн хыççăн чатăра Турă мухтавлăхĕн çути тулнă, пуху чатăрне пĕлĕт хупласа илнĕ. Çĕрлесерен чатăра хупăрласа тăракан пĕлĕт вут пек çуталнă. Çав пĕлĕт кĕлĕ чатăрне яланах хупăрласа тăнă. Тепĕр чухне çав пĕлĕт чатăр çинчен çӳле çĕкленсе кайнă. Çакă вăл Турă янă паллă пулнă. Çав паллă тăрăх халăх илемлĕ Ханаан çĕрне, Хуçа Турă хăйсене Египетранах ертсе каякан çĕре, çула тухнă.

Библире чатăра Турă ирĕкне пĕлтерекен чатăр тата пуху чатăрĕ тесе те каланă, мĕншĕн тесен халăх Турра пуççапмашкăн чатăр тавра пухăннă.

*ТУХНИ 40:17–38*



## ВĂРТТĂН СĂНАВÇĂСЕМ ХАНААНРА

Акă ĕнтĕ Израиль çыннисем Ханаан çĕрĕ патне çитнĕ. Вĕсем Фаран пуш хирĕнче чарăнса тăнă. Çавăнта Моисей вун икĕ Израиль çыннине чĕнсе илнĕ те вĕсене Ханаан çĕрне çапла каласа ăсатнă: «Кăнтăрти çак çĕр-шыва кайăр та çĕрĕ мĕнлине, халăхĕ вăйлă е вăйсăррине, хулисем еплереххине сăнăр, çав çĕрте ӳсекен çимĕçсене илсе килĕр». Вун икĕ сăнавçă çула тухнă. Ханаан çĕрне вĕсем хĕрĕх кун пăхса çӳренĕ. Таврăннăçла хăйсемпе пĕрле гранат, смоква тата ытти улма-çырла илнĕ. Иçĕм çырли çупкăмĕ çав тери пысăк пулнă, ăна иккĕн патакпа çĕклесе пынă. Çитсессĕн сăнавçăсем ку чăнах та «пылпа сĕт юхакан» çĕр-шыв иккенне каласа панă, çирĕплетнĕ хуласенче пурăнакан вăйлă халăх пурăннине пĕлтернĕ. «Вăл халăх пирĕнтен вăйлăрах, эпир ăна хирĕç вăрçăпа каяймăпăр», – тенĕ вĕсем.

Турă хăйсене пулăшма шантарнине манса, хайхи сăнавçăсем халăхра Ханаан çĕрĕ-шывĕ çинчен суя хыпар сарса çӳренĕ, Израиль çыннисене хăратнă. Сăнавçăсенчен Иисус Навинпа Халев кăна Турра шанма пăрахман, халăха хăратса çӳремен. «Эпир çав çĕр-шыва туртса илме пултаратпăр, каяр та ăна çĕнсе илер», – тенĕ Халев. Анчах та çынсем вĕсене итлесшĕн те пулман. Пурте нăйкăшма, Моисейпа Аарона хăйсене Египетран илсе тухнăшăн ӳпкелеме пуçланă. «Хамăра валли урăх пуçлăх суйлар та Египета таврăнар», – тесе калаç-калама тытăннă унтан вĕсем. Иисус Навинпа Халев вара, çири кĕписене çура-çурах, çапла ӳкĕтленĕ: «Пире Хуçамăр хĕрхенет пулсан çав çĕр-шыва кĕрсе кайма пулăшĕ, пылпа сĕт юхакан çав çĕре пире парĕ. Турра хирĕç ан кайăр çеç, çав çĕр-шыври халăхран ан хăрăр çеç, мĕншĕн тесен эпир ăна парăнтарăпăр. Вĕсен нимĕнле хӳтлĕх те çук, Турă вара пирĕнпе, вĕсенчен ан хăрăр». Халăхăн пăлхавлă сăмахĕсене илтсен Моисейпа Аарон кулянса ӳкнĕ. Израиль çыннисем çапла чăркăш та ĕненӳсĕр пулни вĕсен чунĕсене ыраттарнă. Çавăн чухне Турă Моисея каланă: «Хăçанччен çак халăх Мана тарăхтарĕ? Эпĕ вĕсене темĕн чухлĕ хăватсемпе тĕлĕнмелле ĕçсем кăтартрăм пулин те, хăçанччен вĕсем Мана ĕненмĕç?» Унтан Хуçа Турă ку халăха пĕтерсе Моисейран хăйĕнчен çĕнĕ халăх пуçарса ярасси пирки каланă. Анчах та Моисей халăхăн çак пысăк çылăхне каçарма тархасласа Ăна ӳкĕте кĕртнĕ. Моисея пула Турă пăлхавлă халăха каллех каçарнă, анчах та, ĕненменлĕхшĕн айăпласа, Хăй шантарнă Ханаан çĕрĕнче Израиль çыннисен тепĕр ӳсĕмĕ çеç пурăнмалла пуласса пĕлтернĕ. Вăл вăхăтра пурăнакан Израиль çыннисенчен Хăйне шанма пăрахман Иисус Навинпа Халев çеç унта пурăнса курасси çинчен те Турă каланă.

*ХИСЕП 13:1–34; 14:1–30*



## КОРЕЙПА ДАФАНА
## ТАТА АВИРОНА АЙӐПЛАВ ХУНИ

Хуçа Турӑ пӗтӗм Израиль халӑхне Моисея итлемешкӗн, вӑл каланӑ пек пурӑнмашкӑн хушнӑ, мӗншӗн тесен Моисея Вӑл Хӑй пӗтӗм халӑх ертӳçи пулма суйланӑ. Анчах та пӗррехинче Израиль çыннисен тапӑрӗнче пӑлхав пуçланнӑ. Корей, Дафан тата Авирон пуçарнипе ик çӗр аллӑ çын Моисея хирӗç çӗкленнӗ. Вӗсем текех ӑна пӑхӑнса пурӑнасшӑн пулман, хӑвна ыттисенчен мала хуратӑн тесе, вӗсем Моисея айӑпланӑ.

Çакӑн çинчен илтсен Моисей пӗтӗм Израиль халӑхне пухнӑ та, Хуçа Турӑ хӑйне хушнӑ пек, Корейпа Дафан тата Авирон чатӑрӗсем патне пыма та, вӗсен япалисене сӗртӗнме те чарнӑ. Унтан Моисей çапла каланӑ: «Çак ӗçсене пурне те тума мана Хуçамӑр Хӑй янине, çакна эпӗ хам ирӗкӗмпе туманнине эсир çакӑнтан пӗлӗр: вӗсем ытти çынсем пекех вилес пулсан, вӗсене сарӑмсӑр нимӗн те пулмасан, эппин мана Хуçамӑр яман пулать. Енчен те Хуçамӑр халиччен пулманнине кӑтартсассӑн, çӗр çурӑлса кайса вӗсене пурлӑхӗ-мӗнӗпех çӑтса ярсассӑн, вӗсем чӗрӗллех çӗр тӗпне анса кайсассӑн, çак çынсем Турӑран пӑрӑннине пӗлӗр вара».

Вӑл çак сӑмахсене каласанах лешсен айӗнчи çӗр çурӑлса кайнӑ. Çӗр вӗсене хӑйсене те, Корей таврашӗсене те, вӗсен кил-çурчӗсемпе пурлӑхне те çӑтса янӑ.

Вара вӗсем чӗрӗллех хӑйсен мӗн пур пурлӑхӗпе пӗрле çӗр тӗпне анса кайнӑ, вӗсене çӗр хупласа хунӑ, вӗсем вилнӗ. Йӗри-тавра тӑракан Израиль çыннисем, вӗсем кӑшкӑрса йӗнине илтсен, хамӑра та çӗр çӑтса ярӗ тесе хӑраса, çавӑнтан пӑрахса тарнӑ. Тепӗр ик çӗр аллӑ пӑлхавçӑ çине Хуçа Турӑ тӳперен вут янӑ, вӗсем те пурте вилнӗ.

*ХИСЕП 16:1–3, 23–35*



## ПĂХĂР ÇĔЛЕН

Пуш хирпе пынăçемĕн халăх каллех шикленнипе Турра ӳпкелеме тытăннă. Моисея вĕсем тарăха-тарăха каланă: «Мĕншĕн эсир пире Египетран илсе тухрăр? Пуш хирте вилсе пĕтме-и? Кунта çăкăр та, шыв та çук, ку юрăхсăр апат пире йăлăхтарсах çитерчĕ». Çакнашкал ӳпкеленĕшĕн Турă Израиль çыннисем çине наркăмăшлă çĕленсем янă, вĕсем çынсене сăха-сăха вĕлере пуçланă. Çавăн чухне чылайăйăн Моисей патне пынă та çапла каланă: «Хуçамăра хирĕç, сана хирĕç калаçса эпир çылăха кĕтĕмĕр. Пире çĕленсенчен хăтартăр тесе Турра кĕлтусамччĕ».

Моисей халăхшăн кĕлтума пуçланă, вара Хуçа Турă ăна çапла хуравланă: «Пăхăр çĕлен ăстала та ăна çӳллĕ шăчă çине вырнаçтар, çĕлен сăхнă çын пăхăр çĕлен çине пăхсан вилмĕ». Моисей вара пысăк пăхăр çĕлен ăсталанă та ăна шăчă çине çирĕплетнĕ, унтан пурин умĕнчех шăччине çĕкленĕ. Çĕлен сăхнă çын, çак пăхăр çĕлен çине пăхсассăн, чĕрĕ юлнă.

*ХИСЕП 21:4–9*



## ВАЛААМ ПРОРОКПА АНГЕЛ

Пёррехинче Израиль çыннисем Иерихон хулинчен инçех мар, Иордан юхан шывĕ хĕрринче тапăра тăнă. Ку тăрăхра Моав çыннисем пурăннă. Израиль çыннисем йышлă пулнăран вĕсем хăраса ӳкнĕ. Вара Моав патши Валак хăйĕн çыннисене Валаам пророка чĕнсе пыма янă. Патша вĕсене пророка çапла калама хушнă: «Акă Египетран халăх тухса килчĕ, халĕ вăл халăх пирĕнпе кӳршĕллĕ пурăнать. Йышлă пулнăран çав çынсем пĕтĕм çĕре йышăнчĕç. Килсе çак халăха ылхансам, мĕншĕн тесен вĕсем пирĕнтен вăйлăрах. Эсĕ Израиль çыннисене ылханас пулсан, эпĕ вĕсене çĕнтерĕттĕм, хамăр çĕр-шывăмăртан хăваласа ярăттăм. Эсĕ пилленĕ çын пиллĕхлĕ пуласса, эсĕ ылханнă çынна ылхан çитессе эпĕ пĕлетĕп».

Валаам ашак ами çине утланса çула тухнă, унпа пĕрле икĕ тарçи те пынă. Сасартăк ашак ами çул çинче ангела асăрханă та çултан пăрăннă. Ангел аллинче хĕç пулнă. Çавăн чухне Валаам ашак амине çул çине кăларас тесе çапма пуçланă. Анчах та ашак ами каллех ангела курнă та çĕре выртнă. Пророк ăна татах патакпа çапма тытăннă.

Вара Турă ашака калаçмалла тунă, лешĕ этем чĕлхипе çапла каланă: «Эпĕ сана мĕн турăм вара? Эсĕ мана мĕншĕн хĕнетĕн?» Хуçа Турă çавăн чухне Валаам куçне уçтарнă та, вăл та хĕçпе тăракан ангела курнă. Валаам ăна çĕре ӳксех пуç тайнă. «Мĕншĕн эсĕ ашак амине хĕнерĕн? – тенĕ ăна ангел. – Çулу Ман умра тĕрĕс мар пирки Эпĕ сана чарма тухрăм». «Çул çинче мана хирĕç Эсĕ тăнине пĕлмесĕр çылăха кĕтĕм. Енчен те эпĕ мĕн тума шухăшлани Саншăн юрăхсăр пулсан, эпĕ каялла таврăнăп», – тенĕ Валаам ангела. «Çак çынсемпе кай, – тенĕ ăна ангел, – анчах та Эпĕ сана мĕн калăп, эсĕ те çавна кăна кала».

Моав çыннисем хăйсем патне пынă Валаам Израиль çыннисене ылханасса, вĕсем çине инкек-синкек ярасса кĕтнĕ. Анчах та Валаам çапла каланă: «Турă ăна ылханмасть пулсан, эпĕ Израиль халăхĕ çине епле-ха инкек-синкек ярам?» Çапла вара ылхан ярас вырăнне Валаам Израиль халăхне вицĕ хутчен пилленĕ.

*ХИСЕП 22:3–35; 23:7–20*



## ИИСУС НАВИН – МОИСЕЙ ВЫРĂННЕ ЮЛАКАН

Моисейăн ватти те çитнĕ ĕнтĕ, вара Турă ăна вăл часах вилесси çинчен каланă. Анчах та вилес умĕн Моисей, Турă халăхне ертсе пыма çын тупса патăр тесе, вĕсем кĕтӳçĕсĕр сурăхсем пек ан юлччăр тесе, Хуçа Турра тархасланă.

Турă Моисея çапла каланă: «Навин ывăлне Иисуса суйласа ил, унра Турă Сывлăшĕ пур. Аллуна ун пуçĕ çине хур та ăна Елеазар священник умне, пĕтĕм халăх умне тăратса пурин куçĕ умĕнчех ăс-хакăл пар. Израиль халăхĕ ăна итлетĕр тесе, халăх ертӳçин тивĕçне унпа пайла. Вара вăл мĕн тумаллине Елеазар священникран ыйтса пĕлĕ. Елеазар Турă умĕнче шăпа ярса тĕрĕс йышăнусем тăвĕ. Священник хăй те, мĕн пур Израиль çыннисем те, пĕтĕм халăх вăл каланă пек пурăнĕ». Моисей йăлтах хăйне Хуçа Турă каланă пек тунă.

Иисус Навин вăл Турă Израиль халăхне Ханаана кĕме пулăшасса шаннă хайхи икĕ сăнавçăран пĕри пулнă. Ун чухне вĕсем халăха çапла каласа хавхалантарнă: «Турă пирĕнпе! Ку çĕр-шывра пурăнакансенчен ан хăрăр!» Унтанпа ĕнтĕ чылай вăхăт иртнĕ. Израиль çыннисем пуш хирте хĕрĕх çула яхăн çӳренĕ. Çав хушăра ĕнтĕ Египетран тухнă чухне вăйпитти пулнă Израиль çыннисем Турă хăйсене шантарнă Ханаан çĕрне кураймасăрах вилсе пĕтнĕ. Пĕтĕмпех Турă каланă пек пулса иртнĕ. «Мана ӳпкеленĕшĕн, – тенĕ Турă, – эсир çак пуш хиртех вилсе пĕтĕр. Сирĕн хушшăрти çирĕм çултан аслăраххисенчен пĕри те, Иефонния ывăлĕ Халевсăр пуçне тата Навин ывăлĕ Иисуссăр пуçне, Эпĕ тупа туса шантарнă çĕр-шыва кĕреймĕ. Тăшмансен аллине лекĕç тенĕ ачăрсене кăна Эпĕ унта кĕртĕп, вĕсем эсир тиркенĕ çĕр-шыва курĕç. Эсир хĕрĕх кун хушши çав çĕр-шыва сăнаса тăтăр, хăвăр çылăхăрсемшĕн сирĕн хĕрĕх çул асап тӳсмелле пулĕ. Эпĕ сире пăрахсассăн мĕн пуласса пĕлмешкĕн пĕр куншăн пĕр çулталăк тӳсмелле тăвăп».

*ХИСЕП 14:29–30, 34; 27:12–23*



# КИЛЕС ӐРУСЕНЕ ХАЛАЛЛАНИ: ТУРРА АН МАНӐР!

Халăха Моисей çапла ăс-хакăл панă: «Астăвăр, хăвăра Хуçăр, сирĕн Туррăр, епле хушнă, çавăн пек тăвăр: сылтăмалла та, сулахаялла та ан пăрăнăр. Хуçăр, сирĕн Туррăр, кăтартнă çулпа çӳрĕр. Вара эсир чĕрĕ-сывă пулăр, сире аван пулĕ, хăвăра Турă парас çĕр-шывра нумай пурăнăр. Эй, Израиль халăхĕ, итле: пирĕн Туррăмăр – пĕртен-пĕр Хуçа Турă. Хуçуна, хăвăн Турруна, пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм чунтан, пĕтĕм вăйхалупа юрат».

Моисей Израиль çыннисене Турă Египетра тата пуш хир урлă каçнă чухне хăйсемшĕн кăтартнă тĕлĕнмелле паллăсемпе хăватсем çинчен килес ăрусене каласа кăтартма халалланă. Тата вăл Турă пил-хушăвĕсене, саккунĕсене, йĕркисене пурнăçласа пымашкăн ачасене вĕрентме хушнă. Израиль çыннисем Хуçа Турра пуш хирте сăнаса тĕрĕсленĕ пек, Ăна тĕрĕслесе пăхма хушман. Моисей вĕсене çапла каланă: «Хăвăра Египет çĕрĕнчен, чуралăхран илсе тухнă Турра ан манăр. Хуçăртан, хăвăр Туррăртан, хăрăр, пĕр ăна анчах пуççапăр. Урăх турăсене, хăвăр таврари ытти халăхсен туррисене ан пуççапăр, мĕншĕн тесессĕн Хуçăр, сирĕн Туррăр, эсир шанчăклă пуласса кĕтет. Хуçăр, сирĕн Туррăр, çилли тулса çитнипе сире çĕр питĕнчен пĕтерессрен асăрханăр. Хуçăрăн, сирĕн Туррăрăн, пил-хушăвĕсене упраса, Вăл хăвăра панă саккунсемпе йĕркесене çирĕп тытса пурăнăр. Хуçа Турă мĕне ырă та тĕрĕс тесе хисеплет, çавна анчах тăвăр».

*САККУНА АСТУТАРНИ 5:32–33; 6:4–25*


אנכי יהוה
לא יהיה
לא תשא
זכור את
כבד את
לא תרצח
לא תנאף
לא תגנב
לא תענה
לא תחמד

## ТУРРА ПАРНЕ КӲРЕССИ

Израилён кашни çыннинех Моисей çапла каланă: «Хуçу, санăн Турру, хăвна еткерлĕхе панă çĕр-шыва çитсен, çĕрӳ çинчен чи малтан пуçтарнă пур тĕрлĕ çимĕçе те карçинккана тултар. Вара Хуçу, санăн Турру, Хăйне пуççапма суйласа илнĕ вырăна кай. Çавăнта ĕçлесе тăракан священник патне пыр та çапла кала: „Эпĕ паян Хуçама, хамăн Туррăма, Вăл пирĕн мăн асаттемĕрсене тупа туса хамăра пама пулнă çĕр-шыва çитни çинчен пĕлтеретĕп. Акă ĕнтĕ, Турăçăм, Эсĕ мана панă çĕр çинчи чи малтанхи çимĕçĕн пĕр пайне илсе килтĕм“. Унтан карçинккуна парне вырăнĕ умне ларт та Хуçуна, хăвăн Турруна, пуççап.

Вара Хуçу, хăвăн Турру, сана тата кил-йышна панă мĕн пур ырăлăхшăн савăн. Турă Хăйĕн сăваплă вырăнĕнче пуççапма суйласа илнĕ левит та, сан патра пурăнакан ютран килнĕ çын та санпа пĕрле хавасланччăр.

Виçĕ çулта пĕрре эсĕ ху пухса илнĕ çимĕçĕн вуннăмĕш пайне левита, ютран килнĕ çынна, тăлăх ачасемпе тăлăх арăмсене тăраниччен çимелĕх пар. Çак кунран пуçласа сана Хуçу, санăн Турру, Хăйĕн йĕркисене, саккунĕсене тытса пыма хушать: вĕсене пĕтĕм чун-чĕререн тытса пыр, пурнăçласа тăр. Çак кунран Вăл хăвăн Турру пуласса, ху Унăн çулĕпе çӳрессе, Унăн йĕркисене, пил-хушăвĕсене, саккунĕсене пурнăçлассa, Унăн сăмахĕнчен иртмесĕр пурăнасса эсĕ Турра каларăн. Унăн пил-хушăвĕсене тытса пырсассăн, паянтан Турă та сана, Хăй малтан шантарнă пекех, Хăйĕн халăхĕ шутне кĕртĕ. Хăй малтан шантарнă пекех, Вăл сана Хăй пултарнă ытти халăхсенчен пуринчен те хисеплĕрех, мухтавлăрах, чаплăрах тăвĕ, эсĕ Хуçун, хăвăн Туррун, сăваплă халăхĕ шутне кĕрĕн».

*САККУНА АСТУТАРНИ 26:1–19*



## МОИСЕЙ ВИЛНИ

Турă Моисея Моав çĕрĕнчи Иерихон хулине хирĕç ларакан Нево тăвĕ çине хăпарма хушнă. Моисейăн çак ту çинче вилмелле пуласса Хуçа Турă ăна пĕлтернĕ. Моисей ту тăрне хăпарсассăн Хуçа Турă ăна Хăй Авраама, Исаака, Иакова тупа туса вĕсен ăрăвне пама пулнă çĕре кăтартнă. «Акă çав çĕр, – тенĕ Турă. – Эпĕ сана ăна кăтартрăм, анчах та эсĕ ĕнтĕ унта пулса кураймăн».

Çапла вара Турă чури Моисей, Хуçа Турă хăйне каланă пекех, çавăнта вилнĕ. Ăна Моав çĕрĕнче Веффегора хирĕç пĕр айлăмра пытарнă. Хăш вырăна пытарнине вара паян кунччене никам та пĕлмест. Моисей çĕр çирĕм çулта вилнĕ пулин те, унăн куç вăйĕ те, вăй-хавалĕ те чакман. Израиль çыннисем Моисейшăн хурланса Моав тӳремлĕхĕнче вăтăр кун хушши хӳхленĕ. Моисей пек пророк Израиль халăхĕн урăх пулман. Турă унпа куçа-куçăн калаçнă, Хуçа Турă ăна пĕтĕм Египет çĕрĕнче, фараонпа ăна пăхăнса тăракан мĕн пур халăх умĕнче, паллăсемпе хăватсем тутарнă. Моисей пек вăйлă пророк урăх пулман: пĕтĕм Израиль халăхĕ умĕнче вăл аслă та тĕлĕнмелле ĕçсем тунă.

Навин ывăлĕ Иисус вара, Моисей ун пуçĕ çине аллине хунăран, ăс-хакăлĕпе хăватлăланса, Моисей вилнĕ хыççăн Израиль халăхне ертсе пыма пуçланă. Израиль çыннисем ăна итленĕ, Хуçа Турă хăйсене Моисей урлă каланине йăлтах тытса пынă.

*САККУНА АСТУТАРНИ 34:1–12*



## РААВ ВĂРТТĂН СĂНАВÇĂСЕНЕ ÇĂЛСА ХĂВАРНИ

Моисей вилнĕ хыççăн Турă Иисус Навина çапла каланă: «Манăн чурам Моисей вилчĕ. Ĕнтĕ тăр та çак Иордан шывĕ урлă каçса кай. Ху та, мĕн пур халăху та Эпĕ Израиль çыннисене панă çĕр-шыва каçăр. Эсир çитсе ура пуснă кирек епле вырăн та сирĕн пулĕ. Çапла тумашкăн Эпĕ Моисея сăмах парсаттăм. Никам та, нихăçан та сана хирĕç тăраймĕ. Моисейпа пĕрле пулнă пекех, Эпĕ санпа та пĕрле пулăп. Сана пăрахмăп, санран пăрăнмăп. Анчах та çирĕп те паттăр пул, Манăн чурам Моисей хăвна панă саккуна çирĕп тытса пурăн. Ăса çухатас мар тесен, ĕçе ăнтарса пырас тесен, çав саккунран сылтăмалла та, сулахаялла та ан пăрăн».

Израиль çыннисем хăйсем часах çĕнсе илес Ханаан çĕрĕ патне çывхарсах пынă. Акă ĕнтĕ Иерихон ятлă пысăк хулана çирĕплетнĕ хӳмесем те курăнма пуçланă. Иисус Навин икĕ Израиль çыннине çав хулана вăрттăн сăнама янă. Унта çитсен сăнавçăсем Раав ятлă пĕр хĕрарăм çуртне çĕр выртма кĕнĕ. Израиль тапăрĕнчен хулана темĕнле сăнавçăсем килни çинчен, вĕсем Раав патне çĕр выртма кĕни çинчен Иерихон патшине систернĕ. Патша вара вĕсене тытма тарçисене янă.

Анчах та Раав Израиль çыннисемшĕн Турă тĕлĕнмелле ĕçсем туни çинчен илтнĕ пулнă. Иерихон хули Турă Израиль çыннисене пама пулнă çĕр çинче вырнаçнăран Турă çак хулана Израиль çыннисене парасса Раав ĕненнĕ. Çавăнпа та, Турра шанса, вăл çĕр выртма кĕнĕ сăнавçăсене пытантарнă та патша тарçисене хайхисем тĕттĕм пуласпах ман патăмран тухса кайрĕç, тенĕ. Вара патша тарçисем вĕсене Иерихонран Иордана каякан çулпа хăвалама пикеннĕ. Çĕрле Раав сăнавçăсене хăйĕн чӳречинчен вĕренпе хула хӳми çинчен антарса янă. Унăн çурчĕ хула хӳми ăшĕнчех вырнаçнă пулнă. Раав сăнавçăсене ту çине тарса кайма, хăйсене йĕрлекенсемпе тĕл пуласран унта виçĕ кун пытанса пурăнма хушнă.

*ИИСУС НАВИН 1:1–7; 2:1–16*



## ИОРДАН ШЫВӖ УРЛӐ КАҪНИ

Иерихона ҫитмешкӗн Израиль халӑхӗн Иордан шывӗ урлӑ каҫмалла пулнӑ.

Ҫавӑн чухне Турӑ Иисуса ҫапла каланӑ: «Эпӗ Моисейпа епле пӗрле пултӑм, санпа та ҫапла пӗрле пуласса Израиль ҫыннисем пӗлччӗр тесе, паянтан Эпӗ сана пӗтӗм Израиль халӑхӗ умӗнче асла кӑларӑп. Эсӗ килӗшӳ арчине ҫӗклесе пыракан священниксене Иордан шывне кӗрсессӗнех чарӑнма хуш». Вара Иисус каланӑ: «Турӑ хӑвӑрпа пулнине эсир ҫакӑнтан пӗлӗр: Вӑл ҫак ҫӗр-шывра пурӑнакан хананейсене, хеттейсене, евейсене, ферезейсене, гергесейсене, аморрейсене тата иевусей халӑхне пурне те хӑваласа ярӗ. Акӑ Хуҫамӑрӑн, пӗтӗм тӗнче Патшин, килӗшӳ арчине Иордан урлӑ каҫармалла. Арчана ҫӗклесе пыракан священниксем шыва ярса пуссанах Иордан шывӗ юхма чарӑнӗ те хӳме пек тӑрӗ». (Ҫав вӑхӑтра, вырма вӑхӑтӗнче, Иордан тулӑх шывлӑ пулать, ҫырантан тухать.) Арча ҫӗклесе пыракан священниксем Иордан юхан шывне урисене пуссанах шыв юхма чарӑннӑ та ҫак вырӑнтан тӑвалла Адам хули патне ҫитиччченех хӳме пек тӑнӑ, ҫак вырӑнтан анатарахри шыв тинӗсе юхса кайнӑ.

Ҫапла пӗтӗм Израиль халӑхӗ Иорданӑн типнӗ тӗпӗпе каҫма пуҫланӑ. Халӑх каҫнӑ чухне килӗшӳ арчине ҫӗкленӗ священниксем Иордан варринче, типӗ ҫӗр ҫинче, тӑнӑ. Иисус Навин вун икӗ ҫынна ҫав вырӑнтан ҫак тӗлӗнтермӗше асӑнмалӑх пӗрер чул илме хушнӑ. Пӗтӗм халӑх Иордан урлӑ каҫсассӑн Турӑ Иисус Навина ҫапла каланӑ: «Килӗшӳ арчине ҫӗклесе пыракан священниксене Иорданран тухма хуш». Священниксем Иорданран тухсанах шыв каллех хӑйӗн ҫулӗпе юха пуҫланӑ.

Иордан тӗпӗнчен илтернӗ вун икӗ чула Иисус Навин пӗр Галгал ятлӑ вырӑнта палӑк пек купаласа лартнӑ.

*ИИСУС НАВИН 3:7–17; 4:1–24*



## ИЕРИХОНА ИЛНИ

Израиль ҫыннисем Иерихон патне ҫитнине курсан Иерихон патши хула хапхисене пурне те питӗрсе лартма хушнӑ. Анчах та Турӑ Иисус Навина каланӑ: «Иерихон хули те, патши те, салтакӗсем те – пурте санӑн пулӗҫ. Хӗҫлӗ-сӑнӑллӑ арҫынсем, килӗшӳ сӑмахӗн арчине ҫӗклесе, пурте куллен пӗрер хут хула тавра ҫаврӑнччӑр, ултӑ кун хушши ҫапла туччӑр. Килӗшӳ арчи умӗнче пӗрер трубаллӑ ҫичӗ священник пытӑр. Ҫиччӗмӗш кунне хула тавра ҫиччӗ утса ҫаврӑнӑр, священниксем трубисене кӑшкӑртса пыччӑр. Чи пысӑк труба сассине илтсен пӗтӗм халӑх кӑшкӑрса ятӑр: вара хула хӳми тӗпӗ-йӗрӗпех ишӗлсе анӗ, пӗтӗм халӑх хулана кӗрӗ».

Ушкӑн умӗнче хӗҫлӗ-сӑнӑллӑ салтаксем утнӑ, вӗсем хыҫӗнчен священниксем трубисене кӑшкӑртса пынӑ, кайра каллех салтаксем пынӑ. Халӑха вара Иисус ҫапла хушнӑ: «Шӑп пулӑр, ан калаҫӑр. Эпӗ сире: „Кӑшкӑрӑр!“ – тейиччenex пӗр сас та ан кӑларӑр. Эпӗ хушсан вара харӑс кӑшкӑрса ярӑр». Ҫапла вара Турӑ килӗшӗвӗн арчине ҫӗклесе вӗсем хула тавра пӗр хут ҫаврӑннӑ та тапӑра таврӑннӑ. Тепӗр кунне те Израиль ҫыннисем арча ҫӗклесе хула тавра ҫаврӑннӑ та хӑйсен тапӑрне таврӑннӑ. Вӗсем ҫавнашкал ултӑ кун хушши тунӑ. Ҫиччӗмӗш кун килӗшӳ арчине хула тавра ҫиччӗмӗш хут ҫӗклесе ҫаврӑнсан, священниксем трубисене кӑшкӑртса ярсан, Иисус халӑха каланӑ: «Кӑшкӑрӑр! Турӑ хулана сирӗн аллӑра парать!» Халӑх труба сассине илтнӗ-илтменех хыттӑн кӑшкӑрса янӑ, вара хула хӳми тӗпӗ-йӗрӗпех ишӗлсе аннӑ. Халӑх хулана пур енчен те кӗрсе кайнӑ та ӑна ҫӗнсе илнӗ.

Хулана маларах пырса кайнӑ икӗ сӑнавҫӑ хӑйсене хӑвалакансенчен пытарнӑшӑн Раавпа унӑн тӑванӗсене ҫӑлса хӑварма Раава сӑмах панӑ пулнӑ. Вӗсем ӑна Иерихона илнӗ вӑхӑтра чӳрече ҫумне хӗрлӗ вӗрен ҫыхса хума хушнӑ пулнӑ. Раав ҫапла тунӑ та. Вара вӗсем Раавпа унӑн тӑванӗсене Иерихонран илсе тухнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Иерихона тӗпӗ-йӗрӗпе ҫунтарса янӑ.

*ИИСУС НАВИН 6:1–24*



## АМОРРЕЙСЕМПЕ ÇАПĂÇНИ

Пĕррехинче Гаваон текен вырăнта Израиль çыннисемпе вĕсен тăшманĕсем, аморрейсем, хушшинче вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Çапăçу умĕн Турă Иисус Навина çапла каланă: «Ан хăра, Эпĕ вĕсене санăн аллуна паратăп, вĕсенчен пĕри те сана хирĕç тăраймĕ». Иисус ертсе пынипе Израиль çарĕ, хăйсем тăракан вырăнтан тухса, каç хӳттипе пынă. Израиль çарĕ аморрейсем çине кĕтмен çĕртен тапăннă. Лешсене Турă Израиль çыннисем умĕнче хăратса пăрахнă. Çапла Израиль çыннисем аморрейсене çĕнтернĕ, вĕсене Веферон тăвĕ çине каякан çулпа Азекпа Македа çитиччenех хăваланă.

Анчах та Израиль çарĕ тӳрех çĕнтереймен: вăл кун çапăçу вăраха кайнă. Вара Иисус Навин хĕвел ан антăрччĕ, кун вăрăмлантăрччĕ тесе, Турра кĕлтунă. Пĕтĕм Израиль çыннисем умĕнчех вăл: «Эй, хĕвел, Гаваон тĕлĕнче чарăн! Эй, уйăх, Аиалон айлăмĕнче чарăн!» – тесе кăшкăрнă. Вара хĕвелпе уйăх куçми пулнă, Израиль çыннисем тăшмана тĕппипе çапса аркатиччен вырăнтан хускалман. Çапăçу вĕçленнĕ хыççăн Иисус Навин çарĕ хăйĕн тапăрне çĕнтерӳпе таврăннă.

Этем Турра тархасланипе хĕвел тӳпере тăни, анăçалла куçманни унччен те, ун хыççăн та пулман. Çав кун Хăйĕн халăхĕшĕн Турă Хăй çапăçнă.

Турă Иисус Навина çапла каланă: «Эпĕ сана хушатăп: çирĕп те паттăр пул, ан шиклен, нимĕнрен те ан хăра, мĕншĕн тесен эсĕ кирек ăçта кайсассăн та Хуçу, санăн Турру, санпала». Çак сăмахсене Турă Хăйне ĕненекен кашни çыннах калать.

*ИИСУС НАВИН 1:9; 10:6–15*



## ИЗРАИЛЬ ТӐ̆РИСЕМ

Израиль халӑхӗ Ханаана пыриччен унта хеттей, гергесей, аморрей, хананей, ферезей, евей, иевусей халӑхӗсем пурӑннӑ. Хӑш чухне вӗсене пурне те Ханаан ҫыннисем теҫҫӗ. Ханаан ҫыннисем питӗ ҫылӑхлӑ пулнӑран вӗсене Хуҫа Турӑ пӗтерме шутланӑ. Ханаан ҫыннисен чи аслӑ туррисем Ваал тата Астарта пулнӑ. Ваала пуҫҫапнӑ чухне ҫынсем намӑссӑр, аскӑнла ӗҫкӗ-ҫикӗсем ирттернӗ. Ваала пуҫҫапмалли тӳпемлӗ текен вырӑнсенче вӗсем чӳксем тунӑ, хӑш чухне ҫынсене вӗлерсе те Ваала парне кӳнӗ.

Израиль халӑхӗ Ханаан ҫӗрӗнче пурӑнма тытӑннӑ. Ханаан ҫӗр-шывне хальхи Палестина территорийӗ (Израиль патшалӑхӗ) тата Иордан юхан шывӗнчен хӗвел тухӑҫнелли хӑш-пӗр тӑрӑхсем кӗнӗ. Моисей ҫак ҫӗре Израиль халӑхӗн 12 сыпӑкне (йӑхне) пайласа панӑ. Иаковӑн вун икӗ ывӑл пулнӑ, вун икӗ йӑх унӑн вун пӗр ывӑлӗнчен пуҫланса кайнӑ, акӑ вӗсен ячӗсем: Рувим, Симеон, Иуда, Дан, Неффалим, Гад, Асир, Иссахар, Завулон, Иосиф (Иосиф йӑхӗ икӗ ывӑлӗн – Ефремпа Манассиян – йӑхӗсем ҫине пайланнӑ) тата Вениамин. Левий йӑхӗн хӑйӗн ҫӗр пайӗ пулман: левитсене Турӑ Хӑйӗн Кӗлӗ чатӑрӗнче ӗҫлесе тӑма суйласа илнӗ, пурӑнасса вӗсем Израиль халӑхӗн ытти йӑхӗсем хушшинче, хуласенче, пурӑннӑ.

Ханаана ҫитсе вырнаҫнӑ хыҫҫӑн пӗр 300–400 ҫул хушши Израилӗн 12 йӑхӗн ҫирӗп тытӑмлӑ пӗр патшалӑх пулман. Вӗсене ҫӗрпе пӗлӗте Пултаракан пӗр Турра ӗненни пӗрлештерсе тӑнӑ. Апла пулин те вӗсем каллех кӗлеткесене пуҫҫапма тытӑннӑ, хӑйсем пурӑнакан вырӑнти ытти халӑхсен туррисене кӗлтуса Турӑ пил-хушӑвӗсенчен пӑрӑнса кайнӑ. Усал ӗҫсемшӗн тата кӗлеткесене пуҫҫапма тытӑннӑшӑн Турӑ Израиль халӑхне ҫилленнӗ, асап кӑтартнӑ: Израиль тӑшманӗсем – моавит, аммонит, амаликит, филистим, хананей тата мадианит халӑхӗсем – Израиль халӑхне ҫаратнӑ, чуралӑха илнӗ. Ҫак халӑхсен пусмӑрӗнче Израиль ҫыннисем нумай асапланнӑ, ҫӑлӑнӑҫ ыйтса Турра кӗлтунӑ. Халӑха тӑшмансен аллинчен хӑтармашкӑн ырӑлӑхлӑ Турӑ Израиль ҫыннисем хушшинченех тӳресем кӑларнӑ. Анчах та тӳресем вилсенех халӑх каллех кӗлеткесене пуҫҫапма, ашшӗсенчен те усалтарах ӗҫсем тума пуҫланӑ, вара каллех вӗсене Турӑ ҫилли ҫитнӗ.

Израилӗн тӳрисем ҫаксем пулнӑ: Гофониил, Аод, Самегар, Девора ятлӑ хӗрарӑм пророк, Варак, Гедеон, Авимелех, Фола, Иаир, Иеффай, Есевон, Елен, Авдон, Самсон тата Самуил. Ку кӗнекере эпир вӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем ҫинчен ҫеҫ каласа парӑпӑр.

Ҫапла вара, вӑл вӑхӑтра Израильте патша пулман, кашниех хӑйне мӗнле тӗрӗс пек туйӑннӑ, ҫавнашкал пурӑннӑ.



# ГЕДЕОН

Иисус Навин вилнӗ хыҫҫӑн Израиль ҫыннисем, кӗлеткесене пуҫҫапса, Турра тӑтӑшах ҫиллентернӗ. Пӗррехинче ҫавӑншӑн Хуҫа Турӑ вӗсене асап янӑ: Израиль халӑхне мадианитсем чуралӑха илнӗ. Мадианитсен пусмӑрӗ питӗ йывӑр пулнӑ, ҫичӗ ҫул иртсен тин вӗсем хӑйсен Туррине ҫӑлӑнӑҫ ыйтса кӗлтума пуҫланӑ. Хуҫа Турӑ вӗсене илтнӗ те Гедеона ҫулпуҫ тунӑ.

Гедеон хӑйне йӑваш тесе шутланӑ, анчах та Турӑ ӑна ҫапла каланӑ: «Эпӗ санпа пӗрле пулӑп, вара эсӗ мадианитсене, пӗр ҫынна ҫӗнтернӗ пек, ҫӗнтерӗн». Гедеонӑн ашшӗ Ваал турра чӳклемелли вырӑн тунӑ пулнӑ, Турӑ вара Гедеона ӑна аркатма хушнӑ. Гедеон хӑйӗн вунӑ тарҫипе пӗрле ӑна аркатнӑ, юнашар ӳсекен сӑваплӑ йывӑҫа каснӑ. Турӑ валли Гедеон ҫӗнӗ парне вырӑнӗ туса лартнӑ та унта Турра парне кӳнӗ. Тинех Гедеона Турӑ Сывлӑшӗ хупӑрласа илнӗ, вара вӑл Израиль тӑшманӗсене хирӗҫ йышлӑ ҫар пухма тытӑннӑ. Израиль халӑхне ҫӑлма Турӑ чӑнах та хӑйне суйласа илнине пӗлмешкӗн Гедеон ҫапӑҫу умӗн Турӑран паллӑ кӑтартма ыйтнӑ. Гедеон ыйтнӑ паллӑна Турӑ панӑ: йӗтем ҫине Гедеон пӗр касӑлӑха сарса хунӑ ҫӑм, йӗри-тавра тип-типех пулин те, сывлӑмпа нӳрелнӗ. Тепӗр касхине вара йӗри-тавра йӗп-йӗпе сывлӑм ӳкнӗ, ҫӑмӗ тип-типех пулнӑ.

Гедеон хӑйӗн ҫарӗпе мадианитсен тапӑрне хирӗҫ тӑрсан, Турӑ Гедеона ҫапла каланӑ: «Санӑн ҫару ытла та йышлӑ, Эпӗ вӗсене мадианитсене ҫӗнтермешкӗн ирӗк пама пултараймастӑп, ахальлӗн Израиль ҫыннисем мӑнкӑмӑлланса: „Вӗсене эпир хамӑрах ҫӗнтертӗмӗр!“ – тейӗҫ. Ҫавӑнпа та халӑх умне тухса: „Хӑравҫӑсемпе хӑюсӑррисем каялла тавӑрӑнӑр!“ – тесе пӗлтер». Гедеон ҫапла тунӑ та. Вара ҫирӗм икӗ пин ҫын каялла тавӑрӑннӑ, ҫарта вунӑ пин ҫын юлнӑ. Анчах та Хуҫа Турӑ халӑх халӗ те нумай-ха, тенӗ; Вӑл Гедеона ҫынсене юхан шыв хӗррине илсе пырса вӗсем шыв еплерех ӗҫнине сӑнама хушнӑ. Ытларахӑшӗ шывне чӗркуҫленсе ларса ӗҫнӗ. Виҫ ҫӗр ҫын кӑна ывӑҫласа илсе ӗҫнӗ. «Ывӑҫласа илсе ӗҫекен ҫак виҫ ҫӗр ҫын сире ҫӑлӗ – Эпӗ сире мадианитсене ҫӗнтермелле тӑвӑп», – тенӗ Гедеона Турӑ.

Каланӑ пекех пулнӑ. Турӑ тӗлӗнмелле хӑват кӑтартнӑ: Израилӗн виҫ ҫӗр ҫынни мадианитсемпе амаликитсен хӗрлӗ шӑрчӑк пек йышлӑ ҫарне ҫӗнтернӗ.

*ТӲРЕСЕН КӖНЕКИ 6 – 7*



## САМСОН ПАТТĂР

Туррăн тĕлĕнмелле ĕçĕсене, ырăлăхĕпе пулăшăвне курса тăнă çĕртех Израиль çыннисем каллех Турăран пăрăнса Ăна юрăхсăр ĕçсем тума пуçланă. Çавăншăн вĕсем каллех ирĕклĕхне çухатса филистимсен пусмăрĕнче хĕрĕх çул пурăннă. Пусмăрта пурăннă чухне Хуçа Турă вĕсене Самсон ятлă тӳре панă. Çав çыннăн тĕлĕнмелле вăйĕ çӳçĕнче пулнă. Ачи çураличченех Турă унăн ашшĕ-амăшне ачан çӳçне кастарма хушман, мĕншĕн тесен çынсем ăна Туррăн назорейĕ (урăхла каласан, «Турра халалланăскер») тейĕç, вăл Израиле филистимсенчен хăтарма пуçлакане пулĕ.

Самсон çав тери вăйлă пулнă. Пĕррехинче çул çинче ăна арăслан тĕл пулнă, Самсон вара хайхискерне качака путеккине çурса тăкнă пекех çурса тăкнă. Тепрехинче тата вăл, ашакăн янах шăммипе çапсах, пĕр кун хушшинче пин филистима вĕлернĕ. Кирек епле çирĕп вĕрене е сăнчăра вăл ним мар туртса татнă.

Пĕррехинче Самсон Газа хулине пынă, унтах çĕр каçма юлнă. Çавăнта ăна филистимсем вĕлерме шут тытнă. Вĕсем хула хапхисене хупса лартнă та ăна тытса вĕлерме тул çутăласса кĕте пуçланă. Анчах та Самсон çур çĕртех вăраннă та хуларан тухса кайма пуçтарăннă. Питĕрсе лартнă хула хапхине вăл юпи-сăлăпĕ качкиех тăпăлтарса кăларнă та хулпуççи çине çавăрса хурса ту тăрне кайса пăрахнă.

*ТӲРЕСЕН КĔНЕКИ 13:1–5; 14:5, 6; 15:14, 15; 16:1–3*



## САМСОН ВИЛĔМĔ

Самсон хĕрĕх çул хушши Израиль тӳри пулнă. Хăйĕн халăхĕн тăшманĕсене, филистимсене, вăл канлĕн пурăнма паман. Унăн вăйĕ мĕнре пулнине пĕлменрен филистимсем ăна вĕлерес тесен те вĕлереймен.

Пĕррехинче вĕсем Самсонăн савнă хĕрарăмне, Далидана, çав вăйăн вăрттăнлăхĕ пирки хăйĕнченех вăлтса тĕпчеме хушнă. Хĕрарăм унран виçĕ хут вăлта-вăлта ыйтнă, анчах Самсон тĕрĕссине каламан. Далида куллен йăлăнса ыйта пуçланă, тархасла-тархасла йăлăхтарсах çитернĕ. Чунĕ асапланса çитнипе вара Самсон хĕрарăма хăйĕн вăрттăнлăхне уçса панă-панах. «Çӳçĕме кастарсан манăн вăйăм çухалĕ, вара эпĕ те ытти çынсем пекех пулса тăрăп», — тенĕ вăл.

Çакна илтсен Далида ăна çывăратса янă та филистимсене чĕннĕ. Лешсем унăн çӳçне каснă та, Самсон тĕлĕнтермĕш вăйне çухатнă.

Филистимсем ăна тытса икĕ пăхăр сăнчăрпа çыхса хунă, куçĕсене чиксе шăтарнă та тĕрмере ал арманĕ çавăрттарса лартнă. Вăхăт иртнĕçемĕн Самсонăн çӳçĕ ӳсе пуçланă, вăйĕ те тавăрнма тытăннă.

Пĕррехинче çапла филистимсем хăйсен кĕлетке-туррине чӳклеме пуçтарăннă. «Пирĕн туррăмăр хамăр çĕре тустаракана, хамăр йăхташсенчен чылайăшне вĕлернĕ тăшмана, Самсона, аллăмăра тытса пачĕ», — тесе мухтанă вĕсем хăйсен туррине. Унтан вĕсем, хавасланса кайнăскерсем, çапла кăшкăра пуçланă: «Самсона илсе килĕр! Ан тив, вăл пире татах савăнтартăр!» Самсона илсе пынă та пĕтĕм çурт тăрри тытăнса тăракан икĕ вăта юпа хушшине тăратнă. Самсон Турра чĕнсе тархасланă: «Эй, Турă Хуçамăр! — тенĕ вăл. — Филистимсене ик куçăмшăн тавăрмашкăн, Турăçăм, мана аса илсе тепĕр хут кăна хал парсамччĕ». Вара Самсон çурта тĕревлесе тăракан вăта юпасене хирсе хускатнă та: «Пĕтсен те филистимсемпе пĕрлех пĕтем», — тенĕ. Юпасене мĕн пур вăйран тепре хирнĕ те, çурчĕ ишĕлсе аннă, çуртри çыннисем пурте аяла пулса вилнĕ.

*ТӲРЕСЕН КĔНЕКИ 16:14–30*



## РУФЬПЕ НОЕМИНЬ

Пĕррехинче, Израиль халăхне тӳресем тытса тăнă самана-ра, Иудея çĕрĕнче вăйлă выçлăх пулнă. Çавăн чухне выç-лăха пула Вифлеем хулинчи Елимелех ятлă çын арăмĕпе тата икĕ ывăлĕпе пĕрле Моав çĕрне куçса кайнă. (Моав çыннисем Вилĕ тинĕсрен хĕвел тухăçнелле пурăннă.) Çав çыннăн арăмĕ Ноеминь ятлă, ывăлĕсем Махлон тата Хилеон ятлă пулнă.

Елимелех вилсен арăмĕ икĕ ывăлĕпе тăрса юлнă. Икĕ ывăлĕ те моавит хĕрĕсене качча илнĕ: пĕри Орфа ятлă пулнă, тепри – Руфь. Вунă çула яхăн вĕсем пĕрлех пурăннă, анчах Ноеминĕн ывăлĕсем вилсе кайнă та, Ноеминь пĕчченех тăрса юлнă. Иудея çĕрĕнче выçлăх иртсе кайнă, Турă халăха вăйлă тырă-пулă ӳс-терсе панă тенине илтсен, тăлăх арăм тăван çĕр-шывне тавă-рăнма шутланă.

Ноеминь икĕ кинĕпе пĕрле Моав çĕрĕнчен тăван çĕр-шывне кайма çула тухнă. Çул çинче Ноеминь кинĕсене çапла каланă: «Аçăр-аннĕрсем патне тавăрăнăрах. Эсир ывăлăмсемпе те, манпа та ыррăн пурăнтăр, çавăншăн Турă сире тивлет патăр. Хуçамăр сире урăх упăшкаллă, урăх киллĕ пулмалла тутăр». Унтан вăл икĕ кинне те ыталаса чуптунă. Кинĕсем йĕре-йĕре: «Тавăрăн-мастпăр, эпир санпа пĕрлех санăн халăху патне кайăпăр», – тенĕ. Анчах та Ноеминь çине тăрсах тата каланă: «Кинĕмсем, унашкал тăвар мар, эпĕ сире шеллетĕп, мĕншĕн тесен Турă ман çине инкек-синкек ярсах тăрать». Кинĕсем каллех йĕре пуçла-нă. Орфа вара хунямăшĕпе сывпуллашса уйăрăлнă, Руфь хуня-мăшĕпех юлнă. «Хăвна пăрахса киле тавăрăнма ан та ӳкĕтле мана, – тенĕ Руфь хунямăшне. – Эсĕ ăçта кайăн, эпĕ те çавăнта пырăп. Эсĕ ăçта пурăнăн, эпĕ те çавăнта пурăнăп. Сан халăху ман халăх пултăр, сан Турру ман Турă пултăр. Эсĕ ăçта вилĕн, манăн та çавăнтах вилсе çĕре кĕмелле пултăр. Турă ман çине кирек епле инкек-синкек ярсассăн та, мана санран вилĕм çеç уйăрайĕ». Ноеминь, кинĕ хăйпе пĕрле пыма çирĕп шут тытни-не курсан, ăна тек ӳкĕтлемен вара.

*РУФЬ 1:1–17*



## РУФЬ ВООЗ АНИ ÇИНЧЕ

Ноеминьпе Руфь Вифлеема пынине пĕтĕм хула халăхĕ асăрханă. «Ноеминь, эсех-и ку?» – тесе ыйтнă пурте. «Малашне мана Ноеминь тесе ан чĕнĕр, Ноеминь тени „кăмăллă“ тени пулать, – тавăрнă вăл. – Малашне мана Мара тесе чĕнĕр, Мара тени „хурлăхлă“ тени пулать, мĕншĕн тесен Хăватлă Турă ман çине пысăк хурлăх ячĕ. Эпĕ кунтан ырлăх-пурлăхлă тухса кайрăм, каялла мана Турă пуш алăпах тавăрăнмалла турĕ».

Руфь пĕррехинче Вооз ятлă Ноеминь хурăнташĕн ани çине кайнă та выракансем хыççăн ӳксе юлнă пучахсене пуçтарма тытăннă.

Хайхи ана хуçи ку хĕрарăм хăйĕн тăван-пĕтенĕсене хăварса хунямăшне пăхма ют çĕре килнĕ Ноеминь кинĕ иккенне пĕлнĕ. Вара вăл Руфе чĕнсе илнĕ те ăна кашни кунах ана çине килме ирĕк панă. Тарçисене вăл юриех хăйсем хыççăн нумайрах пучах хăварма, хĕрарăмпа сăпайлă пулма хушнă.

Унтан Вооз Руфе çапла каланă: «Аçу-аннӳне хăварса хунямупа унăн халăхĕ патне килнĕшĕн Хуçамăр сана ырăпа тавăрса патăрччĕ. Хăйĕн хӳтлĕхĕнче канăçлăх тупма килнĕшĕн сана Хуçамăр, Израиль Турри, тивĕçлĕ сăвап патăрччĕ».

«Эй, ырă хуçам! – тавăрса каланă ăна кăмăллă та йăваш Руфь. – Хĕрхеннĕшĕн тавах сана. Эсĕ мана, чурусенчен те мĕскĕнрех хĕрарăма, ырă сăмахсем каласа лăплантартăн».

Нумаях та вăхăт иртмен, Вооз Руфе качча илнĕ. Руфĕн ывăл ача çуралнă. Вифлеем хĕрарăмĕсем Ноемине çапла каланă: «Хуçа Туррăмăр пиллĕхлĕ – Вăл санăн йăхна татăлма памарĕ. Çав ачан ячĕ Израильте мухтавлă пултăр. Вăл ача сана ватлăхра савăнтарĕ, пăхса усрĕ, мĕншĕн тесен вăл хăвна юратакан кинӳнтен çуралнă, кинӳ санăн çичĕ ывăлтан та пахарах». Ноеминь ачана алăран яман, чĕрçи çинче сиктерсе ӳстернĕ. «Ноеминĕн ывăл çуралчĕ», – тесе те каланă кӳршĕ хĕрарăмĕсем. Ачана Овид ятлă хунă. Каярахпа унран Иессей çуралнă, Иессейран Давид çуралнă. Давид вара Израилĕн чаплă патши пулнă. Ку кĕнекере Давид çинчен каланине вулăпăр-ха.

*РУФЬ 1:19–21; 2:1–16; 4:13–17*



## АННА КĔЛТУНИ

Израильти Рама хулинче пĕр Елкана ятлă çын пурăннă. Арăмĕ унăн Анна ятлă пулнă. Унăн ача-пăча пулман, çавăнпа вăл питĕ куляннă. Вĕсем кашни çулах Турă уявĕсенче хăйсен хулинчен Силомри сăваплă вырăна Хуçа Турра пуççапса парне кӳме çӳренĕ. Силомра Кĕлĕ чатăрĕ пулнă. Кĕлтунă чухне Анна яланах ӳпкелешсе йĕнĕ. Арăмне юратнăран Елкана ăна питĕ хĕрхеннĕ.

Пĕррехинче, вĕсем Силомри сăваплă вырăна пырсан, Анна каллех йĕме пуçланă. Вара Елкана ăна çапла каланă: «Анна, эсĕ мĕншĕн йĕретĕн? Мĕншĕн чĕрӳне çуратăн? Е эпĕ саншăн вунă ывăлтан та пахарах мар-и?»

Кĕлĕ чатăрне кĕрсен Анна йĕре-йĕре кĕлтуса Турра çапла сăмах панă: «Эй, Саваоф Хуçамăр! Эсĕ Хăвăн чуру епле хуйхăрнине куратăн. Эсĕ мана, Хăвăн чуруна, аса илсен, Хăвăн чуруна ывăл ача çуратмалла тăвас пулсан, эпĕ ăна ĕмĕрлĕхех Турра панă пулăттăм, çӳçне нихăçан та кастармăттăм».

Анна Турра чылай хушă кĕлтунине сăваплă вырăна кĕмелли çĕрте Илий священник пăхса ларнă. Анна хăй ăшĕнче калаçнă, тути кăна хускалнă. Ку хĕрарăм ӳсĕр пулĕ тесе шутласа: «Эсĕ, ӳсĕрскер, кунта нумайччен тăрасшăн-и? Кайса урăл-ха», – тенĕ Илий. «Çук, çук, ырă çыннăм, эпĕ эрех-сăра тавраш ĕçмен, кунта, Турă умĕнче, хуйхă пуснă чунăма уçрăм. Хăвăн чуруна путсĕр хĕрарăм тесе ан шутла, эпĕ йывăр хуйхă пуснăран, пысăк хурлăх тӳснĕрен çапла кĕлтурăм». «Канăçлăн каях эппин, – тавăрнă ăна Илий, – Хуçамăр, Израиль Турри, эсĕ Унран тархасласа ыйтнине йăлтах пурнăçлĕ». «Хăвăн чуруна хĕрхеннĕшĕн тавах сана», – тенĕ вара хĕрарăм. Кĕлĕ туса тавăрăнсан вара вăл малтанхи пек салхуллă сăн-питпе çӳреме пăрахнă.

Турă Анна кĕлтунине илтнĕ, Анна ывăл ача çуратнă.

*ПАТШАСЕН 1-МĔШ КĔНЕКИ 1:1–18*



## АННА САМУИЛА ТУРРА ХАЛАЛЛАНИ

Анна хӑйӗн ывӑлне Самуил ятлӑ хунӑ. Ывӑлӗ ӳсерехпе вӑл ӑна Илий священник патне Кӗлӗ чатӑрне илсе пынӑ та каланӑ: «Эпӗ хайхи сан умӑнта Хуҫамӑра кӗлтуса тӑнӑ хӗрарӑм. Эпӗ Турӑран ывӑл ача пама ыйтса кӗлтусаттӑм, Хӑйӗнчен мӗн тархасласа ыйтнине Хуҫамӑр пурнӑҫларӗ. Акӑ манӑн ывӑлӑм, эпӗ ӑна Хуҫамӑршӑн тӑрӑшмашкӑн ӗмӗрлӗхех Турра халаллатӑп».

Ҫакна каласан Анна хӗрхенӳллӗ Турра пуҫҫапнӑ, кӗллинче Ӑна ҫапла тав туса мухтанӑ:

> Турӑ чун-чӗреме савӑнӑҫпа тултарчӗ! Эсӗ мана инкекрен ҫӑлса хӑвартӑн, уншӑн эпӗ питӗ савӑнатӑп. Хуҫамӑртан сӑвапли урӑх ҫук, Сансӑр пуҫне урӑх турӑ ҫук. Пирӗн Туррӑмӑр пек шанчӑкли, тӗрекли урӑх ҫук. Мӑнкӑмӑлланса нумай сӑмах ан ваклӑр, сирӗн ҫӑвартан чараксӑр сӑмах ан тухтӑр, мӗншӗн тесен Турӑ йӑлтах пӗлет, пирӗн ӗҫе-хӗле Вӑл виҫнӗ ӗнтӗ. Хӑйӗн сӑваплисене Вӑл упраса усрать, Турӑ йӗркине пӑсакансем сӗмлӗхре ҫухалаҫҫӗ, мӗншӗн тесен этемӗн ҫирӗплӗхӗ унӑн вӑй-халӗнче мар. Хӑйне хирӗҫҫисене Хуҫамӑр тусан тӑвӗ.

Анна пӗчӗк Самуила Кӗлӗ чатӑрӗнче Илий священника парса хӑварнӑ, Самуил ҫавӑнтах ӳссе ҫитӗннӗ. Турӑ та, ҫынсем те ӑна юратнӑ. Ҫулленех амӑшӗ ӑна ҫӗнӗ тумтир илсе пырса панӑ, ҫав тумтире тӑхӑнса вӑл Турӑшӑн ӗҫлесе тӑнӑ.

*ПАТШАСЕН 1-МӖШ КӖНЕКИ 1:25–28; 2:1–10, 18, 19, 26*



## САМУИЛА ЧӖНЕКЕН САСӐ

Ҫамрӑк Самуил Кӗлӗ чатӑрӗнче Турӑшӑн тӑрӑшса ҫитӗннӗ. Вӑл вӑхӑтра Турӑ ҫынсемпе сайра хутра ҫеҫ калаҫнӑ, курӑнусенче те Вӑл сайра хутра ҫеҫ курӑнкаланӑ.

Пӗррехинче ҫӗрле Илий хӑйӗн вырӑнӗ ҫинче выртнӑ. Турӑ ҫутаткӑҫӗ сӳнмен пулнӑ-ха. Самуил Кӗлӗ чатӑрӗнче выртнӑ, Турӑ килӗшӗвӗн арчи те унтах ларнӑ. Турӑ Самуила чӗннӗ. «Эпӗ-ха ку!» – тенӗ Самуил. Унтан вӑл Илий патне чупса кайнӑ та: «Эпӗ-ха ку! Эсӗ мана чӗнтӗн-и?» – тенӗ. «Эп сана чӗнмен, кайса выртах», – тенӗ лешӗ. Самуил кайса хӑйӗн вырӑнӗ ҫине выртнӑ.

Анчах та Турӑ Самуила татах тепӗр хут чӗннӗ. Вӑл тӑрса татах Илий патне кайнӑ та: «Эпӗ-ха ку! Эсӗ мана чӗнтӗн-и?» – тенӗ. «Эп сана чӗнмен. Ывӑлӑм, кайса выртах», – тенӗ Илий.

Турӑ Самуила виҫҫӗмӗш хут чӗнсен, вӑл тӑрса Илий патне пынӑ та: «Эпӗ-ха ку! Эсӗ мана чӗнтӗн-и?» – тенӗ. Ҫамрӑка Хуҫа Турӑ чӗннине Илий ӑнланса илнӗ. Вӑл Самуила ҫапла каланӑ: «Кайса выртах, хӑвна чӗнсен вара ҫапла хуравла: „Турӑҫӑм, каласам, чуру Сана итлет“». Самуил хӑйӗн вырӑнӗ патне таврӑннӑ та выртнӑ. Хуҫа Турӑ малтанхиллех Самуила пырса чӗннӗ. Самуил хӑйне Илий вӗрентнӗ пек хуравланӑ: «Турӑҫӑм, каласам, чуру Сана итлет».

Турӑ вара ӑна Илий кил-йышӗпе Хӑй мӗн тӑвасса каласа пӗлтернӗ. Хӑйӗн ывӑлӗсем ӗненӳсӗр, чыссӑрла хӑтланса пурӑннине пӗлсе тӑнӑ ҫинчех Илий вӗсене чарманнишӗн ашшӗне, священника, айӑплама пулнӑ.

*ПАТШАСЕН 1-МӖШ КӖНЕКИ 3:1–14*



## ИЛИЙ СВЯЩЕННИК ВИЛӖМӖ

Çылăхлă ĕçĕсемшĕн Турă Израиль халăхне каллех айăплав хунă: çапăçура филистимсем Израиль çыннисене çĕнтернĕ. Çак çапăçура Израиль çыннисен тăватă пине яхăн салтакĕ вилнĕ. Аркатса тăкнă çарăн юлашкисем тапăра тавăрăнсан Израиль халăхĕн пуçлăхĕсем çапла каланă: «Мĕншĕн Хуçамăр паян филистимсене çĕнтерме ирĕк пачĕ? Атьăр Силом хулинчи Турă килĕшĕвĕн арчине хамăрпа илер. Арча хамăрпа пулсан, вăл пире тăшмансен аллинчен хăтарĕ». Силома янă çынсем унтан Саваоф Хуçа Туррăн килĕшӳ арчине илсе пынă. Ăна çĕклесе пыракансем хушшинче Илийăн икĕ ывăлĕ, Офни тата Финеес, пулнă. Анчах та тепĕр çапăçура та филистимсем Израиль çарне аркатса тăкнă. Израиль çарĕ, вăтăр пине яхăн çуран çар çынни çухатса, çапăçу хирĕнчен тарнă. Турă арчи филистимсен аллине лекнĕ, Илийăн икĕ ывăлне, Офнипе Финееса, вĕлернĕ.

Илий пурăнакан Силом хулине çапăçу хирĕнчен хыпарçă чупса çитнĕ те Израиль халăхĕ хăрушă çухату тӳсни çинчен пĕлтернĕ. Çак хыпара илтсен хула халăхĕ кăшкăрса йĕме пуçланă. Илий священник çав вăхăтра хула хапхи çумĕнче, çул хĕрринче ларнă. Хулара кăшкăрса йĕнине илтсен, вăл хыпарçăран мĕн пулса иртни çинчен ыйтса пĕлнĕ. «Израиль филистимсенчен пысăк çухату тӳсрĕ, – тенĕ ăна хыпарçă. – Турă арчине те туртса илчĕç, санăн икĕ ывăлна та вĕлерчĕç».

Хыпарçă Турă арчи пирки асăнсанах Илий месерле кайса ӳкнĕ те унăн чунĕ тухнă. Илий хĕрĕх çул хушши Израиль тӳри пулнă, тăхăр вун сакăр çула çитсен вилнĕ.

Хуçа Турă çĕрле малтанхи хут Самуила чĕнсе каланă пекех, Илий кил-йышĕн çапла пĕтмелле пулса тухнă.

*ПАТШАСЕН 1-МĔШ КĔНЕКИ 4:1–18*



## САУЛ – ИЗРАИЛЬ ПАТШИ

Самуил Израилĕн аслă пророкĕ пулса тăнă. Вăл хăйĕн халăхне ют кĕлетке-турăсене ĕненме пăрахма, чĕрĕ Турă патне таврăнма чĕннĕ. Ватăлсассăн, Самуил хăйĕн ывăлĕсене Израиль тӳрисем пулма лартнă. Анчах та вĕсем ашшĕн çулĕпе кайман: пуяс ĕмĕтпе кăна пурăннă. Вĕсем çынсенчен тĕрлĕ парне тавраш ĕ илнĕ, халăха тĕрĕс мар суд тунă. Вара Израильти халăх пуçлăхĕсем Самуил патне пырса çапла каланă: «Акă ĕнтĕ эсĕ ватăлса çитрĕн, ывăлусем вара сан çулупа каяс темерĕç. Çавăнпа та пире тытса тăма, ытти халăхсенни пек, патша ларт». Вĕсем ыйтни Турра юрăхлă маррине Самуил пĕлнĕ. Самуил кĕллине илтсе Хуçа Турă ăна çапла каланă: «Халăх мĕн ыйтать, çавна ту. Вĕсем сана мар, Мана йышăнмарĕç, Мана хăйсен Патши ан пултăр терĕç. Эпĕ вĕсене Египетран илсе тухнă кунран пуçласа паян кунччченех вĕсем Мана манса урăх турăсене пуççапрĕç. Мана вĕсем çителĕклĕ хисеплемен пекех, сана та хисеплемĕç. Çапла вара, вĕсене итле. Анчах та вĕсемпе пуç пулас патшана Эпĕ Хам суйласа лартăп, эсĕ çынсене патшан тивĕçĕсене кăна ăнлантарса пар».

Самуил халăха Турă сăмахне пĕлтернĕ. Вĕсемпе патша пуç пулсан, вăл хăйсенех пусмăрлама пуçласси çинчен, вĕсем терт-асапран хăтарма тархасласа йăлăнасси çинчен каланă. Тата вăл Хуçа Турă текех вĕсем йăлăннине итлес çукки пирки те асăрхаттарнă. Анчах та халăх Самуила итлесшĕн те пулман, çаплах хăйсене патша лартса пама ыйтнă.

Пĕррехинче Турă Самуил патне Саул ятлă яштак та чипер çамрăка янă. «Çак çын пирки Эпĕ сана каланăччĕ, вăл Манăн халăхпа пуç пулĕ», – тенĕ Самуила Хуçамăр. Самуил олив çăвĕн савăтне илнĕ те çуне Саул пуçĕ тăрăх янă. Унтан вăл Саула ыталаса чуптунă. «Хуçамăр сана Хăйĕн халăхне тытса тăмашкăн олив çăвĕ сĕрсе палăртрĕ», – тенĕ вăл. Çапла майпа Саул Израиль патши пулса тăнă.

*ПАТШАСЕН 1-МĔШ КĔНЕКИ 8:1–22; 9:2, 17; 10:1*



## ДАВИД КЁТӲÇЁ – ПУЛАС ПАТША

Самуил олив çăвĕ сĕрсе патшана лартнă Саул пĕррехинче пысăк çылăха кĕнĕ. Филистимсемпе çапăçăва кĕрес умĕн вăл Самуил пророка кĕтнĕ. Лешĕн пырса Хуçа Турра парне кӳмелле пулнă. Саул ăна çичĕ кун хушши кĕтнĕ. Самуил вара çаплах пыман. Саул çарĕнчи салтаксем пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн килĕсене салана пуçланă. Самуила кĕтсе илеймен пирки Саул, ку ĕçе священника кăна тума юранине пĕлсе тăнă çĕртех, Турра хăй парне кӳме шутланă. Самуил вара пырсассăнах Саула çапла калань: «Хуçу, хăвăн Турру, сана хушнине итлемесĕр эсĕ питĕ ăссăрла хăтлантăн. Хуçамăр сана, санăн тăхăмна, ĕмĕрлĕхех Израиль патшинче ларма ирĕк панă пулĕччĕ, анчах та халĕ патшалăху тытăнса тăраймĕ. Хуçамăр Хăй кăмăллакан урăх çынна тупĕ. Эсĕ Хуçамăр мĕн хушнине пурнăçламанран Турă çав çынна Хăйĕн халăхĕн çулпуçĕ тăвĕ».

Часах Турă Самуила хитре куçлă та кăмăллă сăн-питлĕ пĕр каччăна кăтартнă. Каччă Давид ятлă пулнă. Вăл ашшĕн сурăхĕсене кĕтнĕ, лайăх кĕтӳçĕ пулнă. Давид сурăхсене тăрăшса пăхнă, тискер кайăксенчен хӳтĕлесе упранă.

Хуçа Турă хушнипе Самуил Давида Израиль халăхĕн патши пулма олив çăвĕ сĕрсе палăртнă. Çавăнтанпа Давид яланах Турă Сывлăшĕллĕ пулнă. Саула вара Турă Сывлăшĕ пăрахса кайнă, ăна усал сывлăш асаплантарма пуçланă. Саул хăйне кĕвĕ-çемĕпе лăплантармашкăн тарçисене лира калакан ăста тупса пама хушнă. Тарçисем ун патне Давида чĕнсе пынă. Çапла майпа Давид патша керменĕнчех юлнă. Давид Саулăн кăмăлне кайнă, вара ăна Саул хăйĕн çар хатĕрĕсене йăтаканĕ туса хунă. Усал сывлăш асаплантара пуçласассăнах Саула Давид лира каласа йăпатнă. Çав самантсенче Саул кăмăлĕ уçăлнă, юсаннă, усал сывлăш та унран хăпнă.

*ПАТШАСЕН 1-МĔШ КĔНЕКИ 13:13, 14; 16:11–33*



## ДАВИДПА ГОЛИАФ

Пĕррехинче филистимсем Израиль халăхĕ çине вăрçăпа кайма çар пухнă. Саул патша ертсе пынипе Израиль çыннисем те вăрçа хатĕрленнĕ, вĕсем филистимсен çарĕ тăракан тăва хирĕç вырнаçнă. Давидăн виçĕ пиччĕшĕ те Саул çарĕнче пулнă. Тепĕртакран ашшĕ Давида пиччĕшĕсене апат çитерме Израиль çарĕ тăракан тапăра янă. Пиччĕшĕсене тата мĕн-мĕн кирлине, вĕсен сывлăхĕсем еплереххине ыйтса пĕлме хушнă.

Давид, Израиль тапăрне çитсен, пиччĕшĕсемпе калаçнă чухне Голиаф ятлă, улăп пек çӳллĕ филистим çыннине курнă. Вăл пăхăр тумпа, шлемпа пулнă, аллинче унăн вăрăм сăнăпа щит пулнă. Турă халăхĕнчен Голиаф тăрăхласа кулнă, Турра хурланă. Израиль çыннисенчен кам та пулин хăйне кĕрешсе çĕнтерсен тин филистимсем Израиль чури пулĕç, тесе йĕкĕлтенĕ вăл. Анчах та унăн улăпла кĕлеткине курнипех хăраса ӳкнĕ Израиль çыннисенчен пĕри те унпа кĕрешме хăюлăх çитереймен. Турра та, Израиль çарне те Голиаф хурланине илтсен, Давид хăйне Голиафпа кĕрешĕве тухмашкăн Саулран ирĕк ыйтнă. Анчах та Саул ăна: «Эсĕ çамрăк-ха, вăл вара нумай курнă çар çынни», — тенĕ. Давид Саула хăй кĕтӳ кĕтнĕ чухне арăслансемпе тата упасемпе кĕрешме Турă хăйне епле пулăшнине каласа кăтартнă. Вара тин Саул ăна кĕрешĕве тухма ирĕк панă, ăна тимĕр тумпа шлем тăхăнтартнă. Анчах та Давид кунашкал çар тумĕпе çӳреме хăнăхман пулнă. Çавăнпа та вăл çар тумне хывнă та аллине хăйĕн чулравне илнĕ, çырмара пилĕк яка чул тупса, вĕсене кĕтӳç хутаççине чикнĕ. Унтан вăл улăпла филистим çыннипе кĕрешĕве тухнă.

Хăй патнелле çывхаракан Давида курсан Голиаф унран тăрăхласа кулма пуçланă. «Эсĕ мана хирĕç туяпа тухрăн-и? Туяпа хăратма эпĕ йытă-им?» — тенĕ вăл. Давид ăна çапла каланă: «Эсĕ мана хирĕç хĕçпе, сăнăпа, щитпа тухрăн. Эпĕ сана хирĕç эсĕ хур тунă Саваоф Хуçамăрăн, Израиль Туррин, ячĕпе тухатăп». Унтан Давид хутаççинчен чул кăларнă та чулравне авăрласа пенĕ. Чулĕ Голиафа тӳрех çамкаран лекнĕ те, лешĕ ӳксе вилнĕ. Хăйсен паттăрĕ вилнине курсан филистимсем тарса саланса пĕтнĕ, çапла вара Израиль çарĕ вĕсене çĕнтернĕ.

*ПАТШАСЕН 1-МĔШ КĔНЕКИ 17:1–53*



## ИОНАФАН

Давид хӑй вӗлернӗ Голиафӑн пуҫне Саула кӑтартма йӑтса пырсан Саул унран: «Эсӗ кам ывӑлӗ пулатӑн?» – тесе ыйтнӑ. «Эпӗ Вифлеемри Иессей ывӑлӗ», – тесе хуравланӑ Давид. Вӗсен калаҫӑвне Саул патша ывӑлӗ Ионафан та илтнӗ. Вӑл вӑйлӑ та хӑюллӑ ҫамрӑк пулнӑ. Давид Ионафан кӑмӑлне кайнӑ, вара вӗсем пӗр-пӗринпе тус пулмашкӑн калаҫса килӗшнӗ. Килӗшӳ тунӑ ятпа Ионафан Давида хӑйӗн тумтирне, пиҫиххине тата хӗҫӗпе уххине парнеленӗ. Ионафан та Давид кӑмӑлне килнӗ.

Анчах та Саула вӗсен туслӑхӗ килӗшмен. Ҫитменнине тата филистимсене ҫӗнтерсе тавӑрӑнакан Израиль ҫыннисем Давида мухтаса: «Саул пин тӑшмана тӗп турӗ, Давид вара вун-вун пин тӑшмана пӗтерчӗ!» – тесе кӑшкӑрса пынӑ. Ку сӑмахсене илтсен Саул питӗ кӑмӑлсӑрланнӑ. Давид мухтавӗ ӑна вӗчӗрхентернӗ. Ҫавӑнтанпа вӑл Давида кӗвӗҫме пуҫланӑ, ӑна вӗлерме май шыранӑ.

Пӗррехинче, Саула усал сывлӑш каллех асаплантарнӑ вӑхӑтра, Давид Саула лира каласа йӑпатнӑ. Кӗтмен ҫӗртен хайхи Саул тытнӑ та Давида сӑнӑпа пенӗ, анчах та Давид пӑрӑнма ӗлкӗрнӗ пирки сӑнӑ юнашар вӗҫсе иртнӗ. Ионафан Давида хӑйӗн ашшӗ ҫиллинчен темиҫе хут та хӳтӗлесе хӑварнӑ. Вӑл Саула усал шухӑш тытнӑшӑн ӳпкелесе ҫапла каланӑ: «Хӑйӗн чурине пӗтерсе патшан ҫылӑха кӗмелле ан пултӑрах, вӑл сана хирӗҫле нимӗнле усал ӗҫ те туман-ҫке. Вӑл мӗн туни пӗтӗмпех хӑвӑншӑн усӑллӑ. Филистим ҫыннине вӗлернӗ чухне вӑл чунне пама хатӗрччӗ, ҫавна кура Хуҫамӑр Израиле аслӑ ҫӗнтерӳ пачӗ. Эсӗ ху та ҫакна пӑхса савӑнса тӑтӑн. Эппин халӗ мӗншӗн-ха айӑпсӑр юн тӑкса Давида пӗр сӑлтавсӑрах вӗлересшӗн?» Малтанласа Саул хӑйӗн ывӑлне итленӗ, Давида вӗлерместӗп тесе тупа та тунӑ.

*ПАТШАСЕН 1-МӖШ КӖНЕКИ 17:57, 58; 18:1–11; 19:1–6*



## ÇЫВĂРАКАН САУЛ УМĔНЧИ ДАВИД

Саул Давида кунран-кун вăйлăрах та вăйлăрах курайми пулса пынă. Юлашкинчен вăл Давида вĕлерме çирĕп шухăш тытнă. Ионафан çакăн çинчен пĕлнĕ те хăйĕн çывăх тусне систернĕ. Вара Давид пĕр ушкăн шанчăклă çын пухнă та, вĕсем Саулран тусем çине тарса пытаннă. Саул ăна хăйĕн çарĕпе тăтăшах йĕрленĕ, анчах та Турă Давида пулăшнăран ниепле те тытайман. Давидăн вара Саула вĕлермелли майсем çине-çинех пулнă, анчах та Турра юратнăран, Унран хăранăран вăл Саула усал сунман.

Пĕррехинче Саул Израиль çыннисенчен виçĕ пинлĕ ушкăн пухнă та Давида шырама тусем çине кайнă. Саул хăйĕн çар çыннисемпе пĕрле пĕр сăрт çине çĕр каçма чарăнса тăнине Давид пĕлнĕ. Вара çĕрле хăйĕн Авесса ятлă тусĕпе пĕрле ту çинчен Саул тапăрне аннă. Лешсем пурте çывăрнă. Вĕсем çывăракан Саул патне пынă та ун пуçĕ вĕçĕнче çĕре тăрăнтарнă сăнă асăрханă. «Çак сăнна илсе мана Саула вĕлерме ирĕк парсам», — тенĕ Давида Авесса тусĕ. Анчах та Давид Турă олив çăвĕ сĕрсе палăртнă çынна вĕлерме чарнă. Вăхăчĕ çитсессĕн Хуçамăр Хăй ăна пĕтерĕ, тенĕ вăл. Вĕсем Саулăн сăннипе шыв кăкшăмне илсе унтан кайнă.

Давид Саул тапăрне хирĕç ту тăррине улăхнă та, Саула кăшкăрса чĕнсе, ăна унăн япалисене кăтартнă. Вара Саул, хăй Давида темĕн чухлĕ усал тунă пулин те, лешĕ ăна тавăрманнине кура çапла каланă: «Çылăха кĕтĕм эпĕ. Давид ывăлăм, тавăрăнсам, текех сана усал сунмăп, мĕншĕн тесен кĕçĕр эсĕ манăн чунăма шеллерĕн. Эпĕ ăссăрла хăтланса пысăк çылăха кĕтĕм». Саул Давида урăх йĕрлеместĕп тесе сăмах панă пулин те, хăйĕн курайманлăхĕнчен хăтăлайман.

*ПАТШАСЕН 1-МĔШ КĔНЕКИ 20:1–43; 26:2–21*



## ДАВИД ПĔТĔМ ИЗРАИЛЬ ПАТШИНЕ ЛАРНИ

Чылайранпа пыракан çапăçусенчен пĕринче филистимсем Израиль çарне çапса аркатнă, Саулпа ывăлĕсене вĕлерне. Çапăçу хирĕнчи патша çарĕнчен пĕр çын Давид патне пынă та Саулпа унăн Ионафан ывăлне филистимсем çапăçура вĕлерни çинчен хыпарланă. Давид хăйĕн тăшманĕ Саул вилни çинчен илтĕ те савăнĕ, тесе шутланă çав çын. Анчах та Давид Саул хăйне мĕн чухлĕ усал туни çинчен аса та илмен. Хуйхăрнипе вăл Саулпа ывăлне асăнса хӳхлев юрри хывнă:

> Пурăннă чухне пĕр-пĕрне юратса, килĕштерсе пурăннă Саулпа Ионафан вилсессĕн те пĕр-пĕринчен уйăрălмарĕç. Ăмăрткайăкран çивĕчрехчĕ, арăсланран вăйлăрахчĕ вĕсем. Эй, Израиль хĕрĕ-арăмĕ! Саула асăнса йĕрĕр, вăл сире чаплă çи-пуç тăхăнтаратчĕ, тумтирĕрсене ылтăн капăрчăксемпе илемлететчĕ. Вĕсем, паттăрсем, çапăçу хирĕнче вилнине ĕненессĕм те килмест! Ионафан тăванăм, саншăн хуйхăратăп. Хаклăран та хаклăччĕ эсĕ маншăн. Сан юратăвна эпĕ хĕрарăм юратăвĕнчен те çӳлерех хураттăм.

Çапла хӳхлесе йĕнĕ Давид вĕсем вилнишĕн. Кайран вăл Хуçа Турă хушнипе Хеврон хулине пурăнма куçнă. Часах унта темиçе иудей пынă та Давида олив çăвĕ сĕрсе Израилĕн кăнтăр пайĕн, Иудейăн, патши пулма лартнă. Тепĕр çичĕ çул çуллăран Давид пĕтĕм Израиль патши пулса тăнă. Çапла Турă Хăй Самуил пророк урлă ăна панă сăмахне пурнăçланă.

*ПАТШАСЕН 2-МĔШ КĔНЕКИ 1:1–4, 23–27; 2:1–4*



## ТУРĂ КИЛĔШĔВĔН АРЧИНЕ ИЕРУСАЛИМА ИЛСЕ ПЫНИ

Давид пĕтĕм Израиль патши пулса тăрсан Иерусалима тĕп хула туса хунă, патша керменĕ те унта пулнă. Давида ăслă та вăйлă пулма Турă пиллĕх панă, çавăнпа та Давид Израилĕн мĕн пур тăшманĕсене çĕнтерме пултарнă. Турра юратнăран Давид Туррăн сăваплă килĕшӳ арчине хăйĕн хулинче, хăйĕн патĕнче усрасшăн пулнă. Çав арчана пĕр çапăçура филистимсем туртса илсе хăйсемпе çĕклесе кайнă пулнă. Каярахпа вĕсем арчана Израиль çыннисене тавăрса панă, вăл Кириат-Иарим текен вырăнта Аминадав ятлă çыннăн килĕнче упраннă. Давид арчана çавăнтан Иерусалим хулине куçарма шухăш тытнă.

Вăтăр пин çын пухса Давид çав арчана илме кайнă. Арчана Иерусалима илсе кĕрсен, ăна Сион тăвĕ çине çĕклесе хăпартсан, Давид савăнмаллипех савăннă. Вăл лира каласа ырă кăмăллă Турра мухтанă, Хуçа Турă кӳнĕ савăнăçшăн вăл ташласа та илнĕ. Пĕтĕм халăх та кăшкăрсах, труба каласах Турра мухтанă. Арча валли Давид ятарласа чатăр ларттарнă, арчана çавăнта вырнаçтарнă. Давид вара Турра тĕрлĕ парне кӳнĕ. Турра парне кӳрсе пĕтерсен вăл халăха Хуçа Турă Саваоф ячĕпе пилленĕ, Израиль çыннисене пурне те çăкăр, пашалу тата пĕçернĕ аш валеçсе панă.

Турă Давид патшана унăн йăхне тĕреклетме сăмах панă. Давидăн еткерне илес çын çинчен вăл çапла каланă: «Эпĕ уншăн ашшĕ пулăп, вăл вара Маншăн ывăлăм пулĕ. Вăл çылăха кĕрес пулсан Эпĕ ăна çаптарса айăплама вăйлисене хушăп, анчах та ырăлăхăма, Саулран туртса илнĕ пек, унран туртса илмĕп. Çав ырăлăха Эпĕ Саулран сан куçу умĕнчех туртса илтĕм. Санăн йăху вара тĕреклĕ пулĕ, патшалăху Ман умăмра ĕмĕрлĕх пулĕ, эсĕ ларакан престол та ĕмĕр-ĕмĕр тытăнса тăрĕ». Туррăн çак сăмахĕсене Давида Нафан ятлă пророк пĕлтернĕ. Вĕсене илтсен, Хуçа Турă умне тăрса, Давид Ăна çапла каланă: «Турăçăм, Хуçам! Эсĕ мана асла кăлармашкăн камах вара эпĕ? Манăн йăхăм кунашкаллине тивĕçлех-шим? Турăçăм, Хуçам! Эсĕ пур тĕлĕшĕнчен те аслăран та аслă! Сан евĕрлĕ Турă урăх çук, Сансăр пуçне урăх Турă çук. Паянтан, Хуçа Туррăмăр, Хăвăн чурупа унăн йăхне панă сăмахна ĕмĕрлĕхе çирĕплетсем, Ху каланине пурнăçласам».

*ПАТШАСЕН 2-МĔШ КĔНЕКИ 6:2–19; 7:14–16, 18–29*



## ДАВИД ПСАЛОМĔСЕМ

Давид кĕтӳçĕ пулнă чухнех, лира каласа, Турра мухтамалли юрăсем – псаломсем – хывса юрлама юратнă. Аслă патша пулса тăрсассăн та вăл юрă хывма пăрахман. Библире Давид псаломĕсем нумай. Псаломсене Турра юратса хывнă, вĕсем Унăн ятне мухтаççĕ.

Сурăхсене ырă кĕтӳçĕ кирлине Давид лайăх пĕлнĕ. Çавăнпа та хăйĕн пĕр псаломĕнче вăл Хуçа Турра мухтаса çапла юрлать:

Турă – манăн Кĕтӳçĕм;
манăн çитменни нимĕн те çук.
Вăл мана ешĕл улăхра канлĕх парать,
лăпкă юхан шыв патне илсе çӳрет,
чунăма хăват парать,
Хăйĕн ячĕшĕн
мана чăнлăх çулĕпе ярать.
Эсĕ манпа пулнăран
эпĕ вилĕмлĕ тĕттĕм варпа кайсассăн та
усалтан хăрас çук.
Санăн тую, Санăн патакку –
çавсем мана хӳтлĕхпе хастарлăх параççĕ.
Тăшмансен куçĕ умĕнчех
Эсĕ мана валли апат-çимĕç хатĕрлерĕн,
хисеп туса пуçăма олив çăвĕ сĕртĕн;
ĕнтĕ куркам тăп-туллиех.
Çапла, ĕмĕрĕм тăршшĕпех
ырăлăху, хĕрхенĕвӳ манпа пултăрччĕ,
эпĕ вара Хуçа Турă çуртĕнче чылайччен пурăнăп.

*ПСАЛОМ 22*



# НАФАН ПРОРОК ДАВИД УМĔНЧЕ

Давид Турра юратнă, Ăна итлесе пурăнма тăрăшнă. Анчах та пĕррехинче вăл пысăк çылăха кĕнĕ. Теплерен, каç кӳлĕм усăлма тесе вăл хăйĕн керменĕн тăррине хăпарнă. Çавăнтан вăл пĕр хĕрарăма курнă та пĕрре пăхсах юратса пăрахнă. Анчах та хĕрарăмĕ, Вирсавия ятлăскер, упăшкаллă пулнăран Давидăн ăна качча илме юраман. Вара Давид Вирсавия упăшкине, Урияна, вăрçа янă, лешне вăрçăра вĕлернĕ. Çапла Давид Вирсавияна качча илнĕ.

Нумаях та вăхăт иртмен, Турă Давид патне Нафан ятлă пророка янă. Нафан ăна çакнашкал ĕç-пуç çинчен каласа кăтартнă. «Пĕр хулара икĕ çын пурăннă: пĕри — пуян, тепри чухăн пулнă. Пуяннин шултра выльăх-чĕрлĕх те, вак выльăх-чĕрлĕх те йышлă пулнă. Чухăннин вара пĕр сурăхсăр пуçне нимĕн те пулман. Ăна та вăл путеклех илсе пăхса çитĕнтернĕ. Путекĕ унăн ачи-пăчисемпе пĕрлех ӳснĕ. Çиес çăкăрне те вăл ăна çитернĕ, хăй ĕçекен савăтранах ăна шăварнă, çывăрасса та путек ун кăкăрĕ çинчех çывăрнă. Чухăн çын путеке хăйĕн хĕр ачи пекех пăхса ӳстернĕ. Пĕррехинче пуян патне пĕр çулçӳревçĕ пынă. Хайхи пуян çын хăна валли апат хатĕрлемешкĕн вăкăрĕ-сурăхĕсенчен пĕрне те пустарасшăн пулман. Вăл чухăнăн сурăхне туртса илсе пустарнă».

Çак калава илтсен Давид тарăхса кайнă. «Кунашкал хăтланакан çынна вĕлермелле! — тенĕ вăл хыттăн. — Чунсăрла хăтланнишĕн унăн çав сурăхшăн тăватă хут хаклăрах тӳлемелле!»

«Çав çын вăл — эсĕ», — тенĕ Давида Нафан. Пророк Давида усал ĕçĕшĕн питĕ вирлĕ питленĕ. «Турă умĕнче çылăха кĕтĕм», — тенĕ ӳкĕнсе Давид. «Хуçамăр санăн çылăхна каçарчĕ, вилĕм ямарĕ, — тенĕ Давид ӳкĕннине курсан Нафан. — Анчах та усал ĕç туса эсĕ Хуçамăр тăшманĕсене Ăна хурламашкăн сăлтав тупса патăн, çавăнпа çуралнă ывăлу вилĕ». Çапла майпа Давидăн çылăхне каçарнă, анчах та айăплавсăр хăварман. Каярахпа Давид хурлăхлă ӳкĕнӳ псаломĕ хывнă, вăл юрăра çапла сăмахсем пулнă: «Хăвăн аслă ырăлăхупа каçарсам мана, Турăçăм... Çуса тасатсам мана, эпĕ юртан та шурă пулăп... Эй, Турăçăм, ăшăмра таса чĕре пултарсам, ăшăмри чăнлăх сывлăшне çĕнетсем».

*ПАТШАСЕН 2-МĔШ КĔНЕКИ 11:2–17; 12:1–14; ПСАЛОМ 50:9, 12*



## АВЕССАЛОМ ВИЛĔМĔ

Давид ывăлĕсенчен пĕри, Авессалом, питĕ мăнкăмăллă та чипер йĕкĕт пулнă. Уйрăммăнах унăн вăрăм çӳçĕ хитре пулнă. Авессалом хăйĕн ашшĕне юратман, престол çине хăй ларасшăн çуннă. Анчах та Израиль çыннисем Авессалома юратнă, хисепленĕ, мĕншĕн тесен вăл суйса, икĕпитленсе, ырă пулма пĕлсе, халăхшăн тăрăшнă пек туса çынсене хăйне майлă çавăрнă. Часах Давидăн, тăван ывăлĕ хĕсĕрленĕрен çар пухса, патша керменне пăрахса, аякка тухса тарма тивнĕ.

Ашшĕ ăçта тарнине тĕпчесе пĕлсен Авессалом ун хыççăн пысăк çарпа кайнă. Çакна илтсен Давид ăна хирĕç хăйĕн çар ушкăнне янă, анчах та Авессалома усал тума, вĕлерме хушман. Хăйне темĕн чухлĕ хуйхă кӳнĕ пулин те, Давид пурпĕрех ывăлне юратнă.

Çапăçу вăрманта пулса иртнĕ. Турă пулăшнипе Давид çарĕ çĕнтернĕ. Авессалом салтакĕсем тарса хăтăлма тăрăшнă. Авессалом хăй мул çине утланса тарнă. Анчах та пĕр лаштра юман айĕпе иртнĕ чухне унăн çӳçĕ йывăç туратĕнчен çакланса ларнă. Мул малалла вĕçтернĕ, Авессалом вара туратран çакăнса юлнă, урисем унăн çĕре перĕнеймен. Çакна курсан Давидăн çар пуçĕ патша ывăлне ухăпа персе вĕлернĕ.

Мĕн пулса иртнине пĕлсен Давид хуйха ӳкнĕ, нумай йĕнĕ. «Ах, Авессалом ывăлăм, Авессалом ывăлăм! Мĕншĕн сан вырăнна манăн вилмелле пулмарĕ-ши? Ывăлăм, Авессалом ывăлăм!» Турă Авессаломăн пăлхавлă пурăнăçне çамрăклах татнă.

Библире çапла каланă: «Кам ашшĕ-амăшне усал сунать, çавăн çутаткăçĕ сĕмлĕхре сӳнет».

*ПАТШАСЕН 2-МĔШ КĔНЕКИ 14:25–26; 15:1–6; 18:2–14, 32–33; ЫТАРУ КĔНЕКИ 20:20*



## ĂСЛĂ СОЛОМОН ПАТША

Давид вилнĕ хыççăн Хуçа Турă унăн Соломон ятлă ывăлне Израиль патшине лартнă. Пĕррехинче Соломона тĕлĕкре Турă курăннă та вăл мĕн ыйтнине пĕтĕмпех пама пулнă. Вара Соломон хăйĕн йышлă халăхне тытса тăмашкăн Турăран ăс ыйтнă. Хуçа Турă ăна çапла хуравланă: «Хăвна валли вăрăм кун-çул та, пуянлăх та, тăшманусен чунне те ыйтманран, тӳрĕ суд тума ăс ыйтнăран ĕнтĕ Эпĕ ыйтăвна тивĕçтерĕп. Эпĕ сана ăслă-тăнлă чун-чĕре паратăп. Эпĕ сана ху мĕн ыйтманнине те паратăп: пуянлăх та, мухтав та. Хăвăн ĕмĕрӳнте патшасем хушшинче сан пекки урăх пулмĕ. Давид аçу пекех Манăн йĕркесене, пил-хушусене пурнăçласа Манăн çулпа çӳресессĕн Эпĕ сана вăрăм кун-çул парăп».

Пĕррехинче Соломон патне тавлашакан икĕ хĕрарăм пĕчĕк ача йăтса пынă. Иккĕшĕ те ачана хăйĕн тесе ĕнентерме тăрăшнă. Чăннине пĕлмешкĕн Соломон ачана çурмалла касма, кашни хĕрарăмнех çуршар пама хушнă. Паллах, вăл ачана вĕлерме шутламан та, хĕрарăмсене тĕрĕслесе пăхас тесе кăна çапла каланă. «Мана та, сана та ан пултăр: ачине çурмалла касăрах эппин!» – тенĕ пĕр хĕрарăмĕ. Тепри вара: «Ачана ан вĕлерĕрех, тепĕр хĕрарăмне парăрах эппин!» – тесе кăшкăрса янă.

Çапла майпа Соломон ачан чăн-чăн амăшĕ хăшĕ иккенне пĕлнĕ, мĕншĕн тесен амăшĕ, ачин пурăнăçне упраса хăварас тесе, ăна çынна пама та хатĕр.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 3:5–28*



## ТУРĂ ÇУРЧĔ

Турă Давида унăн Соломон ывăлĕ Турă Çурчĕ лартасси çинчен, унта Турă мухтавлăхĕн çути тăрасси çинчен каланă пулнă.

Соломон, Турă хушнине пурнăçласа, Ăна валли чаплăран та чаплă Турă Çурчĕ туса лартнă. Турă Çурчĕн ăш-чиккине ылтăнпа витнĕ, лампадăсен çутинче шалта йăлтах çуталса-ялтăраса тăнă. Чул хӳме купалаттарса Соломон Турă Çурчĕ йĕри-тавра картиш тутарнă. Картишĕнче вунă пысăк пăхăр савăт ларнă, вĕсенче Турра парне кӳмелли выльăх-чĕрлĕхе çуса тасатнă. Пĕр савăчĕ ыттисенчен пысăкрах пулнă, ăна пăхăртан ăсталанă вун икĕ вăкăр кĕлетки çине лартнă. Ку савăтри шывпа священниксем тасалу йĕркине туса ирттернĕ. Картишĕнчех пăхăртан тунă пысăк парне вырăнĕ пулнă. Турă Çуртĕнче килĕшӳ арчи валли таса ылтăнпа витнĕ вырăн тунă, ăна Тасаран таса вырăн тенĕ. Çак сăваплă вырăнăн малти пайĕ умĕнче ылтăн парне вырăнĕ пулнă, ун çинче фимиам çунтарса тĕтĕрнĕ. Унтах олив йывăççинчен ăсталаса ылтăнланă икĕ пысăк херувим-ангел тăнă. Херувимĕсем питĕ пысăк пулнă, кашниех пĕр çуначĕпе стенана, иккĕмĕш çуначĕпе тепĕр херувимне перĕнсе тăнă.

Турă Çурчĕн пĕтĕм стенисене херувимсем, пальма йывăççисем, çурăлакан çеçкесем ӳкерсе илемлетнĕ. Турă Çурчĕн урайне те ылтăн сарнă пулнă.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 6:14–36*



# СОЛОМОН ТУРӐ ÇУРТЁНЧЕ КӖЛТУНИ

Турӑ Çуртне туса пӗтерсен священниксем унта Турӑ килӗшӗвӗн арчине илсе пынӑ та Тасаран таса текен шалти сӑваплӑ пӳлӗме лартнӑ. Унта аслӑ священниксӑр пуçне урӑх никамӑн та кӗме юраман, унӑн та шалти пӳлӗме хӑйӗн çылӑхӗсемшӗн тата Хуçа Турӑ умӗнчи халӑх çылӑхӗсемшӗн Турра парне кӳмешкӗн çулталӑкра пӗрре кӑна кӗме юранӑ. Тасаран таса пӳлӗме кӗмелли вырӑна пысӑк чаршав карса хупланӑ пулнӑ.

Килӗшӳ арчине Турӑ Çуртне илсе кӗрсенех, священниксемпе юрӑçӑсем Пултаракана мухтанӑ хыççӑн, унта Турӑ Хӑй пӗлӗт пулса аннӑ, вара пӗтӗм Турӑ Çурчӗ Унӑн мухтавлӑхӗпе тулнӑ. Çавӑн чухне Соломон пухӑннӑ халӑх умӗнче парне вырӑнӗ патне пынӑ та кӗлтуса аллине тӳпенелле тӑснӑ. Вӑл çапла кӗлӗ каланӑ: «Эй, Хуçа, Израиль Турри! Сан евӗр Турӑ çӳл тӳпере те, çӗр çинче те çук; Эсӗ Ху тунӑ килӗшӗве упратӑн, Саншӑн пӗтӗм чун-чӗререн ӗçлесе тӑракан Хӑвӑн чурусене хӗрхенетӗн. Чӑнах та, Турӑ çӗр çинче пурӑнма пултарӗ-и? Эсӗ çӳл тӳпене те шӑнӑçаймастӑн, ӑçтан-ха эпӗ туса лартнӑ Турӑ Çуртне вырнаçайӑн? Апла пулин те, Турӑçӑм, Хӑвӑн чуру кӗлтунине, йӑлӑннине асӑрхасамччӗ. Хӑвӑн чуру Сана чӗннине, Сана кӗлтунине илтсемччӗ. „Унта Манӑн Ятӑм пулӗ“, — тесе çак вырӑн пирки Эсӗ Хӑвах каланӑччӗ. Çак Турӑ Çурчӗ Санӑн куçу умӗнчен кунӗн-çӗрӗн ан кайтӑр. Хӑвӑн чуру çак вырӑншӑн кӗлтунине илтсемччӗ. Манпа, Хӑвӑн чурупа, тата Хӑвӑн халӑхупа, Израиль халӑхӗпе, пӗрле пулсамччӗ. Вӗсем Сана йӑлӑнса кӗлтунине Санӑн яланах илтмелле пултӑрччӗ».

*ПАТШАСЕН 3-МӖШ КӖНЕКИ 8:3–11, 22–52*



## СОЛОМОН ТАТА САВА ÇĔР-ШЫВĔН ХĔРАРĂМ ПАТШИ

Инçет кăнтăрти Сава çĕр-шывĕнче патшара хĕрарăм ларнă. Çав хĕрарăм патша Соломон чапĕ çинчен, Турă ячĕпе вăл мĕн-мĕн туни çинчен илтсен, ăна тупмалли юмахсем парса тĕрĕслеме инçе çĕртен пырса çитнĕ. Хăйпе пĕрле вăл Иерусалима шучĕ çук тупра илсе пынă: тĕвесем çине ырă шăршăллă япаласем, ылтăнпа хаклă йышши чулсем питĕ нумай тиенĕ. Соломон патне пырсассăн хĕрарăм ăна тем тĕрлĕ ыйту та панă. Соломон хĕрарăм патшан мĕн пур ыйтăвĕсене хуравланă. Вăл пĕлменни, ăнлантарса пама пултарайманни нимĕн те пулман.

Сава хĕрарăм патши Соломон ăс-хакăлне курса тĕлĕннĕ. Унтан вăл Соломон лартнă кермене, сĕтелĕ çинчи апат-çимĕçе, чурисен пурăнмалли вырăнне, тарçисен хитрелĕхне, вĕсем еплерех тумланнине, эрех параканĕсене тата Соломон Турă Çуртĕнче пĕтĕмĕшпе çунтарса Турра парне кӳнине те курнă. Вара, хăй тĕлĕннине пытараймасăр, патшана çапла каланă: «Хамăн çĕрĕм-шывăмра сан ĕçӳпе ăсу çинчен çынсем калаçни чăнах иккен. Кунта киличчен, хам куçăмпа куриччен, эпĕ çын сăмахне ĕненсех каймастăм. Халĕ куратăп та — мана çуррине те каласа кăтартман иккен. Ăсу та, пуянлăху та эпĕ илтнинчен чылай нумайрах. Санăн çыннусем телейлĕ, санăн умăнта ĕçлесе тăракан тарçусем те телейлĕ, мĕншĕн тесен вĕсем, яланах санпа пĕрле пулса, ăслă сăмахусене итлеме пултараççĕ. Израиль престолĕ çине Хăйĕн ирĕкĕпе сана лартнă Хуçу, санăн Турру, тивлетлĕ пултăр! Израиле ĕмĕр-ĕмĕр юратакан Турă сана тĕрĕслĕхлĕ пулма, суд тума патшана лартнă». Вара вăл патшана çĕр çирĕм катăк шăратнă ылтăн, питĕ нумай ырă шăршăллă япала, хаклă йышши чулсем парнеленĕ. Сава хĕрарăм патши Соломона парнеленĕ чухлĕ ырă шăршăллă япаласем унччен Иерусалима никам та турттарса пыман пулнă. Соломон та Сава патшине хаклă парне нумай панă, унсăр пуçне хĕрарăм патша мĕн кăмăлланине, мĕн ыйтнине йăлтах парнеленĕ. Унтан хĕрарăм патша хăйĕн тарçисемпе пĕрле тăван çĕр-шывне таврăннă.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 10:1–13*



## СОЛОМОН ТУРĂРАН ПĂРĂННИ

Турă Çуртне тунă чухнех Соломона Турă çапла каланă пулнă: «Эсĕ Манăн саккунсене пурнăçласа тăрсан, Эпĕ кăтартнă çулпа çӳресен, Манăн пил-хушусене тытса пырсан Эпĕ Давид аçуна панă сăмаха сан урлă пурнăçлăп: Израиль çыннисемпе пулăп; Хамăн халăхăма, Израиль халăхне, пăрахмăп». Вара Соломон Турă пил-хушăвĕсене пĕтĕм чун-чĕререн пурнăçласа пынă.

Анчах та, чылай çул иртсен, ватăлнă Соломон Турăран пăрăннă. Соломонăн ют халăхсем хушшинчен илнĕ арăмĕсем нумай пулнă, пурте вĕсем, чĕрĕ Турра пĕлмесĕр, кĕлеткесене пуççапнă. Акă хайхи ют халăхсем хушшинчен илнĕ арăмĕсем кĕлеткесене пуççапма Соломон кăмăлне те çавăрнă. Соломон пуççапмалли кĕлеткесем валли чӳк вырăнĕсем те туса лартнă.

Турă Соломона суя турăсене пуççапма хушман пулнă, анчах та Соломон хăйне Хуçа Турă панă пил-хушăва пурнăçламан. Турă хăйне икĕ хутчен курăннă пулин те, Соломон чунĕпе Турра улталанă. Çакăншăн Турă Соломона çилленсе каланă: «Эсĕ Манăн килĕшӳ сăмахне тата Эпĕ сана панă хушусене упраманшăн, патша кил-йышĕ çакнашкал хăтланса пурăннăшăн Эпĕ санăн патшалăхна туртса илсе ăна чуруна парăп. Анчах та Давид аçуна хисепленĕрен Эпĕ çакна санăн ĕмĕрӳнте тумăп. Патшалăха Эпĕ ывăлунтан туртса илĕп. Çапах та пĕтĕм патшалăхне туртса илмĕп. Пĕр йăхне Эпĕ Хамăн Давид чурамшăн, Хам суйласа илнĕ Иерусалимшăн санăн ывăлнах хăварăп».

Çапла пулса иртнĕ те. Патша çылăхĕшĕн çĕр-шыв икке пайланса кайнă, пĕр-пĕринпе вăрçса пурăнма тытăннă.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 6:12–13; 11:1–13*



## ПАТШАЛĂХ ПАЙЛАНСА КАЙНИ

Чаплă Израиль патшалăхĕ 120 çул кăна тытăнса тăнă: унта Саул, Давид тата Соломон хĕрĕхшер çул патшара ларнă. Соломон вилнĕ хыççăн патшалăх икĕ пая уйăрăлнă: Израиль тата Иудея. Пайланасси çапла пулса иртнĕ. Соломон вилсен унăн ывăлне Ровоама патшана лартас тесе Израиль çыннисем пурте Сихем хулине пуçтарăннă. Пухăннисем Ровоама çапла каланă: «Аçу пире йывăр ĕçпе питĕ тертлентерчĕ, эсĕ çав йывăр çĕклеме çăмăллатсам, вара эпир сана пăхăнса тăрăпăр».

Ровоам хăйĕн ашшĕн, Соломонăн, керменĕнче ĕçлесе тăнă сумлă ватăсемпе канашласа пăхнă. Лешсем ăна канаш панă: «Эсĕ паян çак халăхăн тарçи пулса уншăн тăрăшсан, халăхпа сăпайлăн каласан, вĕсем ыйтнине тивĕçтерсе халăх кăмăлне юрасан, вĕсем яланлăхах санăн чурусем пулĕç». Анчах та Ровоам ваттисен канашне итлес темен. Вăл хăйпе пĕрле ӳснĕ çамрăксенчен канаш ыйтнă. Лешсем япăх канаш панă. «Çак халăха тухса кала, – тенĕ вĕсем. – Манăн кача пӳрне те аттен пĕççинчен хулăнрах. Атте сире йывăр ĕçпе тертлентернĕ пулсан, эпĕ сирĕн çине тата йывăртарах çĕклем тийĕп. Атте сире чĕн пушăпа хĕнеттернĕ пулсан, эпĕ сире скорпион сăхтарса асаплантарăп».

Израиль халăхĕ Иаковăн вун икĕ ывăлĕн хисепĕпе вун икĕ сыпăкран (йăхран) тăнă. Израиль çыннисем хайхи çĕнĕ патшан, Ровоамăн, сăмахне илтсен, ку патша хăйсем тархасланине тивĕçтерес çуккине ăнланса илнĕ. Вара вунă йăхĕ ăна хирĕç пăлхав çĕкленĕ те, уйăрăлса, хăйсен патши пулма Ровоама курайман Иеровоама лартнă. Сăваплă Çырнинче çак патшалăха Израиль патшалăхĕ тенĕ. Израилĕн çурçĕр пайĕнче вырнаçнăран тепĕр майлă ăна Çурçĕрти патшалăх та теççĕ. Чăн малтанах унăн тĕп хули Сихем пулнă, унтан – Фирца, юлашкинчен вара – Самари хули. Израиль патшалăхне пирĕн эрăчченхи 721-мĕш çулта Ассири патши Салманассар аркатса тăкнă.

Соломон патша ывăлне Ровоама пăхăнса тăмашкăн Иуда йăхĕ тата йышлах мар Вениамин йăхĕ кăна килĕшнĕ. Вĕсем Иудея патшалăхĕ туса хунă, ăна Иуда тесе те каланă. Израилĕн кăнтăр пайĕнче вырнаçнăран ăна тепĕр майлă Кăнтăрти патшалăх та теççĕ. Унăн тĕп хули Иерусалим пулнă. Иудея патшалăхне Христос Çураличчченхи 586-мĕш çулта Вавилон тĕппипех пĕтернĕ.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 12*



## ИУДА – КĂНТĂРТИ ПАТШАЛĂХ

Иуда, е Кăнтăрти патшалăх, виçĕ ĕмĕр çурра яхăн тытăнса тăнă. Вăл Çурçĕрти патшалăх пĕтсе ларнă хыççăн тепĕр 135 çултан арканнă. Кăнтăрти патшалăхра 20 патша ылмашăннă: Ровоам, Авия, Аса, Иосафат, Иорам, Охозия, Гофолия хĕрарăм патша, Иоас, Амасия, Озия (Азария), Иоафам, Ахаз, Езекия, Манассия, Амон, Иосия, Иоахаз, Иоаким, Иехония тата Седекия.

Кăнтăрти патшасенчен ытларахăшĕ Турăран пăраннă, кĕлеткесене пуççапнă, çылăхлă пураннă. Апла пулин те вĕсенчен хăш-пĕрисем чун-чĕрипе Турра парăнса пураннă. Калăпăр, Езекияпа Иосия патшара ларнă чухне тăна кĕнĕ вăхăтсем те пулнă. Çавнашкал вăхăтсенче патшасем чӳк вырăнĕсене аркатнă, халăха Турă сăмахне хисеплеме, усал ĕçсенчен пăрăнма хушнă, Турă саккунне, пил-хушăвĕсене, йăли-йĕркисене тытса пыма вĕрентнĕ.

Израильтипе танлаштарсан Иудейăри халăх шучĕ ултă хута яхăн сахалрах пулнă. Кӳршĕллĕ халăхсемпе танлаштарсан вара икĕ патшалăхĕ те пысăках мар пулнă. Вĕсем тăтăшах пĕр-пĕринпе вăрçнă пулин те, вĕсен тĕп тăшманĕсем ют халăхсем пулнă: çурçĕр енче – Сири (Арам), хĕвел тухăçĕнче – хăватлă Ассири тата Вавилон патшалăхĕсем, кăнтăр-хĕвел анăçĕнче – филистимсем, кăнтăр-хĕвел тухăçĕнче – моавитсем.

Иудейăпа Израиль Турра чун-чĕререн парăнса пураннă чухне вĕсем вăрçăсенче çĕнтернĕ. Патшисем те, халăхĕ те саккуна хирĕçле пураннă чухне Хуçа Турă вĕсене тăшмансен аллине парса айăплană.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 12; САККУНА АСТУТАРНИ 32:10*



## ИЗРАИЛЬ – ÇУРÇĔРТИ ПАТШАЛĂХ

Ку патшалăх ик çĕр çул ытла тытăнса тăнă. Çав хушăра пурĕ вун тăхăр патша ылмашăннă: Иеровоам, Нават, Вааса, Ила, Замврий, Амврий, Ахав, Охозия, Иорам, Ииуй, Иоахаз, Иоас, 2-мĕш Иеровоам, Захария, Селлум, Менаим, Факия, Факей тата Осия. Çак патшалăхăн кун-çулĕ юнлă пулнă. Вăл тăтăшах Иудея патшалăхĕпе те, ытти халăхсемпе те вăрçă вăрçнă. Патшисене е хăйсен ывăлĕсем, е патша çумне çывхартнă çынсем вĕлернĕ. Хăйсем патшана ларас тесе вĕсем çавнашкал хăтланнă, анчах та патшана ларсан вĕсене хăйсене те çавнашкал вилĕмех кĕтнĕ. Çурçĕрти патшалăхра çапла тăхăр йăхри патшасем ылмашăннă. Кăнтăрти патшалăхра вара Давид йăхĕнчен, пĕр йăхран тухнисем кăна патшара ларнă.

Çурçĕрти патшалăхăн патшисем Турра юрăхсăр ĕçсем тунă. Вĕсем Турă çулĕнчен пăрăннă, Турра ĕненмен, намăс-симĕсе çухатнă, кĕлеткесене пуççапма тытăннă. Турра ĕненмен çурçĕрти патшасем пĕтĕм халăха çылăха кĕртнĕ. Малтанхи патша вăхăтĕнчех, Иеровоам патшара чухнех, халăх кĕлеткесене пуççапма тытăннă. Иеровоам патша хăй ăшĕнче çапла шухăшланă: «Халăх Иерусалимри Турă Çуртне парне кӳме çӳре пуçласассăн çынсен кăмăлĕ Иудея патши Ровоам еннелле çавăрăнĕ. Вара çынсем мана вĕлерсе хăйсен Иудея патши Ровоам патне тавăрăнĕç, çапла майпа патшалăх каллех Давид йăхĕн аллине лекĕ». Унтан икĕ ылтăн пăру кĕлетки ăсталама хушнă та халăха каланă: «Иерусалима çӳренĕ ан пултăр. Израиль халăхĕ, акă сана Египет çĕрĕнчен илсе тухнă турăсем». Пĕр ылтăн пăрăвне вăл Вефиль хулинче лартма хушнă, теприне – Данра. Çакăнтан çылăха кĕресси пуçланнă. Ылтăн пăру кĕлеткисĕр пуçне çынсем тата ют халăх туррине Ваала та пуççапма тытăннă.

Çав вăхăтра Израиль патшалăхĕнче Турă пророкĕ Ахия пурăннă. Хăйĕн пророкла сăмахĕсемпе вăл Иеровоампа унăн патшалăхне питленĕ: «Хуçамăр, Израиль Турри, çапла калать, – тенĕ вăл, – эсĕ хăвăнтан маларахри патшасенчен пуринчен те япăхрах хăтланатăн, Манăн çиллĕм тулса çитмелĕхех урăх турăсем, кĕлетке-турăсем ăсталаттартăн, Манран вара пăрăнтăн. Çав ĕçсемшĕн Эпĕ Иеровоам ăрăвĕ çине инкек-синкек ярăп». Çапла пулса тухнă та.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 12; 14*



## ИЛИЯ ПРОРОК

Кун иртнĕ те, çул иртнĕ. Патшасем улшăнсах тăнă, акă ĕнтĕ Израильте патшана Ахав ларнă, Турра ĕненмен унчченхи патшасенчен вăл чи путсĕрри пулнă. Унăн арăмĕ, Иезавель, кĕлеткесене пуççапнă. Вăл Ахава та Ваал кĕлеткине пуççапма, ăна валли чӳк çурчĕ лартма ӳкĕте кĕртнĕ. Чăн Турра чунĕпе парăннă ĕненекенсене пурне те Иезавель пĕтерме тăрăшнă.

Ахав патшара ларнă чухне Израильте Туррăн шанчăклă пророкĕ Илия пурăннă, вăл пурне те Турă енне çаврăнма чĕннĕ. Вăл вăхăтра ĕнтĕ Израиль халăхĕ Хуçа Турă çулĕнчен пăрănса кайса кĕлеткесене кĕлтуса-пуççапса пурăннă. Çавăншăн Турă Израиль çыннисене айăплав хунă: Илия пророк каланă пекех, Израиль çĕрĕнче виçĕ çул çурă çумăр çуман, типĕ çанталăк пĕтĕмпех ĕнтсе лартнă. Турă Илияна Ахав йĕрленинчен тарса пĕр çырма хĕрринчи улах вырăна пытанма хушнă. Ирĕн-каçăн пророка çăкăрпа аш çĕклесе пырса памашкăн Турă çăхансем янă, ăшĕ хыпсассăн вăл çырмари шыва ĕçнĕ.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 16:29 – 17:6*



## ТĂЛĂХ АРĂМ ЫВĂЛĔ ЧĔРĔЛНИ

Вăхăт иртнĕçемĕн Илия ĕçсе пурăннă çырма та типсе ларнă. Вара Турă ăна Сидонри Сарепта хулине кайса пĕр тăлăх арăм патĕнче пурăнма хушнă. Çав çурта кĕрсен Илия татăк çăкăрпа кăштах шыв ыйтнă. Ывăлĕпе кăна тăрса юлнă тăлăх арăм питĕ чухăн пулнă, юлашки ывăç çăнăхсăр пуçне, кăкшăм тĕпне кăштах юлнă çусăр пуçне унăн урăх нимĕн те пулман. Хĕрарăм хăйĕн чухăнлăхĕ çинчен Илияна каласа парсан, пророк ăна çапла тавăрнă: «Ан хăра. Каткари çăнăх та, кăкшăмри çу та Хуçамăр çĕр çине çумăр яриччен пĕтмĕ».

Илия пророк тăлăх арăм килĕнче пурăнма пуçланă. Хуçа Турă тĕлĕнмелле ĕç тунă: вĕсем куллен çăкăр пĕçернĕ, анчах та, Илия малтан каласа хунă пекех, çăнăхпа çу иксĕлмен.

Кĕтмен çĕртен тăлăх арăмăн ывăлĕ чирлесе вилнĕ. Хуйха ӳкнĕ амăшĕ, Турă хăйне çылăхĕсемшĕн айăпларĕ тесе, вилнĕ ачине йĕре-йĕре пророк патне йăтса пынă. «Ывăлна мана пар-ха», — тенĕ ăна Илия. Вăл вилнĕ ачана амăшĕн аллинчен илнĕ те хăйĕн пӳлĕмне çĕклесе кĕнĕ. Унтан ăна хăйĕн вырăнĕ çине хунă та Турра тархасласа çапла кĕлтунă: «Хуçамăр, Турăçăм! Мана пурăнма кĕртнĕ тăлăх арăма, ывăлне вилмелле туса, усал тăвăн-и вара?» Унтан вăл ача çинелле виçĕ хут пĕшкĕнсе: «Хуçамăр, Турăçăм! Çак ачана чун кĕртсемччĕ», — тесе Турра йăлăннă. Хуçа Турă шанчăклă пророкĕн кĕллине илтсе тăлăх арăмăн ывăлне вилĕмрен чĕртнĕ. Илия ăна амăшĕ патне йăтса пынă та: «Курсам, санăн ывăлу чĕрĕ-сывах», — тенĕ. Савăнса кайнă хĕрарăм вара пророка: «Эсĕ Туррăн çынни пулнине, сан сăмахусене чăнласах Турă каланине тинех пĕлтĕм», — тесе каланă.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 17:7–24*



## ИЛИЯ ПРОРОКПА ВААЛ ПРОРОКЁСЕМ

Пёррехинче Ваал кёлеткипе ытти кёлеткесене пуççапакан пророксене тата пётём халăха Кармил тăвě çине пуçтарттăр тесе каламашкăн Турă Илияна Ахав патша патне янă. Патша пророксемпе халăха ту çине пуçтарсан, Илия пророк вěсене çапла каланă: «Эсир чылайччен иккěленесшěн-и? Чăн Турă – Хуçамăр пулсан, Ăна пуççапăр. Енчен те Ваал пулсан, ăна пуççапăр». Пророка хирěç никам та пěр сăмах та чěнмен. Вара Илия халăха каланă: «Мансăр пуçне Хуçамăрăн урăх пророксем тăрса юлмарěç, Ваал пророкěсем вара – тăват çěр аллăн. Пире икě пăру парăр, пěрне вěсем суйласа илччěр те çурмалла касса вутă çине хуччăр, анчах та кăвайтне ан чěртчěр. Теприне эпě хатěрлесе вутă çине хурăп, кăвайтне чěртмěп. Эсир хăвăр турра тархаслăр, эпě хамăн Хуçа Турра тархаслăп. Хăшě вут чěртсе хуравлě, çавă чăн Турă пулě». Халăх ку сăмахсемпе килěшнě.

Ваал пророкěсем пăрăва вутă çине хунă та: «Эй, Ваал! Илтсемччě пире!» – тесе кăшкăрма пуçланă. Анчах яра куна ăнран кайиччен кăшкăрсан та, нимěнле хурав та пулман. Унтан Илия халăха çывăхарах пыма чěннě. Пурте ун йěри-тавра пуçтарăнсан, вăл Израилěн вун икě сыпăкě (йăхě) шучěпе вун икě чул илсе парне вырăнě тунă, ун çине вутă хунă, унтан пăрăвне касса вутă çине хунă. Вара парне вырăнě тавра алтса çавăрăннă шăтăк шывпа туличченех парне вырăнě çине виçě хутчен тăватшар витре шыв сапма хушнă. Унтан Илия çапла кěлтума пуçланă: «Хуçамăр, Авраампа Исаакăн тата Израилěн Турри! Эсě Израильте пěртен-пěр Турă пулнине, эпě Санăн чуру пулнине, пěтěмпех Эсě каланă пек тунине çак кун пурин те пěлмелле пултăр! Илтсем мана, Турăçăм, илтсемччě! Эсě, Хуçамăр, Турă пулнине тата çынсен кăмăлне Хăвăн енне çавăрасса çак халăх пěлтěрччě». Хуçа Турă Хăйěн пророкěн кěллине илтнě, вара пěлěтрен аннă вут-çулăм парнелěх пăрăва, хунă вутта тата çывăхри чулсене те çунтарса янă, алтса çавăрăннă шăтăкри шыва та типěтсе лартнă. Çакна курсан пурте чěркуçленсе: «Хуçамăр – Турă, Хуçамăр – Турă!» – тесе кăшкăрса янă. Çапла майпа Хуçа Турă Хăй пěртен-пěр Турă пулнине, Ваал пророкěсем ултавçăсем кăна пулнине кăтартса панă.

*ПАТШАСЕН 3-МĔШ КĔНЕКИ 18:18–39*



## ШЫВПА КĂТАРТНĂ ХĂВАТ
## ТАТА ÇУПА КĂТАРТНĂ ХĂВАТ

Илия хыççăн Турă Елисея аслă пророк тунă, ун урлă нумай хăват кăтартнă. Пĕррехинче, Елисей Иерусалимра чухне, ун патне хула çыннисем пынă та: «Пирĕн хуламăр аван вырăнта ларать, анчах та шывĕ япăх, çавăнпа та тăпри пулăхсăр», – тенĕ. Вара Елисей хăйне çĕнĕ савăт пама, савăта кăштах тăвар яма ыйтнă. Тăвар савăтне алла илсессĕн вăл çăлкуç патне пынă та тăварне унта янă. Елисей унтан Турă ирĕкĕпе малашне шыв лайăх пуласса, çак шыв вилĕм илсе килмессе, тăпрана пулăхлатасса пĕлтернĕ. Вара шыв лайăхланнă.

Тепрехинче Елисей патне пĕр тăлăх арăм пынă та йĕре-йĕре хăйĕн хуйхи çинчен каласа панă. Упăшки вилнĕ хыççăн çав хĕрарăм парăмĕсене парса татайман пулнă, çавăнпа та парăм илес çынни унăн икĕ ывăлне чуралăха илсе кайма пынă иккен. Елисей, ăна инкекре пулăшас тесе, çапла ыйтнă: «Кала-ха, санăн килӳнте мĕн пур?» «Çу янă кăкшăмсăр пуçне манăн урăх нимĕн те çук», – тавăрнă хĕрарăм. Пророк ăна: «Пĕтĕм кӳршӳ-аршусенчен кайса пушă савăтсем ыйт. Кайран киле кай та, алăка питĕрсе, ывăлусемпе хăвăн кăкшăмунти çăва пушă савăтсене тултар, туллисене вара айккине илсе ларт».

Хĕрарăм кайнă та Елисей хушнă пек тунă. Вăл кӳршисенчен кăкшăмсемпе тирĕксем кивçен илнĕ те, кил алăкне питĕрсе, ывăлĕсемпе пĕрле пушă савăтсене хăйĕн кăкшăмĕнчи çăва яма пуçланă. Çапла чылай кăкшăм тултарсан хĕрарăм ывăлне тепĕр пушă савăт пама хушнă. Ывăлĕ пушши урăх çуккине пĕлтернĕ. Вара тăлăх арăм пăхать те хăйĕн кăкшăмĕнче çу пĕтнине асăрхать.

Мĕн пур савăта çупа тултарсан хĕрарăм Елисея çак тĕлĕнмелле хăват çинчен пырса каласа кăтартнă. «Çав çăва кайса сут та укçипе парăмна тат, юлнă укçи сана ывăлусемпе пурăнмалăх та çитĕ», – тенĕ хĕрарăма Елисей.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 2:19–22; 4:1–7*



# СИРИ ÇАР ПУÇĔ НЕЕМАН

Сири патшин Нееман ятлă çар пуçĕ пулнă. Вăл ятлă-сумлă, пурте хисеплекен çын пулнă, анчах та питĕ хăрушă юхан-суран чирĕпе чирленĕ.

Израиль çыннисемпе вăрçă вăрçнă чухне пĕр çапăçура Сири салтакĕсем пĕчĕк хĕр ачана тыткăна илнĕ. Нееман арăмĕ çав хĕр ачана хăй патне тарçа илнĕ. Елисей пророк урлă Турă тунă хăватсем çинчен хĕр ача пĕлнĕ. Пĕррехинче вăл хуçа арăмне çапла каланă: «Эх, манăн хуçа Самарири пĕр пророк патне кайса пăхнă пулсан, çав пророк ăна юхан-суран чирĕнчен сыватĕччĕ». Çакна илтсен Нееман хăйĕн патши патне кайнă та Израиль хĕр ачин сăмахĕсене пĕлтернĕ. «Каях эппин, – тенĕ Сири патши Неемана, – эпĕ сана Израиль патши патне çыру çырса парса ярăп».

Арăмĕпе сывпуллашса Нееман Израиле тухса кайнă. Унта çитсен вăл çырăвне патшана панă. Çырура çапла каланă пулнă: «Манăн тарçăма, Неемана, юхан-суранĕнчен сывалма пулăшсамăр. Ку çырăва эпĕ ăна хăйне парса яратăп». Çырăва вуласа тухнă хыççăн Израиль патши тарăхнипе çири тумтирне туртса çурсах каланă: «Этеме вилмелле е чĕрĕлмелле тумашкăн эпĕ мĕн, Турă-им? Ку çынна юхан-суранĕнчен сыватмашкăн мĕншĕн-ха вăл ман патăма янă? Вăл манпа вăрçă кăларма сăлтав шыранине халĕ ĕнтĕ пурсăр та курса тăратăр».

Елисей кун çинчен пĕлсен хăйĕн тарçине патша патне çапла калама хушса янă: «Ху çири тумтире эсĕ мĕншĕн туртса çуртăн? Çав çын ман патăма килтĕр те Израильте пророк пуррине пĕлтĕр».

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 5:1–8*



## НЕЕМАН СЫВАЛНИ

Нееман çăмăл урапапа Елисей кил-çурчĕ тĕлне çитсе чарăннă. Елисей хăйĕн тарçине ăна хирĕç тухса çапла калама хушнă: «Иордан хĕррине кай та çичĕ хутчен шыва кĕрсе тух, вара ӳт-пĕвӳ çĕнелĕ, чирӳнтен тасалăн». Ку сăмахсене илтсен Нееман тарăхса кайнă. «Вăл хăй кунта тухасса, ура çине тăрса хăйĕн Туррине тархасласса, унтан аллине юхан-суран çине хурса сыватасса кĕтнĕччĕ эпĕ, – тенĕ вăл. – Дамаскри Авана тата Фарфар юхан шывĕсем Израильти мĕн пур шывсенчен те чаплăрах мар-им вара? Эпĕ вĕсенче çăвăнса чирĕмрен тасалаймастăм-и?» Çиллине ниçта чикейменнипе вăл Елисей патĕнчен кайнă.

Анчах та хăйĕн тарçисемех ăна хăваласа çитсе каланă: «Эй, хуçамăр! Енчен те пророк сана мĕнле те пулин йывăр ĕç тума хушнă пулсан, эсĕ çавна тумăттăн-и? Халĕ вара вăл сана: „Çăвăн та – вара чирӳнтен тасалăн“, – тесе кăна хушрĕ-иç». Нееман тинех пророк сăмахĕсене итлеме килĕшнĕ. Вăл Иордан шывĕ хĕррине кайнă та çичĕ хутчен шыва кĕрсе тухнă, вара унăн ӳчĕ, пĕчĕк ача ӳчĕ пекех, тап-таса пулса тăнă.

Нееман вара Турă суйласа илнĕ çын патне, Елисей патне, тавăрăннă. «Çĕр çинчи мĕн пур халăхсенчен Израиль халăхĕ кăна чăн Турра пĕлнине халĕ тинех ăнлантăм, – тенĕ вăл пророка. – Ĕнтĕ хăвăн чурунтан парнесем йышăнсам». Анчах та, Нееман тем тери хистенĕ пулин те, Елисей парне тавраш илме килĕшмен. Вара Нееман, сывпуллашнă чухне, текех кĕлетке-турăсене чӳклемĕп тесе, Хуçа Турра кăна парнесем кӳрĕп тесе пророка сăмах панă.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 5:9–17*



## СУККĂРЛАТНĂ ТĂШМАНСЕМ

Сирипе Израиль хушшинчи вăрçă вăхăтĕнче Елисей Израиль патшине Сири çарĕсем еплерех вырнаçнине пĕлтерсе тăнă. Çак пĕлĕве ăна Турă уçса панă. Çапла майпа Израиль пĕр çĕнтерӳ хыççăн тепĕр çĕнтерӳ тусах пынă. Сири патши, хăйĕн çар çыннисем хушшинче вăрçă вăрттăнлăхĕсене Израиль çарне пĕлтерсе тăракан сутăнчăк пур пулĕ тесе, канлĕхне çухатнă. Анчах та пĕр тарçи ăна каланă: «Эй, патшам! Эй, хуçам! Пирĕн хушшăмăрта сутăнчăк çук, анчах та Израильте Елисей ятлă пĕр пророк пур. Эсĕ çывăрмалли пӳлĕмре пăшăлтатса каланă сăмахсене те вăл хăйсен патшине пĕлтерсе тăма пултарать».

Елисей пророк мĕнле хулара пурăннине пĕлсен Сири патши ăна тыткăна илмешкĕн çавăнта пысăк çар янă. Çĕрле салтаксем çав хула патне çывхарнă та ăна хупăрласа илнĕ. Анчах та Сири салтакĕсем Елисея тытма пырсассăн вăл Турра: «Вĕсене курми тусамччĕ», – тесе кĕлтунă. Елисей сăмахĕсене илтсе Турă вĕсене суккăрлатнă. Сири салтакĕсене вара, курми пулнăскерсене, Елисей пророк хăйсен хулинчен кăларса Самарине илсе пынă. Самари вăл вăхăтра Çурçĕрти патшалăхăн тĕп хули пулнă. Самарине çитсессĕн Елисей: «Хуçамăр! Вĕсен куçĕсене уçсам, каллех курмалла тусам», – тенĕ. Хуçа Турă вĕсен куçĕсене уçнă та, лешсем хăйсем Самари варринче тăнине курах кайнă. Сири çыннисене курсан Израиль патши Елисея çапла каланă: «Хаклă çыннăм, тен, манăн вĕсене вĕлерес?» «Ан вĕлер, – тавăрнă Елисей. – Хăвăн хĕçӳпе тыткăна илнисене эсĕ вĕлерместĕн-çке. Эсĕ вĕсене шывпа çăкăр пар. Ĕçсе çиччĕр те кайран хăйсен патши патне кайччăр». Вара патша вĕсем валли чаплă апат-çимĕç хатĕрлеттернĕ, лешсем тăраничченех ĕçсе çинĕ. Израиль патши ирĕке ярсассăн вĕсем хăйсен патши патне тавăрăннă. Çавăнтан вара Сири çарĕсем Израиль çĕрне тек тапăнман.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 6:8–23*



## ИОАС ПАТШАНА ЛАРНИ

Иудея патшисенчен пĕри Охозия ятлă пулнă. Вăл çапăçура вилнĕ хыççăн унăн амăшĕ Гофолия, Турра ĕненменскер тата хаярскер, хăй патшана ларас тесе, патша раттинчи çынсене пурне те вĕлерсе пĕтерме шут тытнă. Анчах та Охозия аппăшĕ Иосавеф хайхи Охозия ывăлне, Иоаса, Гофолияран пытарса упраса хăварнă. Иосавеф Иоаса Турă Çуртĕнче ултă çул хушши пытарса пурăннă. Çав ултă çул хушшинче Иудейăра Гофолия патшара ларнă.

Иоас çиччĕ тултарсан Иодай священник Турă Çуртне мĕн пур салтаксене, çĕрпӳсене, патша хуралçисене, сăнăлли-щитлисене пуçтарнă. Иодай вĕсене патша ывăлне кăтартнă та, вара вĕсем çав ачана патшана лартма сăмах татнă. Турă Çуртне хуралласа çар çыннисем ăна йĕри-тавра хупăрласа илнĕ. Çав вăхăтра Иодай священник Иоаса халăх умне илсе тухнă, ăна пуçкăшăлĕ тăхăнтартса, олив çăвĕ сĕрсе, патшана лартни çинчен халăха пĕлтернĕ. Халăх Иоаса хапăлласа: «Сывă пултăр патша!» — тесе кăшкăрса саламланă. Çакăн çинчен пĕлсен пĕтĕм Израиль халăхĕ савăннă. Иоас асламăшне вара, Гофолияна, вĕлернĕ.

Иодай священник çамрăк патшана ăс-тăн парса вĕрентсе пурăннă чухне Иоас Турра юрăхлă ĕçсем тунă. Ӳсерехпе Иоас ĕлĕкрех Турă Çуртĕнче тăшмансем мĕн çĕмĕрни-аркатнине йăлтах юсаттарнă. Анчах та Иодай вилнĕ хыççăн вăл, начар канаш паракансене итлесе, чĕрĕ Турăран пăрăннă та кĕлеткесене пуççапма тытăннă. Вăл Хуçа Турă ирĕкне хирĕç кайнă.

Пĕррехинче Иодай ывăлĕ Захария халăх çылăхĕсене питлесе сăмах каланă. Çакна илтсен Иоас ăна Турă Çурчĕн картишĕнчех вĕлерттернĕ. Çавăн хыççăн çĕр-шыва инкек çине синкек киле пуçланă. Сири çарĕсем Израиль çĕрне тустарса тухнă, Турă Çуртĕнчи пуянлăха çаратса турттарса кайнă. Иоас патша вырăнпах чирлесе выртнă чухне вара ăна хăйĕн икĕ тарçиех вĕлернĕ.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 11; 12; 2 ПАРАЛИПОМЕНОН 24:1–25*



# ОЗИЯ ПАТШАН МĂНКĂМĂЛЛĂХĔ ТАТА ĂНА АЙĂПЛАВ ХУНИ

Озия Иудея патшалăхĕн вуннăмĕш патши пулнă. Вăл 16 çултах патшана ларнă та 52 çул хушши Иерусалимра патша пулнă.

Озия Турра юрăхлă ĕçсем тунă. Захария священник ăна Турăран хăрама вĕрентнĕ вăхăтсенче вăл Хуçа Турăран пулăшу ыйтсах тăнă, Турă ăна пулăшнă. Озия Иерусалим хулипе унăн таврашне тăшмансем тапăнасран çирĕплетнĕ; ту айлăмĕнче те, тӳремлĕхре те хăйĕн йышлă кĕтĕвĕсем çӳренĕ пирки вăл нумай çăл чавтарнă. Озия çĕр ĕçне юратнăран унăн уй-хирĕсенче, иçĕм çырли пахчисенче темĕн чухлĕ çын ĕçленĕ. Унăн çарĕнче пурĕ виç çĕр çичĕ пин те пилĕк çĕр салтак пулнă. Хăйĕн пĕтĕм çарне валли Озия хĕçсем, сăнăсем, шлемсемпе тумсем, ухăсем, чулравпа пемелли чулсем хатĕрлеттернĕ. Иерусалимра вăл çĕмренсемпе тата пысăк чулсемпе пемелли ăста шухăшласа кăларнă хатĕрсем тутарнă, вĕсене башньăсемпе хӳме кĕтессисене лартса тухнă. Çирĕп те вăйлă патшалăх туса хума пултарнă пирки унăн чапĕ ытти çĕр-шывсенче те сарăлсах пынă.

Анчах та Озия çакнашкал вăй-хăватлă пулса тăрсассăнах мăнкăмăлланса кайнă, çакă ăна пĕтернĕ те: вăл Хуçин, хăйĕн Туррин, саккунне пăхăнми пулнă. Мăнкăмăлланнă Озия тĕтĕрмелли алтарь çинче фимиам тĕтĕрме Турă Çуртне хăй кĕнĕ. Ун хыççăн Азария священникпа Туррăн тепĕр сакăр вунă священникĕ те кĕнĕ. Вĕсем Озия патшана чарма тăрăшса çапла каланă: «Озия, санăн Хуçамăр ячĕпе тĕтĕрме юрамасть, ку ĕçе Турă палăртса хунă Аарон ывăлĕсем – священниксем – кăна тума пултараççĕ. Таса вырăнтан тух, мĕншĕн тесен эсĕ саккуна пăхăнмасăр хăтланатăн, уншăн сана Турă Хуçамăр ырă тумĕ». Тĕтĕркĕче аллине тытма та ĕлкĕрнĕ пирки Озия священниксене çилленсе кайнă. Анчах та çилли тулса çитнĕ-çитменех унăн пичĕ юхан-суранланса ларнă. Çак ĕç-пуç Турă Çуртĕнчи тĕтĕрмелли алтарь патĕнче мĕн пур священниксен куçĕ умĕнчех пулса иртнĕ. Патша пичĕ çинчи юхан-сурана курсанах Азарияпа ытти священниксем ăна Турă Çуртĕнчен хистесех илсе тухнă, Хуçа Турă хăйне айăплав хунине ăнлансан Озия хăй те васкасах тухнă. Çапла вара Озия патша мĕн виличченех юхан-суран чирĕпе тертленнĕ. Озияна ятарлă çуртра усранă, ăна Турă Çуртĕнчен уйăрнă. Патша кил-йышне тата халăха вара вăл вăхăтра унăн ывăлĕ Иоафам тытса тăнă.

*2 ПАРАЛИПОМЕНОН 26*



# ИЗРАИЛЬ ТУРĂРАН ПĂРĂННИ

Израиль çыннисем хăйсене Египетран илсе тухнă, фараон пусмăрĕнчен хăтарнă Хуçа Турă умĕнче, хăйсен Турри умĕнче тăтăшах çылăха кĕме пуçланă. Вĕсем ют турăсене пуççапма, ют халăхсен йăли-йĕркипе пурăнма тытăннă. Хуçа Турă ют халăхсене хăйсен çĕрĕнчен хăваласа ярса çав çĕре Израиль çыннисене панă пулнă. Израиль çыннисем хăйсен патшисем хыççăн кайнă. Патшисем вара Турра юрăхсăр ĕçсем тунă: мĕн пур ялĕ-хулипех, хурал çуртĕнчен пуçласа хуласем таранах, кĕлеткесене пуççапмашкăн чӳк вырăнĕсем тутарнă, хăйсем пурăнакан çĕр çинчи кашни сăрт çинче, йывăç сулхăнĕнче сăваплă чулсем, ют халăхсен Астарта ятлă хĕрарăм туррин кĕлеткисем лартса тухнă. Хуçа Турă хăйсем патĕнчен хăваласа янă халăхсем пекех, вĕсем çав вырăнсенче фимиам тĕтĕрнĕ. Израиль çыннисем Турра питĕ çиллентернĕ, Турă хăйсене: «Апла ан хăтланăр», – тенĕ пулин те, вĕсем кĕлеткесене пуççапнă.

Вара Турă Хăйĕн пророкĕсемпе малкурăмлă çыннисем урлă Израильпе Иуда халăхне çапла асăрхаттарнă: «Усал çулăрсемпе çӳреме пăрахăр, Манăн пил-хушусене, Манăн йĕркесене, Манăн пĕтĕм саккуна тытса пурăнăр. Çав саккуна Эпĕ сирĕн мăн аслаçăрсенех панăччĕ, сире те Хамăн чурамсем – пророксем урлă – ăна тытса пыма вĕрентсех тăтăм». Анчах та Израиль çыннисем çакна итлемен, вĕсем Хуçине, хăйсен Туррине, ĕненмен мăн аслашшĕсем пекех кутăнланнă. Вĕсем Турă йĕркисене те, Турă хăйсен мăн аслашшĕсемпе тунă килĕшĕве те, Вăл хăйсене асăрхаттарса уçса панă сăмаха та сума суман. Пушлăх хыççăн хăваласа, вĕсем хăйсем пушлăхра тăрса юлнă. Хуçа Турă хăйсене ют халăхсем пек ан хăтланăр тесе хушса хăварнă çинчех, вĕсем кӳршĕллĕ халăхсенчен тĕслĕх илнĕ. Хуçин, хăйсен Туррин, пил-хушăвĕсене манса вĕсем хăйсем валли пуççапмалли икĕ пăру кĕлетки шăратса ăсталанă, Астартăна чӳклемелли сăваплă вырăнсем тунă. Вĕсем тата хĕвелпе çăлтăрсене те пуççапнă, Ваал ятлă турра кĕлтунă, ывăлĕ-хĕрĕсене вут урлă сиктернĕ, юмăç янă, тухатнă. Турра юрăхсăр ĕçсем туса çапла вĕсем хăйсемех Унăн çиллине тултарса çитернĕ.

Вара Израиль çыннисене Хуçа Туррăн çилли çитнĕ, Вăл вĕсене пăрахнă. Пĕртен-пĕр Иуда сыпăкĕсĕр (йăхĕсĕр) пуçне урăх пĕри те тăрса юлман. Анчах Иуда йăхĕнчисем те Хуçин, хăйсен Туррин, пил-хушăвĕсене тытса пурăнман.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 17:7–18*



## АССИРИ ИЗРАИЛЕ ÇĔНСЕ ИЛНИ

Осия Çурçĕрти патшалăхăн – Израилĕн – юлашки патши пулнă. Вăл патшара тăхăр çул ларнă – Христос Çураличченхи 730-мĕш çултан пуçласа 721-мĕш çулччен. Осия Турра юрăхсăр ĕçсем тунă. Израильтен çурçĕр-хĕвел тухăçнелле питĕ пысăк Ассири патшалăхĕ сарăлса выртнă, унăн тĕп хули Ниневи ятлă пулнă. Ассири патшисем питĕ хаяр та хапсăнчăк пулнă. 724-мĕш çулта Салманассар патша ертсе пыракан хăватлă Ассири çарĕ Израиле тапăннă. Израилĕн Осия патши Салманассара парăнса ăна хырçă тӳлеме пуçланă.

Осия Египет патши патне элчĕсем янине, хăйне, Салманассара, çулсеренех хырçă тӳлесе тăманнине Ассири патши пĕлнĕ. Вара вăл Осияна сутăнчăк тесе тĕрмене лартнă, Израиле хирĕç вăрçă пуçланă, Самари хулине хупăрласа илсе унта хăйĕн çарĕпе виçĕ çул тăнă. Осия патшана ларни тăхăр çула кайсан Ассири патши Самари хулине çĕнсе илнĕ, Израиль çыннисене Ассирине хăваласа кайнă. Вĕсене патша Гозан юхан шывĕ тăрăхĕнчи Халах тата Хавор хулисене тата Миди хулисене куçарса кайнă. Ку ĕнтĕ Çурçĕрти патшалăх пĕтнине пĕлтернĕ.

Йĕркесĕр ĕçĕсемшĕн Турă Хăйĕн халăхне çапла айăплав хунă. Ку ĕç-пуç Христос Çураличчен 721-мĕш çулта пулса иртнĕ. Тепĕр икĕ ĕмĕр иртсен тин Израиль çыннисен сахалрах йышĕ Ассирирен Израиле таврăннă. Вĕсемпе пĕр вăхăталлах иудейсем те, тепĕр майлă каласан, Кăнтăрти патшалăхри еврейсем те, таврăннă.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 17:2–6*



## САМАРИ ÇЫННИСЕМ

Çурçĕрти патшалăхра пурăнакан Израиль çыннисене тыткăна илсе кайсан, вĕсен çĕрĕ-шывĕ пушанса юлнă. Вăхăт иртнĕçемĕн Ассири патши Израиль хулисене Вавилонран та-та ытти çĕр-шывсенчен çынсем куçарса пынă. Вĕсем Самари тăрăхĕнчи хуласенче пурăнма пуçланă. Малтанах, пурăнма пуçласанах, вĕсем Хуçа Турра сума суман, çавăнпа Хуçа Турă, арăслансем ярса, вĕсене пĕтерме тытăннă. Çавăн çинчен Ассири патшине хыпар çитернĕ: «Эсĕ Самари хулисене куçарнă халăхсем çав çĕрти Турра пĕлмеççĕ, çавăнпа та Турă вĕсене арăслансем ярса пĕтерет». Вара Ассири патши Самарирен куçарса пынă пĕр Израиль священникне тавăрăнма, Самари халăхне унти Туррăн йĕркисене вĕрентсе пурăнма хушнă.

Самарирен куçарса кайнă священниксенчен пĕри Вефиль хулине пурăнма тавăрăннă. Вăл Самарире пурăнакансене Хуçа Турра хисеплеме вĕрентнĕ. Çав хушăрах унта пурăнакан кашни халăхах хăйсен кĕлетке-туррисене те ăсталанă, вĕсене тахçан Самари халăхĕ тунă чӳк вырăнĕсенех лартнă. Вĕсем пĕр вăхăтрах Хуçа Турра та, хăйсем уйăрălса килнĕ тĕп халăхсен йăли-йĕркисемпе хăйсен туррисене те пуççапнă.

Çĕнĕ Килĕшӳре асăннă Самари çыннисене еврейсем шăпах ĕнтĕ çав халăхсенчен пулса кайнă тесе шухăшланă. Çĕнĕ Килĕшӳ тапхăрĕнче Самари çыннисем хăйсен туррисене мар, Хуçа Турра кăна пуççапнă пулин те, вĕсем еврейсенчен чылай тĕлĕшпе уйăрălса тăнă, вĕсемпе хирĕççе пурăннă. Самари çыннисен хăйсен священникĕсем пулнă, вĕсем хăйсен йăли-йĕркисене тытса пурăннă. Вĕсем Гаризим тăвĕ çинче ятарласа Турă çурчĕ те туса лартнă, каярахпа еврейсем ăна аркатнă.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 17:24–33*



# ЕЗЕКИЯ ПАТША КĔЛТУНИ

721-мĕш çулта Ассири çыннисем Çурçĕрти патшалăха çĕнсе илсе Израиль çыннисене Ассирине куçарса кайнă хыççăн пысăках мар Кăнтăрти патшалăх, Иуда, Турă пулăшнипе тата тепĕр 130 çул тытăнса тăнă.

Иуда патшисенчен пĕри Езекия пулнă. Вăл Иерусалимра çирĕм тăхăр çул хушши патшара ларнă. Турра ĕненсе Моисей урлă панă мĕн пур пил-хушусене çирĕп тытса пынăран вăл Иуда патшисенчен чи лайăххи пулнă. Езекия кĕлеткесене пуççапассипе кĕрешме пуçланă. Пуççапмалли кĕлеткесене вăл пурне те аркатса тухнă, халăха чĕрĕ Турра ĕненсе шанма чĕннĕ. Езекия Ассири патшине пăхăнми пулнă, ун тарçи пулма пăрахнă.

Вара Ассири патши Сеннахирим Езекияна хăратса парăнтарма шут тытнă, ун патне çыру янă. Çырура вăл Иуда патши Турра ĕненсе шаннинчен мăнкăмăллăн тăрăхласа кулнă, хăйне, Ассири патшине, пĕр сăмахсăрах пăхăнма хушнă. Мĕншĕн тесен Ассирипе юнашар вырнаçнă пур патшалăхсем те унăн аллинче пулнă, Сеннахирим вăй-хăватĕнчен хăтăлса юлма вĕсене нимĕнле турăсем те пулăшайман.

Çырăва илсессĕн Езекия Турă Çуртне кайнă. Унта вăл çырăва уçнă та çапла кĕлтунă: «Эй, Хуçамăр, херувимсен çуначĕсем çинче ларакан Израиль Турри! Эсĕ çĕр çинчи мĕн пур патшалăхсен пĕртен-пĕр Турри, Эсĕ тӳпепе çĕре пултарнă. Эй, Хуçамăр, çывăхарах килсе итлесемччĕ; эй, Хуçамăр, куçна уçса пăхсамччĕ. Эй, Хуçамăр, Сана, чĕрĕ Турра, хур туса Сеннахирим янă çак çырури сăмахсене илтсемччĕ! Чăнах та, Турăçăм, Ассири патшисем çĕр çинчи чылай халăха тĕп турĕç, çĕр-шывĕсене тустарчĕç, туррисене вута пăрахса çунтарчĕç; анчах та вĕсем турăсем мар, йывăçпа чулран этем аллипе ăсталанăскерсем кăна, çавăнпа вĕсене пĕтерме те май пур. Анчах та халĕ, Хуçамăр, Туррăмăр, пире унăн тыткăнĕнчен çăлса хăварсам, çапла майпа çĕр çинчи пĕтĕм патшалăхсене Эсĕ, Хуçамăр, Ху кăна пĕртен-пĕр Турă иккенне пĕлтерсем».

Турă Езекиян ĕненӳ кĕллине илтнĕ те Хăйĕн сăваплă ятне хирĕçлеме хăйнăшăн Ассири çыннисене айăплав хунă: пĕр çапăçура вĕсене парăнмалла тунă.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 18:1–7; 19:9–19*



## ИОСИЯ ПАТША КИЛӖШӲ КӖНЕКИНЕ ТУПНИ

Иосия та Иудея патшисенчен пӗри пулнӑ. Иосия сакӑр ҫулта престола йышӑннӑ та Иерусалимра вӑтӑр пӗр ҫул хушши патшара ларнӑ. Вӑл Турра юрӑхлӑ ӗҫсем тунӑ, мӑн аслашшӗн Давидӑн ҫулӗпех кайнӑ; сылтӑмалла та, сулахаялла та пӑрӑнман, хӑйӗн ӗмӗрӗ тӑршшӗпех Турра пӑрахман.

Вун ултӑ ҫултанах Иосия чун-чӗрипе Хуҫа Турӑ патне ӑнтӑлма пуҫланӑ, тепӗр тӑватӑ ҫултан, патшана ларни вун икӗ ҫула кайсан, вӑл Иудейӑпа Иерусалима чӳк вырӑнӗсенчен тасатма тытӑннӑ. Вӑл пуҫҫапмалли кӗлеткесене аркатнӑ, пӗтӗм Иудея ҫӗрӗнчи йӗрӗхсене ним юлми тӗп тунӑ. Патшана ларни вун сакӑр ҫула кайсан Иосия Турӑ Ҫуртне ҫӗнетес ӗҫе пуҫарса янӑ. Ҫав ӗҫе тумашкӑн ҫынсем нумай-нумай кӗмӗл пухса парса пулӑшнӑ.

Турӑ Ҫуртне ҫӗнетме пуҫласан Хелкия ятлӑ священник Турӑ Моисей урлӑ панӑ килӗшӳ кӗнекине тупнӑ. Священник ҫав кӗнекене Шафан ятлӑ ҫыруҫӑна панӑ, лешӗ ӑна патша патне илсе пынӑ. Иосия патша кӗнекене вуласа пама хушнӑ. Тупнӑ кӗнекере ҫырнӑ сӑмахсене илтсессӗн патша хӑрамаллипех хӑраса кайнӑ: ку сӑмахсем пӗтӗм халӑх пӑхӑнма пӑрахнӑ Турӑ саккунӗн сӑмахӗсем пулнӑ.

Иосия чӗререн хуйхӑрса, йӗрсе, тархасласа Хуҫа Турӑран каҫару ыйтма пуҫланӑ. Вӑл Турӑ Ҫуртне пынӑ та пӗтӗм халӑха пухма хушнӑ, тупӑннӑ килӗшӳ кӗнекинчи мӗн пур сӑмахсене сасӑпа вуласа панӑ. Унтах вӑл Хуҫа Турӑ хыҫҫӑн кайма, пӗтӗм чун-чӗререн Унӑн мӗн пур пил-хушӑвӗсене, кӑтартӑвӗсемпе йӗркисене тытса пыма сӑмах панӑ. Турӑпа тунӑ ҫак килӗшӗве ҫирӗп тытса пурӑнмашкӑн вӑл пӗтӗм халӑха та сӑмах партарнӑ.

Иосия пӗтӗм Израиль ҫыннисен ҫӗрӗнчи Турра пӗлмен халӑхсенчен юлнӑ ирсӗрлӗхӗн юлашкийӗсене, пуҫҫапмалли кӗлеткесене, тӗппипех пӗтернӗ. Иосия пурӑннӑ вӑхӑтра Израиль ҫыннисем Турра панӑ сӑмахне ҫирӗп тытнӑ, Турӑ ҫулӗнчен пӗртте пӑрӑнман.

*2 ПАРАЛИПОМЕНОН 34:1–8, 14–19, 29–33*



## ИЕРЕМИЯ ПРОРОК

Иеремия пророк тăтăшах Турă çинчен пĕлтерсе тăнă. Пĕррехинче вăл ют кĕлетке-турăсене пуççапнăшăн, вĕсене чӳкленĕшĕн Тофетпа Иерусалимра пурăнакансене питленĕ. Малтанах Иеремия вĕсем çинчен пророкла сăмахне Тофетра каланă. Унтан вăл Иерусалима пынă та Турă Çурчĕн картишĕнче тăрса унти пĕтĕм халăха каланă: «Хуçа Турă Саваоф, Израиль Турри, çапла калать: „Кутăнлашса Манăн сăмахăмсене итлеменшĕн Эпĕ çак хулапа унăн таврашĕнчи ялсем çине Хам малтанах вĕсене каласа хунă инкек-синкеке ярăп“».

Çакнашкал пророкла сăмахсене илтсессĕн Турă Çуртĕнчи священник тарăхнипе Иеремияна çапса янă, çыхтарса тĕрмене лартнă. Тепĕр кунне священник ăна кăларттарнă, анчах та Иеремия пĕтĕм Израиль хулисене, пĕтĕм халăхне тата Турă умĕнчи ултавлă священника еплерех шăпа кĕтни çинчен каллех пророкла сăмахне пĕлтернĕ. Унтан Иеремия Турра çак сăмахсене каланă: «Эй, Хуçамăр! Эсĕ манăн кăмăлăма Хăв патна туртрăн, туртсах илтĕн; Эсĕ манран вăйлăрах – Эсех çĕнтертĕн. Куллен эпĕ çын кулли пулатăп, кашниех манран мăшкăллать, мĕншĕн тесен калама пуçласанах малашлăхра пусахлупа аркану кĕтни çинчен калатăп. Турă сăмахĕшĕн мана хур тăваççĕ, куллен йĕкĕлтесе кулаççĕ. Вара эпĕ шухăшларăм: „Ун çинчен асилтерсе тăрам мар, текех Ун ячĕпе калам мар“, анчах та чĕрем çунсах тухать, шăм-шакăмран та çулăм тухать. Çав çулăма чарма тăрăшса эпĕ халтан кайрăм, чараймарăм».

Шанчăклă пророка хĕсĕрлекенсем нумай пулнă, анчах Турă ăна çирĕплĕх парсах тăнă. Çавăнпа та Иеремия каланă: «Вăйлă çар çынни пек, Хуçа Турă манпа пĕрле, çавăнпа мана хĕсĕрлекенсемех такăнĕç, мана çĕнтереймĕç, ăссăрла хăтланнăшăн хăйсенех намăс курмалла пулĕ. Эй, Хăватлă Турă! Сăваплисене Эсĕ тĕрĕслетĕн, çын чĕрине витĕр курса тăратăн. Хуçа Турра мухтаса юрлăр, Хуçа Турра чаплăлатăр, мĕншĕн тесен Вăл чухăнсене усал çынсен аллинчен çăлса хăварать».

*ИЕРЕМИЯ 19:13–15; 20:1–13*



## ИЕРЕМИЯН ПРОРОКЛА СĂМАХНЕ ВАРУХ ÇЫРСА ХУНИ

Пĕррехинче Турă Иеремияна çапла каланă: «Кĕнеке çырмалли тĕркеме ил те Эпĕ сана Израиль пирки, Иуда пирки тата ытти халăхсем пирки мĕн каланине, Эпĕ вĕсем çине инкек-синкек яма шухăшланине çавăнта çырса хур. Тен, Иуда çыннисем сăмахăма илтĕç те хăйсен усал çул-йĕрĕнчен пăрăнĕç, вара Эпĕ вĕсен мĕн пур йĕркесĕрлĕхне, çылăхне каçарăп».

Иеремия Варух ятлă çынна чĕнсе илнĕ те Хуçа Турă хăйĕн урлă калас сăмахсене пĕтĕмпех çырса пыма хушнă. Варух çырса хурсан Иеремия ăна каланă: «Тĕрмере ларнă пирки манăн Турă Çуртне кайма май çук; çапла ĕнтĕ эсĕ кай та ху çак тĕркеме мĕн çырнине – Турă ман урлă каланă сăмахсене – типĕ тытмалли кун сасăпах вуласа пар. Çавна эсĕ пĕтĕм Иерусалим халăхĕ умĕнче тата ытти хуласенчен пуçтарăннă иудейсем умĕнче сасăпах вула. Тен, вĕсем Хуçа Турра пăхăнса кĕлтăвĕç те хăйсен усал çул-йĕрĕнчен пăрăнĕç, мĕншĕн тесен Турă çак халăха питĕ хытă çилленнĕ, тарăхнă».

Нирия ывăлĕ Варух хăйне Иеремия пророк мĕн хушнине пĕтĕмпех тунă. Иудея патши Иоаким, Иосия ывăлĕ, патшана ларни пилĕк çула кайсан, çулталăкăн тăххăрмĕш уйăхĕнче Иерусалимра пурăнакан мĕн пур халăха тата Иудея хулисенчен Иерусалима пуçтарăннă ытти çынсене Хуçа Турă умĕнче типĕ тытма хушнă. Çав кун Варух тĕркеме çырнă сăмахсене Турă Çуртĕнче вуласа панă.

*ИЕРЕМИЯ 36:1–10*



## ПРОРОКЛА СĂМАХСЕМ ÇЫРНĂ ТĔРКЕМЕ ИОАКИМ ПАТША ÇУНТАРСА ЯНИ

Варух тĕркеме çырнă Иеремия пророкăн сăмахĕсене Турă Çуртĕнче вуласа пĕтерсен, Иудея патши çумĕнчи улпутсен сехри хăпнă. Вĕсем çавăн пирки Иоаким патшана часрах кайса каласа кăтартнă. Патша çав тĕркеме илсе пырса хăйне вуласа пама хушнă. Патша хăйĕн керменĕнче ларнă, унăн умĕнчи савăтра кăвар шăраннă. Тĕркеме Иоаким патне илсе пынă та вула пуçланă; вуласа тухнă сыпăксене патша хачăпа касса кăвар çине пăрахса ларнă. Çапла пĕтĕм тĕркеме çунтарса янă. Иоаким патшапа унăн тарçисем Турă сăмахне ĕненмен. Вĕсем Хуçа Турра итлеменшĕн иудейсем часах Вавилон патшин тыткăнне лекессе Иеремия пророк асăрхаттарнине илтсен те хăраман. Иоаким Варух çыруçăпа Иеремияна ярса тытма хушнă, анчах Хуçа Турă вĕсене йĕрлекенсенчен пытарса хăварнă.

Патша тĕркеме çунтарса янă хыççăн Турă Иеремияна Иудея патши Иоаким çунтарса янă тĕркемри сăмахсене пĕтĕмпех тепĕр тĕркем çине çырса хума каланă. Иудея патшине Иоакима вара çак сăмахсене пĕлтерме хушнă: «Хуçамăр çапла калать. Эсĕ тĕркеме çунтарнă чухне: „Вавилон патши килсе çак çĕре тустарĕ, пĕтĕм халăха тата выльăх-чĕрлĕхе вĕлерсе пĕтерĕ тесе эсĕ мĕншĕн çырса хутăн?“ – терĕн. Иудея патши Иоаким пирки Хуçамăр çапла калать: çак ĕçшĕн Давидăн престолĕ çине унăн тăхăмĕнчи çын лараймĕ, Иоаким виллине кăнтăрлахи шăрăхпа çĕрлехи сивве кăларса пăрахĕç. Эпĕ ăна хăйне те, унăн ăрăвне те, тарçисене те вĕсен усаллăхĕшĕн айăплав хурăп. Эпĕ вĕсем çине те, Иерусалимра пурăнакансем çине те, Иуда халăхĕ çине те тĕрлĕ инкек-синкек ярăп. Эпĕ çав инкексем пирки вĕсене малтанах асăрхаттартăм пулин те, вĕсем итлес темерĕç».

Нирия ывăлне Варуха вара Иеремия тепĕр тĕркем панă, лешĕ Иеремия каланă хыççăн Иудея патши Иоаким çунтарса янă тĕркемри сăмахсене пĕтĕмпех çĕнĕрен çырса пынă. Тата çĕнĕ тĕркеме хуша-хуша та çырнă. Хушса çырнисем те маларах каланă евĕрлех пулнă.

*ИЕРЕМИЯ 36:14–32*



## ВАВИЛОН ИУДĂНА ÇĔНСЕ ИЛНИ

Пĕтĕмпех Турă Иеремия пророк урлă малтанах каласа хунă пек пулса иртнĕ: иудейсене Вавилон патши Навуходоносор тыткăна илнĕ. Тем тери питлесен те, асăрхаттарсан та çынсем Турă умĕнче ӳкĕнменшĕн, кĕлеткесене пуççапма пăрахманшăн, усаллăхпа çылăхран хăтăлас теменшĕн Турă вĕсене çапла айăплав хунă. Кăнтăрти патшалăхра пурăнакансем Турă Çурçĕрти патшалăха епле айăплав хунине хăйсен куçĕсемпе хăйсемех курнă пулин те, саккуна тытса пурăнас темен. Вара Израиле 130 çул каялла айăпланă пекех, Вавилон çарĕсене ярса, Хуçа Турă ку патшалăха та аркатма шутланă.

Иоаким ывăлĕ Иехония Иерусалимра вун сакăр çулта патшана ларнă. Ашшĕ пекех путсĕр пурăнса вăл Турра юрăхсăр ĕçсем тунă. Вăл Иерусалимра патшана ларни виçĕ уйăх иртсенех Вавилон патшин çыннисем хулана хупăрласа, çавăрса илнĕ. Çавăн чухне Вавилон патши Навуходоносор хăй хула патне çывхарнă. Иудея патши Иехония хăйĕн амăшĕпе, тарçисемпе, патша керменĕнчи улпут тавращĕсемпе, евнухсемпе пĕрле Вавилон патши патне тухнă та тыткăна парăнма килĕшнĕ. Хуçа Турă малтан каласа хунă пекех, Навуходоносор Иерусалимри Турă Çуртĕнчи пĕтĕм мула, патша керменĕнчи пуянлăха Иерусалимран турттарса кайнă, Израиль патши Соломон Турă Çурчĕ валли тутарнă мĕн пур ылтăн савăта çаратнă. Çĕнтерӳçĕсем Иерусалим халăхне – патша çумĕнче ĕçлекен çынсене, мĕн пур хăюллă çар çыннисене, платниксене, тимĕрçĕсене – Вавилона куçарса кайнă. Вĕсен шучĕ пурĕ вунă пин çын пулнă. Çĕр ĕçĕпе пурăнакан чухăнсемсĕр пуçне Иудейăра урăх никам та тăрса юлман.

Иехония вырăнне Вавилон патши Иудея патшине Иехонийан тетĕшне Матфанияна лартнă, ăна Седекия тесе урăх ят панă. Седекия çирĕм пĕр çулта патшана ларнă та Иерусалимра вун пĕр çул патша пулнă. Иоаким патша пекех хăтланса вăл Турра юрăхсăр ĕçсем тунă. Иерусалимпа Иудейăна çав тери хытă çилленнипе Хуçа Турă вĕсене Хăйĕн умĕнчен сирнĕ.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 24:8–20*



# ИЕРУСАЛИМА ТАТА ТУРĂ ÇУРТНЕ АРКАТНИ

Турă хушнипе Израиль патши Соломон Иерусалимра еплерех чаплă Турă Çурчĕ туса лартни çинчен эпир вуланăччĕ ĕнтĕ. Анчах та Иерусалима малтанхи хут çĕнсе илнĕ хыççăн тепĕр вун пĕр çултан халдей (Вавилон) çарĕсем каллех çак хулана тапăнса кĕнĕ. Соломон туса лартнă Турă Çуртне вĕсем аркатнă. Акă мĕн çырнă ун çинчен Библире.

Патшана ларни тăхăр çула кайсан, Вавилон патши Навуходоносор хăйĕн пĕтĕм çарĕпе Иерусалим патне çывхарнă та ăна çавăрса илнĕ, хула йĕри-тавра тем çӳллĕш тăпра купалаттарнă. Иерусалима çарсем çулталăк çурă хупăрласа тăнă, хулара выçлăх пусланнă: унта пурăнакансен çимелли юлман. Вара тăшмансем хулана илнĕ, çĕрле иудейсен пĕтĕм çарĕ хапха патнелли çулпа чупнă. Çав хапха патша сачĕ çывăхĕнче, икĕ хӳме хушшинче пулнă. Халдейсем хулана хупăрласа илнĕ пулин те, патша тӳремлĕхелле каякан çулпа тарма ĕлкĕрнĕ. Анчах та халдей çарĕсем Седекия патшана Иерихон тӳремлĕхĕнче хăваласа çитнĕ. Иудея патшин çарĕ тарса-сапаланса пĕтнĕ. Седекияна тыткăна илнĕ те Ривла хулине Вавилон патши патне илсе кайса суд тунă. Седекия ывăлĕсене хăйĕн куçĕ умĕнчех вĕлернĕ, Седекияна хăйне вара, куçĕсене чиксе шăтарса, сăнчăрласа, Вавилона илсе кайнă.

Навуходоносора хураллакансен пуçлăхĕ Навузардан тата халдей çарĕ çапла Иерусалима кĕнĕ те Турă Çуртне, патша керменне тата Иерусалимри мĕн пур çурт-йĕре çунтарса янă, Иерусалим тавра тытса çавăрнă хӳмене те тĕппипех ишнĕ. Хулара тăрса юлнă халăха тата Вавилон патши енне тарса каçнă çар çыннисене патшана хураллакансен пуçлăхĕ Навузардан урăх çĕре пурăнма куçарнă. Çĕр ĕçлесе пурăнакан чухăнсенчен хăшне-пĕрне кăна иçĕм çырли пахчисенче, уй-хирсенче ĕçлеме хăварнă. Турă Çурчĕн картишĕнчи пăхăр юпасене, Турă Çуртĕнче пуççапнă чухне усă курмалли мĕн пур пăхăр хатĕр-хĕтĕре халдейсем çĕмĕрнĕ те пăхăрне Вавилона леçнĕ. Вĕсем Турă Çуртĕнчи мĕн пур пăхăр савăтсене, тĕтĕркĕчсене, тирĕксене тата ылтăн-кĕмĕл япаласене пурне те çаратса тухса кайнă.

Çак ĕç-пуç Христос Çураличченхи 587—586-мĕш çулсенче пулса иртнĕ. Çапла вара Соломон тутарнă Турă Çурчĕ 400 çул ытла ларнă.

*ПАТШАСЕН 4-МĔШ КĔНЕКИ 25:1–16*



# ДАНИИЛПА ВИÇĔ ТУСĔ

Иерусалимра пурăнакансене тыткăна илнĕ Вавилон патши Навуходоносор хăйĕн керменĕн пуçлăхне тыткăнри Израильпе Иудея çыннисем хушшинчен керменĕнче ĕçлесе тăмашкăн çамрăксене суйласа илме хушнă. Вĕсен патша е княç раттинчен, ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен кăлтăксăр, ăслă та тавçăруллă пулмалла пулнă. Кермен пуçлăхĕ çапла тунă та. Хайхи суйласа илнĕ çамрăксене патша хăйĕн сĕтелĕ çинчи тутлă апат-çимĕçе çитерме, хĕрлĕ эрехе ĕçтерме хушнă. Тата вăл çамрăксене тĕрлĕ ăслăлăха, халдей чĕлхине виçĕ çул вĕрентме хушнă.

Иудей çамрăкĕсем хушшинче Даниил, Анания, Мисаил тата Азария пулнă. Вавилон керменĕнче Даниила Валтасар тесе чĕннĕ, Ананияна – Седрах, Мисаила – Мисах, Азарияна – Авденаго. Даниил вара патша сĕтелĕ çинчи тутлă апат-çимĕçе çисе хăйне ирсĕрлетес темен. Мĕншĕн тесен ку апат-çимĕçе темрен те хатĕрлеме пултарнă. Моисей саккунĕпе вара еврейсен пули-пулми аш-пăша çиме юраман. Çавăнпа та вăл кермен пуçлăхĕнчен хăйсене пахча çимĕçпе ĕçмелĕх шыв кăна пама ыйтнă. Капла тусан çамрăксем начарланса кайĕç те, патша хăйне çилленĕ тесе кермен пуçлăхĕ малтанах Даниил ыйтăвне тивĕçтересшĕн пулман. Анчах та Даниил, хăйсене вунă кун хушши пахча çимĕçпе шыв кăна парса тĕрĕслесе пăхма сĕнсе, ăна ӳкĕте кĕртнĕ. Тепĕр вунă кунтан иудей çамрăкĕсем сăнĕ-пичĕпе чиперленнĕ, кĕлеткипе патша сĕтелĕ çинчи апат-çимĕçе çисе пурăнакан çамрăксенчен те маттуртарах пулнă.

Турă Даниила, Ананияна, Мисаила тата Азарияна пĕлӳпе ăс панă, Даниила вара тĕлĕксем мĕне пĕлтернине ăнлантарма та пултарулăх панă.

Тепĕр виçĕ çултан патша хăйĕн патĕнче ĕçлесе тăма суйласа илнĕ Иудейăпа Израиль çамрăкĕсене чĕнтернĕ. Кашнинпех куç-куçăн курса калаçнă хыççăн патша вĕсем хушшинче Даниилпа, Ананияпа, Мисаилпа тата Азарияпа танлашма пултараканни урăх никам та çуккине палăртнă. Çавăнпа та вĕсене патша çумĕнче ĕçлесе тăма хăварнă. Патша çак çамрăксенчен кирек мĕн çинчен ыйтсан та, вĕсен хуравĕсем мĕн пур халдей асамçисемпе ăсчахĕсем каланинчен вунă хут та ăслăрах пулнă.

*ДАНИИЛ 1:3–20*



# ЫЛТĂН КĔЛЕТКЕ ТАТА ВИÇĔ ПАТТĂР АРÇЫН

Вавилон патши Навуходоносор Деире хирĕнче вăтăр метр çӳллĕш, виçĕ метр сарлакăш ылтăн кĕлетке шăратса лартма хушнă. Унтан патша хушнипе пĕлтерӳçĕ çапла кăшкăрнă: «Эй, тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăхсемпе йăхсем, сире çакна пĕлтеретпĕр: труба е кĕвĕ каламалли урăх хатĕр сассине илтсессĕнех Навуходоносор лартнă ылтăн кĕлеткене çĕре ӳксе пуççапăр! Кам та кам ăна çĕре ӳксе пуççапмасть, çавна тӳрех тытса çунакан кăмакана пăрахĕç».

Халдейсенчен пĕри патшана элекленĕ: «Эй, патшам! Иудей арçыннисем Седрах, Мисах тата Авденаго эсĕ хушнине пăхăнмаççĕ, санăн туррусене кĕлтумаççĕ, ылтăн кĕлеткене те пуççапмаççĕ». Вара Навуходоносор, питĕ хытă çилленсе-тарăхса кайса, Седраха, Мисаха тата Авденагона хăй патне илсе пыма хушнă. «Эсир çав кĕлеткене пуççапмасан, — тенĕ вĕсене патша, — сире çунакан кăмакана пăрахĕç, сире ун чухне ман аллăмран мĕнле Турă хăтарĕ?» Вĕсем вара патшана çапла хуравланă: «Эй, патша! Эпир пуççапакан Туррăмăр пире вĕри кăмакаран та, санăн аллунтан та хăтарма пултарать. Хăтармасассăн вара, патша, çакна пĕлсе тăр: пурпĕр эпир санăн туррусене те кĕлтăвас çук, ылтăн кĕлеткене те пуççапас çук». Çакна илтсен, урса кайнă Навуходоносор хăйĕн çарĕнчи чи вăйлă салтаксене хайхи пăхăнман иудейсене тытса çыхма, çамрăксене вĕри кăмакана пăрахма хушнă.

Виçĕ иудей çамрăкне тытса çыхаççĕ те вĕри кăмакана пăрахаççĕ. Кăмакана ытти чухнехинчен çичĕ хут ытларах хĕртнĕрен вĕсене кăмакана пăрахакансем хăйсем çунса кĕлленнĕ. Вут çине тинкерсе пăхсан Навуходоносор тĕлĕнсех кайнă, хăвăрт сиксе тăнă та хăйĕн улпут таврашĕсене çапла каланă: «Çыхнă виçĕ çамрăка эпир вута пăрахрăмăр-çке! Эпĕ вара вут ăшĕнче нимĕнле çыхăсăрах çӳрекен, таса та сывă тăваттăшне куратăп. Тăваттăмĕшĕ Турă евĕрлех».

Патша кăмака патнерех çывхарнă та: «Седрах, Мисах тата Авденаго, Çӳлти Туррăн чурисем! Вутран тухса ман патăма килĕр-ха!» — тенĕ. Лешсем çулăмран тухса ун патне пынă. Вĕсем çулăмра сиенленменнине пурте курнă: çӳçĕсем те ĕнмен, тумтирĕсем те чиперех, хăйсенчен çунăк шăрши те кĕмен. Вара Навуходоносор çапла каланă: «Седрах, Мисах тата Авденаго Турри мухтавлă пултăр. Мĕнле аслă паллăсемпе чаплă хăватсем кăтартать Вăл! Унăн Патшалăхĕ — ĕмĕрлĕх патшалăх, Вăл ăруран ăрăва хуçаланĕ». Вара патша Седраха, Мисаха тата Авденагона Вавилон çĕрĕ-шывĕнче чапа кăларнă.

*ДАНИИЛ 3*



## ĂНЛАНМАЛЛА МАР СĂМАХСЕН ПĔЛТЕРĔШНЕ ДАНИИЛ ĂНЛАНТАРНИ

Навуходоносор хыççăн Вавилонра унăн ывăлĕ Валтасар патшана ларнă. Пĕррехинче вăл хăйĕн пине яхăн улпут таврашĕ валли чаплă ĕçкĕ-çикĕ тунă. Ĕçкĕ-çикĕ ирттермешкĕн тарçисене Валтасар хăйĕн ашшĕ Иерусалимри Турă Çурчĕн сăваплă вырăнĕнчен илсе тухнă ылтăн-кĕмĕл савăтсене çĕклесе пыма хушнă. Патшапа унăн улпучĕсем, вĕсен арăмĕсем хĕрлĕ эрех ĕçе-ĕçе хăйсен ылтăн, кĕмĕл, пăхăр, тимĕр, йывăç тата чул кĕлеткеллĕ туррисене мухтама пуçланă.

Сасартăк патша керменĕнчи ĕçкĕ-çикĕ пыракан пӳлĕмре лампада çути ӳкекен стена çине этем алли темĕн çырма тытăннă. Çакна курсан патша сăнран ӳкнĕ, унăн чĕркуççийĕсем тăр-тăр чĕтре пуçланă, вăл Вавилонри ăсчахсене пурне те ман патăма илсе килĕр тесе кăшкăрма тытăннă. Мĕн çырса хунине ăнлантарса пама пултаракана вăл патшалăхри пуç пулакан виççĕмĕш çын тума пулнă. Анчах та Вавилон ăсчахĕсенчен пĕри те стена çине çырнă сăмахсен пĕлтерĕшне ăнлантарса парайман.

Çакна йăлтах илтнĕ патша майри ĕçкĕ-çикĕ пыракан пӳлĕме кĕнĕ те патшана Даниил çинчен каласа кăтартнă. Вăл патшана Даниилра Турă Сывлăшĕ пурри çинчен, çак çамрăк ăслă пулни çинчен, тĕлĕксене ăнлантарса пама пултарни çинчен, вăрттăнлăхсене уçса пани çинчен тата кăткăс ыйтусен тупсăмне тупма пултарни çинчен те каласа панă. Вара Даниила патша патне илсе пынă, патша унран ăнланмалла мар сăмахсен пĕлтерĕшне ăнлантарса пама ыйтнă.

Даниил вара Валтасар патшана мăнкăмăллă пулнишĕн тата хĕрлĕ эрех ĕçе-ĕçе кĕлетке-турăсене мухтамашкăн сăваплă савăтсене илнишĕн Турă питĕ çилленнине пĕлтернĕ. Çавăнпа та Турă çак сăмахсене çыртарнă. «Кунта акă мĕн çырнă, – тенĕ унтан Даниил, – МЕНЕ, МЕНЕ, ТЕКЕЛ, УПАРСИН. Ку сăмахсен пĕлтерĕшĕ çакăн пек: МЕНЕ – Турă санăн патшара ларас кунусене шутласа хунă, юлашки кунне те палăртнă; ТЕКЕЛ – сана чăнлăх тарасипе виçнĕ, эсĕ питĕ çăмăл иккен; УПАРСИН – санăн патшалăхна вакласа миди тата перс халăхĕсене парĕç». Вара Валтасар хушнипе Даниила хĕрлĕ патша тумĕ тăхăнтартнă, мăйне ылтăн вăчăра çакса янă, ăна патшалăхри пуç пулакан виççĕмĕш çын тесе пĕлтернĕ. Пророкла сăмахсем çав каçах пурнăçланнă: Валтасара вĕлернĕ, унăн патшалăхне Миди патши Дарий çĕнсе илнĕ.

*ДАНИИЛ 5:1–31*



## ДАНИИЛ КЁЛТУНИ

Валтасар хыççăн патшана ларнă Дарий те мăнкăмăллăскер, кĕлеткесене пуççапаканскер пулнă. Çапах та вăл Даниила ăслă та пархатарлă пулнăран килĕштернĕ.

Дарий хăйĕн пĕтĕм патшалăхне тытса тăмашкăн çĕр çирĕм пуçлăх лартма шухăш тытнă. Патшана пули-пулми ан чăрмантарччăр тесе, вăл тата виçĕ çынна аслă пуçлăха лартнă. Çав виçĕ аслă пуçлăхран пĕри Даниил пулнă. Вăл ытти пуçлăхсенчен ăслăрах та, пархатарлăрах та пулнă; патша ăна пĕтĕм патшалăха тытса тăракан тумашкăн та шутлакаланă. Вара пуçлăхсемпе аслă пуçлăхсем, Даниила айăплас тесе, унăн ĕçне хурламалли сăлтав шырама пуçланă. Анчах та Даниил патшашăн пĕтĕм чун-чĕрипе парăнса ĕçленĕ пирки вĕсем унăн ĕçĕнче нимĕнле йăнăш та, айăп та тупайман.

Юлашкинчен Даниила патша куçĕ умĕнче ӳкермешкĕн пуçлăхсем пĕр чее шухăш тытнă. Даниил хăйĕн Туррине тăтăшах кĕлтунине вĕсем пĕлнĕ те, патша патне пырса, саккун кăларма ыйтнă. Çав саккунпа вара кирек камăн та вăтăр кун хушши Дарий патшасăр пуçне урăх пĕр турăран та, çынран та нимĕн те ыйтма юраман. Хайхи саккуна пăхăнман çынна тискер арăслансем янă шăтăка пăрахмалла пулнă. Патша хăйĕн пуçлăхĕсем мĕншĕн çапла ыйтнине пĕлмен, çавăнпа та саккуна алă пусса çирĕплетме килĕшнĕ.

Çĕнĕ саккун çинчен илтнĕ пулин те, Даниил хăйĕн Туррине кĕлтума пăрахман. Вăл хăтлă пӳлĕмĕнче чĕркуçленсе, Турра тав туса, кунне виçĕ хутчен кĕлтунă. Иерусалимри Турă Çуртне аркатиччен унта Турă мухтавĕн çути тăнă пулнă. Çавăнпа та кĕлтунă чухне Даниил хăйĕн тăван Иерусалим хули еннелле пăхакан чӳречесене яланах уçса хунă.

Даниила курайман усал çынсем вăл хăйĕн Туррине епле кĕлтунине, епле Унран ырăлăх ыйтнине вăрттăн сăнаса тăнă та çавăн çинчен тӳрех патшана элек пама шутланă.

*ДАНИИЛ 6:1–11*



## ДАНИИЛА АРĂСЛАН ШĂТĂКНЕ ПĂРАХНИ

Хайхи Даниила курайман патша çумĕнчи улпутсем, Даниил патша саккунне пăхăнмасăр хăйĕн Туррине кунне виçĕ хутчен кĕлтăвать тесе, Дарий патшана çăхав çитернĕ. Çакна илтсен патша хуйха ӳкнĕ, унтан Даниила çăлса хăварма шухăшланă. Анчах та элекçĕ улпутсем миди тата перс халăхĕсен саккунĕпе патша алă пусса çирĕплетнĕ нимĕнле хушăва та улăштарма юраманни çинчен асăрхаттарнă. Вара патша Даниила арăслан шăтăкне пăрахма хушнă. «Эсĕ яланах тархаслакан Турру сана çăлса хăварĕ», — тенĕ патша çавăн чухне Даниила. Унтан патша хăй керменне таврăннă та каçхи апат çимесĕрех çывăрма выртнă, анчах та çĕрĕпех çывăрса каяйман. Тул çутăлнă-çутăлманах патша арăслан шăтăкĕ патне васканă, шăтăк патне çитсессĕн хурлăхлă сасăпа: «Чĕрĕ Туррăн чури Даниил! Эсĕ яланах тархаслакан Турру сана арăслансенчен çăлса хăварма пултарчĕ-и?» — тесе ыйтнă. Даниил хирĕç çапла таврăнă: «Туррăм хăйĕн ангелне ярса арăслансен çăварне хуптарчĕ. Турă умĕнче эпĕ таса пулнă пирки, сан умăнта та, патшам, нимĕнле айăпа кĕмен пирки мана арăслансем нимĕн те тумарĕç».

Даниил чĕрĕ-сывă пулнине курсан патша, питĕ хĕпĕртесе кайса, ăна шăтăкран кăларма хушнă. Шăтăкран кăларсан пăхаççĕ те — арăслансем ăна нимĕнле сиен те туманнине кураççĕ. Вара Даниила айăпланă çынсене патша хушнипе илсе пынă та çав шăтăках пăрахнă. Шăтăк тĕпне ӳкичченех арăслансем вĕсем çине сиксе ӳкнĕ те çурса тăкнă.

Çакăн хыççăн Дарий çыру çырнă та ăна хăйĕн патшалăхĕн мĕн пур кĕтесĕсене çитернĕ. Çырура вăл пур халăхсене те Даниил Туррине хисеплеме хушнă, мĕншĕн тесен Даниил пуççапакан Турă — ĕмĕрлĕх Турă, Вăл вĕçĕмсĕр хуçаланĕ. «Вăл хăтарать, çăлать, пĕлĕт çинче те, çĕр çинче те хăватсемпе паллăсем кăтартать. Вăл Даниила арăслансенчен те çăлса хăварчĕ!» — тесе çырнă пулнă çав çырура.

*ДАНИИЛ 6:12–27*



# ИУДЕЙСЕМ ТЫТКӐНРАН ТАВӐРӐННИ

Ассири ҫарӗсем Ҫурҫӗрти патшалӑха, Израиле, ҫӗнсе илсе халӑхне тыткӑна хӑваласа кайни ҫинчен эпир вуланӑччӗ. Ку ӗҫ-пуҫ Христос Ҫураличчен ҫичӗ ӗмӗр маларах пулса иртнӗ. Тепӗр ҫӗр ҫултан Мидин тата Вавилонӑн пӗрлештернӗ ҫарӗсем икӗ ҫул хушши хупӑрласа тӑнӑ хыҫҫӑн Ниневи хулине аркатнӑ. Вӑйланса кайнӑ Вавилон патшалӑхӗ кӳршӗллӗ ҫӗрсене тустарнӑ, вӗсем хушшинче Кӑнтӑрти патшалӑх та, Иудея, пулнӑ. Иудея ҫыннисене Вавилон тыткӑнне хӑваласа кайнӑ.

Анчах та вӑйлӑ Вавилон империйӗн те пӗтесси ҫитнӗ. Ӑна миди тата перс халӑхӗсем ҫӗнсе илнӗ. Кир ятлӑ перс патши иудейсене тӑван ҫӗр-шывне тавӑрӑнма ирӗк панӑ. «Перси патши Кир ҫапла калать, – тесе пӗлтернӗ вӑл пӗтӗм патшалӑхӗнче. – Ҫӳлти Турӑ, Хуҫамӑр, мана ҫӗр ҫинчи мӗн пур патшалӑхсене пачӗ. Вӑл мана Хӑйне валли Иудейӑри Иерусалимра Турӑ Ҫурчӗ туса лартма хушрӗ. Кам Унӑн халӑхӗ хушшинчен тухнӑ, – Турӑ ҫав халӑхпа пултӑр, – вӗсем пурте Иудейӑри Иерусалима кайччӑр, Израиль Туррине, Хуҫамӑра, валли Турӑ Ҫурчӗ туса лартчӑр». Израилӗн вун икӗ йӑхӗнчен хӗрӗх пин ытла еврей тӑван ҫӗр-шывне тавӑраннӑ, ытларахӑшӗ иудейсем, урӑхла каласан, Иуда йӑхӗнчен тухнӑ еврейсем, пулнӑ. Перссем пурӑнакан ҫӗр-шывсенче те еврейсем нумаййӑн тӑрса юлнӑ.

Тавӑрӑннӑ хыҫҫӑн тепӗр ҫулхинех иудейсем Иерусалима пухӑннӑ та Турӑ Ҫурчӗ валли ҫӗнӗ никӗс хывса хӑварнӑ. Ватӑ священниксем, левитсемпе йӑх пуҫӗсем, малтанхи Турӑ Ҫуртне астӑваканскерсем, Турӑ Ҫурчӗн ҫӗнӗ никӗсне хывнине курсан чылайӑшӗ сасӑпах йӗнӗ, хӑшӗ-хӑшӗ тата савӑннипе хыттӑн кӑшкӑрнӑ. Йӗри-таврах савӑнса кӑшкӑрнипе хутӑш йӗни илтӗнсе тӑнӑ.

Турӑ Ҫуртне ҫӗнӗрен лартассине Иудея патшин Иехониян мӑнукӗ Зоровавель йӗркелесе пынӑ. Анчах та ӗлӗкрех иудейсем пурӑннӑ ҫӗрсене вырнаҫнӑ халӑхсем вӗсене кураймасӑр Турӑ Ҫуртне лартма чӑрмантарнӑ. Вӗсем еврейсене хӑратса пӗтернӗ, Перси патши Артаксеркс умӗнче еврейсене тем тӗрлӗ те хурланӑ. Турӑ Ҫуртне тӑвас ӗҫе вӗсем вун пилӗк ҫуллӑха – Персире урӑх патша, каллех Дарий ятлӑскер, ларичченех – чарса лартма пултарнӑ.

Дарий патша вара Кир патша хушӑвне ҫӗнӗрен ҫирӗплетнӗ, Турӑ Ҫуртне туса пӗтерме хушса Иерусалима ҫыру янӑ. Турӑ Ҫуртне ҫӗнӗрен Адар уйӑхӗн виҫҫӗмӗш кунӗ тӗлне, Дарий патшана ларни ултӑ ҫула кайсан, туса пӗтернӗ.

*ЕЗДРА 1 – 6*



## ПАТША МАЙРИ ЕСФИРЬ

Перси патши Артаксеркс авланма шут тытнӑ. Чи хитре хӗрсене Сузы ятлӑ хулана пуҫтарас тесе вӑл хӑйӗн патшалӑхӗн мӗн пур кӗтесӗсене хыпарҫӑсем янӑ. Тӗп хулара хӗрсене патша умне тӑратмашкӑн вун икӗ уйӑх хатӗрленӗ. Вӑл тапхӑрта Персире Ассири тата Вавилон ҫарӗсем хӑй вӑхӑтӗнче тыткӑна илсе кайнӑ еврейсен тӑхӑмӗсем те пулнӑ. Сузы хулинче Мардохей ятлӑ пӗр иудей пурӑннӑ. Вӑл тетӗшӗн хӗрне, Есфирь ятлӑскерне, пӑхса ӳстернӗ. Хӗрӗ питӗ чипер те йӑрӑс пӳллӗ пулнӑ. Есфирӗн ашшӗ-амӑшӗ вилсессӗн Мардохей ӑна усрава илнӗ, хӑйӗн хӗрӗ пекех пӑхнӑ. Пӗтӗм ҫӗр-шыври чиперккесене тӗп хулана, Сузӑна, пухма пуҫласассӑн, патша ҫуртне пыма Есфире те чӗннӗ. Патшана Есфирь ытти чиперккесенчен те ытларах килӗшсе кайнӑ. Вӑл унӑн пуҫӗ ҫине патша пуҫкӑшӑлӗ тӑхӑнтартнӑ та ӑна качча илнӗ. Патша, улпут таврашӗсемпе хӑйне пӑхӑнса тӑракан пуҫлӑхсене йыхравласа, Есфирь ячӗпе чаплӑ туй туса ирттернӗ, тӗрлӗ тӑрӑхра пурӑнакан халӑхсене ҫӑмӑллӑхсем панӑ, патшалла тараватлӑхпа парнесем валеҫнӗ. Есфирь вара, хӑйне Мардохей хушнӑ пекех, хӑй мӗнле халӑх хӗрӗ пулни ҫинчен нимӗн те шарламан.

Нумаях та вӑхӑт иртмен, патша хӑйӗн пӗр улпутне, Амана, ытти улпутсен пуҫлӑхне лартнӑ. Патша керменӗнче ӗҫлесе тӑракансен патша хушнипе Аман умӗнче ҫӗре ӳксе пуҫ таймалла пулнӑ. Пӗр Мардохей ҫеҫ ӑна пуҫ тайман. Аман вара, ҫиллине шӑмараймасӑр, Артаксерксӑн патшалӑхӗнчи мӗн пур иудейсене тӗп тума шут тытнӑ.

Вӑл Артаксеркс патшана ҫапла каланӑ: «Санӑн патшалӑхун мӗн пур тӑрӑхӗсенче ытти халӑхсем хушшинче сапаланса пурӑнакан пӗр халӑх пур. Вӗсен саккунӗсем ытти халӑхсеннинчен питӗ уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ, вӗсем патша саккунӗсене те пӑхӑнмаҫҫӗ». Патша Амана ҫав халӑхпа хӑйӗн мӗн тӑвас килет, ҫавна тума ирӗк панӑ. Вара Артаксеркса пӑхӑнса тӑракан мӗн пур тӑрӑхсене хыпарҫӑсем ҫырусем ҫитернӗ. Ҫав ҫырусенче вун иккӗмӗш уйӑхӑн (Адар уйӑхӗн) вун виҫҫӗмӗш кунӗнче мӗн пур иудейсене, ватти-вӗттипех, хӗрарӑмсемпе ачасене те, пӗр кун хушшинче вӗлерсе пӗтерме, пурлӑхӗсене туртса илме хушнӑ пулнӑ. Патша хушӑвӗ ҫитнӗ кашни вырӑнтах иудейсем хуйха ӳкнӗ: типӗ тытнӑ, ӳлесе йӗнӗ.

*ЕСФИРЬ 1 – 3*



# ПАТША МАЙРИ ЕСФИРЬ
## *(малалли)*

Хӑйсене мӗнле шӑпа кӗтнине илтсен Мардохей хайхи патша хушӑвӗ ҫинчен Есфире пӗлтернӗ. Хӑйӗн халӑхӗн хӳттине кӗме, хӗрхенме ыйтмашкӑн вара Мардохей Есфире патша патне кайма хушнӑ. Патша майри тарҫӑ урлӑ Мардохея ҫапла хурав панӑ: «Патша хӑй чӗнмен ҫын ун патне шалти картишне кӗрсен, ҫав ҫынна тӳрех вӗлермелле айӑплаҫҫӗ. Анчах та патша ҫав ҫын еннелле хӑйӗн ылтӑн туйине тӑссан, ӑна вӗлермеҫҫӗ. Мана вара патша вӑтӑр кун ӗнтӗ хӑй патне чӗнмест». Мардохей Есфире ҫапла калама ыйтнӑ: «Патша ҫуртӗнче ларса мӗн пур иудейсенчен ху кӑна ҫӑлӑнса юлӑп тесе ан шухӑшла. Кам пӗлет, тен, эсӗ шӑпах ҫак вӑхӑтсемшӗн патша ырӑлӑхне тивӗҫмелле пултӑн?» «Кай та Сузӑри мӗн пур иудейсене пӗр ҫӗре пухӑнма хуш, – тавӑрнӑ вара Есфирь Мардохея, – унтан ман ятӑмпа типӗ тытӑр; виҫӗ талӑк нимӗн те ан ҫийӗр, ан ӗҫӗр. Эпӗ те тарҫӑмсемпе пӗрле типӗ тытӑп, кайран, йышӑннӑ йӗркене пӑссах, патша патне кайӑп. Мана вилме пӳрнӗ пулсан, эппин, вилем». Ҫав хушӑра усал Аман Мардохея ҫакса вӗлермешкӗн ҫирӗм пилӗк метр ҫӳллӗш такан хатӗрлеттерме те ӗлкӗрнӗ.

Виҫҫӗмӗш кунне Есфирь хӑйӗн патша майри тумне тӑхӑннӑ та шалти картишне, патшан канмалли вырӑнне, кӗнӗ. Патша Есфирь еннелле хӑйӗн ылтӑн туйине тӑснӑ. Есфирь ҫывӑхарах пынӑ та ылтӑн туяна сӗртӗннӗ, унтан патшапа Амана ҫав кунах ӗҫке чӗннӗ. Лешсем пынӑ. «Эй, Есфирь, эсӗ мӗн ӗмӗтленетӗн, манран мӗн тархаслатӑн?» – тенӗ патша хӗрлӗ эрех ӗҫсе ларнӑ чухне. Вара патша майри ҫапла тавӑрнӑ: «Пурӑнӑҫӑма парнелесемччӗ – ҫакӑ манӑн ӗмӗтӗм; тӑван халӑхӑма пӗтмелле ан тусамччӗ – ҫакӑ манӑн тархаславӑм. Мӗншӗн тесен мана хама та, тӑван халӑхӑма та тӗппипех пӗтермелле туса хучӗҫ». Ҫапла майпа патша хӑйӗн арӑмӗ еврей хӗрарӑмӗ пулнине пӗлнӗ, Аманӑн чее шухӑшне тавҫӑрса илнӗ. Патша хушнипе вара Мардохея ҫакма хатӗрленӗ такан ҫине Амана хӑйне ҫакса вӗлернӗ.

Анчах та Перси патшалӑхӗнче пурӑнакан иудейсене вӗлерсе пӗтермелли хушусене ӗнтӗ пӑрахӑҫлама та, улӑштарма та юраман, мӗншӗн тесен вӗсене патша ячӗпе ҫырса, патшан куҫлӑ ҫӗррипе пичет пуссах ҫирӗплетнӗ пулнӑ. Вара патша ҫӗнӗ хушусем ҫыртарнӑ: тӗрлӗ хуласенчи иудейсене пӗрлешсе хӑйсен пурӑнӑҫӗшӗн ҫапӑҫма ирӗк панӑ. Индирен пуҫласа Эфиопи таранах сарӑлса выртакан империн ҫӗр ҫирӗм ҫичӗ тӑрӑхне урхамахсем ҫине утланнӑ хыпарҫӑсем вӗҫтернӗ. Вӗсем часах ҫав хушӑва вырӑнти пуҫлӑхсем патне ҫитернӗ. Еврейсем ҫӑлӑнса юлнине асӑнма Мардохей вара ҫуллен Пурим ятлӑ уяв ирттерессине йӑлана кӗртнӗ.

*ЕСФИРЬ 4 – 10*



## НЕЕМИЯ ИЕРУСАЛИМ ХӲМИНЕ ТУТАРНИ

Сузы ятлă тĕп хулара Перси патши Артаксеркс çумĕнчи улпут тавращĕсем хушшинче ятлă-сумлă Неемия пулнă.

Пĕр иудей Иерусалимран Персине таврăннă. Неемия унран Иерусалим çинчен, унта юлнă иудейсен пурăнăçĕ çинчен ыйтса пĕлме пуçланă. Лешĕ Неемияна çапла каласа панă: «Тыткăна хăваласа кайман, хăйсен çĕр-шывĕнчех тăрса юлнă еврейсем питĕ тертлĕ те мĕскĕн пурăнаççĕ. Иерусалим хӳмине аркатнă, хӳме хапхисене çунтарса янă». Çак сăмахсене илтсен Неемия ларсах йĕнĕ. Вăл темиçе кун хушши хуйхăллă çӳренĕ, типĕ тытнă. Артаксеркс патша хăйне Иерусалима ятăрччĕ, хула хӳмине çĕнĕрен туса лартма ирĕк патăрччĕ тесе вăл Турра кĕлтунă.

Артаксеркс патша Неемияна Иерусалима кайма ирĕк панă. Вара Неемия ытти иудейсемпе пĕрле хулан аркатнă хӳмипе хапхисене çĕнĕрен тума пуçланă. Çакăн çинчен иудейсен тăшманĕсем пĕлнĕ те вĕсене тĕрлĕ майпа хăратса ĕçе чарса лартасшăн пулнă. Анчах та Неемия хăйĕн çыннисене хĕçсем панă. Хӳме купалама чул çĕклекенсен пĕр аллинче чул пулнă, тепĕр аллинче – хĕç. Ĕçлекенсем пурте хĕçпе пулнă. Кунĕн-çĕрĕн ĕç вĕресе тăнă. Турă алли хӳме тăвакансене хӳтте илнĕ, Вавилон çарĕ Иерусалима çĕнсе илсе çунтарса яни çĕр хĕрĕх çул иртсен, хӳмене çĕнĕрен купаласа лартнă.

Çиччĕмĕш уйăхра пĕтĕм халăх пасар вырăнне пуçтарăннă. Ездра ятлă священника Турă панă Моисей саккунĕн кĕнекине илсе пыма хушнă. Ездра саккун кĕнекине илсе пынă та ирхи шуçăмран кăнтăрлаччен арçынсене те, хĕрарăмсене те – итлеме пухăннисене пурне те – вуласа панă. Пĕтĕм халăх саккун кĕнекинче çырнă сăмахсене тимлесе итленĕ. Ездра аслă Турра, Хуçана, тав тунă, пĕтĕм халăх вара аллисене тӳпенелле çĕклесе «Аминь, аминь»*, – тесе тавăрнă. Унтан пурте çĕре ӳксе Турра пуççапнă.

*НЕЕМИЯ 1 – 8*

---

* *Авалхи еврей чĕлхинчен куçарсассăн «аминь» тени «чăн; çапла пултăр» тени пулать.*



## ХАЛĂХ ТУРĂ ПАТНЕ ТАВĂРĂННИ

Çав уйăхăн çирĕм тăваттăмĕш кунĕнче мĕн пур Израиль çыннисем пухăннă. Иудейсем, типĕ тытса, шултра пиртен çĕленĕ хурлăх çи-пуçĕ тăхăннă, хăйсен йăлипе пуçĕсем çине кĕл сапнă пулнă. Израиль çыннисем ытти мĕн пур халăхсенчен уйăрăлса хăйсен тата мăн аслашшĕсен çылăхĕсенчен ӳкĕннĕ. Пĕр вырăнта тăрса вĕсем Хуçин, хăйсен Туррин, саккун кĕнекине чĕрĕк кун вуланă. Тата тепĕр чĕрĕк кун Хуçине, хăйсен Туррине, ӳкĕнсе пуççапнă. Çӳллĕрех вырăнта Иисус, Вания, Кадмиил, Шевания, Вунний, Шеревия, Вания, Хенани левитсем тăнă, вĕсем Хуçине, хăйсен Туррине, хыттăн тархасланă. Левитсем çапла каланă: «Тăрăр, Хуçăра, хăвăр Туррăра, ĕмĕр-ĕмĕр мухтăр. Турăçăм, каçса кайса мухтанинчен те, ырланинчен те аслăрах яту пиллĕхлĕ пултăр. Эсĕ, Турăçăм, пĕртен-пĕр, Сансăр пуçне урăх турă çук. Эсĕ çӳл тӳпене тата унта мĕн пуррине, çĕре тата унта мĕн пуррине, тинĕсе тата унта мĕн пуррине пĕтĕмпех пултарнă, Эсĕ пурне те пурăнăç паратăн, тӳпери хăватсем те сана пăхăнаççĕ».

Халăх хăйĕн çылăхĕсемшĕн тата Турăран пăрăннăшăн пĕтĕм чун-чĕрипе ӳкĕнсе çапла кĕлтунă: «Халĕ Эсĕ пирĕн Туррăмăр, Ху тунă килĕшĕве упракан, Хăвăн халăхна хĕрхенекен аслă, хăватлă, хăратуллă Туррăмăр! Эпир сахал асап тӳснĕ пек ан туйăнтăрччĕ Сана. Пирĕн патшасем те, священниксем те, пророксем те, мăн асаттесем те, Санăн пĕтĕм халăху – Ассири патшисен пусмăрĕнчен пуçласа паян кунчченех – асап тӳсрĕ. Эсĕ пире айăпланисем пире çитни тĕрĕссех; Эсĕ тĕрĕс суд турăн, эпир, чăнах та, айăплă. Çавăнпа та эпир Турă саккунĕ хушнă пек пурăнма, мĕн пур пил-хушусемпе йĕркесене тытса тăма, пурнăçлама çырсах тивĕç сăмахĕ паратпăр. Çырнине алă пуссах çирĕплететпĕр, алă пусни çинче – пирĕн пуçлăхсем, левитсем, священниксем çаптарнă пичет». Аслăран та аслă çынсем çак килĕшĕве алă пусса, хăйсен пичечĕсене лартса çирĕплетнĕ. Ытти хура халăх, священниксем, левитсем, хапха хуралçисем, юрăçăсем, Турă Çурчĕ таврашĕнче ĕçлесе тăракансем, Турă саккунне йышăннă мĕн пур урăх çĕр-шыв çыннисем, вĕсен арăмĕсем, ывăлĕсем, хĕрĕсем – ăнланма пултаракансем пурте – тăванĕсемпе, халăхăн ятлă-сумлă çыннисемпе, пĕр шухăшлă пулнă, тупа туса çак тивĕçе хăйсем çине илнĕ.

*НЕЕМИЯ 9:1–6; 9:32 – 10:29*



## ИОВ АСАПĔСЕМ

Уц çĕрĕнче çирĕп ĕненекен Иов ятлă пĕр питĕ пуян çын пурăннă. Вăл таса, тӳрĕ, Турăран хăракан, кирек епле усал-тĕселтен те пăрăнма тăрăшакан çын пулнă. Унăн çичĕ ывăл та виçĕ хĕр пулнă.

Пĕррехинче Турă патне шуйттан пынă. «Эсĕ ăçтан килтĕн?» – тесе ыйтнă унран Турă. «Эпĕ пĕтĕм тĕнче тавра çӳресе çавăрăнтăм», – тавăрнă шуйттан. «Манăн чурама, Иова, асăрхарăн-и? Унашкал таса, тӳрĕ, Турăран хăракан, кирек епле усал-тĕселтен те пăрăнма тăрăшакан çын çĕр çинче урăх çук», – тенĕ ăна Хуçа Турă. Вара шуйттан Хуçа Турра çапла каланă: «Иов Турăран ахальтен хăрать-им? Ăна хăйне те, кил-йышне те, пурлăхне те хӳтте илекенни Эсĕ мар-им вара? Унăн ĕçĕсене пурне те Эсĕ пилленĕ, унăн кĕтĕвĕсем талккăшĕпех сарăлса кайнă. Анчах та Эсĕ унăн мĕн пуррине тĕкĕнсе пăх-ха – ун чухне вăл Сана ырă сăмах калĕ-и?» Вара Турă шуйттана каланă: «Унăн мĕн пуррипе хуçаланма сана ирĕк паратăп».

Çакнашкал ирĕк илсессĕн шуйттан Иова тĕрлĕ майсемпе сăтăр тума пуçланă. Вăл унăн мĕн пур ачисене вĕлерсе пĕтернĕ, пĕтĕм пуянлăхне тĕп тунă. Çапах та Иов ӳпкелешсе Турра хурламан. «Турă пачĕ, Турă илчĕ; Хуçамăр ячĕ ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă пултăр», – тенĕ кăна вăл. Унтан арăмне çапла каланă: «Турăран ыррине йышăнса, япăххине йышăнмалла мар-и вара пирĕн?» Турă умĕнче Иов пĕр сăмахпа та çылăха кĕмен. Вара шуйттан ăна хăрушă чирпе чирлеттернĕ – пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанĕ таранах унăн ӳчĕ юхан-суранпа витĕннĕ. Асапĕ ытла йывăр пулнăран Иовăн ĕмĕчĕ татăлнă.

Вара Иов асапĕ çинчен илтнĕ виçĕ тусĕ ăна лăплантарма пынă. Анчах та лăплантарнă çĕртех вĕсем: тӳрĕ пурăнакансене Турă айăпламасть, эппин Иов темшĕн айăплă тесе сăмахлама пуçланă. Иов малтанхи пекех тӳрĕ пурăнатăп тесе çине тăнă. Тусĕсем çеç калани ăна çителĕксĕр туйăннă. Вăл Турăпа калаçасшăн пулнă. Мĕншĕн ман кунашкал асап тӳсмелле пулчĕ-ши тесе тилмĕрнĕ пулин те, çăлăнас шанчăкне çухатмасăр вăл çапла каланă: «Хăтараканăм чĕрĕ пулнине, юлашки кун Вăл мана чĕртсе тăратасса, вара эпĕ Турра курасса пĕлетĕп».

*ИОВ 1; 2; 4; 5; 19:25–26*



## АСАПĔСЕНЕ ТӲССЕ ИРТТЕРНĔ ХЫÇÇĂНХИ ИОВ

Иов хăйĕн виçĕ тусĕпе калаçса ларнă чухне сасартăк вăйлă çил-тăвăл кĕрлеме пуçланă, тăвăл вăхăтĕнчех Турă сасси илтĕнсе кайнă. Турă Иова этем хуравлайми ыйтусем пама тытăннă, вара этем умĕнче Турă явап тытманнине Иов ăнланса илнĕ. Турă эпир Ун пирки шухăшланинчен тем тери аслă. Хуçа Турă калаçма чарăнсассăн Иов Ăна: «Эсĕ пурне те пултарнине, Эсĕ тăвас тенине чарма çуккине пĕлетĕп», – тенĕ.

Иова тĕрĕслесе сăнанă хыççăн Турă ăна мĕн-мĕн çухатнине йăлтах тавăрса панă, малтанхинчен икĕ хут та ытларах тавăрнă. Иовăн лăплантарма пĕлмен тусĕсене вара, вĕсем Турă çинчен Иов пек тĕрĕс калаçманшăн, Хуçа Турă питĕ çилленнĕ. Çавăнпа Хуçа Турă вĕсене хăйсен ячĕпе Турра парне кӳмешкĕн, Иова хăйсемшĕн кĕлтума тархасламашкăн хушнă, Хăй Иов кĕллине кăна йышăнасса пĕлтернĕ. Иовăн тусĕсем вара, Хуçа Турă хушнине пурнăçласа, Турăран каçару илнĕ.

Тем те пĕр тӳссе ирттернĕ хыççăн Иов патне пĕртăванĕсемпе пĕлĕшĕсем парнесемпе пынă. Иовăн юлашки кунĕсене Турă малтанхинчен те тивлетлĕ тунă. Асапĕсене тӳссе ирттернĕ хыççăн Иов чылай пурăннă, унăн çичĕ ывăлпа виçĕ хĕр çуралнă. Иов хĕрĕсем пек чиперккесем пĕтĕм çĕр çинче те урăх пулман.

Пурăнса çитсессĕн Иов ватăлса вилнĕ.

*ИОВ 38 – 42*



# ПСАЛТИРЬ

Библи кӗнекисенчен пӗрне – Псалтире – ыттисенчен ытларах та вулаççӗ. Унта çӗр аллă псалом, урăхла каласан, кӗвӗ-çемӗпе юрламалли кӗлӗ юрри кӗрет. Псаломсем чун-чӗрипе Турра парăннă çынсене мӗн хумхантарнине йăлтах – çӗр çинчи йӗркесӗрлӗхшӗн куляннине те, çутă тӗттӗме çӗнтерессе шаннине те, çылăхран ӳкӗннине тата Турă кӳрекен çăлăнăçшăн çуннине те – палăртаççӗ. Чи хавхалантаруллă псаломсенче Çăлакан Христос килессе пророкла систернисем те пур.

Псаломсем çинчен калаçнă чухне ытларах Давид псаломӗсене асра тытаççӗ, мӗншӗн тесен кӗлӗ юррисенчен чылайăшне вăл çырнă. Анчах та Псалтирьте Турă хавхалантарнипе çырнă урăх авторсен кӗлӗ юррийӗсем те пур. Псаломсенчи нумай сăмах христиансен кӗллисене те кӗнӗ. Ку кӗнекере эпир тӗслӗх вырăнне икӗ псалом илсе кăтартатпăр.

*1-мӗш псалом*

Турра хисеплемен çынсен канашне çӳремен, çылăхлă çынсен çулӗпе утман, усала вӗрентекенсемпе юнашар ларман çын телейлӗ. Унăн кăмăлӗ Турă саккунӗ патне ăнтăлать, вăл Турă саккунӗ çинчен кунӗн-çӗрӗн шухăшлать. Вăл юхан шыв хӗррине лартнă йывăç пек пулӗ: вăхăчӗ çитсессӗн çав йывăç çимӗç парать, çулçисем те унăн типсе лармаççӗ; çавнашкал çын мӗн туни йăлтах ăнса пырӗ. Турра хисеплеменнисем апла мар, вӗсем – çил çавăрттарса каякан тусан пек. Çавăнпа Турра хисеплеменнисем судра чăтаймӗç, çылăхлисем тӳррисен пухăвне лекеймӗç. Мӗншӗн тесен Хуçа Турă тӳрӗ çынсен çулне пӗлсе тăрать, Турра хисеплеменнисен çулӗ вара путланӗ.

*150-мӗш псалом*

Турра Унăн сăваплă вырăнӗнче мухтăр, Унăн тӳпери вăй-хăватне мухтăр! Ăна тӗреклӗхӗшӗн мухтăр, Ăна аслăлăхӗшӗн мухтăр. Труба сассипе Ăна мухтăр, лирăпала арфа каласа Ăна мухтăр. Тимпан çапса, ташласа Ăна мухтăр; хӗлӗхсене сӗртӗнсе, шăхличӗсене вӗрсе Ăна мухтăр. Янкăс саслă кимвалпа, вăйлă саслă кимвалпа Ăна мухтăр. Пур чӗрӗ чун та Турра мухтатăр. Аллилуия*.

* *«Аллилуия» тени авалхи еврей чӗлхинчен куçарсан «Турра мухтăр» тени пулать.*



## ПСАЛТИРЬТИ СӐВӐСЕНЕ АСТУСА ЮЛАР

Санӑн ятна пӗлекенсем Сана шанса тӑрӗҫ, мӗншӗн тесессӗн, Турӑҫӑм, Эсӗ Хӑвна шыракансене пӑрахмастӑн. *(9:11)*

Турӑ мухтавӗ ҫинчен ҫӳл тӳпе пӗлтерет, Унӑн аллин ӗҫӗсем ҫинчен пӗлӗт тӳпи калать. *(18:2)*

Пӗтӗм ҫӗр Хуҫа Турӑран хӑраса тӑтӑр, тӗнчере пурӑнакансем пурте Ун умӗнче хисеплесе чӗтреччӗр. *(32:8)*

Пуҫӑнса пӑхӑр та – вара Хуҫа Турӑ епле ыррине курӑр! Ӑна шанса пурӑнакан ҫын телейлӗ. *(33:9)*

Ҫулна Хуҫа Турӑ аллине парса Ӑна шан та – Вӑл йӑлтах пултарӗ. *(36:5)*

Хуйхӑ курнӑ вӑхӑтра Мана чӗн; Эпӗ сана хӑтарӑп та, эсӗ Мана мухтӑн. *(49:15)*

Эй, Турӑҫӑм, мана таса чӗреллӗ пултарсам, манри чӑнлӑх сывлӑшне ҫӗнетсе ҫирӗплетсем. *(50:12)*

Эй, халӑх! Кирек епле вӑхӑтра та Ӑна шан; Ун умӗнче чунна уҫса пар; Турӑ пирӗншӗн хӳтлӗх. *(61:9)*

Ҫӗр ҫинчи ҫынсем Санӑн ҫулна, Эсӗ мӗн пур халӑхсене ҫӑласса пӗлччӗр. *(66:3)*

Тусем пуличченех, Ху ҫӗрпе ҫут тӗнчене пултаричченех, ӗмӗр-ӗмӗрех Эсӗ – Турӑ. *(89:3)*

Анчах та Хуҫа Турӑ – манӑн хӳттӗм, Туррӑм – манӑн хӳтлӗхӗмӗн тӗрекӗ. *(93:22)*

Эй, чунӑм, Хуҫа Турра мухта, Вӑл тунӑ ырӑлӑхсене пӗрне те ан ман. *(102:2)*

Ҫӗрпе тӳпе хушши мӗн чухлӗ пысӑк, Туррӑн ырӑлӑхӗ те Хӑйӗнчен хӑракансемшӗн ҫавнашкалах пысӑк. *(102:11)*

Ӑслӑлӑх пуҫламӑшӗ – Турӑран хӑрани. *(110:10)*

Турӑ ман майлӑ, эпӗ хӑрамӑп: этем мана мӗнех тӑвайӗ? *(117:6)*

Ҫамрӑкӑн таса пурӑнӑҫпа епле пурӑнмалла? Сан сӑмаху вӗрентнӗ пек пурӑнса. *(118:9)*

Эпӗ Санӑн – ҫӑлсам мана. *(118:94)*

Куҫҫульпе акнисем савӑнса вырӗҫ. *(125:5)*

Хӑйне чӗнекенсемшӗн, Хӑйне чӑнласах чӗнекенсемшӗн пуриншӗн те Турӑ ҫывӑх. *(144:18)*

*Санăн сăмаху –*
*манăн умри*
*çутаткăç тата*
*çул-йĕрĕм*
*çинчи çутă.*

## ЫТАРУ КĔНЕКИ

Библин пĕр кĕнеки Соломонăн Ытару Кĕнеки ятлă. Ку кĕнеке çамрăксене кĕскен вĕрентсе каланисенчен тăрать, вĕсенчен ытларахăшне ăслă Соломон патша çырнă. Ытарусен тĕп теми – ăслăх, тӳрĕлĕх, Турăран хăрасси, пĕлӳ, кăмăл-сипет, харпăр хăйне чарма пĕлесси, тăрăшулăх, харпăр хăйне тытма пĕлесси, Турра шанасси, чухăнсене пулăшасси, тăшмансене хĕрхенесси, ача-пăчана пăхса ӳстересси, ултавсăрлăх, тĕрĕслĕх, йĕркеллĕ ăс-тăн тата ытти те. Акă Ытару Кĕнекинчи хăш-пĕр вĕрентсе каланисем.

Ăслăх никĕсĕ – Турăран хăрасси; айвансем кăна ăслăха тата вĕрентсе каланине ним вырăнне те хумаççĕ.

Ачам, аçу ăс панине итле, аннӳ хушнине ан хирĕçле.

Ачам! Сана çылăхлă çынсем хăйсем майлă çавăрасшăн пулсан, ӳкĕте ан кĕр.

Пĕтĕм чун-чĕререн Турра шан, хăвăн ăс-хакăлна ан шан. Хăвăн ĕçӳ-хĕлӳнте Ăна пĕлмешкĕн тăрăш, вара Вăл сана тĕрĕс çулпа ярĕ.

Ачам, Хуçа Турă айăплавне йышăнмасăр ан тăр, Вăл сана питленине йывăра ан ил; мĕншĕн тесен Турă кама юрататать, кама ашшĕ ывăлне кăмăлланă пек кăмăллать, çавна айăплав хурать.

Кам чухăна хĕсĕрлет, çав ăна Пултаракана хур тăвать; Хуçа Турра сума сăвакан вара тертлисене ырă тăвать.

Тӳрĕлĕх халăха асла кăларать, йĕркесĕрлĕх халăхăн ятне ярать.

Этем хăй утас çулĕ çинчен шухăшлать, анчах та ăна хăйĕн çулĕпе илсе пыраканĕ – Хуçа Турă.

Ашшĕне çука хăваракан, амăшне хăваласа кăларса яракан – намăс-симĕссĕр, чыссăр ывăл.

Çамрăка çул пуçламăшĕнченех ăс парса вĕрент, вара вăл çав çултан ватлăхра та пăрăнса каймĕ.

Тăшману выçă пулсан, ăна çăкăр çитер; ăшĕ хыпнă пулсан, шыв ĕçтер.



# ЕККЛЕСИАСТ КĔНЕКИ

Соломонăн Ытару Кĕнеки хыççăнах Библие Екклесиаст – е Ӳкĕтлевçĕ – Кĕнекине кĕртнĕ. Ку кĕнеке паха та ăслă кĕске шухăшсенчен тăрать, вĕсем Ытару Кĕнекинчи вĕрентсе каланисем евĕрлĕрех. Акă çав кĕнекери хăш-пĕр йĕркесем.

Пустуй ĕç, тенĕ Екклесиаст, пустуй ĕç, – йăлтах харама каять.

Хуйхă кулăран аванрах, мĕншĕн тесен сăн-пите хуйхă çапсан, чĕре ырăланать.

Ăслăх çар хатĕрĕсенчен аванрах; анчах та çылăхлă пĕр çын нумай-нумай ыррине тĕп тăвать.

Шăтăк чавакан хăех унта кĕрсе ӳкет, карта-хурана аркатакана хăйнех çĕлен сăхать.

Çăкăрна юхăмпа яр, вăхăт иртнĕçемĕн çав çăкăра каллех тупăн.

Эй, яш-кĕрĕм, çамрăк чухне савăн, чĕрӳ яшлăхра савăнăç мĕнне туйса юлтăр; чуну туртнă çĕре, куçу ăнтăлнă çĕре ут, анчах та пĕлсе тăр: çакăншăн пуриншĕн те санăн Турă умĕнче судра явап тытмалла пулать.

«Пурăнăç мана савăнтармасть», – тейĕн эсĕ ватлăх кунĕсем çитсен. Унччен вара, çамрăк чухне, хăвна Пултаракана асунта тыт. Саншăн хĕвел те, çутă та, уйăх та, çăлтăрсем те сӳнĕç, çумăр хыççăн çĕнĕ пĕлĕтсем пухăнĕç. Çав вăхăт çитсен вара кил хуралçи пек шăлусем лăканĕç, вăйпитти арсем пек чĕркуççисем лăштăрах кайĕç. Ун чухне арман авăртакансем пек шăлусем, сахалланса юлса, авăртма пăрахĕç. Чӳречерен пăхакансен сăнĕ тĕксĕмленнĕ пек куçу тĕксĕмленĕ, алăк хупăннă пек çăвару хупăнĕ. Ун чухне арман чулĕ пек шăлусем авăртса сас кăлармĕç, этем, ыйхи вĕçнĕрен, автан сассипех вăранĕ, сасси çĕтнĕрен юрă ĕнĕрейĕмĕ. Ун чухне этеме çӳллĕ вырăнсем шиклентерĕç, вăл çула тухма та хăраса тăрĕ. Этемĕн çӳçĕ миндаль çеçки пек шап-шурă пулĕ, шăрчăк пек йăрă çурăм шăмми хытса ларĕ. Этем пурăнăç тутине çухатĕ. Çапла вара вăл хăйĕн ĕмĕрлĕх килне кайма пуçтарăнĕ. Ĕнтĕ урамра ăна виле çинче хӳхлекен хĕрарăмсем кĕтеççĕ. Çавăнпа та пурăнăç çиппи – кĕмĕл вăчăра, ылтăн çыхă татăличчен Пултаракана асунта тыт. Пурăнăçу çăлкуç умĕнче ӳксе арканнă кăкшăм пек арканиччен, çăл кустăрми пек ӳксе йăшиччен Пултаракана асунта тыт. Ĕнтĕ тăпраран пулнă кĕлеткӳ çĕр ăшне тавăрăнĕ, Турă панă чуну кăна Турă патне тавăрăнĕ.



# ПРОРОКСЕМ

Авалхи Килĕшӳре пророксен кĕнекисем чылай вырăн йышăнаççĕ: Исаия, Иеремия (ăна Варух пулăшнă), Иезекииль, Даниил тата тепĕр вун икĕ пророк. Калăпăшĕ пысăках мар пулнăран вун икĕ пророк кĕнекисене тата Кĕçĕн пророксен кĕнекисем теççĕ. Кĕнекисене пророксен ячĕсене панă: Осия, Иоиль, Амос, Авдий, Иона, Михей, Наум, Аввакум, Софония, Аггей, Захария тата Малахия.

Библири пророксем малашне мĕн пуласса пĕлсе тăракан çынсем пулнă пулин те, ку вĕсен пултарулăхĕн пĕр енĕ çеç пулнă. Вĕсен ĕçĕн тĕп тĕллевĕ вара урăххи: çынсен куçĕсене уçса, вĕсене аваллăхри, хальхи тата пуласлăхри пулăмсен чăн-чăн пĕлтерĕшне уçса парасси. Пророксем манăçуллă Израиль халăхне вăл çĕр çинчи ытти халăхсем пек маррине астутарсах тăнă. Израиль халăхне Турă Хăйĕн халăхĕ тенĕ, Вăл Израиль çыннисемпе килĕшӳ тунă. Ку халăхăн малашлăхĕ тулаш пулăмсенчен те, улшăнчăк шăпаран та мар, çав халăх хăйĕн Хуçа Туррине мĕн тери чунран парăнса тăнинчен килнĕ. Пророксен кĕнекисенче хурланса питленĕ сăмахсем çутă шанчăкпа та çирĕп ĕненӳпе каланă сăмахсемпе черетленсе пыраççĕ. Çутă шанчăклă сăмахсенче çынсем хăçан та пулсан хăйсен Хуçа Турри енне çаврăнса Унра çăлăнăç тупасси çинчен каланă.

Пророксем Израиль халăхне хăйсен сăмахне мар, Турă Хăй вĕсене уçса панă сăмаха пĕлтернĕ. Пророксем халăхпа ытарлă калаçнă. Ытарусен тĕп шухăшне чылай чухне тавçăрса илме те йывăр. Анчах та ĕмĕрсем иртнĕçемĕн çынсем пророксен сăмахĕсем чăна килнине кĕретĕн курса ĕненнĕ, пулса иртнĕ ĕç-пуçсенче пророксем малтанах каласа хунине асăрханă. Çапла вара, Христос çураличчен чылай малтан пророксем тĕнчене Çăлакан килесси çинчен, Вăл этемлĕхе çылăхпа вилĕм тыткăнĕнчен хăтарасси çинчен, Хăйĕн ĕмĕрлĕх патшалăхне туса хурасси çинчен каланă пулнă.

Паянхи кун та эпир, пророксен кĕнекисене вуласа, вĕсенче авалхи çинчен каланисемпе малтанах пĕлтернисем пурнăçланнине кăна асăрхамастпăр. Эпир çав кĕнекесенче этемĕн Турă патне илсе каякан çул-йĕрĕсем çинчен каланă нихçан кивелми сăмахсене тупатпăр.



## ИСАИЯ ПРОРОК

Исаия пророк Израильте Христос çураличчен сакăр ĕмĕр маларах пурăннă. Вăл Турă мухтавĕ çинчен питĕ тăрăшса вĕрентнĕ, Турăран пăрăнакан Израиль халăхĕ, икĕпитленсе, Турă йĕркине хытă тытнине питленĕ, çылăхлисене ӳкĕнмешкĕн чĕннĕ.

Исаия халăха Турра шанма чĕнсе каланă. Акă унăн чĕнĕвĕсен пĕр тĕслĕхĕ: «Эсĕ çакна пĕлместĕн-и? Эсĕ çакна илтмен-и? Çĕре вĕçрен-вĕçе пултарнă ĕмĕрлĕх Хуçа Турă ывăнмасть, халтан каймасть. Унăн ăс-хакăлĕ пĕлсе çитейми. Вăл ывăннă çынна вăй парать, халтан кайнине тĕреклĕх парнелет. Яш-кĕрĕм те ывăнать, халсăрланать, çамрăксем те урараан ӳкеççĕ, Хуçа Турра шанакансем вара çĕнĕ вăй илеççĕ. Вĕсем ăмăрткайăксем пек çуначĕсене сараççĕ, чупсан та ывăнмаççĕ, утсан та ĕшенмеççĕ».

Исаия этемлĕхе Çăлакан Иисус Христос çураласса малтанах пророкла систернĕ. Вăл Çăлакан çуралассичинчен те, Унăн пурăнăçĕ çинчен те, асапĕсем çинчен те, вилĕмĕ çинчен тата вилĕмрен чĕрĕлсе тăрасси çинчен те каланă. Йăлтах вăл каланă пек пулнă. Мĕн пулнине вара каярах Çĕнĕ Килĕшӳ кĕнекинче çырса кăтартнă.

Исаия пророк Христос çинчен çапла каланă: «Вăл пирĕн халсăрлăха, нишлĕхе Хăй çине илчĕ: эпир вара Ăна Турă амантрĕ, айăплав хучĕ, мĕскĕнлетрĕ тесе шутланăччĕ. Анчах та Ăна пирĕн çылăхсемшĕн суранлатнă, пирĕн йĕркесĕрлĕхшĕн асаплантарнă иккен. Пирĕн тĕнчемĕр айăпне Ун çине хунă пулнă иккен, Унăн суранĕсемпе эпир сывалтăмăр. Пурте эпир, сурăхсем пек, çĕтсе кайнă, кашни харпăр хăй çулĕпе пăрăнса кайнă. Вара Хуçа Турă пирĕн пурин çылăхĕсене те Ун çине хунă. Ăна асап кăтартнă, анчах Вăл Хăйĕн ирĕкĕпе асапланнă, çăварне те уçман. Сурăха пусма илсе кайнă пек, Ăна илсе кайнă. Çăм касакан умĕнче путек сас паман пекех, Вăл та Хăйĕн çăварне уçман».

*ИСАИЯ 40:28–31; 53:4–7*



## «ХĔÇĔСЕНЕ ШĂРАТСА СУХАПУÇ ТĂВĔÇ...»

Исаия пророк кĕнекинче юлашки вăхăтсем çинчен тата чылайранпа кĕтекен, Турă шантарнă Çăлаканăн Патшалăхĕ çитесси çинчен, тĕнче Патши килесси çинчен пророкла калани пур:

Юлашки кунсенче
Туррăн Çурчĕ ларакан ту
ытти тусемпе пуç пулса тăрĕ,
мĕн пур сăртсенчен çӳлерех çĕкленĕ,
вара унта пĕтĕм халăхсем пуçтарăнĕç.
«Килĕр, Туррăн тăвĕ çине,
Иаков Туррин кил-çуртне хăпарăпăр,
Вăл пире Хăйĕн çул-йĕрĕпе çӳреме вĕрентĕ,
эпир Унăн сукмакĕпе çӳрĕпĕр», – тейĕç вĕсем.
Мĕншĕн тесен саккун Сионран тухĕ,
Хуçа Турă сăмахĕ – Иерусалимран.
Вара Вăл халăхсене суд тăвĕ,
нумай йăхсене питлесе айăплĕ;
хĕçĕсене шăратса сухапуç тăвĕç,
сăннисенчен – çурла;
халăх çине халăх хĕç çĕклемĕ,
ĕнтĕ текех вĕсем вăрçă вăрçма вĕренмĕç.

*ИСАИЯ 2:2–4*



## «УСАЛ ТĂВАКАН ПУЛМĔ...»

Тупă Исаия пророка малашлăхра, Çăлакан Патшалăхĕ – Турă Ывăлĕ Иисус Христос Патшалăхĕ – çитсен, мĕн пулассине уçса панă. Ун чухне çĕр çинче усал та, хуйхă та пулмĕ.

Вăл чухăнсене тĕрĕс суд тăвĕ,
çĕр çинче асапланакансен ĕçне чăннипе татса парĕ,
Унăн айăплав сăмахĕн туйи çĕре çапĕ,
çăварĕнчен тухакан сывлăшĕ Турра хисеплеменнисене вĕлерĕ.
Пилĕкне Вăл тĕрĕслĕхпе чăнлăх
пиçиххийĕ çыхĕ.
Ун чухне кашкăр путекпе юнашар пурăнĕ,
барс качака путеккипе çума-çумăн выртĕ;
пăру та, çамрăк арăслан та, ĕç вăкăрĕ те пĕрле пулĕç;
пĕчĕк ача вĕсене ертсе çӳрĕ.
Ĕнепе упа ами те пĕрле çисе çӳрĕç,
вĕсен пăрушĕпе çури те юнашар выртĕç;
арăслан та, вăкăр пекех, улăм çийĕ.
Пĕчĕк ача çĕлен шăтăкĕ умĕнче вылĕ,
аллине çĕлен йăвинелле тăсĕ.
Манăн сăваплă пĕтĕм тăвăм çинче усал та, сăтăр та тăвакан пулмĕ:
мĕншĕн тесен, тинĕс шывпа тулнă пекех,
çĕр те Турра пĕлессипе тулĕ.

*ИСАИЯ 11:4–9*



## ОСИЯ ПРОРОК

Çурçĕрти патшалăх, Израиль, Турăран пăрăнни çинчен, унта йĕркесĕр ĕçсем туни тата кĕлеткесене пуççапни çинчен эпир маларах вуланăччĕ. Израиль халăхĕпе патшисене тĕрĕс çул çине тавăрас тесе Хуçа Турă вĕсене айăплав хыççăн айăплав хунă, Хăйĕн пророкĕсем урлă халăха тăна кĕртме тăрăшнă, анчах та йăлтах харама кайнă. Патшисем те, халăхĕ те çаплах йĕркесĕр пурăннă, кĕлеткесене пуççапнă. Çавăнпа та Хуçа Турă ку патшалăха аркатса тăкса çыннисене урăх халăхсен аллине пусмăра пама шутланă. Çурçĕрти патшалăх пĕтес умĕн Израильте Осия, Исаия тата Михей ятлă пророксем пурăннă. Осия пророк кĕнекинче Турăпа Израиль халăхĕ хушшинчи хутшăнусене упăшкипе арăмĕ хушшинчи хутшăнусем пек, Хăйĕн халăхĕн ултавне вара – арăмĕ упăшкине улталанă пек сăнарласа кăтартнă. Акă мĕнле калать ун çинчен Осия пророк:

> Эй, Израиль çыннисем! Хуçа Турă сăмахне итлĕр: çĕр çинче чăнлăх та, хĕрхенӳ те пулманран, никам та Турра пĕлес теменрен Хуçа Турă çак çĕр-шывра пурăнакансене суд тăвĕ. Панă сăмаха тытманнипе улталассин, вĕлерессипе вăрлассин, аскăнланассин чикки çук, юн тăкăннăçемĕн тăкăнать. Турра пĕлес теменрен Манăн халăхăма тĕп тăвĕç. Эсĕ Турра епле пĕлес темерĕн, Эпĕ те çавнашкалах санăн священникусен ĕçне пĕлес теместĕп. Эсĕ хăвăн Туррун саккунне епле мантăн, Эпĕ те санăн ачусене çавнашкалах манăп. Эй, Израиль халăхĕ, ытти халăхсем пек каçса каясла ан хĕпĕрте; мĕншĕн тесен эсĕ хăвăн Туррунтан пăрăнтăн, Ăна улталарăн.

Çав хушăрах пророк халăх Турă патне тавăрăнса Ун умĕнче ӳкĕнсен, Турă Хăй халăхне пиллесси пирки те калать: «Эй, Израиль халăхĕ, Хуçу енне, хăвăн Турру енне çавăрăн; мĕншĕн тесен эсĕ саккунсăрлăхна пула тĕпне çитиччenех ӳкрĕн. Эпĕ Хамран пăрăнса кайнисене сыватăп, Хамăн ырă кăмăлăмпа вĕсене юратăп, вĕсем çине тек çилĕ тытмăп. Израиль халăхĕшĕн Эпĕ сывлăм пулăп; вăл сарана пек чечекленĕ, Ливан кедрĕ пек тымарланĕ».

Ӳкĕннĕ халăхăн инçе малашлăхĕ пирки Осия пророкла çапла калать: «Анчах та Израиль çыннисем виçсе пĕтерейми те шутласа кăларайми тинĕс хăйăрĕ пек йышлă пулĕç. „Эсир Ман халăхăм мар“, – тенĕ çĕрте вĕсене: „Эсир чĕрĕ Туррăн ывăлĕсем“, – тейĕç».

*ОСИЯ 1:10; 4:1–2, 6; 9:1; 14:2, 5, 6*



## ИОИЛЬ ПРОРОК

Иоиль пророк хăçан пурăнни паллă мар, анчах та вăл Иудейăри пророксенчен пĕри пулнă тесе шутлаççĕ. Вăл инçе малашлăх пирки, Туррăн кунĕ çитесси пирки пророкла çапла каланă:

«Ах, мĕнле кун килĕ! Çав кун, Туррăн кунĕ, çывăх ĕнтĕ: çав юлашки кун Хăватлă Пултаракан янă тустару пек килĕ. Сион тăвĕ çинче труба кăшкăртăр, Манăн сăваплă тăвăм çинче хăрушлăх хыпарне пĕлтерĕр. Çĕр çинче пурăнакансем пурте чĕтресе тăччăр, мĕншĕн тесен Туррăн кунĕ килет, вăл çывăх та ĕнтĕ. Ун чухне Эпĕ пурин çине те Хамăн Сывлăшăма ярăп. Сирĕн ывăлăрсемпе хĕрĕрсем пророкла калаçа пуçлĕç. Сирĕн ватăсене Турă тĕлĕк кăтартса ăн парĕ. Сирĕн çамрăксене тĕрлĕрен курăну пулĕ. Çав кунсенче Хамăн Сывлăшăма арçын чурасемпе хĕрарăм чурасем çине те ярăп. Çӳл тӳпере те, çĕр çинче те паллăсем – юн, вут тата тĕтĕм юписем – кăтартăп. Туррăн аслă та хăрушă кунĕ çитиччен хĕвел тĕттĕмленĕ, уйăх юнланĕ. Кам Турра ятран чĕнĕ, çав çăлăнĕ. Мĕншĕн тесен çăлăнăç, Хуçа Турă каланă пек, Сион тăвĕ çинче тата Иерусалимра пулĕ, вара Хуçа Турă чĕннисем пурте çăлăнĕç».

Чылай ĕмĕр иртсен Петр апостол çак сăмахсемпех халăха Çăлакан Иисус Христос çинчен каласа пĕлтернĕ.

Израиль патшалăхĕ çĕнĕрен йĕркеленсе каясси çинчен те Иоиль пророкла каланă: «Çав вăхăтра, Эпĕ Иудăпа Иерусалим çыннисене тыткăнран тавăрсан, ытти мĕн пур халăхсене пуçтарăп та вĕсене Иосафат айлăмне илсе пырăп. Вара унта Манăн халăхăма, ытти халăхсем хушшинчи Манăн çыннăмсене, сапаласа янăшăн, Манăн çĕрĕме пайласа пĕтернĕшĕн Турра пĕлмен халăхсене суд тăвăп. Вĕсем, Манăн халăхăма çĕнсе илсе, тыткăнрисене шăпа ярса валеçнĕ. Турă Сион çинчен кĕрлевлĕн сас парĕ, Унăн сасси Иерусалимран илтĕнĕ. Çĕрпе пĕлĕт чĕтренĕç, анчах Хуçа Турă Хăйĕн халăхĕн хӳтлĕхĕ, Израиль çыннисен сыхлăхĕ пулĕ. Çавăн чухне Эпĕ – сăваплă тăвăм çинче, Сион çинче, пурăнаканскер – хăвăрăн Хуçа Туррăр пулнине пĕлĕр; Иерусалим вара сăваплă вырăн пулĕ».

*ИОИЛЬ 1:15; 2:1, 28–32; 3:1–2, 16–17*



## ИОНА ПРОРОК

Пёррехинче Иона пророка Турă çапла каланă: «Тăр та пысăк Ниневи хулине кай, унта ӳкĕтлесе вĕрент, мĕншĕн тесен Эпĕ унти усал ĕçсем çинчен пĕлетĕп». Иона, Турра итлес темесĕр, Унран Фарсис хулине тарма шут тытнă. Вăл Иоппине çитсе Фарсиса каякан карап çине ларнă. Анчах Хуçа Турă тинĕс çинче çил кăларнă, тинĕсре хăрушă çил-тăвăл пуçланнă, карап кĕç-вĕç саланса каяс патнех çитнĕ. Карапçăсем сехĕрленсе ӳкнĕ, кашни хăйĕн туррине йăлăнма тытăннă; карапа çăмăллатас тесе ун çине тиенĕ çăксене тинĕсе ывăтма пуçланă. Иона çав вăхăтра карапăн аялти пӳлминче вăранми çывăрнă пулнă. Капитан Ионăна вăратнă та: «Эсĕ епле çак самантра çывăрса выртатăн? Тăр! Хăвăн Турруна тархасла, тен, Вăл пире çăлĕ», – тенĕ. «Атьăр шăпа ярар, – тенĕ карапçăсем, – кама пула пирĕн çак инкеке курмалла пулчĕ». Шăпи Ионăна тухнă. Вара Иона вĕсене çапла каланă: «Мана тинĕсе тытса ывăтăр, вара тинĕс лăпланĕ, мĕншĕн тесен çак хăрушă çил-тăвăл мана пула тухнине эпĕ пĕлетĕп». Ионăна шыва ывăтсассăн тинĕс çавăнтах лăпланнă. Вара карап çинчисем Турă умĕнче хăраса-чĕтресе ӳкнипе Ăна парне кӳрсе тупа тунă. Турă пысăк кита Ионăна çăтса яма хушнă. Иона кит ăшĕнче виçĕ кун та виçĕ каç пулнă, Хуçине, хăйĕн Туррине, çаплах кĕлтума пăрахман. Унтан Хуçа Турă кита Ионăна тип çĕр çине кăларса пăрахма хушнă.

Турă Иона пророка иккĕмĕш хут каланă: «Тăр та пысăк Ниневи хулине кай, унта Эпĕ сана мĕн хушнине ӳкĕтлесе вĕрент». Хальхинче Иона, Турă сăмахĕнчен иртме хăраса, Ниневине кайнă. Унта çитсессĕн вăл урамсенче çапла вĕрентсе-ӳкĕтлесе çӳренĕ: «Тепĕр хĕрĕх кунран Ниневине аркатĕç!» Çакна илтсен Ниневи патши керменĕнчен тухса кайнă. Вăл, хăйĕн çинчи патша тумтирне хывса пăрахса, шултра пиртен çĕленĕ ахаль çи-пуç тăхăннă. Унтан вăл пурне те çавнашкалах тумланма, типĕ тытса, хăйсен мĕн пур çылăхĕсемшĕн каçару ыйтса Турра тархаслама хушнă. Хулара пурăнакансем Турăпа Унăн пророкне ĕненнĕ. Турă Ниневи çыннисем усал ĕçсем тума пăрахнине курнă та, вĕсене хĕрхенсе, яма пулнă асапа яман.

*ИОНА 1 – 4*



## МИХЕЙ ПРОРОК

Михей пророк Иудейӑри Морасфит хулинчен пулнӑ. Вӑл Иоафам, Ахаз тата Иезекия Иудейӑра патшара ларнӑ чухне; Менаим, Факия, Факей тата Осия Израильте патшара ларнӑ чухне Христос Çураличчӗнхи 780–700-мӗш çулсенче пророкла вӗрентнӗ. Михей халӑх Турӑран пӑрӑнни çинчен, халӑх пуçлӑхӗсене малашлӑхра суд кӗтни çинчен, Самарипе Иерусалима аркатса тӑкасси çинчен малтанах каласа хунӑ. Тата вӑл Сион Патши, Çӑлакан, килесси çинчен, Унӑн патшалӑхӗ çитесси çинчен пророкла пӗлтернӗ:

Юлашки кунсенче Туррӑн тӑвӗ ытти тусемпе пуç пулса тӑрӗ, ытти сӑртсенчен çӳлерех çӗкленӗ, вара унта мӗн пур халӑхсем пуçтарӑнӗç. Нумай-нумай халӑх унта пырӗ те калӗ: «Килӗр, Туррӑн тӑвӗ çине, Иаков Туррин кил-çуртне хӑпарӑпӑр. Вӑл пире Хӑйӗн çул-йӗрӗпе çӳреме вӗрентӗ, эпир Унӑн сукмакӗпе çӳрӗпӗр. Мӗншӗн тесен саккун Сионран тухӗ, Хуçа Турӑ сӑмахӗ – Иерусалимран. Вара Вӑл халӑхсене суд тӑвӗ, нумай йӑхсене питлесе айӑплӗ. Вӗсем хӗçӗсене шӑратса сухапуç тӑвӗç, сӑннисенчен – çурла. Халӑх çине халӑх хӗç çӗклемӗ, ӗнтӗ текех вӗсем вӑрçӑ вӑрçма вӗренмӗç. Кашниех хӑйӗн иçӗм çырли авӑрӗ айӗнче, смоква йывӑçӗ айӗнче ларӗ, вӗсене никам та хӑратмӗ, мӗншӗн тесен çапла пулмалла тесе Хуçа Турӑ Саваоф чӗлхи-çӑварӗ каланӑ. Кашни халӑх хӑйӗн туррине пуççапать, эпир вара ӗмӗр-ӗмӗрех хамӑр Хуçа Туррӑмӑра пуççапӑпӑр». Çав кун сусӑррисене пуçтарӑп, хӑвалаласа салатнисене тата Хам инкек-синкек янисене пӗр çӗре пухӑп, тет Хуçа Турӑ. Эпӗ вӗсенчен вӑйлӑ халӑх тӑвӑп. Турӑ вара Сион тӑвӗ çинче çак кунран пуçласа ӗмӗр-ӗмӗр вӗсен Патши пулӗ. Эй, Иерусалим тӑвӗ! Эсӗ кӗтӳ хуралламалли башня евӗр! Сан патна ӗлӗкхи вӑй-хӑвату тавӑрӑнӗ, эсӗ ӗлӗкхи пекех пуç пулса тӑрӑн, Иерусалимра пурӑнакансем патне патшалӑхӗ тавӑрӑнӗ.

Вара Иаков тӑхӑмӗсем ытти нумай-нумай халӑх хушшинче Турӑ панӑ сывлӑм пек, курӑк çинчи шалкӑм çумӑр тумламӗсем пек пулӗç.

*МИХЕЙ 4:1–8; 5:7*



## ÇĂЛАКАН КИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПРОРОКЛА КАЛАНИСЕМ

Çак кĕнеке пуçламăшĕнче Турă этеме Хăйĕн сăнарĕллĕ те Хăйĕн евĕрлĕ пултарни çинчен каланăччĕ. Турă этеме Хăй пекех хĕрхенӳллĕ, тĕрĕслĕхлĕ, çылăхсăр тăвасшăн пулнă. Анчах та малтанхи этемсемех – Адампа Ева – çылăха кĕмесĕр чăтайман. Вĕсен пирвайхи ывăлĕ Каин та хăйĕн Авель шăллĕне вĕлернĕ. Вара çĕр çинче çылăх çав тери нумайланса кайнăран Турă çапла каланă: «Пурте пăрăнса кайрĕç, юрăхсăра тухрĕç; ырă тăвакан çук, пĕр çын та çук».

Чăн-чăн Турра ĕненнине упрамашкăн, Хăйĕн пил-хушăвĕсемпе пурăнмашкăн Хуçа Турă çĕр çинче пĕр халăха – Израиль халăхне – суйласа илнĕ. Турă Хăйĕн пророкĕсем урлă Израиль халăхне Çăлакан – Хăй олив çăвĕ сĕрсе палăртнăскер (еврейла Ăна «Мессия», грекла «Христос» теççĕ) – килессе пĕлтернĕ. Исаия пророк Иисус Христос çураличчен çич çĕр çул маларах çапла каланă: «Акă Ача çуралчĕ; пире Ывăл пачĕç; Вăл Хăйĕн патшалăхне çĕклесе тăрать, Ăна çапла ятсем хурĕç: Чапли, Канашçă, хăватлă Турă, ĕмĕрлĕх Ашшĕ, тĕнче Патши». Михей пророк вара Çăлакан çуралас вырăна та малтанах пĕлтернĕ: «Эсĕ те, Вифлеем-Ефрафа, Иудейăн ытти хулисенчен нимĕн чухлĕ те кая мар. Сан хушăран Израильте Патша пуласси çуралĕ; Вăл чăн пуçламăшĕнченех, ĕмĕрхи вăхăтранах тухĕ».

Исаия пророк кĕнекинчен эпир Çăлакан килнин тĕп тĕллевне вуласа пĕлетпĕр. Вăл этемлĕхе çылăх тыткăнĕнчен хăтарас тесе, çынсене Турă енне çавăрас тесе; çынсен çылăхĕсемшĕн вилсе, вĕсене çăлса хăварас тесе килнĕ. «Вăл пирĕн халсăрлăха, нишлĕхе Хăй çине илчĕ: эпир вара Ăна Турă амантрĕ, айăплав хучĕ, мĕскĕнлетрĕ тесе шутланăччĕ. Анчах та Ăна пирĕн çылăхсемшĕн суранлатнă, пирĕн йĕркесĕрлĕхшĕн асаплантарнă иккен. Пирĕн тĕнчемĕр айăпне Ун çине хунă пулнă иккен, Унăн суранĕсемпе эпир сывалтăмăр. Пурте эпир, сурăхсем пек, çĕтсе кайнă, кашни харпăр хăй çулĕпе пăрăнса кайнă. Вара Хуçа Турă пирĕн пурин çылăхĕсене те Ун çине хунă. Ăна асап кăтартнă, анчах Вăл Хăйĕн ирĕкĕпе асапланнă, Хăйĕн çăварне те уçман. Сурăха пусма илсе кайнă пек, Ăна илсе кайнă. Çăм касакан умĕнче путек сас паман пекех, Вăл та Хăйĕн çăварне уçман».

Çĕр çине Иисус Христос килсен, çак пророкла каланисем пурнăçланнă. Малалла çак кĕнекере Иисус çурални, пурăнни тата вĕрентни, вилни тата чĕрĕлни çинчен каласа панă.

*ПСАЛОМ 13:3; ИСАИЯ 9:6; 53; МИХЕЙ 5:2*



# ÇĔНĔ КИЛĔШӲ́

# ЗАХАРИЯПА АНГЕЛ ТУРĂ ÇУРТĔНЧЕ

Авалхи Килĕшӳре çырса кăтартнă чи юлашки ĕçсем хыççăн Çĕнĕ Килĕшӳри ĕçсем пуçланиччен темиçе ĕмĕр иртнĕ. Иисус Христос çуралнă вăхăталла еврей халăхĕ, политика хăйтĕллĕнлĕхне тĕппипех çухатса, Рим империйĕн аллине кĕрсе ӳкнĕ. Анчах та çынсем шанчăка çухатман: авалхи пророксен кĕнекисенче тĕнчене Çăлакан килесси çинчен каланă. Вăл килсен еврейсене Рим пусмăрĕнчен хăтарасса, Израиль аслăлăхне çĕнĕрен чĕртсе тăратасса чылайăшĕ ĕненнĕ. Турă Хăйĕн халăхне валли тата пахараххине хатĕрленĕ. Çăлакан – Христос – килессе чи малтан Шыва кĕртекен Иоанн пĕлтернĕ.

Çураласса та Иоанн тĕлĕнмелле çуралнă. Унăн ашшĕ, Захария, священник пулнă. Вăл Елисавета ятлă арăмĕпе Иудейăн сăртлă-туллă тăрăхĕнче пурăннă. Тӳрĕ пурăнакан мăшăр Хуçа Турă хушнисене çирĕп тытса пынă. Хăйсен ача-пăча пулманнишĕн вĕсем питĕ куляннă, иккĕшĕ те ĕнтĕ ватăлас еннелле кайнă.

Пĕррехинче Захария Иерусалимри Турă Çуртĕнче ĕçленĕ, Турă Çурчĕн картишĕнче вара тем чухлĕ халăх кĕлтуса тăнă. Захария ладан çунтарса тĕтĕрнĕ чухне ăна Турă ангелĕ курăннă. Ангела курсан Захария тĕлĕннипе хăраса кайнă. Вара ангел ăна çапла каланă: «Ан хăра, Захария! Санăн кĕллӳне Турă илтрĕ. Санăн арăму Елисавета сана ывăл ача çуратса парĕ, эсĕ ăна Иоанн ятлă хурăн. Уншăн эсĕ савăнса хĕпĕртĕн, вăл çуралнăшăн нумайăшĕ хавасланса тăрĕç, мĕншĕн тесен Иоанн Хуçамăр умĕнче аслă пулĕ. Вăл эрех тавраш ĕçмĕ; амăш варĕнчех унăн чун-чĕри Турă Сывлăшĕпе тулĕ. Вăл Израиль çыннисене нумайăшне хăйсен Хуçа Турри енне çавăрĕ». Ангел сăмахĕсене илтсен Захария иккĕленсе çапла каланă: «Ку чăн пуласса эпĕ епле пĕлĕп-ши? Эпĕ ĕнтĕ ватăлтăм, ман арăм та ватăлса çитрĕ». Вара ангел ăна çапла тавăрнă: «Эпĕ – Турă умĕнче тăракан Гавриил. Мана сан патна çак хыпара пĕлтерме янă. Ман сăмахсене ĕненменшĕн эсĕ чĕлхесĕр пулăн, эпĕ калани пурнăçланиччен калаçаймасăр пурăнăн».

*ЛУКА 1:5–21*



## ШЫВА КӖРТЕКЕН ИОАНН ҪУРАЛНИ

Пӗтӗмпех ангел каланӑ пек пулса иртнӗ. Палӑртса хунӑ вӑхӑтра Захарияпа Елисаветӑн ывӑл ача ҫуралнӑ. Вӗсем питӗ хӗпӗртесе кайнӑ, тӑванӗсемпе кӳршисем те вӗсемпе пӗрле савӑннӑ. Мӗншӗн тесен ӗлӗк-авал, Захарияпа Елисаветӑн пек мӑшӑрсен ача пулмасан, ҫакна пысӑк инкек те намӑс тесе шутланӑ.

Ҫуралнӑ хыҫҫӑн саккӑрмӑш кунне, Моисей саккунӗ хушнӑ тӑрӑх, вӗсен хӑйсен йӑлипе ача ӳтне кастармалла пулнӑ. Ҫак йӑлана туса ирттерме пынисем пурте ачана ашшӗ ячӗпе Захария ятлӑ хурасшӑн пулнӑ, мӗншӗн тесен ун чухне ҫуралнӑ ачасене ашшӗ-амӑшӗн е тӑванӗсен ятне панӑ. Анчах та амӑшӗ каланӑ: «Ҫук, ӑна Захария ятлӑ мар, Иоанн ятлӑ хурар». Ыттисем ӑна хирӗҫ: «Сирӗн йӑхра ун ятли никам та ҫук-ҫке!» – тенӗ. Унтан вӗсем, аллисемпе паллӑ кӑтартса, ывӑлне мӗн ятлӑ хурас тесе ашшӗнчен ыйтнӑ. Захария хӑма татӑкӗ илнӗ те: «Унӑн ячӗ – Иоанн», – тесе ҫырса панӑ. Ҫакна курсан пурте тӗлӗннӗ. Ҫав самантрах Захариян чӗлхи-ҫӑварӗ уҫӑлнӑ, вара вӑл сасӑпах Турра мухтама пуҫланӑ. Ҫав тӑрӑхра пурӑнакансем пурте хӑраса ӳкнӗ, унтан ҫак хыпар пӗтӗм сӑртлӑ Иудея ҫӗрӗ-шывӗ тӑрӑх сарӑлнӑ. «Ку ача кам пулӗ-ши?» – тенӗ ҫав хыпара илтнӗ ҫынсем. Чӑн та, унра Турӑ хӑвачӗ пулнӑ.

Иоанн ашшӗ, Захария, чун-чӗри Турӑ Сывлӑшӗпе тулнӑран пророкла калама пуҫланӑ: «Израилӗн Хуҫа Туррине мухтав! Вӑл килсе Хӑйӗн халӑхне хӑтарчӗ; Вӑл Хӑйӗн авалхи сӑваплӑ пророкӗсем урлӑ каласа пӗлтернӗ пекех, Хӑйӗн тарҫи Давид йӑхӗнчен пирӗн пата хӑватлӑ Ҫӑлакана ячӗ. Эсӗ те, ывӑлӑм, Ҫӳлти Туррӑн пророкӗ пулӑн, мӗншӗн тесен эсӗ Хуҫа Туррӑмӑр валли ҫул хатӗрлеме Ун умӗнчен пырӑн. Ҫылӑх каҫарттарса ҫӑлӑнасси пирки те эсӗ Унӑн халӑхне каласа ӑнлантарӑн. Юратакан тата хӗрхенекен Туррӑмӑр ҫӳлтен пире валли шурӑмпуҫ ҫути ячӗ. Тухакан хӗвел ҫути тӗттӗмре, вилӗм тыткӑнӗнче пурӑнакансене канӑҫлӑх ҫулне кӑтартӗ».

Иоанн ятлӑ ача ҫитӗнсе, ӑс-хакӑлӗпе ҫирӗпленсе пынӑ. Израиль халӑхӗ умне тухма вӑхӑчӗ ҫитиччен вӑл пуш хирте пурӑннӑ.

*ЛУКА 1:22–25, 57–80*



## ИИСУС ÇУРАЛАССИ ÇИНЧЕН ЫРĂ ХЫПАР ПĔЛТЕРНИ

Этемлĕхе çылăхпа вилĕм тыткăнĕнчен çăлас тесе Турă Хăйĕн Ывăлне Иисус Христоса тĕнчене килтернĕ. Вăл çуралнă хыççăн çĕр çинче çĕнĕ тапхăр пуçланнă. Пирĕн эрări çулсен хисепĕ те Иисус Христос Çуралнинчен пуçланать.

Иисус епле çурални тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерет. Вăл – Турă Ывăлĕ – выльăх витинче çуралнă. Иисус çуралсанах вара Ирод патша Ăна вĕлерме шут тытнă...

Сăмахăмăра малтанах пуçлар-ха. Израилĕн çурçĕр пайĕнчи Назарет ятлă пĕчĕк хулара Мария ятлă Хĕр пурăннă. Çав таса чĕреллĕ Хĕр Турра питĕ юратнă. Пĕррехинче Ăна Турă янă Гавриил ангел курăннă та çапла каланă: «Эй, тивлетлĕ Хĕр, савăн! Санпала Турă Хуçамăр: Эсĕ пур хĕрарăмсенчен те мухтавлă». Ангел сăмахĕсене илтсен Мария аптăрасах кайнă. «Ан хăра, Мария! – тенĕ вара ăна ангел. – Эсĕ Турăран ырăлăх илтĕн. Акă Эсĕ йывăр çын пулса Ывăл ача çуратăн. Ăна Иисус ятлă хурăн. Вăл аслă пулĕ, Ăна Çӳлти Туррăн Ывăлĕ тесе калĕç. Турă Ăна мăн аслашшĕн, Давидăн, престолне парĕ. Вăл ĕмĕр-ĕмĕр Иаков йăхĕн Патши пулĕ, Унăн Патшалăхĕ нихăçан та пĕтмĕ».

Ун чухне Марияна Турă умĕнче тӳрĕ пурăнакан Иосиф ятлă çын валли çураçса хунă пулнă. «Ку епле пулма пултарĕ-ши? – ыйтнă вара Мария ангелран. – Эпĕ халĕ качча та кайман-çке». Ангел ăна çапла каланă: «Сан çине Турă Сывлăшĕ анĕ, Сана Çӳлти Туррăн хăвачĕ витсе тăрĕ, çавăнпа çуралас таса Ачуна та Турă Ывăлĕ тейĕç». «Эпĕ – Турă чури, – тенĕ Мария, – эппин пĕтĕмпех эсĕ каланă пек пултăр». Ангел вара Ун патĕнчен кайнă.

Мария ача çуратассине пĕлсен Иосиф ăна уйăрса ярасшăн пулнă. Анчах та çапла шухăшласанах ăна тĕлĕкре Турă ангелĕ курăннă. «Давид патша йăхĕнчи Иосиф, – тенĕ Турă ангелĕ, – эсĕ Марияна качча илме ан хăра, Вăл Турă Сывлăшĕн хăвачĕпе йывăр çын пулнă. Мария Ывăл Ача çуратĕ, эсĕ çав Ачана Иисус ятлă хур, мĕншĕн тесен Вăл Хăйĕн халăхне çылăхĕсенчен çăлĕ».

*МАТФЕЙ 1:19–21; ЛУКА 1:26–35*



## ИИСУС ХРИСТОС ÇУРАЛНИ

Мария йывăр çын пулнă чухне Иосифпа иккĕшĕн инçе çула тухса кайма тивнĕ, мĕншĕн тесен Рим императорĕ Август пĕтĕм патшалăхри халăх шутне çырса тухма хушнă. Çырăнмашкăн вара кашниннех хăйсен мăн аслашшĕсен хулине каймалла пулнă. Иосифпа Мария иккĕшĕ те Давид патша йăхĕнчен пулнă. Çак патша Израиль çĕрне Иисус çураличчен пин çул маларах тытса тăнă.

Çапла вара Иосифпа Мария хăйсен мăн аслашшĕ Давид патша çуралнă Вифлеем хулине тухса кайнă. Назаретран Вифлеема çитме ик çĕр çухрăмран та ытларах. Ун чухне пуйăссем те, машинсем те пулман, çавăнпа çулçӳревре темиçе кун ирттерме тивнĕ. Назарет хули Израилĕн çурçĕр пайĕнче, Галилейăра, вырнаçнă, Вифлеем вара – кăнтăр пайĕнче, Иудейăра. Галилейăран Иудейăна çитме Самари витĕр тухмалла пулнă. Çитменнине тата Самарипе Иудея – питĕ сăрт-туллă вырăнсем.

Иосифпа Мария Вифлеема çитсен вара хăна çуртĕнче вĕсем валли çĕр каçмалăх вырăн та тупăнман. Марийăн ĕнтĕ çăмăлланас вăхăчĕ те çитнĕ. Кун пирки Евангелире çапла çырнă: «Вара Мария Хăйĕн малтанхи Ывăлне çуратнă, Ăна чĕркесе сурăхсене апат памалли сырăша вырттарнă». Ку ĕнтĕ вĕсем выльăх витинче çĕр каçма юлнине, Ачана сырăша хунине пĕлтерет. Авалхи халап тăрăх, çав вите ту хăвăлĕнче пулнă. Унти кĕтӳçĕсем сурăхсене çавнашкал ту хăвăлĕсенче усранă пулнă.

*ЛУКА 2:1–7*



## АНГЕЛСЕМ КӖТӲҪӖСЕНЕ
## ИИСУС ХРИСТОС ҪУРАЛНИ ҪИНЧЕН ПӖЛТЕРЕҪҪӖ

Ҫавăн чухне Вифлеем хули таврашĕнче кĕтӳҫĕсем сурăх кĕтĕвĕсене хураллана. Иисус ҫуралнă каҫ хăш-пĕр кĕтӳҫĕсем ҫывăрман, кĕтӳ кĕтнĕ. Сасартăк вĕсен умне Турă ангелĕ пырса тăнă та, вĕсене Туррăн мухтавлăхĕ ҫутатса янă. Кĕтӳҫĕсем ҫав тери хăраса ӳкнĕ. Вара ангел вĕсене ҫапла каланă: «Ан хăрăр! Эпĕ сире пĕтĕм халăха савăнтармалли чаплă хыпар пĕлтерме килтĕм. Паян Давид хулинче сире Ҫăлакан ҫуралчĕ, Вăл – Христос Хуҫамăр. Акă сире паллă: эсир сырăша чĕркесе хунă Ачана курăр». Унтан сасартăк ҫав ангелпа пĕрле пĕлĕтри ангелсен йышлă ҫарĕ курăнса кайнă. «Ҫӳлте Турра мухтав, ҫĕр ҫине канăҫлăх килчĕ, ҫынсене ырăлăх ҫитрĕ!» – тесе Турра мухтаса юрланă ангелсем.

*ЛУКА 2:9–14*



## КĔТӲÇĔСЕМ ИИСУС ПАТНЕ ПЫРАÇÇĔ

Шухăшласа пăхăр-ха, ангелсене курсан кĕтӳçĕсем еплерех хăраса ӳкнĕ пулĕ. Çăлакан – Иисус Христос Хуçамăр – çуралнине илтсен тата мĕнле тĕлĕннĕ пулĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсем кĕтĕвне пăрахса хăварсах Вифлеемалла кайнă. Ун пирки Евангелире çапла çырнă: «Ангелсем пĕлĕте çĕкленсе кайсан кĕтӳçĕсем пĕр-пĕрне каланă: „Атьăр Вифлеема кайса унта мĕн пулнине, Турă пире мĕн каласа пĕлтернине курар“. Вĕсем васкаса Вифлеема çитнĕ те Марияпа Иосифа тата сырăшра выртакан пĕчĕк Ачана шыраса тупнă. Ачана курнă хыççăн кĕтӳçĕсем хăйсене ангел çак Ача пирки мĕн пĕлтернине каласа панă. Итлекенсем пурте кĕтӳçĕсем каласа панинчен тĕлĕннĕ. Çак сăмахсене Мария ялан Хăйĕн чĕринче усранă. Йăлтах ангел каланă пек пулса иртнĕ. Çавна курма-илтме тӳр килнĕшĕн Турра мухтаса кĕтӳçĕсем хăйсен кĕтĕвĕ патне тавăрăннă».

*ЛУКА 2:15–20*



## ТӐРӖЛӖХЛӖ СИМЕОН

Çуралнăранпа сакăр кун иртсен священник Ачан ӳтне касмалли йăлана туса ирттернĕ. Вара Ăна Иисус ятлă хунă. Ача çураличченех панă çак ят «Турă çăлать» тенине пĕлтерет.

Турă панă Моисей саккунĕ хушнă тăрăх малтанхи ывăл ачана Турра халалламалла пулнă. Çавăнпа та, Иисусултă эрне тултарсан, Ăна Иерусалимри Турă Çуртне илсе пынă. Хуçа Турă саккунĕпе килĕшӳллĕн, вĕсен тата икĕ улатăпа кайăкĕ е икĕ кăвакарчăн чĕппи парне кӳмелле пулнă.

Çав вăхăтра Иерусалимра пĕр тӳрĕлĕхлĕ, Турра хисеплекен Симеон ятлă ватă пурăннă. Ун çинче Турă Сывлăшĕ пулнă, Симеон Израиль халăхне çăлăнăç килессе кĕтнĕ. Турă янă Çăлакана курмасăр вилместĕн тесе ăна Турă Сывлăшĕ малтанах систернĕ пулнă. Ашшĕпе Амăшĕ саккун хушнă йăлана тума пĕчĕк Ачана Турă Çуртне илсе пырсан, Турă Сывлăшĕ хушнипе Симеон та унта пынă. Вăл Христоса алла тытнă та Турра мухтаса çапла каланă: «Эй, Туррăм! Тинех Эсĕ мана, Хăвăн чуруна, Ху каланă пек, лăплантарса яратăн: ман куçăмсем Санран çăлăнăç илсе килекене курчĕç ĕнтĕ. Ку çăлăнăçа Эсĕ мĕн пур халăхсем умĕнчех хатĕрленĕ. Ытти халăхсемшĕн вăл чăн çутă пулĕ, Хăвăн Израиль халăхне мухтава кăларĕ». Иосифпа Мария хăйсен Ывăлĕ çинчен Симеон çапла каланине илтсен питĕ тĕлĕннĕ.

Унтан Симеон вĕсене пилленĕ те Марияна çапла каланă: «Çак выртакан Ачана пула Израильте ӳкекен те, тăракан та нумай пулĕ, Ун пирки нумайăшĕ тавлашĕç; санăн чун-чĕрӳне вара хĕç витерĕ».

*ЛУКА 2:21–35*



## ĂСЧАХСЕМ ПУÇÇАПНИ

Ирод патша вăхăтěнче Иудейăри Вифлеем хулинче Иисус çуралсан, хěвел тухăçěнчи ăсчахсем Иерусалима пынă. «Иудейсен Патши пулма çуралнă Ача ăçта-ши? Ěнтě эпир хěвел тухăçěнче Унăн çăлтăрě тухнине куртăмăр та Ăна пуççапма килтěмěр», – тенě вěсем.

Çакна илтсен Ирод патша аптăраса кайнă. Вара Ирод иудейсенаслă священникěсене, Моисей саккунне вěрентекенсене пурне те пухса, вěсенчен пулас Патша ăçта çуралнине тěпчесе ыйта пуçланă. «Иудейăри Вифлеем хулинче, – тенě ăна вěсем, – мěншěн тесен Турă пророк урлă çапла пěлтернě: „Эсě те, Вифлеем, Иуда çěрě, Иудейăн пысăк хулисенчен нимěнпе те кая марскер! Мěншěн тесен санăн çыннусенчен Çулпуçě тухě, Вăл Манăн Израиль халăхěн Кěтÿçи пулě“». Вара Ирод ăсчахсене вăрттăн чěнсе илтернě те вěсенчен çав çăлтăр курăннă тěрěс вăхăта ыйтса пěлнě. «Кайăр та Ача çинчен тěплěн тěпчесе ыйтса пěлěр. Ăна тупсан вара мана килсе калăр, эпě те кайса пуççапам Ăна», – тенě Ирод ăсчахсене, Вифлеем хулине кайма хушса. Тěрěссипе вара Ирод патша Ачана вěлерме шут тытнă, мěншěн тесен унăн каярахпа хăй вырăнне çак Ача патшана ларасран сехри хăпнă.

Патша хушнине итлесе ăсчахсем кайнă. Çул çинче вěсене каллех хайхи хěвел тухăçěнче асăрханă çăлтăр курăннă. Çав çăлтăр вěсем умěнче куçса пынă-пынă та Ача тěлне çитсен тăпах чарăннă. Çăлтăра курсан вěсем питě савăнса-хěпěртесе кайнă.

*МАТФЕЙ 2:1–10*



## ĂСЧАХСЕН ПАРНИСЕМ. ИРОД АЙĂПСĂР АЧАСЕНЕ ВĔЛЕРТТЕРЕТ

Вифлеема çитсен ăсчахсем çăлтăр чарăнса тăнă тĕлти пӳрте кĕнĕ. Пĕчĕк Ачапа Унăн Амăшне Марияна курсан вĕсем Ачана чĕркуçленсех пуççапнă, унтан хутаçĕсенчен кăларса Ăна ылтăн, ладан тата смирна парнеленĕ.

Каярахпа Турă вĕсене тĕлĕк кăтартса Ирод патне кайма юраманни çинчен пĕлтернĕ. Çакăн хыççăн ăсчахсем хăйсен çĕр-шывне урăх çулпа тавăрăннă. Ăсчахсем хăйне улталанине ăнланса илсен Ирод пит çилленсе кайнă. Вара вăл Вифлеемпа ун таврашĕнче çуралнă иккĕри тата икĕ çултан кĕçĕнрех ывăл ачасене пурне те вĕлерсе тухма хушнă. Çăлтăр хăçан курăннине ăсчахсенчен тĕпчесе пĕлнĕ пирки вăл ачасен ӳсĕмне çăмăллăнах шутласа кăларнă. Çар çыннисем Вифлеем хулине пырса айăпсăр ачасене вĕлернĕ.

*МАТФЕЙ 2:10–12, 16–18*



## ЕГИПЕТА ТАРНИ

Ирод çапла шухăшланă: салтаксем вĕлернĕ ачасем хушшинче ăсчахсем Израилĕн пулас Патши теекен Ача та пулĕ. Анчах та апла килсе тухман. Ăсчахсем кайсанах Турă ангелĕ Иосифа тĕлĕкре курăннă. «Тăр та Ачапа Амăшне илсе Египета тар, – тенĕ ангел. – Эпĕ систериччен вара çавăнтах пурăн, мĕншĕн тесен Ирод Ачана шыраса тупса вĕлерттересшĕн». Иосиф тăнă та Ачапа Амăшне илсе çĕр варринчех Египета тухса кайнă. Вĕсем вара Ирод виличченех Египетра пурăннă. Çапла майпа Хуçа Турă пророк сăмахĕсемпе: «Хам Ывăлăма Эпĕ Египетран чĕнсе илтĕм», – тесе калани пурнăçланнă.

Вифлеемран Египет çĕрне çитмешкĕн çĕр-çĕр çухрăм. Пĕчĕк Ачаллă Марияпа Иосифа çав çула утса тухма çăмăл пулман.

*МАТФЕЙ 2:13–15*



## ИИСУСĂН НАЗАРЕТ ХУЛИНЧИ АЧАЛĂХĔ

Иосиф тата Марияпа Ывăл Ачи Иисус иудейсен Ирод патши виличченех Египетра пурăннă. Ирод вилсен вара Иосиф тĕлĕкре каллех Турă ангелне курнă. Ангел ăна çапла каланă: «Ача чунне шыракансем вилчĕç ĕнтĕ, çавăнпа тăр та, Ачапа Амăшне илсе, Израиль çĕрне кай».

Ангел хушнине итлесе, Иосиф Израиле таврăннă. Анчах та Израилĕн пĕр пайĕнче, Иудейăра, Ирод ывăлĕ Архелай патшара ларнине пĕлсен, вăл унта кайма шикленнĕ. Тĕлĕкре курăннă Турă ангелĕ хушнипе вара Иосиф унччен Мария пурăннă Назарет хулине кайнă.

Иисусăн Назаретри пурăнăçĕ пирки эпир питĕ сахал пĕлетпĕр. Иосиф платник пулнă, Иисус та ăна пулăшкаланă, кайран çак ĕçе вĕренсех çитнĕ. Евангелире Иисусăн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ çинчен нумаях çырман пулин те, пирĕншĕн çав сăмахсем пысăк пĕлтерĕшлĕ. «Иисус ӳснĕçемĕн кăмăлĕпе çирĕпленсе, ăс-хакăлĕпе хăватланса пынă, Турă пиллĕхĕ Ун çинче пулнă», – тесе çырнă пĕр тĕлте. Тепĕр тĕлте тата çапла каланă: «Иисус ӳссех, ăслăлансах пынă, Турă кăмăлне те, çынсен кăмăлне те кайнă».

Иисус ашшĕ-амăшĕ каланине итлекен Ача пулнă. Акă мĕн вулатпăр ун пирки Евангелире: «...Вăл ашшĕ-амăшĕн сăмахĕнчен иртмесĕр пурăннă». Ача-пăчан ашшĕ-амăшне юратмалли, итлемелли пирки Турă Хăй каланă. «Хăвна ырă пултăр тесен, хăвна Турă панă çĕр çинчи кун-çулу вăрăмрах пултăр тесен, аçу-аннӳне хисепле», – тесе вĕрентет пире Туррăн Вунă пил-хушăвĕсенчен пĕри.

*МАТФЕЙ 2:19–23; ЛУКА 2:40, 50–52; ТУХНИ 20:12*



## ИИСУС ТУРӐ ÇУРТĔНЧЕ

Çапла вара, Иисуса Назарет хулинче пăхса çитĕнтернĕ. Вăл ӳснĕçемĕн кăмăлĕпе çирĕпленсе, ăс-хакăлĕпе хăватланса пынă, Турă пиллĕхĕ Ун çинче пулнă.

Унăн ашшĕ-амăшĕ кашни çулах Пасха уявне Иерусалима çӳренĕ. Иисус вун иккĕ тултарсан вĕсем Иерусалимри уява Ăна та илсе кайнă.

Уяв хыççăн пурте килĕсене таврăннă, Иисус вара Иерусалимрах юлнă. Марияпа Иосиф çакна асăрхаман, вĕсем Иисус хăйсен хурăнташĕсемпе, пĕлĕшĕсемпе киле пырать пулĕ тесе шухăшланă. Тепĕртакран вĕсем Ăна шыра пуçланă, анчах та Иисуса тупаймасăр каялла Иерусалима таврăннă. Виçĕ кунран тин вĕсем Иисуса Турă Çуртĕнче тупнă. Вăл унта вĕрентекенсене итлесе ларнă. Итленĕ хушăрах Вăл тата ыйтусем те панă, ыттисем пурте Унăн ăсĕнчен те, хуравĕсенчен те тĕлĕннĕ.

«Ывăлăм, – тенĕ Амăшĕ Иисуса, – мĕншĕн Эсĕ капла хăтланатăн? Аçупа иксĕмĕр Сана шыраса йăлт кулянса пĕтрĕмĕр». Иисус вĕсене каланă: «Эсир Мана мĕншĕн шырарăр? Эпĕ Аттем çуртĕнче пулма тивĕçлине пĕлмен-им эсир?» Иисус мĕншĕн çапла каланине ашшĕ-амăшĕ ăнланса илеймен. Анчах та Мария Ачин сăмахĕсене чĕринчех усранă.

Иисус вĕсемпе пĕрле Назарета таврăннă та ашшĕ-амăшĕн сăмахĕнчен иртмесĕр пурăннă. Иисус ӳссех, ăслăлансах пынă, Турă кăмăлне те, çынсен кăмăлне те кайнă.

*ЛУКА 2:40–52*


HHofmann.

## ИОАНН ВӖРЕНТНИ ТАТА ШЫВА КӖРТНИ

Захария ятлă священник ывăлĕ Иоанн пуш хирте пурăннă. Хуçа Турă ăна ятарлă ĕç тума хатĕрленĕ: унăн халăха Çăлакан, урăхла каласан, Христос, килесси çинчен пĕлтермелле, çынсене çылăхран ӳкĕнме чĕнмелле пулнă. Çăлакан килес тĕле Иоанăн халăха хатĕрлемелли çинчен пророксем Иоанн çураличчен темиçе ĕмĕр маларахах çырса хăварнă: «Акă Эпĕ Сан умăнтан хыпарçăма яратăп, вăл сана валли çул хатĕрлесе хурĕ». «Пуш хирте чĕнекенĕн сасси илтĕнет: „Хуçамăр валли çул хатĕрлĕр, Вăл утас çулсене тӳрлетĕр!“ — тесе çырнă пулнă пророксемех».

Тăхăнасса Иоанн тĕве çăмĕнчен тунă тумтир тăхăнса, пилĕкне чĕн пиçиххи çыхса çӳренĕ. Çиессе те вăл хĕрлĕ шăрчăк тата хăвăлсенче тупкаланă пыл çисе пурăннă. Турă Иоана Хăйĕн ирĕкне уçса панă хыççăн Иоанн вĕрентсе çӳреме пуçланă. Вăл Иордан юхан шывĕ таврашĕнче пур çĕрте те вĕрентсе çӳренĕ. Иоанн халăха çылăх каçарттарма, ӳкĕнме; çылăхран ӳкĕннине палăртмашкăн тĕне кĕме, урăхла каласан, шыва кĕме чĕнсе çӳренĕ. Вара ун патне пĕтĕм Иудея çĕрĕнчен, Иерусалимран çынсем пыма пуçланă. Çылăхран ӳкĕннисене вăл Иорданра шыва кĕртнĕ.

«Пирĕн мĕн тумалла ĕнтĕ?» — тесе ыйтнă унран халăх. Иоанн вĕсене хирĕç çапла тавăрса каланă: «Камăн икĕ кĕпе пур, вăл пĕрне кĕпесĕррине патăр. Камăн çимелли пур, вăл та çаплах тутăр». Налук пухакансем те Иоанн патне шыва кĕме пынă. «Вĕрентекен! Пирĕн мĕн тумалла-ши?» — тесе ыйтнă вĕсем. Иоанн вĕсене çапла каланă: «Хăвăра илме хушнинчен ытлашши парăм ан илĕр». Салтаксем те унран ыйтнă: «Пирĕн тата мĕн тумалла?» Иоанн хуравланă: «Никама та ан хĕсĕрлĕр, ан элеклĕр. Хăвăра мĕн чухлĕ шалу панипе çырлахăр».

*МАРК 1:1–8; ЛУКА 3:2–18*



## ИИСУС ХРИСТОС ХУÇАМĂРА ШЫВА КĔРТНИ

Халăх Çăлакан килессе кĕтнĕ, çавăнпа та чылайăшĕ: «Хамăра шантарнă Çăлакан – Иоанн мар-ши?» – тесе ыйтнă. Анчах та Иоанн çапла хуравланă: «Эпĕ сире ӳкĕнтерсе шывпа çеç тĕне кĕртетĕп, анчах та ман хыççăн Килекенни манран хăватлăрах, эпĕ Унăн пушмакне алла илме те тивĕçлĕ мар. Вăл вара сире Турă Сывлăшĕпе тата вутпа тĕне кĕртĕ». Çакна вăл Иисус Христос çинчен каланă.

Акă ĕнтĕ Иисус та Иоанн патне шыва кĕме пынă. «Санăн мана шыва кĕртмелле, мĕншĕн Эсĕ Ху ман патăма килтĕн?» – тесе хирĕçленĕ малтанах Иоанн. Анчах та Иисус ăна хуравласа каланă: «Çапла пулмалла та, пирĕн Турă ирĕкне пурнăçламаллах». Иоанн вара шыва кĕртме килĕшнĕ. Шыва кĕртнĕ хыççăнах Иисус шывран тухнă. Акă ĕнтĕ тӳпе уçăлса кайнă та Иоанн Турă Сывлăшĕ Иисус çине кăвакарчăн пек пулса аннине асăрханă. Тӳперен çакнашкал сасă илтĕннĕ: «Çакă Манăн савнă Ывăлăм, Унра Манăн ырă кăмăлăм».

*МАТФЕЙ 3:11–17*


O. STEMLER

# ИИСУСА ПУШ ХИРТЕ ИЛЁРТСЕ ТĔРĔСЛЕНИ

Шыва кĕнĕ хыççăн Турă Сывлăшĕ Иисуса, шуйттан илĕртсе тĕрĕслетĕр тесе, пуш хире илсе кайнă. Унта Иисус хĕрĕх кун та хĕрĕх каç ĕçмесĕр, çимесĕр пурăннă, юлашкинчен Унăн çиесси килнĕ. Çав самантрах шуйттан Ун патне пынă та çапла каланă: «Эсĕ Турă Ывăлĕ пулсан çак чулсене çăкăр пулма хуш». Иисус шуйттана Çырнинче каланă сăмахсемпе тавăрнă: «Çын çăкăрпа анчах пурăнмасть, Турă çăварĕнчен тухакан кашни сăмахпах пурăнать».

Унтан шуйттан Иисуса Иерусалим хулинчи Турă Çурчĕн тăррине илсе кайса тăратнă та çапла каланă: «Эсĕ Турă Ывăлĕ пулсан çакăнтан сик. Çырнинче каланă вĕт-ха: „Турă Хăйĕн ангелĕсене Сана упрама хушĕ, Эсĕ уруна чулпа суранласран вĕсем Сана алă çине çĕклĕç“». Иисус ăна çапла тавăрнă: «„Хăвăн Хуçа Турруна илĕртсе ан тĕрĕсле“, – тесе те çырнă вĕт».

Унтан шуйттан Иисуса питĕ çӳллĕ ту çине илсе кайнă та Ăна тĕнчери мĕн пур патшалăхсене, вĕсен чапне-илемне кăтартнă. «Эсĕ мана чĕркуçленсе пуççапсан çаксене йăлтах Сана паратăп», – тенĕ Ăна шуйттан. Вара Иисус ăна çапла хуравланă: «Кăп Манран, шуйттан! Çырнинче: „Хуçа Турруна кăна пуççап, пĕр Уншăн анчах ĕçлесе тăр“, – тенĕ вĕт». Вара шуйттан Иисус патĕнчен кайнă, çавăнтах Ăна ангелсем пырса пулăшма пуçланă.

*МАТФЕЙ 4:1–11*



## ИИСУС ХРИСТОСĂН ВУН ИКĔ ВĔРЕНЕКЕНĔ

Ӳссе çитĕнсессĕн Иисус Галилея çĕрне кайнă. Вăл Назаретран Геннисарет кӳлли хĕрринчи Капернаум хулине пурăнма куçнă. Ун чухне çак кӳлле Галилея тинĕсĕ тесе те каланă. Çапла вара Исаия пророк сăмахĕсем пурнăçланнă. Вăл çапла каланă пулнă: «Тинĕс еннелле выртакан çул çинчи, Иордан леш енчи Завулонпа Неффалим çĕрĕнче пурăнакансем, Турра пĕлмен Галилея халăхĕ! Тĕттĕмре пурăннă халăх хăватлă çутă курчĕ! Вилĕм çĕрĕнче, вилĕм тĕттĕмлĕхĕнче пурăнакансемшĕн çутă килчĕ!»

Çавăнтан вара Иисус вĕрентме пуçланă. «Çӳлти Патшалăх çывхарчĕ ĕнтĕ, çавăнпа та çылăхăрсенчен ӳкĕнĕр!» — тесе вĕрентнĕ Вăл. Ун хыççăн тĕрлĕ çĕртен килнĕ темĕн чухлĕ халăх çӳренĕ. Иисус вĕсене вĕрентнĕ тата чир-чĕртен сыватнă.

Петр текен Симонпа унăн шăллĕ Андрей Галилея тинĕсĕнче пулă тытнă пулнă. Иисус вĕсене курнă та çапла каланă: «Ман хыçăмран пыракансем пулăр, Эпĕ сире çын чунĕсене тытакансем тăвăп». Çапла калани итлекенсене чăнлăха уçса памашкăн Иисус вĕсене Ырă Хыпар вĕрентсе çӳреме ярасса пĕлтернĕ. Андрейпа Петр пулă тытмалли сĕреке-тетелĕсене пăрахса хăварса çав самантрах Иисус хыççăн кайнă. Пырсан-пырсан Иисус тата икĕ пĕртăвана — Иаковпа унăн шăллĕне Иоана — курнă. Вĕсем хăйсен ашшĕпе, Зеведейпе, кимĕ çинче сĕреке-тетелĕсене юсаса тăнă пулнă. Иисус ку пĕртăвансене те чĕннĕ. Вĕсем вара киммине пăрахса хăварса, ашшĕнчен уйăрăлса Ун хыççăн кайнă. Ытти вĕренекенĕсем те çавнашкалах, Иисус чĕнсессĕнех, Ун хыççăн кайнă. Иисус вĕсене чир-чĕртен сыватма тата усал сывлăшсене хăваласа кăларма хăват панă.

Çапла Иисус вун икĕ вĕренекенне ялан Хăйпе пĕрле пулма суйласа илнĕ, вĕсене ыттисенчен уйрăммăн вĕрентнĕ. Вун икĕ вĕренекенĕн ячĕсем çапла: Симон, Андрей, Иоанн, Иаков, Филипп, Варфоломей, Матфей, Фома, Алфей ывăлĕ Иаков, Фаддей, Симон Кананит тата кайран Иисуса тытса панă Иуда Искариот. Иисусăн вĕренекенĕсем пурте ахаль çынсем çеç пулнă, анчах та Турă вĕсене Хăйĕн Ывăлĕн Иисус Христосăн тусĕсем тата вĕренекенĕсем пулма телей пӳрнĕ.

*МАТФЕЙ 4:12–22; МАРК 3:13–19*



## ИИСУС МАЛТАНХИ ХУТ ХĂВАТ КĂТАРТНИ

Пĕррехинче Иисуспа вĕренекенĕсене Галилейăри Кана хулине туя чĕннĕ. Хăна-вĕрле ĕçсе çинĕ вăхăтрах хайхисен хĕрлĕ эрех пĕтнĕ. «Вĕсен эрехĕ пĕтнĕ», – тенĕ Иисуса туя пынă Амăшĕ. Анчах та Иисус: «Манăн вăхăтăм çитеймен-ха», – тесе тавăрнă. Вара Мария, Иисус çине кăтартса, хăналакан тарçăсене Вăл мĕн хушнине тума каланă.

Çавăнта юнашарахултă пысăк чул савăт ларнă. «Çак савăтсене шыв тултарăр-ха», – тенĕ тарçăсене Иисус. Лешсем шывне тултарсан, Вăл тарçăсене савăтран ăсса туй пуçне леçсе пама хушнă.

Хăй патне çĕклесе пынă ĕçмене астивсе пăхсан туй пуçĕ кĕрĕве чĕннĕ те çапла каланă: «Пурте лайăххрах хĕрлĕ эрехе малтан параççĕ. Кайран, ĕçсе çитсен, япăхраххине параççĕ. Эсĕ вара лайăххрах хĕрлĕ эрехне халиччен кăлармасăр тăнă». Туй пуçĕ çав эрехе ăçтан илнине пĕлмен, ăна шыв ăсакан тарçăсем кăна пĕлнĕ.

Çапла вара, хăватлă ĕçсем тума Иисус Галилейăри Кана хулинче пуçланă. Вăл Хăйĕн чап-хăватне кăтартнăран вĕренекенĕсем Ăна ĕненнĕ.

*ИОАНН 2:1–11*



## ИИСУС СУТУÇĂСЕНЕ ТУРĂ ÇУРТĔНЧЕН ХĂВАЛАСА КĂЛАРНИ

Пасха уявĕ çитеспе Иисус Иерусалима пынă. Турă Çуртне кĕрсен, Вăл унта вăкăр, сурăх, кăвакарчăн сутнине, укçа улăштаракансем ларнине курнă. Иисус кантраран пушă явнă та сутуçăсене пурне те вăкăрĕ-сурăхĕ мĕнĕпех Турă Çуртĕнчен хăваласа кăларнă, укçа улăштаракансен укçисене сапаласа янă, сĕтелĕсене тӳнтерсе тухнă. Вара кăвакарчăн сутакансене çапла каланă: «Пуçтарса кайнă пултăр кунтан йăлтах! Аттем çуртне суту-илӳ çурчĕ тунă ан пултăр!» Çавăн чухне Унăн вĕренекенĕсем Çырнинче: «Санăн çуртушăн çунни вут пек кĕллентерет Мана», – тенине аса илнĕ.

Турă Çуртĕнче Иисус Хăйне çапла тыткаланине курсан, иудейсем: «Çапла тума ирĕкӳ пуррине Эсĕ пире мĕнле паллă кăтартса ĕнентерĕн?» – тенĕ. «Çак Турă Çуртне пăсăр, Эпĕ вара ăна виçĕ кунран çĕнĕрен туса лартăп», – хуравланă Иисус. «Ку Турă Çуртне хĕрĕх ултă çул хушши тунă, Эсĕ ăна виçĕ кунрах туса лартасшăн-и?» – тенĕ иудейсем. Турă Çурчĕ тесе Иисус Хăйĕн ӳт-пĕвне каланă пулнă. Вăл вилĕмрен чĕрĕлсе тăрсан вĕренекенĕсем Иисусăн çак сăмахĕсене аса илнĕ. Вара Çырнинче каланине те, Иисус сăмахне те ĕненнĕ.

Иерусалимри Пасха уявĕнче пулнă чухне Иисус тĕрлĕ хăватсем кăтартнă. Çакна курсан чылайăшĕ Ăна ĕненме пуçланă.

*ИОАНН 2:13–23*



## ИИСУСПА НИКОДИМ КАЛАÇĂВĔ

Фарисейсем* хушшинче иудейсен пĕр пуçлăхĕ, Никодим ятлăскер, пулнă. Пĕррехинче Никодим çĕрле, никам курман чухне, Иисус патне пынă та çапла каланă: «Вĕрентекен! Эсĕ Турă патĕнчен килнине эпир пĕлетпĕр. Турăран маррисем Эсĕ кăтартнă хăватсене тума пултараяс çук». «Чăн-чăнах калатăп сана, – тавăрнă ăна Иисус, – çӳлте çуралманни Турă Патшалăхне кураймĕ». «Ватăлнă çын епле тата çуралма пултарĕ? – тĕлĕнсе ыйтнă Никодим. – Амăш варне кĕрсе тепре çуралаймасть-çке вăл!» «Чăн-чăнах калатăп сана: шывран тата Турă Сывлăшĕнчен çуралманни Турă Патшалăхне кĕреймĕ, – хуравланă Иисус.

– Çын ӳт-пĕвĕнчен ӳт-пӳ кăна çуралать, чун сывлăшĕ вара Турă Сывлăшĕнчен çуралать. „Сирĕн çӳлте çуралмалла“, – тенĕ сăмахăмран эсĕ ан тĕлĕн». «Мĕнле майпа пулма пултарать-ха вăл?» – ăнланаймасăр ыйтнă Никодим. Иисус вара çапла каланă: «Этем Ывăлне** ĕненекенсем пĕри те ан пĕтчĕр тесе, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулччăр тесе Унăн, Моисей пуш хирте çĕлене çĕкленĕ пек, çĕкленмелле. Тĕнчене питĕ юратнăран Турă Хăйĕн пĕртен-пĕр Тăван Ывăлне панă. Çакна Вăл ĕненекенĕсем ан пĕтчĕр тесе, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулччăр тесе тунă. Хăйĕн Ывăлне Турă çак тĕнчене суд тума яман, Ун урлă тĕнче çăлăнтăр тесе янă. Турă Ывăлне ĕненекен айăплă пулмĕ. Ăна ĕненменни айăпа юлнă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен вăл Туррăн пĕртен-пĕр Тăван Ывăлне ĕненмен. Сучĕ çапла пулать: тĕнчене çутă килчĕ, анчах çынсем, ĕçĕсем усал пулнăран, тĕттĕме çутăран ытла юратрĕç. Усал ĕç тăвакан çутта юратмасть. Хăйĕн усал ĕçĕсем палăрасран хăраса вăл çутă патне пымасть. Турăри ĕçĕсем палăрччăр тесе, тӳрĕ пурăнакан çутталла туртăнать».

*ИОАНН 3:1–21*

---

** Фарисейсем – Иудейăри пĕр тĕн юхăмĕн йĕркине тытса пыракан çынсем. Çав юхăм майлă каякан çынсем тĕн саккунĕн тулаш паллисене, йăла-йĕркене питĕ çирĕп уяса пурăннă.*

*** Этем Ывăлĕ – Авалхи Килĕшӳре Çăлакана çапла та каланă.*



## ИИСУСПА САМАРИ ХĔРАРĂМĔ

Пĕррехинче Иисус Израилĕн кăнтăр пайĕнчен, Иудейăран, Галилейăна кайма тухнă. Иудейăран Галилейăна кайма вара Самари çĕрĕпе иртмелле пулнă. Самари çыннисем, еврейсем пекех, пĕртен-пĕр Турра, çĕрпе пĕлĕте Пултаракана ĕненнĕ. Анчах та вĕсен хăйсен йăли-йĕрки, хăйсен священникĕсем пулнă. Пĕр хушă вĕсен хăйсен кĕлĕ çурчĕ те пулнă, каярахпа еврейсем ăна аркатнă. Еврейсемпе Самари çыннисем пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăннă.

Çапла Иисуспа вĕренекенĕсем Сихарь ятлă Самари хулине пырса çитнĕ. Иисус, çул çинче ывăннăскер, çăл патне канма ларнă, вĕренекенĕсем апат-çимĕç туянма кайнă. Кăнтăр вăхăчĕ çитнĕ. Пĕр Самари хĕрарăмĕ çăл патне шыв ăсма пырать. «Шыв ĕçтерсемччĕ», – тет ăна Иисус. Тĕлĕнсе кайнă Самари хĕрарăмĕ Ăна çапла калать: «Епле-ха Эсĕ, Иудея çынни, манран, Самари хĕрарăмĕнчен, ĕçме ыйтатăн?» Иисус ăна хирĕç каланă: «Турă сана пĕлме панă пулсан, „шыв ĕçтерсемччĕ“ тесе калаканĕ Камне пĕлес пулсан, ху Унран ыйтнă пулăттăн. Вара Вăл сана чĕрĕлĕх шывĕ парĕччĕ». «Ырă Çыннăм! – тенĕ Ăна хĕрарăм. – Санăн ăсмалли те çук-çке, çăлĕ вара тарăн. Ăçтан-ха апла Санăн чĕрĕлĕх шывĕ пулма пултартăр?» Иисус çапла хуравланă: «Кам çак шыва ĕçет, унăн татах ĕçесси килет. Кам та кам Эпĕ панă шыва ĕçет, унăн ĕмĕрне те ăшĕ хыпмĕ. Эпĕ паракан шыв унăн чунĕнче ĕмĕрлĕх пурăнăçа юхакан çăлкуç пулса тăрĕ». Хĕрарăм Унран Турра ăçта пуççапмалла – мăн асаттесем пуççапнă ту çинче е Иерусалимра – тесе ыйтнă. Иисус ăна тавăрса каланă: «Турă вăл – Сывлăш. Çавăнпа пуççапакансен те Ăна чăнлăхпа тата чун-чĕререн пуççапмалла». «Çăлаканăмăр Христос килессе, килсен пире йăлтах каласа ăнлантарасса эпĕ пĕлетĕп», – тет Ăна хĕрарăм. «Вăл Эпĕ, санпа Калаçаканни», – тет ăна Иисус.

Кăкшăмне лартса хăварсах хĕрарăм хулана чупнă та пурне те хăй тĕл пулнă Çын çинчен кала-кала кăтартнă. «Кайса пăхăр-ха, – тенĕ хĕрарăм çынсене, – Христос мар-и Вăл?» Хĕрарăм Ун пирки каланине илтсен Самари çыннисем нумайăшĕ Иисуса ĕненме пуçланă. Çавăнпа Самари çыннисем Иисус патне пынă та Ăна хăйсем патĕнче пĕр-ик кунлăх юлма ыйтнă. Вăл вара унта икĕ кун пурăннă. Унăн Хăйĕн сăмахĕсене илтсен ĕненекенсем татах нумайланнă.

*ИОАНН 4:1–42*



## ПУЛĂ НУМАЙ КĔНИНЧЕН ТĔЛĔННИ

Иисус халăха Геннисарет кӳлли хĕрринче вĕрентме юратнă. Пĕррехинче çавăнта Турă сăмахне итлемешкĕн питĕ нумай халăх пуçтараннă. Халăх йышлă пирки Иисуса калаçма та йывăр пулнă. Çыран хĕрринче икĕ кимĕ пулнă, вĕсенчен пĕри – Симонăн. Иисус хайхи Симон кимми çине ларнă та кăшт шаларах ишсе кайса çыран хĕрринчи халăха вĕрентме пуçланă.

Вĕрентсе пĕтерсен Вăл Симона çапла каланă: «Тарăнрах çĕре ишсе кĕр те пулă тытма сĕреке-тетелӳсене карса хур». «Вĕрентӳçĕ! – тенĕ Ăна Симон. – Эпир çĕрĕпех тертленсе ĕçлерĕмĕр, çапах пĕр пулă та тытаймарăмăр. Эсĕ хушатăн пулсан, апла сĕреке-тетелсене карса хурам эппин». Тетелĕсене карсан питĕ нумай пулă кĕнĕ. Вара вĕсен сĕреке-тетелĕсем çурăлма пуçланă та вĕсем инçех те мар пулă тытакан тусĕсене Иаковпа Иоана хăйсене пулăшма чĕннĕ. Икĕ киммине те пулă тултарнă, анчах та тӳпеми пулнăран киммисем путма пуçланă. Петр текен Симон çавна курсан Иисус ури умне ӳксе: «Эй, Хуçамăр! Кайсам ман патăмран, эпĕ – çылăхлă çын», – тенĕ. Вăл çак сăмахсене Турăран хăранипе каланă, мĕншĕн тесен Петр хăйне Хуçамăрпа юнашар пулма тивĕççĕр тесе шутланă. Иисус вара Симона çапла каланă: «Ан хăра! Паянтан эсĕ чун тытакан пулăн».

Каярахпа Петр чăнах та çынсене вĕрентсе-ӳкĕтлесе Иисус Хуçамăр енне çавăрма пуçланă, вĕсене çăлăнăç çулне кăтартнă.

*ЛУКА 5:1–10*



## ПАРАЛИЧ ÇАПНĂ ÇЫННА СЫВАТНИ

Пĕррехинче, Иисус Капернаум хулинче пулнă чухне, Ун тавра питĕ нумай халăх пуçтараннă. Вĕсем хушшинче тĕрлĕ çĕртен пынă ахаль çынсем те, ятлă-сумлисем те пулнă. Иисус вĕсене вĕрентнĕ, Унра Турă хăвачĕ пулнă, çав хăват чирлисене сыватнă чухне палăрнă. Иисус вĕрентекен çурт патне çынсем вырăнпах выртакан паралич çапнăскерне сыватма çĕклесе пынă. Анчах халăх йышлă пулнă пирки вĕсем çав çынна шала çĕклесе кĕртеймен. Вара вĕсем çурт тăррине хăпарнă та ăна пĕр тĕлтен сӳтсе паралич çапнă çынна вырттарнă вырăнĕпех пӳлĕм варрине антарса Иисус умне хунă. Вĕсен ĕненĕвне курсан Иисус чирлĕ çынна çапла каланă: «Санăн çылăхусем каçарăнчĕç».

Саккун вĕрентӳçисемпе фарисейсем çакна илтсен хăйсем хушшинче калаçнă: «Вăл Турра хурлать вĕт-ха! Турăсăр пуçне çылăх каçарма кам пултарĕ?» Иисус вĕсен шухăшĕсене пĕлсе çапла каланă: «Эсир мĕншĕн ун пек шухăшлатăр? Мĕн калама çăмăлтарах: „Сан çылăхусем каçарăнчĕç“ теме-и е: „Тăр та утса çӳре“ теме? Манăн, Этем Ывăлĕн, çĕр çинче çылăхсене каçарма ирĕк пуррине ĕнтĕ пĕлсе тăрăр». Унтан Иисус паралич çапнă çынна: «Эпĕ сана калатăп: тăр та хăвăн вырăнна илсе киле кай», – тенĕ.

Лешĕ тăнă та вырăнне илсе, тĕлĕнмелле сывалушăн Турра мухтаса килне кайнă. Çавăнта тăракансем пурте Турра мухтама пуçланă. «Паян эпир халиччен пулман тĕлĕнтермĕшсем куртăмăр», – тенĕ вĕсем.

*ЛУКА 5:17–26*



## ТУ ÇИНЧЕ ВĔРЕНТНИ: ТЕЛЕЙ ПИЛ-ХУШĂВĔСЕМ

Пĕррехинче Иисус Хăй тавра халăх пухăннине курсан сăрт çине улăхнă. Çав сăрт çинче Иисус халăха вĕрентсе каланине Ту çинче вĕрентни теççĕ. Авалхи Килĕшӳ вăхăтĕнче Турă Хăйĕн халăхне панă Вунă пил-хушу евĕрлех, Ту çинче вĕрентни этем пурăнăçне тытса тăракан кăмăл-сипет никĕсĕ çинчен калать, пире Турă Патшалăхне кĕме юрăхлă пулма чĕнет. Вĕренекенĕсемпе ытти çынсем Хăй тавра пуçтарăнсан, Иисус вĕсене çапла вĕрентме пуçланă:

Чун-чĕм кĕлмĕçисем телейлĕ: вĕсен Çӳлти Патшалăх пур.

Йĕрекенсем телейлĕ: вĕсене Турă лăплантарĕ.

Йăваш кăмăллисем телейлĕ: Турă вĕсене çĕр парĕ.

Турă чăнлăхĕшĕн выçăхса çунакансем телейлĕ: вĕсем ăна пĕлĕç.

Хĕрхенме пĕлекенсем телейлĕ: Турă та вĕсене хĕрхенĕ.

Таса чунлисем телейлĕ: вĕсем Турра курĕç.

Килĕшӳ кӳрекенсем телейлĕ: Турă вĕсене Хăйĕн ачисем тейĕ.

Тĕрĕслĕхшĕн хĕсĕрленине тӳсекенсем телейлĕ: вĕсен Çӳлти Патшалăх пур.

Сире Ман хыçран пынăшăн хурласан, хĕсĕрлесен, сăлтавсăрах усал сăмах каласа кӳрентерсен, эсир телейлĕ. Савăнса хĕпĕртĕр: сире валли Турă тӳпере чаплă сăвап хатĕрленĕ. Сире халĕ хĕсĕрленĕ пекех, сирĕнчченхи пророксене те хĕсĕрленĕ.

Эсир – тĕнче тăварĕ. Тутине çухатнă тăвар пахалăхне тавăрма пулĕ-и? Вăл ĕнтĕ ниме юрăхсăр, ăна çын ури айĕнче таптанма кăна кăларса тăкмалла.

Эсир – тĕнче çути. Ту çинче ларакан хула курăнмасăр юлмĕ. Çутаткăça та çутсан чӳлмекпе хупламаççĕ; пӳртрисене пурне те çутă пултăр тесе ăна çӳллĕрех вырăна лартаççĕ. Çапла сирĕн çуттăр та çынсемшĕн çутаттăр, вĕсем, сирĕн ырă ĕçĕрсене курса, Çӳлти Аçăра мухтачăр.

*МАТФЕЙ 5:3–16*



# ТУ ÇИНЧЕ ВĔРЕНТНИ: МОИСЕЙ САККУНĔ ÇИНЧЕН

Эпĕ пророксен сăмахĕсемпе Моисей саккунне улăштарма килнĕ тесе ан шухăшлăр. Эпĕ улăштарма мар, туса çитерме килтĕм. Чăн калатăп сире: çĕрпе пĕлĕт пĕтмесĕр, саккунра çырни пĕтĕмпех пурнăçланмасăр, саккунри пĕр саспалли те пăрахăçланмĕ. Çапла вара, кам çак пил-хушусенчен чи пĕчĕккине те пулин пăсать, çынсене та çаплах тума вĕрентет, çавна Çӳлти Патшалăхра Турă кĕçĕнни тейĕ. Кам пил-хушусене тытса пырать, çапла тума вĕрентет, çавна Çӳлти Патшалăхра Турă асли тейĕ. Çавăнпа та калатăп сире: фарисейсемпе саккун вĕрентӳçисенчен тӳрĕрех пурăнмасан Çӳлти Патшалăха кĕреймĕр.

«Ан вĕлер, кам та кам çынна вĕлерет, çав суда тивĕçлĕ», — тесе авалах каланине эсир илтнĕ. Эпĕ вара сире калатăп: хăй тăванне сăлтавсăр çилленекен кашни çыннах суда тивĕçлĕ. Кам хăй тăванне айвана хурса кӳрентерет, çав синедрион* судне тивĕçлĕ. Кам хăй тăванне ăссăра хурса хаклать, çав тамăк вутне тивĕçлĕ. Çавăнпа ĕнтĕ эсĕ Турă Çуртĕнче парне пама тăрсан, тăвану сана кӳреннине аса илсен, парнӳне кӳме тăхта. Малтан тăванупа кайса çурас, унтан Турă Çуртне пырса парнӳне кӳр.

«Ан аскăнлан», — тесе авалах каланине эсир илтнĕ. Эпĕ вара сире калатăп: хĕрарăм çине аскăннăн пăхакан кашни çын шухăш-кăмăлĕнче аскăн ĕç тăвать. «Кам хăй арăмне уйăрса ярать, çавăн арăмне уйăру хучĕ çырса памалла», — тенĕ авалах. Эпĕ вара сире калатăп: кам хăй арăмне аскăн ĕç туман çĕртех уйăрса ярать, çав арăмне аскăн ĕç тума хĕтĕртет. Кам уйăрса янă арăма илет, вăл та аскăн ĕç тăвать.

Тата эсир авалах çапла каланине те пĕлетĕр ĕнтĕ: «Тупа тунинчен ан ирт, Турă ятне асăнса тупа тунине пурнăçла». Эпĕ вара сире калатăп: нимĕн ячĕпе те тупа ан ту. Пĕлĕтпе те тупа ан ту, вăл Туррăн престолĕ. Çĕрпе те тупа ан ту, вăл Турă ури айĕн кантармалăхĕ. Иерусалимпа та тупа ан ту, вăл Аслă Патша хули. Пуçупа та тупа ан ту, эсĕ пĕр çӳç пĕрчин тĕсне те улăштарма пултараймастăн. Сирĕн мĕн калани те çакă çеç пултăр: «çапла» е «çук». Çак сăмахсенчен ытлашшине вара чее шуйттан калаттарать.

*МАТФЕЙ 5:17–37*

* *Синедрион — еврейсен аслă канашĕ тата сучĕ.*



# ТУ ÇИНЧЕ ВЁРЕНТНИ: ЮРАТУПА КЁЛЁ ÇИНЧЕН

«Куçшăн – куç, шăлшăн – шăл», – тесе авалах каланине эсир илтнĕ. Эпĕ вара сире калатăп: хăвна усал тăвакана усалпа ан тавăр. Сылтăм енчен çупса яракана сулахай енне çавăрса пар. Кам санпа судлашса кĕпӳне туртса илесшĕн, ăна çири тумтирне те пар. Кам сана хăйпе пĕрле пĕр çухрăм уттарать, унпа пĕрле иккĕ кай. Хăвăнтан ыйтакана пар, кивçен илес текенрен ан пăрăн.

«Хăвна çывăх çыннуна юрат, тăшманна кураймасăр тăр», – тесе авалах каланине эсир илтнĕ. Эпĕ вара сире калатăп: тăшманăрсене юратăр, хăвăра ылханакансене ырă сунăр, хăвăра кураймансене ырă тăвăр, хăвăра кӳрентерекенсемшĕн те, хĕсĕрлекенсемшĕн те кĕлтăвăр. Вара эсир Çӳлти Аçăр ачисем пулăр. Вăл Хăйĕн хĕвелне усаллисем çине те, ыррисем çине те пăхтарать; çумăрне сăваплисем çине те, сăвапсăррисем çине те çутарать. Хăвăра савакансене кăна юрататăр пулсан, сире мĕншĕн мухтамалла? Налук пухакансем те çаплах тумаççĕ-им? Хăвăр тăванăрсене анчах сума сăватăр пулсан, сире мĕншĕн мухтамалла? Чăн Турра пĕлмен халăх çыннисем те çаплах тумаççĕ-им? Çапла вара, Çӳлти Аçăр епле паха, эсир те çапла паха пулăр.

Асăрханăр, Турра юрăхлă ĕçĕре çынна кăтартасшăн ан тăвăр, унсăрăн Çӳлти Аçăртан сăвап пулмĕ. Çавăнпа чухăна нимĕнле шăв-шав кăлармасăрах пулăш. Хăйсене çынсем мухтаччăр тесе, икĕ питлисем синагогăсемпе урамсенче шăв-шав кăларса пулăшанçи тăваççĕ. Эсĕ вĕсем пек ан пул. Чăн калатăп сире: илнĕ парни вĕсен кунти пурăнăçра кăна. Эсĕ вара чухăнсене пулăшнине ан палăрт: сылтăм аллу мĕн тунине сулахаййи ан пĕлтĕр. Вара вăрттăн тунине те куракан Аçу сана уççăнах тавăрса парĕ.

Турра кĕлтунă чух та икĕ питлĕ çынсем пек ан пул. Пурте курччăр тесе, вĕсем синагогăсенче, урам тăваткалĕсенче тăрса кĕлтума юратаççĕ. Чăн калатăп сире: илнĕ мухтавĕ вĕсен кунти пурăнăçра кăна. Эсĕ вара кĕлтунă чухне шалти пӳлĕме кĕр те, алăкне хупса, Çӳлти Аçуна никама палăртмасăр кĕлту. Вара вăрттăн тунине те куракан Аçу сана уççăнах тавăрса парĕ.

Кĕлтунă чух ытти халăх çыннисем пек ытлашши ан калаç. Вĕсем вăрăм кĕлле Турă хăвăртрах илтĕ тесе шухăшлаççĕ. Вĕсем пек ан пулăр, сире мĕн кирлине Çӳлти Аçăр эсир Унран ыйтичченех пĕлсе тăрать. Эсир вара çапла кĕлтăвăр:

*МАТФЕЙ 5:38–48; 6:1–8*

*Эй, Ҫӳлти Аттемӗр!*
*Санӑн яту хисеплентӗр,*
*Санӑн Патшалӑху килтӗр;*
*Санӑн ирӗкӳ*
*ҫӗр ҫинче те ҫӳлти пекех пултӑр.*
*Паян пурӑнмалӑх*
*ҫӑкӑр пар пире.*
*Эпир хамӑра парӑмлӑ пулнисене*
*каҫарнӑ пек,*
*пирӗн парӑмсене каҫар пире.*
*Ҫылӑха ан кӗрт пире,*
*усалтан хӑтар пире.*
*Патшалӑх та, хӑват та,*
*аслӑлӑх та ӗмӗрех Санӑн.*
*Аминь.*

# ТУ ÇИНЧЕ ВĔРЕНТНИ:
# ТУРĂ УМĔНЧЕ МĔНЛЕ ПУЛМАЛЛИ ÇИНЧЕН

Типĕ тытнă чухне те икĕ питлĕ çынсем пек хуйхăллă ан çӳрĕр. Вĕсем хăйсем типĕ тытнине çынсене кăтартасшăн сăнĕсене салхулатаççĕ. Чăн калатăп сире, илнĕ парни вĕсен кунти пурăнăçра кăна. Эсĕ вара типĕ тытнă чухне çӳç-пуçна тирпейле те пит-куçна çу. Çакна эсĕ ху типĕ тытнине çынсене палăртас мар тесе, курăнми Аçу анчах пĕлсе тăтăр тесе ту. Вара вăрттăннине те куракан Аçу сана уççăнах тавăрса парĕ.

Çĕр çинче хăвăр валли пурлăх ан пухăр. Кунта кĕве те çиет, тутăхса та пĕтет, вăрăсем те çĕмĕрсе кĕрсе вăрлаççĕ. Эсир хăвăра валли пурлăх тӳпере пухăр. Унта кĕве те çимест, тутăхса та пĕтмест, вăрăсем те çĕмĕрсе кĕрсе вăрламаççĕ. Мĕншĕн тесен пурлăхăр ăçта, чун-чĕрĕр те çавăнта пулĕ.

Куç – ӳт-пӳ çутаткăçĕ. Çавăнпа ĕнтĕ эсĕ таса куçлă пулсан, пĕтĕм ӳт-пĕвӳ те çутă пулĕ. Эсĕ таса мар куçлă пулсан, пĕтĕм ӳт-пĕвӳ те тĕксĕм пулĕ. Çапла санăн ăшунти çутту та тĕттĕм пулсан, чăн тĕттĕмĕ хăй еплерех-ши?

Никам та икĕ хуçа тарçи пулаймасть, мĕншĕн тесен вăл пĕр хуçине кураймĕ, теприне юратĕ; е пĕриншĕн тăрăшĕ, теприншĕн тăрăшмĕ. Эсир Турă чури те, мул чури те пулаймăр.

Çавăнпа та сире калатăп: ĕçме-çиме пирки те, тумтир пирки те ан кулянăр. Чун – апат-çимĕçрен, кĕлетке тумтиртен пахарах мар-им вара? Вĕçен кайăксене сăнăр-ха: вĕсем тырă акса-вырса кĕлете пухса хумаççĕ, Çӳлти Аçăр вĕсене тăрантарать. Эсир вĕçен кайăксенчен пахарах мар-им вара? Тăрăшнипе кам шит чухлĕ те пулин ӳсни пур? Тумтиршĕн тата мĕншĕн тăрăшас? Хирти чечексем епле ӳснине сăнăр-ха: вĕсем çи-пуç çĕлес тесе арласа тĕртмеççĕ. Çапах та чаплă Соломон патша та пĕр хир чечекĕ пек чаплă тумланайман, тетĕп сире. Эй, çителĕксĕр ĕненекенсем! Паян пур та ыран вута кăна пăрахмалли курăка та Турă çапла çи-пуç парать пулсан, сире тумлантармĕ-им? Çапла вара, «мĕн çиес», «мĕн ĕçес», «мĕн тăхăнас» тесе ан кулянăр. Вăл япаласем пирки ытти халăх çыннисем ăшталанса çӳреççĕ. Сире мĕн-мĕн кирлине Çӳлти Аçăр пĕлет. Пуринчен малтан Турă Патшалăхне, Унăн чăнлăхне ăнтăлса шырăр, ыттине вара Турă сире йăлтах парĕ. Çапла ĕнтĕ ыранхи куншăн ан кулянăр, тăрăшмалли ыран та тупăнĕ, кунсерен ĕç-пуç тупăнсах пырать.

*МАТФЕЙ 6:16–34*



## ТУ ÇИНЧЕ ВĔРЕНТНИ: ÇЫНСЕМ УМĔНЧЕ МĔНЛЕ ПУЛМАЛЛИ ÇИНЧЕН

Ан айăплăр, вара хăвăра та айăпламĕç. Мĕншĕн тесен эсир çынсене мĕнле айăплăр, хăвăра та çаплах айăплĕç. Эсир çынсене мĕнле виçепе виçĕр, хăвăра та çав виçепех виçĕç. Мĕншĕн эсĕ хăвăн тăвану куçĕнчи çӳппе асăрхатăн, хăвăн куçунти пĕренене асăрхамастăн? Хăвăн куçунта пĕрене пулин те, епле-ха эсĕ тăванна: «Куçна кĕнĕ çӳппе кăларса ярам-ха», – тесе калама пултаратăн? Икĕ питлĕскер! Малтан хăвăн куçунти пĕренене кăлар, вара тин тăванун куçĕнчи çӳппе епле кăлармаллине пĕлĕн. Сăваплă япалана йытăсене ан парăр, хаклă ĕнчĕ шăрçана та сыснасем умне ан сапалăр – вĕсем ăна таптĕç кăна, хăвăра туртса çурĕç.

Ыйтăр, ыйтсан сире парĕç; шырăр, шырасан тупăр; шаккăр, шаккасан сире уçĕç. Мĕншĕн тесен ыйтакан – илет, шыракан – тупать, шаккакана уçаççĕ. Сирĕн хушшăрта ывăлĕ çăкăр ыйтсан ăна чул паракан çын пур-и? Е пулă ыйтсан çĕлен паракан пур-и? Енчен те эсир, усал пулин те, ачăрсене ырă япала пама пĕлетĕр пулсан, сирĕн Çӳлти Аçăр Хăйĕнчен ыйтакансене ырăлăхне паратех.

Çапла вара, çынсене хăвăрпа мĕнле пултарас килет, вĕсемпе те çавнашкалах пулăр. Çакă вăл саккун тата пророксен сăмахĕсен тĕшши пулать те.

Тăвăр хапхаран кĕрĕр,
мĕншĕн тесен тамăк хапхи пысăк, çулĕ аслă.
Чылайăшĕ çав çулпа пырать.
Чĕрĕлĕх хапхи вара тăвăр, çулĕ ансăр.
Çав çула тупаканĕ сахал.

*МАТФЕЙ 7:1–14*

## ЫЛТĂН ЙĔРКЕ

***«Çапла вара,<br>çынсене хăвăрпа<br>мĕнле пултарас килет,<br>вĕсемпе те<br>çавнашкалах пулăр».***

**Матфей пĕлтернĕ Ырă Хыпар 7:12**

## ТУ ÇИНЧЕ ВĔРЕНТНИ: ЧĂНЛĂХПА СУЯЛĂХ

Суя пророксенчен асăрханăр. Вĕсем сирĕн патăра сурăх тирĕ витĕнсе пыраççĕ, анчах ăшĕнче хăйсем – тискер кашкăрсем. Вĕсене эсир ĕçĕсенчен пĕлĕр. Кӳкен йываççи çинчен – иçĕм çырли, куршанак çинчен смоква татни пур-и? Лайăх йывăç ырă çимĕçех тăвать, начар йывăçăн çимĕçĕ те япăх. Лайăх йывăç япăх çимĕç тумасть, начар йывăç та ырă çимĕç тумасть. Ырă çимĕç кӳмен йывăça касса вута пăрахаççĕ. Çапла вара, суя пророксене ĕçĕ-çимĕçĕсенчен пĕлĕр.

Мана: «Эй, Хуçам! Эй, Хуçам!» – тесе калакан кашни çынах Çӳлти Патшалăха кĕреймĕ. Унта Çӳлти Аттем ирĕкне пурнăçлакан кăна кĕрейĕ.

«Эй, Хуçам! Эй, Хуçам! Эпир Сан ятупа пророкла сăмахсем каламарăмăр-им? Сан ятупа усалсене хăваласа кăлармарăмăр-им? Сан ятупа нумай-нумай тĕлĕнмелле ĕç тумарăмăр-им?» – тейĕ Мана чылайăшĕ суд кунĕ çитсен. Ун чухне Эпĕ вĕсене уççăнах калăп: «Эй, йĕркесĕр ĕç тăвакансем! Эпĕ сире нихăçан та пĕлмен, кайăр ман патăмран!»

Çапла вара, Манăн çак сăмахăмсене итлекен, вĕсене пурнăçлакан хăйĕн çуртне чул никĕс çине лартнă ăслă çын евĕрлех. Акă çумăр çуса ярать те юхан шыв çыранран тухать, çил-тăвăл тапранса каять. Анчах та çав çурт, чул никĕс çине лартнăскер, ишĕлмест. Кам та кам Манăн çак сăмахăмсене итлет, анчах вĕсене пурнăçламасть, çав хăйĕн çуртне хăйăр çине лартакан ăссăр çын евĕрлех. Акă çумăр çуса ярать те юхан шыв çыранран тухать, çил-тăвăл тапранса каять. Çав çурт вара кĕмсĕртетсе тĕпĕ-йĕрĕпех ишĕлсе анать.

Иисус Хăйĕн сăмахне вĕçлесен, халăх Унăн вĕрентĕвĕнчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. Мĕншĕн тесен Вăл саккун вĕрентӳçисемпе фарисейсем пек мар, çакна тумашкăн ирĕк илнĕскер пек вĕрентнĕ.

*МАТФЕЙ 7:15–29*



## ТĂЛĂХ АРĂМĂН ЫВĂЛНЕ
## ВИЛĔМРЕН ЧĔРТНИ

Иисус пĕррехинче Наин хулине кайнă. Унпа пĕрле вĕренекенĕсем тата темĕн чухлĕ халăх пынă. Хула хапхи патне çитеспе Вăл виле пытарма каякансене курнă; вилни тăлăх арăмăн пĕртен-пĕр ывăлĕ пулнă. Татăлса йĕрекен тăлăх арăма курсан Иисус ăна хĕрхенсе: «Ан йĕр», – тенĕ. Унтан Вăл пырса вилене çĕклемеллине аллипе сĕртĕннĕ. Виле çĕклесе пыракансем чарăннă. Иисус вара каланă: «Ачам, сана тăма хушатăп!» Çав самантрах вилнĕ каччă тăрса ларнă та калаçма пуçланă. Иисус ăна амăшне тавăрса панă. Çынсем пурте хăраса-тĕлĕнсе кайнă, вĕсем Турра мухтаса: «Пирĕн хушшăмăрта аслă пророк тупăнчĕ! Турă Хăйĕн халăхĕ патне килчĕ», – тенĕ.

*ЛУКА 7:11–16*



## АКАÇĂ ÇИНЧЕН КАЛАНĂ ЫТАРУ

Иисус халăха акаçă çинчен ытару каласа панă:

Пĕр акаçă акана тухнă. Акнă чухне хăш пĕрчисем çул хĕррине ӳкнĕ, кайăксем вĕçсе пынă та çав пĕрчĕсене сăхса пĕтернĕ. Хăшĕ тата чуллă çĕре ӳкнĕ, тăпри ăшăх пулнăран калчи часах шăтса тухнă. Анчах та хĕвел тухсанах ăна ĕнтсе янă, тымар ярайман калча вара типсе ларнă. Хăш пĕрчисем тата пиçенлĕ вырăна ӳкнĕ, пиçен ашкăрса çитĕнсе кайнă та калчана пусса лартнă. Теприсем вара пулăхлă çĕр çине ӳкнĕ те тулли пучах ӳстернĕ: пĕр пĕрчĕрен çĕр пĕрчĕ, утмăл пĕрчĕ, вăтăр пĕрчĕ таран пулнă. Илтме хăлха пурри илттĕр!

Кайран Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене çак ытарăвăн пĕлтерĕшне ăнлантарса панă:

Çул хĕррине ӳкнĕ пĕрчĕ Çӳлти Патшалăх çинчен каланă сăмаха итлесе те ăнланайман çын евĕр. Ун патне шуйттан пырать те чĕрине акнă вăрлăха çаратса каять.

Чуллă çĕре ӳкни сăмаха илтсе ăна тӳрех хавхаланса йышăнакан çын евĕрлĕ. Анчах та тымарсăр пулнăран çав çын ĕненĕвĕ самантлăха кăна пырать. Асаплă вăхăтсем çитсен, сăмахшăн хĕсĕрлеме тытăнсан, çав çын сăмахран пăрăнать.

Пиçенлĕ вырăна ӳкни сăмаха итлекен çыннах пĕлтерет. Анчах та пурăнăç хуйхи-суйхи, пуянлăх ултавĕ ун чĕринчи сăмаха пусса лартать те, сăмах вара тĕшĕленеймест.

Пулăх çĕр çине ӳкни Турă сăмахне илтсе, ăнланса илекене пĕлтерет. Ун чĕринче сăмах тĕшĕленет те, çав çын вара çĕр хут, утмăл хут, вăтăр хут ытларах усă кӳрет.

*МАТФЕЙ 13:3–9, 18–23*



## ÇӐ̈ЛТИ ПАТШАЛӐХ ÇИНЧЕН КАЛАНӐ УЛТӐ ЫТАРУ

Пĕррехинче Иисус килтен тухса тинĕс хĕррине пырса ларнӑ. Иисус таврa темĕн чухлĕ халӑх пуçтарӑннӑ, çавӑнпа Вӑл кимĕ çине кĕрсе ларнӑ. Халӑх вара çыран хĕрринче тӑнӑ. Иисус халӑха ытарлӑн вĕрентнĕ:

Çӳлти Патшалӑха хӑйĕн ани çине тулӑ акнӑ çынпа танлаштарма пулать. Анчах та çĕрле, пурте çывӑрнӑ чухне, унӑн тӑшманĕ пынӑ та тулӑ хушшине çум курӑкĕ акса кайнӑ. Калча ӳссе пуç кӑларсан вара çум курӑкĕ те палӑрнӑ. Тарçисем хуçине пырса çапла каланӑ: «Хуçамӑр! Эсĕ хӑвӑн ану çине тулӑ акнӑччĕ, çум курӑкĕ ӑçтан тухнӑ тата унта?» «Тӑшман хӑтланнӑ çавна», – тенĕ хуçи вĕсене. «Çумлаттарас теместĕн-и, эпир кайса çумлӑпӑр», – тенĕ тарçисем. «Çук, çумланӑ чух çумпа пĕрле тулли те тӑпӑлĕ, – тет хуçи. – Выриччен хутӑшах ӳсчĕр-ха, вырмара вара выракансене çапла хушӑп: „Çунтарса ямашкӑн малтан çум курӑкне пухса кĕлтен-кĕлтен çыхӑр, тыррине вара кĕлетĕме пухса хурӑр“».

Унтан Иисус вĕсене тепĕр ытару каласа кӑтартнӑ:

Çӳлти Патшалӑха тата ана çине акнӑ сарӑ пӑрӑç вӑррипе танлаштарма пулать. Сарӑ пӑрӑç вӑрри ытти вӑрӑсенчен чи пĕчĕкки пулин те, ӳссен вӑл ӳсен-тӑрансенчен чи çӳлли пулса тӑрать. Вӑл йывӑç пекех паркаланса каять, турачĕсем хушшинче вĕçен кайӑк пытанмалӑхах вырӑн пулать.

Иисус вĕсене урӑх ытарусем те каласа панӑ:

Çӳлти Патшалӑха тата кӑвас тĕпĕпе танлаштарма пулать. Хĕрарӑм кӑвас тĕпне илнĕ те виçĕ витре çӑнӑхпа хутӑштарса çӑрнӑ, вара пĕтĕм чусти йӳççе хӑпарнӑ.

Çӳлти Патшалӑха тата ана çинче чавса пытарнӑ мулпа танлаштарма пулать. Çав мула пĕр çын тупнӑ та никама та систермен. Хайхискер савӑннипе пурлӑхне кайса сутать те пĕтĕм анине сутӑн илет.

Çӳлти Патшалӑха тата хаклӑ ĕнчĕ шыракан купсапа танлаштарма пулать. Пĕррехинче вӑл хаклӑран та хаклӑ ĕнчĕ курнӑ та кайса мĕн пур пурлӑхне сутса çав ĕнчĕне туяннӑ.

Çӳлти Патшалӑха тата сĕреке-тетелпе танлаштарма пулать. Пулӑçӑсем ӑна тинĕсе янӑ та унта тĕрлĕ йышши пулӑ кĕнĕ. Сĕреке-тетел тулсан ӑна пулӑçӑсем çыран хĕррине туртса кӑларнӑ, унтан ларнӑ та юрӑхлӑ пуллине суйласа савӑта янӑ, юрӑхсӑррине кӑларса ывӑтнӑ. Тĕнче пĕтмĕшĕнче те çаплах пулĕ: ангелсем килĕç те усаллисене сӑваплисенчен уйӑрса çунакан вута пӑрахĕç; унта шӑл шатӑртаттарса йĕни илтĕнсе тӑрĕ.

*МАТФЕЙ 13:24–33, 44–50*



## ИИСУС КӲЛӖ ÇИНЧИ ÇИЛ-ТӐВӐЛА ЧАРАТЬ

Пӗррехинче Иисуспа вӗренекенӗсем кимӗпе Геннисарет кӳлли урлӑ каçма пуçланӑ. Ишсе пынӑ вӑхӑтрах Иисус тӗлӗрсе кайнӑ. Сасартӑк кӳлӗ çинче питӗ вӑйлӑ çил-тӑвӑл тухнӑ, хум çапнипе кимме шыв тула пуçланӑ. Вара вӗренекенӗсем Иисуса вӑратнӑ та çапла каланӑ: «Хуçамӑр, çӑлсам! Путса вилетпӗр-иç». «Ӑçта сирӗн ӗненӗвӗр? – тенӗ вӗсене Иисус. – Мӗншӗн эсир çав тери хӑраса ӳкнӗ, çителӗксӗр ӗненекенсем?» Вара Иисус тӑнӑ та çиле чарнӑ, унтан тинӗсе каланӑ: «Чарӑн, ан шавла!» Çавӑнтах çил чарӑннӑ, кӳлӗ лӑпланса шӑп пулнӑ.

Вӗренекенӗсем питӗ хӑраса та тӗлӗнсе пӗр-пӗринпе çапла калаçнӑ: «Кам-ши Ку? Вӑл çиле те, хумсене те чарӑнма хушса Хӑйне итлеттерет».

*МАТФЕЙ 8:23–27; МАРК 4:37–41; ЛУКА 8:22–25*



## ИАИР ХЁРНЕ ВИЛЁМРЕН ЧЁРТНИ

Тепрехинче Иисус Галилея тинёсё хёрринче Хăй патне тĕрлĕ çĕртен пуçтарăннă халăха вĕрентнĕ. Çавăнта синагога пуçлăхĕсенчен пĕри, Иаир ятлăскер, Иисус патне пырать. Вара Ун ури умне ӳксе вăл питĕ хытă тархасла пуçлать: «Хĕрĕм вилесле выртать, сывалтăр тесе, чĕрĕ юлтăр тесе Эсĕ пырса ун çине аллуна хурсамччĕ!» Вара Иисус унпа пĕрле кайнă. Халăх та Иисуспа пĕрлех пынă, çын нумаййипе Ăна пур енчен те хĕстернĕ.

Çавăнта юн кайнипе вун икĕ çул асапланакан пĕр хĕрарăм пулнă. Вăл тухтăрсем патне тăтăшах çӳресе нумай нуша курнă, анчах сывалайман. Çав хĕрарăм Иисус çинчен чылай илтнĕ пулнă. «Ун тумтирне сĕртĕнсенех сывалăттăм», — тесе шухăшланă вăл. Вара хайхискер халăх хушшипе хĕсĕнсе хыçалтан пынă та Ун тумтирне вăрттăн сĕртĕннĕ. Çавăнтах хĕрарăм хăй сывалнине туйса илнĕ.

Иисус, Хăйĕнчен хăват тухнине сиссе, халăх еннелле çаврăннă та: «Тумтирĕме кам сĕртĕнчĕ?» — тесе ыйтнă. Иисус мĕншĕн çапла ыйтнине вĕренекенĕсем ăнланман, пур енчен те халăх хĕстернĕрен пулĕ тесе çеç хуравланă. Анчах та Иисус, Хăйне кам сĕртĕннине курас тесе, çаплах йĕри-тавралла пăхкаланă. Хăранипе чĕтреме ернĕ хĕрарăм, хăйпе мĕн пулса иртнине пĕлекенскер, Иисус патне пынă та Ун умне ӳксе тĕрĕссине каласа панă. «Ĕненĕвӳ сана чирӳнтен çăлчĕ. Канăçлă, сывлăхлă пул!» — тенĕ вара ăна Иисус.

Вăл çак сăмахсене каласа тăнă вăхăтрах Иаир килĕнчисем пыраççĕ те çапла калаççĕ: «Хĕрӳ вилсе кайрĕ ĕнтĕ, халь тин Вĕрентекене ан чăрмантар». «Ан хăра, — тет çакна илтсен Иисус Иаира, — хытăрах ĕнен кăна». Иаир килне çитсен, Вăл аптăраса кайнă çынсене курать, тăванĕсем хӳхлесе йĕнине илтет. «Мĕншĕн каплах кулянса йĕретĕр? — тет вĕсене Иисус. — Хĕр ача вилмен, çывăрать кăна». Çынсем Иисусран тăрăхлама пуçланă. Анчах та Иисус вилнĕ хĕрĕн ашшĕ-амăшĕпе тата Петрпа, Иаковпа, Иоанпа пĕрле хĕр ача выртакан пӳлĕме кĕрет. Унтан хĕр ачана аллинчен тытать те: «Хĕрĕм, сана калатăп, тăр!» — тет. Хĕр ача çав самантрах тăнă та утма пуçланă. Çакнашкал хăвата курнă çынсем тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ.

*МАРК 5:21–42*



## ИИСУС ПИЛĔК ПИН ÇЫННА ТĂРАНТАРНИ

Пĕррехинче Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсемпе Галилея тинĕсĕн тепĕр енне, Тивериада тăрăхне кайнă. Вăл чирлисене сыватса хăват тунине курнă халăх Ун хыçĕнчен йышлăн пынă.

Иисус ту çине хăпарнă та унта Хăйĕн вĕренекенĕсемпе пĕрле ларнă. Иудейсен Пасха уявĕ çывхарса килнĕ пулнă. Иисус Хăй патне темĕн чухлĕ халăх пынине курать те Филипа çапла калать: «Кун чухлĕ халăха тăрантармалăх çăкăр ăçтан сутăн илмелле-ха пирĕн?» Хăй мĕн тăвассине пĕлнĕ пулин те, çакна Вăл Филипа тĕрĕслесе пăхас тесе каланă.

«Кунта ик çĕр динарийлĕх* çăкăр туянсан та çитес çук. Кашнине пĕрер татăк та лекеймĕ», — тенĕ Ăна Филипп.

Иисусăн пĕр вĕренекенĕ, Петр текен Симон шăллĕ Андрей, Ăна çапла калать: «Кунта пĕр ачан пилĕк урпа çăкăрĕпе икĕ пĕчĕк пулă пур, анчах çакăн чухлĕ халăха вăл ăçтан çиттĕр?» «Халăха ларма хушăр», — тенĕ Иисус. Вырăнĕ çеремлĕ пулнă. Çапла вара пилĕк пин çынна яхăн ларса тухнă.

Иисус çăкăрĕсене илсе Турра тав тунă та çиме ларнисене çăкăрпа пулла валеçсе панă. Кама мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлех илнĕ. Пурте çисе тăрансан Иисус вĕренекенĕсене каланă: «Юлнă татăксене пуçтарăр, нимĕн те сая ан кайтăр». Лешсем вара пилĕк урпа çăкăрне çинĕ хыççăн юлнă татăксене пуçтарнă. Пурĕ вун икĕ тулли кунтăк пухăннă.

«Ку чăнах та тĕнчене килмелли Çав Пророк!» — тенĕ çавăн чухне Иисус тунă хăвата курнисем.

*ИОАНН 6:1–14*

---

** Динарий — çав вăхăтра Израильте çӳренĕ Рим укçи.*



## ИИСУС ШЫВ ÇИЙЁПЕ УТАТЬ

Çăкăрпа тата пулăпа кăтартнă хăватсем хыççăнах Иисус Хăйён вёренекенёсене кимĕ çине ларса тинĕс тепĕр енне ишсе каçма хушать. Хăй халăха ăсатма юлать. Халăхпа сывпуллашсан Иисус кĕлтума ту çине улăхнă, çĕрле те унта пĕчченех пулнă. Çав вăхăтра кимĕ тинĕс варринче пулнă ĕнтĕ. Çил вăйлă пулнăран кимме хумсем лăсканă. Тул çутăласпа вара Иисус тинĕс çийĕпе утса вĕренекенĕсем патне çывхарнă. Вĕренекенĕсем, Вăл тинĕс çийĕпе утса пынине курсан, хăраса ӳкнипе куçа мĕлке курăнать пулĕ тесе шутланă. Сехрисем хăпнипе вĕсем кăшкăраша пуçланă. Иисус вĕсене çавăнтах сасă парса каланă: «Хастар пулăр! Ку – Эпĕ, ан хăрăр!»

«Хуçам! – тенĕ Ăна Петр. – Енчен те Ку Эсех пулсан, эппин мана та Хăв патна шыв çийĕпе пыма ирĕк парсамччĕ». «Килсем», – тенĕ Иисус. Петр вара кимĕрен тухса шыв çийĕпе Иисус патне утнă. Анчах та çил вăйлине асăрхасан вăл хăранипе пута пуçланă. «Хуçам! Çăлсам мана!» – тесе кăшкăрса янă вăл. Иисус çавăнтах аллине тăсса ăна ярса тытнă. «Эй, çителĕксĕр ĕненекен, – тенĕ ăна Иисус, – мĕншĕн эсĕ иккĕленсе кайрăн?» Вĕсем кимĕ çине ларсанах çил лăпланнă.

Кимĕ çинчисем Ун патне пырса, пуççапса çапла каланă: «Эсĕ чăнах та Турă Ывăлĕ!»

*МАТФЕЙ 14:22–33*



## ИИСУС ХРИСТОС ÇАП-ÇУТĂ ПУЛНИ

Иисус пĕррехинче Петра, Иоана тата Иакова Хăйпе пĕрле илнĕ те çӳллĕ ту çине хăпарнă. Унтан, Иисус кĕлтунă чухне, вĕренекенĕсем Унăн сăн-сăпачĕ улшăннине асăрханă: сăнĕ хĕвел пек ялтăраса, тумтирĕ чăлт шуррăн çуталса кайнă. Çавăнтах, мухтавлă çутăра курăнса, Моисейпа Илия пророк Иисуспа калаçса тăнă. Ăнран кайнă Петр вара Иисуса çапла каланă: «Хуçамăр! Пире кунта епле аван. Кăмăлу пулсан, эпир кунта виçĕ хӳшĕ тăвăпăр: пĕрне – Сан валли, теприне – Моисей валли тата теприне – Илия валли». Çак сăмахсене каласа пĕтеричченех вĕсене çутă пĕлĕт хупласа илнĕ. Вара пĕлĕтрен: «Çакă Манăн савнă Ывăлăм, Унра Манăн ырă кăмăлăм; Ăна итлĕр», – тенĕ сасă илтĕннĕ.

Ку сасса илтсен вĕренекенĕсем хăранипе çĕр çумне тĕшĕрĕлнĕ. Иисус вĕренекенĕсем патне пынă та вĕсене сĕртĕнсе каланă: «Тăрăрах, ан хăрăр». Пуçĕсене çĕклесе пăхсан вĕсем Иисуса кăна курнă. Урăх никам та пулман.

Ту çинчен аннă чухне вара Иисус вĕренекенĕсене çапла хушнă: «Этем Ывăлĕ вилĕмрен чĕрĕлсе тăриччен çак курăну пирки никама та ан калăр».

*МАТФЕЙ 17:1–9; ЛУКА 9:28–36*



## ЙĂЛТАХ КАÇАРАКАН ЮРАТУ

Петр пĕррехинче Иисус патне пырса çапла ыйтнă: «Хуçам! Хама усал тунă ĕненекен тăванăма ман миçе хутчен каçармалла? Çичĕ хутчен-и?» «Çичĕ хутчен теместĕп, çичĕ хут çитмĕл таранах», — тавăрнă ăна Иисус. Вара ытару каласа панă:

Çӳлти Патшалăх чурисене парăм укçи тӳлесе таттаракан патша евĕрлĕ. Çав патша парăм укçине шутла пуçласан, ун патне вунă пин талант* парăмлă пĕр тарçине илсе пыраççĕ. Парăмне тӳлесе татма укçи пулманран патша чурине хăйне те, арăмĕпе ачисене те, мĕн пур пурлăхне те сутса парăма татма хушнă. Çакна пĕлсен чури ун ури умне ӳксе тархасланă: «Патшам! Тепĕртак тăхтасам, эпĕ сана пĕтĕмпех тӳлесе татăп». Патша вара çав чурана хĕрхеннĕ те, ирĕке кăларса, парăмне каçарнă. Анчах та чури патша патĕнчен тухнă-тухманах хăйĕн пĕр юлташне тĕл пулнă. Юлташĕ ăна нумаях та мар, çĕр динарийлĕх парăмлă пулнă. Хайхи чура ăна çулса илет те: «Парăмна тавăрса пар!» — тесе пăва пуçлать. «Тепĕртак тăхтасам, эпĕ сана пĕтĕмпех тӳлесе татăп», — тесе тархасланă юлташĕ ун умне ӳксе. Чура ун сăмахĕсене итлесшĕн те пулман, парăмне тӳлесе татиччен ăна тĕрмене тытса хуптарнă. Çакна курса тăнă ытти юлташĕсем хуйха ӳкнĕ. Вĕсем патша патне кайнă та пулса иртнĕ ĕç-пуç çинчен йăлтах каласа кăтартнă. Патша вара хайхи чурана чĕнтерсе çапла калать: «Эй, усал чура! Эсĕ мана тархасларăн та, эпĕ сан пĕтĕм парăмна каçартăм. Эпĕ сана каçарнă пекех санăн та юлташна каçармалла марччĕ-и вара?» Çилли тулса çитнипе патша çав чурана асаплантаракансен аллине панă та пĕтĕм парăмне тӳлесе татиччен тертлентерме хушнă. Çылăха кĕнĕ тăванăрсене чĕререн каçармасан Çӳлти Аттем те сирĕнпе çаплах тăвĕ.

«Эй, Çӳлти Аттемĕр» кĕлĕре Хуçамăр пире каçару пирки çапла кĕлтума вĕрентет: «Эпир хамăра парăмлă пулнисене каçарнă пек, пирĕн парăмсене каçар пире».

*МАТФЕЙ 6:2; 18:21–35*

* *Талант — чи пысăк укçа виçи, 30 килограма яхăн кĕмĕлпе танлашать.*



## ЫРӐ КӐМӐЛЛӐ
## САМАРИ ҪЫННИ ҪИНЧЕН КАЛАНӐ ЫТАРУ

Пӗр ҫын, Моисей саккунне вӗрентекенскер, Иисуса тӗрӗслес тесе ҫапла ыйтнӑ: «Вӗрентекен, ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа кӗрес тесен манӑн мӗн тумалла?» «Саккунра мӗн тесе ҫырнӑ?» – таврӑннӑ ӑна Иисус. Лешӗ каланӑ: «Хӑвӑн Турруна пӗтӗм чӗререн, пӗтӗм чунран, пӗтӗм ӑс-халтан, пӗтӗм вӑй-халтан юрат. Ҫывӑх ҫыннуна хӑвна юратнӑ пек юрат». Иисус ӑна хирӗҫ: «Эсӗ тӗрӗс каларӑн. Ҫапла ту, вара ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа кӗрӗн», – тенӗ. Анчах та саккун вӗрентӳҫи хӑйне тӳрре кӑларасшӑн Иисусран татах ыйтнӑ: «Ман ҫывӑх ҫыннӑм кам?» Иисус, ӑна таврӑса, ытару каласа кӑтартнӑ:

Пӗр ҫын Иерусалимран Иерихона кайма тухнӑ. Ҫул ҫинче ӑна вӑрӑ-хурахсем тапӑннӑ та ҫаратса, хӗнесе пӗтернӗ. Унтан вилес патне ҫитнӗскерне пӑрахса хӑварнӑ. Ӑнсӑртран ҫав ҫулпа пӗр священник иртсе пынӑ. Вӑл, аманнӑ ҫынна курсан, чарӑнса тӑмасӑрах айккинчен пӑрӑнса кайнӑ. Кӑшт тӑрсан ҫав вырӑна левит ҫитнӗ. Вӑл та ҫавнашкалах пӑрӑнса иртсе кайнӑ. Ҫав ҫулпах пӗр Самари ҫынни иртсе пынӑ. Вӑл, мӗскӗне курсан, ӑна питӗ хӗрхеннӗ. Вара унӑн суранӗсене эрехпе олив ҫӑвӗ сӗрсе, эмеллесе ҫыхнӑ. Унтан ӑна ашакӗ ҫине лартнӑ та хӑна ҫуртне илсе кайнӑ. Хӑна ҫуртӗнче те вӑл уншӑн тӑрӑшнӑ. Тепӗр кунне, хӑй тухса каяс умӗн, кил хуҫине вӑл икӗ динарий панӑ та: «Эсӗ ҫак ҫыншӑн тӑрӑш-ха. Ку укҫа ҫитмесен эпӗ каялла таврӑннӑ чух уншӑн сана татах тӳлӗп», – тенӗ.

Ҫак ытарӑва каласа пӗтерсен Иисус саккун вӗрентӳҫинчен: «Эсӗ мӗнле шутлатӑн ӗнтӗ? Вӑрӑ-хурахсен аллине лекнӗ ҫыншӑн ҫав виҫҫӗшӗнчен хӑшӗ ҫывӑххи пулнӑ?» – тесе ыйтнӑ. «Ӑна хӗрхенсе пулӑшаканни», – тенӗ саккун вӗрентӳҫи. Вара Христос ӑна ҫапла каланӑ: «Кай та эсӗ те ҫапла ту».

*ЛУКА 10:25–37*



## ИИСУС – ЫРӐ КӖТӲÇӖ

Турӑ Христоса Хӑйӗн халӑхӗн тӳпери Кӗтӳçи пулма янӑ. Кӗтӳçӗ сурӑхӗсемшӗн тӑрӑшнӑ пекех тӗнчене Çӑлакан Иисус та Хӑйне пӗтӗм чӗререн хапӑл тӑвакансемшӗн, пурӑнӑçӗнче Унӑн пил-хушӑвӗсене тытса пыракансемшӗн тӑрӑшать. Акӑ Хуçамӑр Иисус сӑмахӗсем:

Чӑн-чӑнах калатӑп сире: кам сурӑх картине алӑкран мар, урӑхла майпа кӗрет, çав – вӑрӑ-хурах. Алӑкран кӗрекенни çеç чӑн-чӑн сурӑх кӗтӳçи. Ӑна хуралçӑ алӑкне уçса парать, сурӑхсем ун сассине илтеççӗ, вӑл сурӑхӗсене ятран чӗнсе кӑларать. Сурӑхсене кӑларсан вӑл кӗтӳ пуçӗнче пырать. Сурӑхӗсем, унӑн сассине палланӑран, ун хыççӑн пыраççӗ. Вӗсем ют çын хыççӑн каймаççӗ, сассине палламанран унран тараççӗ.

Чӑн-чӑнах калатӑп сире: Эпӗ – сурӑхсем валли тунӑ алӑк. Манран малтан килнисем пурте вӑрӑ-хурахсем, сурӑхсем вӗсене итлемерӗç. Эпӗ – алӑк: Ман витӗр кӗрекен çӑлӑнӗ, улӑх-çаран та тупӗ. Вӑрӑ вӑрлама, вӗлерме, пӗтерме анчах килет. Эпӗ сире чӗрӗлӗх пама, тулли пурӑнӑçлӑ тума килтӗм.

Эпӗ – ырӑ кӗтӳçӗ. Ырӑ кӗтӳçӗ сурӑхӗсемшӗн чунне парать. Тара тытнӑ çын кӗтӳçӗ мар, сурӑхӗсем те унӑн хӑйӗн мар. Кашкӑр çывхарнине курсан вӑл сурӑхӗсене пӑрахсах тарать. Кашкӑр вара сурӑхӗсене туртса çурать, кӗтӗвне салатса ярать. Тара тытнӑ çын вӑл тара тытнӑ çынах, сурӑхсемшӗн тӑрӑшмасть, тарать.

Эпӗ – ырӑ кӗтӳçӗ. Эпӗ Хам сурӑхӑмсене пӗлетӗп, вӗсем те Мана пӗлеççӗ. Аттем Мана пӗлнӗ пекех, Эпӗ те Аттеме пӗлетӗп. Эпӗ сурӑхӑмсемшӗн чунӑма парӑп. Манӑн урӑх сурӑхсем те пур, вӗсем ку картара мар. Манӑн вӗсене те илсе килмелле. Вӗсем те Ман сасса илтӗç, вара пӗр кӗтӳ, пӗр Кӗтӳçӗ пулӗ.

Эпӗ чунӑма каялла илес тесе паратӑп, çавӑнпа юратать те Мана Аттем. Никам та Ман чунӑма туртса илеймест, ӑна Эпӗ Хам паратӑп. Манӑн Ӑна памашкӑн та, каялла илмешкӗн те ирӗкӗм пур, мӗншӗн тесен Аттем пил-хушӑвӗ çавнашкал.

*ИОАНН 10:1–5, 7–18, 30*



## ПĔРТĂВАН МАРФĂПА МАРИЯ

Иерусалимран инçех те мар Вифани ятлă ял пулнă. Çав ялта аппăшĕпе йăмăкĕ, Марфăпа Мария, тата вĕсен Лазарь пиччĕшĕ пурăннă. Виççĕшĕ те вĕсем Иисуса питĕ юратнă, час-часах Ăна хăйсем патне хăнана чĕннĕ.

Пĕррехинче, Иисус вĕсем патне пырсан, Мария Ун ури умне ларнă та Ун сăмахĕсене итлеме пуçланă. Марфа вара хăна валли апат-çимĕç хатĕрлесшĕн тăрăшнă. Мария хăйне пулăшманшăн вăл кӳреннĕ. Вара Марфа Иисуса çапла каланă: «Хуçамăр! Йăмăк мана пĕчченех ĕçлеттерни Сана нимех те мар-и? Мана пулăшма кала-ха ăна!» «Эй, Марфа, Марфа, – тесе хуравланă Иисус, – эсĕ нумайшăн чăрманса, хыпкаланса çӳретĕн, кирли вара пĕрре кăна. Мария чи кирлине суйласа илчĕ, çавна унран никам та туртса илеймĕ».

*ЛУКА 10:38–42*



## ĂССĂР ПУЯН ÇИНЧЕН КАЛАНĂ ЫТАРУ

Иисус халăха ӳкĕтлесе-вĕрентсе çапла каланă: «Асăрханăр, пуянлăха ан хапсăнăр, мĕншĕн тесен çыннăн пурăнăçĕ пуянлăх нумайăшĕнчен килмест». Иисус вĕсене ытару каласа панă:

Пĕр пуян çыннăн хирĕнче тырă питĕ ăнса пулнă. Вара вăл: «Ман ĕнтĕ мĕн тăвас-ши? Вырса пуçтарнă тырра усрама вырăн çитмест», — тесе шухăшланă. Унтан çапла шут тунă: «Акă мĕн тăвăп. Кивелнĕ ампарсене пăсса çĕнĕ пысăк ампарсем туса лартăп. Вара пĕтĕм тырра, мĕн пур пуянлăха çавăнта пуçтарса хурăп. Кайран хама: санăн пурлăху нумай ĕнтĕ, темиçе çула çитмелĕх те выртать. Ĕçсе çи те савăнса кан! — тейĕп». Анчах Турă ăна каланă: «Эй, ăссăр! Кĕçĕрхи каç сан чунна илĕç. Эсĕ хатĕрлесе хуни кама юлĕ?» Турăшăн пуянлăх пухас вырăнне хăйшĕн çеç мул пухакан кашни çынпах çапла пулĕ.

Тата Иисус çапла каланă: «Çавăнпа ĕнтĕ ĕçмелли-çимелли шыраса ан пăшăрханăр. Çак тĕнче çыннисем пурте çавăншăн çеç тăрăшаççĕ. Сире мĕн кирлине вара Аçăр пĕлсе тăрать. Эсир чи малтан Турă Патшалăхне тăрăшса шырăр, ыттине вара Турă сире йăлтах парĕ. Эй, пĕчĕк кĕтĕвĕм, ан хăра. Аçăр сире Патшалăх пама кăмăл тунă. Хăвăрăн пурлăхăра сутăр та чухăнсене пулăшăр. Вара хăвăршăн тӳпере арканми арча, пĕтми мул хатĕрлесе хурăр: унта вăрă та кĕмест, кĕве те çимест. Сирĕн мулăр ăçта, чун-чĕрĕр те çавăнта пулĕ».

*ЛУКА 12:15–21, 29–34*



## ПУЯНПА ЛАЗАРЬ ÇИНЧЕН КАЛАНӐ ЫТАРУ

Иисус çакнашкал ытару каласа панӑ:

Пӗр çын питӗ пуян пулнӑ. Вӑл чи хаклӑ йышши тумтирпе çӳренӗ, кашни кун чаплӑ ӗçкӗ-çикӗ тунӑ. Çав пуянӑн хапхи умӗнче кӗсенленсе кайнӑ Лазарь ятлӑ кӗлмӗç выртнӑ. Вӑл пуян сӗтелӗ çинчен ӳкекен тӗпренчӗксемпе тӑранса пурӑнасшӑн пулнӑ. Унӑн суранӗсене йытӑсем пыра-пыра çулланӑ.

Кӗлмӗç вилнӗ те, ангелсем ӑна Авраам патне пӗлӗт çине илсе кайнӑ. Пуян çын та вилнӗ, ӑна пытарнӑ. Вӑл тамӑкра асапланнӑ чух çӳлелле пӑхнӑ та инçетре Авраама тата унпа юнашар тӑракан Лазаре курнӑ. Пуян кӑшкӑрнӑ: «Эй, Авраам мӑн асатте, хӗрхен мана! Лазаре ярсам, типнӗ çӑварӑма тумлам шывпа йӗпеттӗрччӗ! Эпӗ çак çулӑм ӑшӗнче питӗ асапланатӑп-çке!» Авраам ӑна каланӑ: «Ачам, астуса ил-ха. Çӗр çинчи пурӑнӑçунта эсӗ ыррине çеç куртӑн, Лазарь хӗн-хур курса пурӑнчӗ. Халӗ вӑл кунта савӑнать, эсӗ вара асапланатӑн. Ку енчен леш енне каçма та, леш енчен ку енне каçма та май çук, мӗншӗн тесен сирӗнпе пирӗн хушшӑмӑрта тӗпсӗр шырлан». «Эй, мӑн асаттем, тархаслатӑп сана, – тенӗ пуян, – Лазаре эсӗ ман атте килне яр эппин. Унта манӑн татах пилӗк шӑллӑм пур-çке! Вӑл вӗсене каласа пӗлтертӗр, вӗсен те çак асапланмалли вырӑна килмелле ан пултӑрччӗ!» Авраам ӑна каланӑ: «Вӗсен Моисей тата пророксем пур, çавсене итлеччӗр». «Çук, Авраам мӑн асатте, – хирӗçленӗ пуян, – вилнисенчен кам та пулин кайса каласан, вӗсем çылӑхӗсенчен ӳкӗнӗччӗç». Вара Авраам ӑна çапла каланӑ: «Вӗсем Моисея та, пророксене те итлемесен, вилнӗ çынсенчен кам та пулин чӗрӗлсе тӑрса каласан та ӗненмӗç».

*ЛУКА 16:19–31*



## ÇУХАЛНĂ СУРĂХ ÇИНЧЕН КАЛАНĂ ЫТАРУ

Иисус тĕнчене Турăран пăраннă, Турра манса кайнă çынсене тупса çăлас тесе килнĕ. Вăл, ырă кĕтӳçĕ пекех, çухалнă сурăхне ялан шырать. Хăйĕн пĕр ытарăвĕнче Иисус çапла каланă:

Сирĕн хăшĕн те пулин çĕр пуç сурăх пултăр. Вăл, пĕр сурăхне çухатсан, тăхăр вун тăххăрăшне хире хăварса çухалнă сурăхне мĕн тупичченех шыраса çӳремĕ-и? Сурăхне тупсан вăл савăннипе ăна хăйĕн хулпуççийĕ çине çĕклесе хурĕ. Вара килне илсе пырсан хăйĕн тусĕсене, кӳршисене чĕнсе пуçтарĕ те вĕсене калĕ: «Манпа пĕрле савăнăр, эпĕ çухалнă сурăха тупрăм!» — тейĕ. Калатăп сире: çавнашкалах тӳпере те пĕр çылăхлă çын ӳкĕннишĕн савăнăç нумайрах пулĕ. Вăл савăнăç тăхăр вун тăхăр ӳкĕнме кирлĕ мар тӳрĕ пурăнакан çыншăн савăннинчен те ытларах пулĕ.

*ЛУКА 15:3–7*



## АТАШНӐ ЫВӐЛ ÇИНЧЕН КАЛАНӐ ЫТАРУ

Иисус халӑха тата тепӗр ытару каласа панӑ:

Пӗр çыннӑн икӗ ывӑл пулнӑ. Кӗçӗнни ашшӗ патне пынӑ та: «Атте, хама тивӗçлӗ пурлӑха мана уйӑрса пар!» – тенӗ. Ашшӗ вара ывӑлӗсене пурлӑх уйӑрса панӑ.

Часах кӗçӗн ывӑлӗ хӑйӗнне пӗтӗмпех пуçтарнӑ та инçетри çӗр-шыва тухса кайнӑ. Унта путсӗр пурӑнса вӑл пурлӑхне салатса пӗтернӗ. Пурлӑхӗ пӗтнӗ хыççӑнах çав çӗр-шывра йывӑр выçлӑх пуçланнӑ, вӑл вара аптӑраса çитнӗ. Унтан пӗр çын патне тарçа кӗнӗ. Лешӗ ӑна хӑйӗн сыснисене пӑхма хире янӑ. Çимелли нимӗн те пулманран вӑл сысна апачӗпе тӑранса пурӑнма та хатӗр пулнӑ.

Юлашкинчен вӑл шухӑшласа илнӗ те: «Ман атте килӗнче мӗн чухлӗ тарçӑ тӑраничченех çӑкӑр çиет, эпӗ выçӑ вилетӗп! – тенӗ. – Ӗнтӗ атте патне таврӑнам та ӑна калам: „Эй, атте! Эпӗ Турӑ умӗнче те, сан умӑнта та çылӑха кӗтӗм, ывӑлу ятне илтме те тивӗçсӗр! Çапах мана ху патна тарçа илсем“, – теем». Унтан вӑл ашшӗ патне кайнӑ.

Ашшӗ ӑна аякран курсанах хӗрхеннӗ, хирӗç чупса пынӑ та ыталаса чуптунӑ. «Эй, атте, – тенӗ ӑна ывӑлӗ. – Эпӗ Турӑ умӗнче те, сан умӑнта та çылӑха кӗтӗм, ывӑлу ятне илтме те тивӗçсӗр!» Ашшӗ хӑйӗн тарçисене çапла хушнӑ: «Чи лайӑх тумтир илсе килсе тумлантарӑр ӑна. Пӳрнине çӗрӗ тӑхӑнтартӑр, урине тӑхӑнма пушмак парӑр. Самӑртнӑ пӑрӑва çавӑтса килсе пусӑр, ӗçсе çиер, савӑнар! Ку ывӑлӑм манӑн вилнӗччӗ, халӗ акӑ чӗрӗлчӗ! Çухалнӑччӗ, акӑ тупӑнчӗ!»

Çав вӑхӑтра аслӑ ывӑлӗ хирте пулнӑ. Таврӑннӑ чухне вӑл килӗнче савӑнса юрланине илтнӗ. Вара пӗр тарçине чӗнсе илнӗ те: «Кунта мӗн тӑваççӗ?» – тесе ыйтнӑ. «Сан шӑллу таврӑнчӗ, – тенӗ ӑна тарçи, – савӑннипе аçу самӑртнӑ пӑрӑва пустарчӗ». Аслӑ ывӑлӗ питӗ çилленнӗ, килне те кӗресшӗн пулман. Ашшӗ ӑна хӑй тухса чӗннӗ. Анчах та вӑл ашшӗне каланӑ: «Миçе çул эпӗ саншӑн тарçӑ пек ӗçлесе пурӑнтӑм, эсӗ хушнине яланах туса тӑтӑм. Анчах юлташсемпе савӑнма эсӗ мана пӗр качака путекки те памарӑн! Аскӑн арӑмсемпе çӳресе пурлӑхне салатнӑ ывӑлу килнӗ те, эсӗ уншӑн самӑртнӑ пӑрӑва пустарнӑ». «Эй, ывӑлӑм! – тенӗ ӑна ашшӗ. – Эсӗ яланах манпа пӗрле. Манӑн мӗн пурри пӗтӗмпех санӑн. Шӑллу таврӑннӑшӑн хӗпӗртемелле, мӗншӗн тесен вӑл вилнӗччӗ, халӗ чӗрӗлчӗ; çухалнӑччӗ, халӗ тупӑнчӗ!»

*ЛУКА 15:11–32*



## ЮХАН-СУРАНЛĂ ВУНĂ ÇЫН

Иисус Иерусалим хулине кайнă чухне Галилейăпа Самари хушшинчи çулпа иртсе пынă. Пĕр яла кĕрес умĕн Ăна юхан-суранлă вунă çын тĕл пулнă. Вĕсем чарăнса аякранах кăшкăрма пуçланă: «Эй, Вĕрентӳçĕ, Иисус! Хĕрхен пире!» Иисус вĕсене çапла каланă: «Эсир кайăр та священниксене курăнăр». Вара лешсем кайнă та çулпа пынă чухнех юхан-суранран тасалнă.

Юхан-суранлă вунă çынран пĕри кăна Иисус патне тавăрăннă. Вара Ăна тав туса, Ун ури умне ӳксе пуççапнă, хыттăн Турра мухтанă. Çакскер Самари çынни пулнă, ытти тăххăрăшĕ вара – иудейсем.

Иисус çапла каланă: «Эсир вуннăн юхан-суранран тасалмарăр-и? Тепĕр тăххăрăшĕ ăçта? Çак ют халăх çыннисĕр пуçне ыттисем мĕншĕн Турра мухтама тавăрăнмарĕç?» Унтан Иисус ăна каланă: «Эсĕ тăрса каях, ĕненĕвӳ сана çăлчĕ».

*ЛУКА 17:11–19*



# ФАРИСЕЙПА НАЛУК ПУХАКАН ÇИНЧЕН КАЛАНӐ ЫТАРУ

Эпир хамӑр çинчен час-часах тӳрӗ те сӑваплӑ, çылӑхсӑр пурӑнатпӑр тесе шутлатпӑр. Ытти çынсене хурласа хӑйсем кӑна сӑваплӑ тесе шутлакансене питлесе Иисус фарисейпа налук пухакан çинчен хывнӑ ытару каласа кӑтартнӑ:

Икӗ çын Турӑ Çуртне кӗлтума кӗнӗ: пӗри ятлӑ-сумлӑ, тӳрӗ пурӑнакан, саккун хушнине çирӗп тытса пыракан фарисей пулнӑ; тепри – хура халӑха хӗсӗрлесе Рим пусмӑрçисем валли налук пухакан. Фарисей тӑнӑ та çапла каласа кӗлтунӑ: «Эй, Туррӑм, тавтапуç Сана, эпӗ ӗнтӗ вӑрлакан, кӳрентерекен, аскӑнланакан ытти çынсем пек мар. Акӑ çак налук пухакан пек те мар. Эрнере икӗ хут типӗ тытатӑп, хам ӗçлесе илнинчен вуннӑмӗш пайне Турра паратӑп».

Налук пухаканӗ кӑна пуçне çӗклеме те хӑяймасӑр аякра тӑнӑ. Вӑл аллине кӑкӑр çине хурса каланӑ: «Эй, Туррӑм, хӗрхен мана, çылӑхлӑ çынна!»

Çавӑнпа та калатӑп сире: фарисей мар, çак çын Турӑ умӗнче ытларах тӳрре тухса килне тавӑрӑннӑ. Мӗншӗн тесен кам хӑйне асла хурать, çав кӗçӗне юлӗ; хӑйне кӗçӗне хуракан асла тухӗ.

*ЛУКА 18:10–14*



## ИИСУС АЧАСЕНЕ ПИЛЛЕТ

«Çӳлти Патшалăхра чи асли кам пулĕ?» – тесе ыйтнă пĕррехинче вĕренекенĕсем Иисусран. Иисус пĕр пĕчĕк ачана кăчăк туртса илнĕ те ăна вĕренекенĕсем умне тăратнă. «Чăн калатăп сире, – тенĕ Вăл, – улшăнаймасан, ача пек пулаймасан эсир Çӳлти Патшалăха кĕреймĕр. Çавăнпа та кам хăйне çак ача пек кĕçĕне хума пултарайĕ, çавă Çӳлти Патшалăхра чи асли пулĕ. Кам çакнашкал пĕр ачана Ман ятăмшăн хапăл тăвать, çав Мана хапăл тăвать».

Тепрехинче çынсем ачисене Иисус патне аллине хурса кĕлтутарма илсе пынă. Анчах та вĕренекенĕсем вĕсене Иисус çывăхне ярасшăн пулман. Вара Иисус çапла каланă: «Ачасене Ман патăма çывăхарах килме ирĕк парăр, ан чарăр, мĕншĕн тесен Çӳлти Патшалăх вĕсем пеккисемшĕн». Унтан Вăл ачасем çине аллине хурса пилленĕ.

*МАТФЕЙ 18:1–5; 19:13–15*



## СУККĂР ÇЫННА СЫВАТНИ

Иисус Иерихон ятлă пĕр пысăк хулана пырса çитнĕ. Яланхи пекех, Ун хыçĕнчен темĕн чухлĕ халăх пынă. Хула çумĕнчи çул хĕрринче Вартимей ятлă пĕр суккăр çын ыйткаласа ларнă. Иисус тунă хăватсем пирки вăл малтанах илтнĕ пулнă. Хăйĕнчен инçех те мар Иисус иртсе пырать тенине илтсен вара суккăр çын кăшкăрса каланă: «Давид Ывăлĕ Иисус! Хĕрхенсем мана!» Çынсем ăна шăпланма хушнă, анчах вăл тата хытăрах: «Давид Ывăлĕ! Хĕрхенсем мана!» – тесе кăшкăрнă.

Иисус чарăннă та ăна чĕнсе пыма хушнă. «Ан хăра, тăр, Вăл сана пыма хушать», – тенĕ темиçе çын суккăр патне пырса. Вартимей вара çиелти тумне хывса пăрахсах сиксе тăнă та Иисус патне пынă. «Эсĕ Мана хăвăншăн мĕн тутарасшăн?» – тесе ыйтнă унран Иисус. «Вĕрентекен! Манăн куракан пуласчĕ!» – тавăрнă суккăр. Иисус ăна çапла каланă: «Ĕнтĕ каях, ĕненĕвӳ сана çăлчĕ». Вартимей çав самантрах куракан пулнă та, Турра мухтаса, Иисус хыççăн кайнă.

*МАРК 10:46–52; ЛУКА 18:43*



## ИИСУС ЛАЗАРЕ ЧЁРТСЕ ТĂРАТАТЬ

Иерусалимран инçех мар вырнаçнă Вифанире Лазарьпе унăн йăмăкĕсем Марфăпа Мария пурăннă. Вĕсем Иисусăн тусĕсем пулнă. Пĕррехинче, Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсемпе çын çук вырăнта пулнă чухне, Иисус хурлăхлă хыпар илнĕ. Лазарь йăмăкĕсем Ун патне çапла калама янă: «Хуçамăр! Эсĕ юратакан пиччемĕр чирлерĕ». Çавна илтсен Иисус каланă: «Ку чир вилмелли чир мар. Ку – Турă мухтавне кăтартмалли, çапла майпа Турă Ывăлне мухтава кăлармалли чир». Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсемпе чарăнса тăнă вырăнта тата икĕ кун пурăннă. Вара, Лазарь вилнине малтанах пĕлсе, Вифание кайнă.

Пиччĕшĕшĕн хуйхăракан Марфăпа Марияна лăплантарма иудейсем чылаййăн пухăннă. Иисуса курсан Марфа çапла каланă: «Хуçамăр! Эсĕ кунта пулнă пулсан, пиччем вилмен пулĕччĕ. Çапах та Эсĕ мĕн ыйтнине Турă Сана халĕ те парасса пĕлетĕп». «Пиччӳ чĕрĕлсе тăрĕ», – тенĕ Иисус. Унтан çапла каланă: «Эпĕ – чĕрĕлӳ тата пурăнăç. Мана ĕненекен вилсен те чĕрĕлет. Кам пурăннă чухне Мана ĕненет, çав нихăçан та вилмест. Эсĕ çакна ĕненетĕн-и?» «Ĕненетĕп, Хуçамăр! – тет Ăна Марфа. – Эсĕ тĕнчене килмелли Турă Ывăлĕ, Çăлакан пулнине ĕненетĕп».

Унтан Марфа кайнă та хăйĕн йăмăкне Марияна чĕннĕ. Мария тата унпа пĕрле пулнă иудейсем йĕнине курсан, Иисус чунран хурланса: «Ăçта пытартăр эсир ăна?» – тенĕ. «Хуçамăр, пырса пăхсамччĕ», – теççĕ Ăна. Иисус Лазаре пытарнă ту хăвăлĕ патне пынă та тупăклăха хупланă чула куçарса хума хушнă. Марфа вара Лазаре тупăклăха хуни тăватă кун иртни çинчен пĕлтернĕ. Иисус ăна çапла каланă: «Ĕненсен, Турă мухтавне курăн тесе каламарăм-и-ха Эпĕ сана?» Тупăклăх умĕнчи чула илсен Иисус çӳлелле пăхса каланă: «Аттем! Мана илтнишĕн тав тăватăп Сана. Эсĕ Мана илтессе пĕлетĕп. Анчах та çакна Эпĕ кунта тăракан халăха илтме каларăм. Мана Эсĕ янине ĕненччĕр терĕм». Çак сăмахсем хыççăн Иисус хыттăн чĕннĕ: «Лазарь, тух!» Вара вилнĕ тенĕ Лазарь алли-урине виле пирĕпе чĕркенипех тухнă.

Çавăн чухне, Иисус тунă хăвата курса, чылай иудей Ăна ĕненме пуçланă. Çав самантран вара фарисейсемпе аслă священниксем Иисуса вĕлерме шут тытнă.

*ИОАНН 11:1–50*



## ИИСУСПА ЗАКХЕЙ

Иисус каллех Вилĕ тинĕсрен инçех мар вырнаçнă Иерихон хулине тавăраннă. Çав хулара налук пухакансен пуçлăхĕ, Закхей ятлă пĕр пуян пурăннă. Вăл Иисуса курасшăн питĕ тăрăшнă, анчах хăй лутра пирки халăх хушшинчен Ăна курма пултарайман. Иисуса курас тесе Закхей вара маларах чупса кайнă та Вăл иртес тĕлти смоква йывăççи çине хăпарса кайнă. Çав вырăна çитсен Иисус çӳлелле пăхнă та Закхея асăрханă. «Закхей! Хăвăртрах ан, Манăн паян сан патна хăнана пымалла!» – тенĕ ăна Иисус. Закхей васкаса йывăç çинчен аннă та Иисуса хăй патне савăнсах илсе кĕнĕ.

Çакна курсан çынсем: «Вăл çылăхлă çын патне хăнана кĕчĕ!» – тесе Иисуса ӳпкелешме пуçланă. Вара Закхей Иисуса çапла каланă: «Эпĕ халех хамăн пурлăхăн çуррине чухăнсене валеççе паратăп. Кама та пулин улталанă пулсан, эпĕ ăна тăватă хут ытларах тавăрса парăп». «Паян Закхей кил-йышне çăлăнăç çитрĕ, мĕншĕн тесен вăл та Авраам ачи. Этем Ывăлĕ çухалнă çынсене шыраса тупса çăлма килнĕ», – тенĕ Иисус.

*ЛУКА 19:1–10*



# КАМĂН ÇЫЛĂХĔ НУМАЙ КАÇАРĂНАТЬ, ÇАВ ЫТЛАРАХ ЮРАТАТЬ

Пĕр Симон ятлă фарисей Иисуса хăнана чĕннĕ. Иисус килĕшнĕ те ун килне кĕнĕ.

Çав хулара çылăхлă хĕрарăм пурăннă. Вăл Иисус фарисей килĕнче апат çинине пĕлнĕ те алебастр савăтпа ырă шăршăллă, хаклă олив çăвĕ, мирă, илсе пынă. Хĕрарăм, хыçалтан пырса, Иисус ури патĕнче йĕрсе тăнă, Унăн урисем çине куççуль юхтарса хăйĕн çӳçĕпе шăла-шăла илнĕ. Вăл Иисусăн урисене чуптăва-чуптăва мирăпа сĕрнĕ.

Çавна курсан Иисуса чĕнсе кĕртнĕ фарисей хăй ăшĕнче шухăшланă: «Çак Çын чăнах та пророк пулсан, Хăйне кам, мĕнле хĕрарăм сĕртĕннине пĕлĕччĕ, мĕншĕн тесен ку çылăхлă хĕрарăм!» Анчах та Иисус ун енне çаврăнса: «Симон, Ман сана пĕр сăмах каламалли пур», — тенĕ. Симон вара: «Вĕрентекен, кала», — тесе хуравланă. Иисус çапла каланă: «Икĕ çыннăн усламçăна парăм тӳлемелле пулнă: пĕрин — пилĕк çĕр динарий, теприн — алă динарий. Анчах вĕсен тӳлеме нимĕн те пулманран усламçă вĕсене иккĕшне те каçарнă. Ĕнтĕ кала-ха, çавсенчен хăшĕ усламçăна ытларах юратĕ?» «Хăшне ытларах каçарнă, çавă тесе шутлатăп эпĕ», — тенĕ Симон. «Эсĕ тĕрĕс каларăн», — тенĕ Иисус.

Унтан Вăл, хĕрарăм енне çаврăнса, Симона каланă: «Çак хĕрарăма эсĕ куратăн-и? Эпĕ сан кил-çуртна кĕтĕм, çапах эсĕ ура çума Мана шыв та памарăн. Ку хĕрарăм вара Ман урасене куççулĕпе çуса, хăйĕн çӳçĕпе шăлса типĕтрĕ. Эсĕ Мана саламласа чуптумарăн, вăл вара Эпĕ килнĕренпех Манăн урасене пĕр чарăнмасăр чуптăвать. Эсĕ Ман пуçăма олив çăвĕ те сĕрмерĕн, вăл вара Манăн урасене мирăпа сĕрчĕ. Çавăнпа калатăп сана: вăл çапла хытă юратнăран унăн нумай-нумай çылăхĕ каçарăнать. Камăн çылăхĕ сахал каçарăнать, çав сахал юратать».

Вара Иисус хĕрарăма каланă: «Санăн çылăхусем каçарăнчĕç». Унта ларакансем хăйсем хушшинче: «Ку Кам-ши? Вăл çылăх каçарма та пултарать», — тесе калаçнă. Иисус çав хĕрарăма: «Ĕненнĕвӳ сана çăлчĕ, канăçлă каях ĕнтĕ», — тенĕ.

*ЛУКА 7:37–50*



## ИИСУС ХУÇАМĂР ИЕРУСАЛИМА КĔНИ

Иисуспа вĕренекенĕсем Иерусалималла çывхарса пынă. Çавăн чухне, Елеон тăвĕн тайлăмĕнче ларакан Виффаги ялĕ тĕлне çитеспе, Иисус икĕ вĕренекенне маларах янă. Вĕсене Иисус çапла хушнă: «Çак хăвăр умăрти яла кайăр, кĕнĕ-кĕменех унта кăкарса хунă ашак амипе тихине курăр, вĕсене вĕçертсе Ман патăма илсе килĕр». Вĕренекенĕсем кайнă та йăлтах Иисус каланă пек пулса иртнĕ.

Ашак амипе тихине çавăтса пырса вĕренекенĕсем хăйсен тумтирĕсене ашаксем çине хунă, Иисус çав тумтирсем çине ларнă. Иерусалим патне çывхарсан Ăна хирĕç темĕн чухлĕ халăх тухнă. Çынсем тумтирĕсене тата пальма турачĕсене Иисус умне çул тăрăх сарса пынă. «Давид Ывăлне Осанна!* Турă ячĕпе килекен мухтавлă! Çӳлте Турра Осанна!» Çакă Турă Захария пророк урлă калани пурнăçланмашкăн пулса иртнĕ. Пророк çапла каланă пулнă: «Сион хĕрне** калăр: акă йăваш кăмăллă Патшу тихаллă, ĕçе кӳлĕннĕ ашак ами çине утланса сан патна çывхарать».

Иисус Иерусалима пырса кĕрсен пĕтĕм хула хускалса кайнă. «Кам-ши Ку?» – тесе ыйтнă халăх. «Ку – Галилейăри Назаретран тухнă Пророк, Иисус», – тесе тавăрнă Ăна мухтакан çынсем. Иисус Лазаре вилĕмрен чĕртсе тăратнине тата ытти хăватсене тунине курнисем çавăн çинчен ыттисене кала-кала кăтартнă. «Куратăр-и? Нимĕн те тăваймастпăр. Пĕтĕм тĕнче Ун хыççăн каять!» – тесе калаçнă фарисейсем. Вĕсем Иисуса Хăйне мухтакан вĕренекенĕсене чарма хушнă. «Калатăп сире, – тенĕ Иисус вĕсене хирĕç, – вĕсем шăплансан чулсем кăшкăрма пуçлĕç».

*МАТФЕЙ 21:1–11; ЛУКА 19:37–40; ИОАНН 12:12–19*

---

* *«Давид Ывăлĕ, пире çăлсамччĕ!» тени пулать.*

** *Сион хĕрĕ тесе Иерусалим хулипе унта пурăнакансене каланă.*



## ИИСУС ИЕРУСАЛИМШĂН ЙĔНИ

Иисус Иерусалим хулишĕн, Хăйне хапăл туман хулашăн, йĕнĕ. Çав хулари кашни чул ăсчахсемпе пророксем çинчен, вăрçăсемпе инкексем çинчен, хĕрӳллĕ кĕлĕсемпе ĕмĕт-шанчăксем çинчен каласа кăтартма пултарĕччĕ. Çав хула чылайранпа Çăлакана кĕтнĕ, кĕтсе илсен вара Ăна пĕлес те темен. Çавăнпа Иисус куляннă та:

> Эх, Иерусалим, Иерусалим! Пророксене пĕтерекен, ху патна янисене чулпа персе вĕлерекен хула! Кайăк хăй чĕпписене çуначĕ айне пухнă пек, Эпĕ миçе хутчен санăн ачусене пуçтарма тăрăшрăм, анчах та эсир пуçтарăнасшăн пулмарăр! Ĕнтĕ сирĕн çуртăр пушанса юлать. Калатăп сире: «Турă ячĕпе Килекен мухтавлă!» — теес вăхăт çитиччен эсир Мана урăх кураймăр.

Акă ĕнтĕ Иисус хулана пырса кĕрес вăхăт çитнĕ. Çавăн чухне, хула çине пăхса, Иисус хула шăпишĕн йĕрсе янă:

> Эх, Иерусалим! Хăвна мĕн канăçлăх кӳнине эсĕ çак кунсенче пĕлес пулсанччĕ, анчах та вăл халĕ саншăн пытарăнчăк. Акă кунсем çитĕç, тăшманусем сана хупăрласа илĕç, йĕри-тавра шăтăксем чавĕç, пур енчен те хĕстерсе çитерĕç. Вĕсем сана та, ачусене те тĕп тăвĕç. Çак вырăнта чул çинче чул хăвармĕç, мĕншĕн тесен эсĕ хăвăн патна Турă килнĕ вăхăта пĕлеймерĕн.

*ЛУКА 13:34, 35; 19:41–44*



## «ЧĔННИСЕМ НУМАЙ ТА, СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ САХАЛ»

Пĕррехинче Иисус фарисей килне пынă. Унта хăнасем питĕ йышлă пулнă, вара Иисус кил хуçине çапла каланă: «Эсĕ кăнтăрлахи е каçхи апата хăна пухнă чухне тусусене, хурăнташусене, тăванусене тата пуян кӳршӳсене кăна ан чĕн, мĕншĕн тесен кайран вĕсем те сана хирĕçле чĕнсе тав тума пултараççĕ. Пысăк ĕçкĕ-çикĕ тума шутласан эсĕ малтан чухăнсене, уксах-чăлахсене, чирлисене, суккăрсене чĕн. Вĕсем тавăрса парайманшăн эсĕ телейлĕ пулăн. Сăваплă çынсем чĕрĕлсе тăнă чухне уншăн сана тавăрса парĕç».

Çавна илтсен хăнасенчен пĕри: «Турă Патшалăхĕнче çăкăр çиес çын телейлĕ!» – тенĕ Ăна. Иисус, хуравласа, çапла ытару каласа кăтартнă:

> Пĕр çын пысăк ĕçкĕ-çикĕ хатĕрленĕ те питĕ нумай хăна чĕннĕ. Ĕçсе çиме вăхăт çитсен вăл чурине хăнисем патне: «Ĕнтĕ апат-çимĕç пĕтĕмпех хатĕр, пырăр», – тесе чĕнме янă. Анчах пурте, калаçса татăлнă пекех, хăнана пырайманшăн каçару ыйта пуçланă. «Эпĕ çĕр илтĕм, çавна пăхма халех каймалла. Тархасшăн, каçар мана», – тенĕ пĕри. «Эпĕ пилĕк мăшăр вăкăр туянтăм, вĕсене çӳретсе пăхма каятăп. Пырайманшăн каçар», – тенĕ тепри. Виççĕмĕшĕ тата: «Эпĕ нумай пулмасть авлантăм, çавăнпа пыраймастăп», – тесе хуравланă.
>
> Вара чура тавăрăннă та çапла-çапла тесе хуçине каласа панă. Кил хуçи çилленсе çитсе хăйĕн чурине çапла хушса янă: «Эсĕ часрах кай та хула урамĕсенчи, тăкăрлăксенчи пĕтĕм ыйткалакансене, чăлахсене, уксахсемпе суккăрсене кунта чĕнсе кил». Чури каялла тавăрăнсан каланă: «Хуçам! Пĕтĕмпех эсĕ хушнă пек турăм, сĕтел хушшинче татах вырăн нумай-ха». «Эсĕ эппин хула хĕрринчи урамсемпе çулсем тăрăх кай та пурне те апат çиме ӳкĕтле. Ман çуртра туллиех хăна пултăр! – тенĕ хуçи чурана. – Калатăп сире: малтан чĕннисем пĕри те ман пысăк ĕçкĕ-çикĕре сĕтел хушшинче лараймĕç, мĕншĕн тесен чĕннисем нумай та, суйласа илнисем сахал».

*ЛУКА 14:12–24; МАТФЕЙ 22:14*



## «ПАТШАННЕ ПАТШАНА ПАРĂР, ТУРРĂННЕ – ТУРРА»

Саккун вĕрентӳҫисемпе фарисейсем тĕрлĕ майпа усă курса Иисуса хăйсен тавлашăвĕсене хутшăнтарма, ҫапла вара Унăн сăмахĕнче айăпламалли сăлтав тупма тăрăшнă. Хăйхисем Ун патне хăйсен вĕренекенĕсене яраҫҫĕ. «Вĕрентекен! – теҫҫĕ вĕсем Иисуса, – Эсĕ тӳрĕлĕхлĕ пулнине пĕлетпĕр, Эсĕ, чăнах та, Турă ҫулĕ ҫинчен вĕрентетĕн, никама та юрама тăрăшмастăн. Саншăн пур ҫын та пĕрех. Эппин каласам пире: Эсĕ мĕнле шухăшлатăн? Пирĕн Рим патшине, императора, налук тӳлемелле-и е тӳлемелле мар?»

Фарисейсем Иисуса пăтăрмахлă ыйту панă. Енчен те Иисус Рим патшине налук тӳлемелле теес пулсассăн, Ăна Израиль халăхне сутнăшăн, Рим майлă пулнăшăн айăплĕччĕҫ. Енчен те налук тӳлемелле мар теес пулсассăн, Иисуса Рима хирĕҫ пăлхав тунăшăн айăплĕччĕҫ. Анчах та Иисус, вĕсен чеелĕхне пĕлсе тăрса, ҫапла каланă: «Мĕн эсир Мана тĕрĕслетĕр, икĕ питлĕскерсем? Налук тӳлемелли укҫăра Мана кăтартăр-ха». Лешсем Ăна пĕр динарийлĕх кĕмĕл укҫа тыттарнă. Иисус вĕсене калать: «Ҫакăнта кам сăнне ҫаптарнă, кам ятне ҫырнă?» «Патшанне», – теҫҫĕ фарисейсем. Вара Иисус вĕсене ҫапла калать: «Патшанне патшана парăр, Туррăнне – Турра». Ҫак сăмахсене илтсен вĕсем аптăраса ӳкнĕ те Ун патĕнчен кайнă.

Ҫавăн хыҫҫăн Иисус пухăннă халăха тата вĕренекенĕсене ҫапла каланă: «Саккун вĕрентӳҫисемпе фарисейсем Моисей ларнă вырăна йышăннă. Ҫавăнпа вĕсем мĕн каланине итлĕр, хушнине пурнăҫласа тăрăр. Анчах та вĕсем пек ан хăтланăр: мĕншĕн тесен вĕсем хăйсем каланине хăйсем те тумаҫҫĕ. Вĕсем ҫынсен ĕнси ҫине чăтма ҫук йывăр ҫĕклем хураҫҫĕ, анчах та ҫынсене пулăшас тесе пӳрнине те хускатасшăн мар. Тăвакан мĕн пур пек ĕҫĕсене те вĕсем ҫынсене кăтартма ҫеҫ тăваҫҫĕ».

*МАТФЕЙ 22:15–22; 23:1–5*



## «ЧИ МАЛТАНХИ, ЧИ АСЛӐ ПИЛ-ХУШУ»

Пĕррехинче Иисус патне саккун вĕрентӳçи пынӑ. «Вĕрентекен! Саккунри чи аслӑ пил-хушу хӑшĕ?» — тесе ыйтнӑ вӑл Иисусран. Иисус вара ӑна çапла каланӑ: «„Хӑвӑн Турруна пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм чунран, пĕтĕм ӑс-халтан юрат“. Çакӑ чи малтанхи, чи аслӑ пил-хушу. Иккĕмĕш пил-хушӑвĕ те çавӑн евĕрлех: „Çывӑх çыннуна хӑвна юратнӑ пек юрат“. Моисей саккунĕпе пророксен сӑмахĕ пĕтĕмпех çак икĕ пил-хушу çинче никĕсленсе тӑрать».

*МАТФЕЙ 22:36–40*



## ЧУХĂН ТĂЛĂХ АРĂМĂН ИКĔ ПĂХĂР УКÇИ

Иисус пĕррехинче Турă Çуртĕнче çапла вĕрентнĕ: «Саккун вĕрентӳçисенчен асăрханăр. Вĕсем урамра-мĕнре хăйсене саламланине пит килĕштереççĕ. Синагогăсенче те вĕсем малти вырăна ларма, ĕçкĕ-çикĕре кĕрекере ларма юратаççĕ. Вĕсем малтан тăлăх арăмсене кил-çуртсăр хăвараççĕ, кайран çын умĕнче нумайччен кĕлтăваççĕ. Çавнашкаллисене пит йывăр айăплав пулĕ».

Иисус унтан Турă Çурчĕ валли пухмалли укçа арчи умне ларнă та çынсем унта укçа янине сăнама пуçланă. Укçа яракансем чылайăшĕ пуян пулнă, укçине те вĕсем нумай хывнă. Унтан пĕр чухăн тăлăх арăм пынă та арчана икĕ пăхăр вак укçа янă.

Вара Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене чĕнсе илсе çапла каланă: «Чăн калатăп сире: çак чухăн тăлăх арăм укçа хуракансенчен пуринчен те ытларах хучĕ. Мĕншĕн тесен пурте арчана ытлашшине ячĕç, ку тăлăх арăм вара пур-çук юлашки укçине хучĕ, хăйне пурăнмалăх укçине пĕтĕмпех арчана ячĕ».

*МАРК 12:38–44*



## ИИСУС МАЛАШЛĂХ ÇИНЧЕН КАЛАТЬ

Библире нумай тĕлте Çăлакан килесси, Ăна кĕтни çинчен, тĕнчере Турă Патшалăхĕ йĕркеленесси çинчен каланă. Çăлакан мухтавлăн та чаплăн килмелле, анчах та çак тĕнче усаллăхĕ Ăна çапăçусăр çул парас çук. Çавăнпа та усала тĕппипех çĕнтериччен тĕнчере нумай-нумай инкек-синкек пулĕ. Çакăн çинчен вĕренекенĕсене Иисус Хăй пĕрре кăна мар каланă:

Хăвăра кам та пулин илĕртсе улталасран асăрханăр. Ман ятăмпа килекенсем нумай пулĕç. «Эпĕ – Христос», – тесе вĕсем чылайăшне улталĕç. Тата эсир çывăхри вăрçăсем çинчен те, инçетри вăрçăсем çинчен те илтĕр. Астăвăр, тӳрех хăраса ан ӳкĕр, çавсен пурин те пулмалла; анчах ку пĕтес вăхăт мар-ха. Халăх çине халăх тапăнĕ, патшалăх çине патшалăх вăрçăпа тухĕ, выçлăх тата мур пуçланĕ, тĕллĕн-тĕллĕн çĕр чĕтренĕ. Çаксем пурте – асап пуçламăшĕ кăна-ха. Ун чухне сире асаплантарма тытса парĕç, сире вĕлерĕç, Мана пула сире пĕтĕм тĕнче курайми пулĕ. Çавăн чухне чылайăшĕ улталанĕ, пĕр-пĕрне сутĕ, пĕр-пĕрне курайми пулĕ. Нумай суя пророк килĕ, вĕсем чылайăшне илĕртсе улталĕç. Йĕркесĕрлĕх вăйланса пынăçемĕн çынсем пĕр-пĕринчен сивĕнĕç. Çаксене вĕçне çитиччен тӳссе ирттерекен çăлăнĕ. Çавăн чухне тĕнчипех, кашни халăхах, Турă Патшалăхĕ çинчен çак Ырă Хыпара пĕлтерсе çӳрĕç, вара тин çак тĕнче пĕтес вăхăт çитĕ.

Çавăн чухне суя христоссемпе суя пророксем тупăнĕç. Вĕсем тĕлĕнмелле паллăсемпе хăватсем кăтартса, май килсен, суйласа илнисене те илĕртсе улталама пăхĕç. Çав асап кунĕсем иртсен сасартăк хĕвел тĕттĕмленĕ, уйăх çути сӳнĕ. Тӳпери çăлтăрсем ӳкĕç, çӳлти вăй-хăватсем хускалĕç. Çавăн хыççăн пĕлĕт çинче Этем Ывăлĕн палли курăнĕ, вара çĕр çинчи мĕн пур халăхсем йĕре пуçлĕç. Вĕсем тӳпери пĕлĕтсем çинче хăватлă та āслă мухтавпа килекен Этем Ывăлне курĕç. Çĕрпе пĕлĕт те пĕтĕ, Ман сăмахăм вара нихăçан та çухалмĕ. Çавă хăш кун, хăш сехетре пуласса Атте Турăсăр пуçне никам та пĕлмест, тӳпери ангелсем те пĕлмеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ сыхă пулăр, мĕншĕн тесен Хуçăр хăш кун, хăш сехетре килессине пĕлместĕр.

*МАТФЕЙ 24:3–14, 29–36, 42*



## ВУНĂ ХĚР ÇИНЧЕН КАЛАНĂ ЫТАРУ

Яланах сыхă пулмашкăн, Этем Ывăлĕ умне тăма хатĕр пулмашкăн парса хăварнă пил-хушăвне Иисус ытарлăн палăртнă. Ку ытарусене Вăл тĕнче пĕтмĕшĕ çинчен пророкла каланă хыççăн пĕлтернĕ. Хăйĕн пĕр ытарăвĕнче Христос кĕтмен çĕртен килекен Турă Патшалăхне кĕрӳ каччăпа танлаштарнă. Йăла-йĕрке тăрăх хĕр çумĕсен кĕрӳ каччăна çунакан çутаткăçсемпе кĕтсе илмелле пулнă. Акă çав ытару:

Ун чухне Çӳлти Патшалăх çутаткăçсем илсе кĕрӳ каччăна хирĕç тухнă вунă хĕр евĕрлĕ пулĕ. Вĕсенчен пиллĕкĕшĕ ăслă пулнă, пиллĕкĕшĕ – айван. Айваннисем çутаткăçĕсене илнĕ, анчах çунтармалли çуне илме маннă. Ăслисем вара çутаткăçĕсене те, çунтармалли çу кăкшăмĕсене те илнĕ. Кĕрӳ каччă час пырайманран хĕрсем ыйхăласа çывăрсах кайнă.

Çĕр варринче кăшкăрни илтĕнсе кайнă: «Кĕрӳ килет, хирĕç тухăр!» Вара хĕрсем вăраннă та тăрса çутаткăçĕсене йĕркене кĕртнĕ. «Пирĕн çутаткăçсем сӳнме пуçларĕç, пире çу парăр-ха», – тенĕ айваннисем ăслисене. Анчах та ăслисем çапла тавăрса каланă: «Парсассăн çăвĕ сире те, хамăра та çитеймĕ. Çу сутакан патне кайăр та хăвăр валли туянăр». Вĕсем çу туянма кайсан кĕрӳ каччă пырса çитнĕ. Вара хатĕр тăракан пилĕк хĕр унпа туй пулас пӳрте кĕнĕ, унтан тарçăсем алăка хупса хунă.

Тепĕртакран леш хĕрĕсем пыраççĕ. «Хуçамăр! Хуçамăр! Уçса кĕртсемччĕ пире!» – теççĕ вĕсем. Анчах та каччă вĕсене çапла хуравланă: «Чăн калатăп сире: эпĕ сире палламастăп!»

Çапла вара, сыхă пулăр, мĕншĕн тесен Этем Ывăлĕ хăш кун, хăш сехетре килессе пĕлместĕр.

*МАТФЕЙ 25:1–13*



## ХРИСТОС – ИÇЁМ ÇЫРЛИ АВĂРĔ

Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене çапла каланă:

Эпĕ – чăн-чăн иçĕм çырли авăрĕ, Аттем вара – пахчаçă. Çырласăр туратăмсене Вăл касса пăрахать. Çырла тăвакан туратсене Вăл, çырли тата нумайрах пултăр тесе, иртсех, тасатсах тăрать. Эпĕ сире вĕрентсе каланă сăмахăмпа тасатрăм ĕнтĕ. Эсир Манра пулăр, Эпĕ сирĕнте пулам. Тĕмĕрен уйăрнă турат çырла тăваймĕ, çавăн пекех эсир те, Манра пулмасан, çимĕç параймăр. Эпĕ – авăр, эсир – туратсем. Эпĕ сирĕнте пулнă пекех, кам та кам Манра, çавă нумай çимĕç парĕ, мĕншĕн тесен Мансăр эсир нимĕн те тăваймăр. Кам Манра мар, çавă типсе выртакан, касса пăрахнă юрăхсăр турат пек. Çавнашкал туратсене пуçтарса вута пăрахаççĕ, çунтарса яраççĕ. Эсир Манра пулсан, Ман сăмахăмсем те сирĕн ăшăрта пулĕç. Вара кирек мĕн ыйтсан та, çавна сире парĕç.

Эпĕ сире Хама Аттем юратнă пек юратрăм. Манăн юратăвăмпа пурăнăр. Эпĕ Аттем хушнине туса тăнăран Унăн юратăвĕпе пурăнатăп. Эпĕ хушнине туса тăрсан эсир те Ман юратăвăмпа пурăнăр. «Пĕрне-пĕри юратăр», – тесе пил-хушу паратăп сире.

Тĕнче сире кураймасть пулсан, вăл сирĕнтен те маларах Мана курайманнине пĕлсе тăрăр. Эсир çак тĕнче çыннисем пулнă пулсан, хăйĕн çыннисене тĕнче юратĕччĕ. Эпĕ сире тĕнчерен суйласа илсе уйăрнă пирки эсир çак тĕнче çыннисем мар. Çавăнпа та тĕнче сире кураймасть. Мана хĕсĕрлерĕç пулсан, сире те хĕсĕрлĕç. Манăн сăмахăма итлерĕç пулсан, сирĕнне те итлĕç. Çавна сире йăлтах Ман ятăмшăн тăвĕç, мĕншĕн тесен тĕнче Мана Яракана пĕлмест. Эпĕ тĕнчене килмен пулсан, каламан пулсан, вĕсем çылăх мĕнне пĕлмĕччĕç. Халĕ вĕсем, çылăхлăскерсем, хăйсене тӳрре кăлараймĕç. Кам Мана кураймасть, вăл Аттеме те кураймасть.

*ИОАНН 15:1–7, 9–10, 17–23*



## АСЛӐ КАҪХИ АПАТ

Пасха уявӗ ҫитсен Иисус, Петрпа Иоана Иерусалим хулине кайма хушса, ҫапла каласа янӑ: «Эсир кайӑр та хамӑра валли Пасха апачӗ хатӗрлесе хурӑр». Вӗренекенӗсем Унран: «Эсӗ пире ӑҫта хатӗрлеме хушатӑн?» – тесе ыйтнӑ. Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Эсир хулана пырса кӗнӗ чух кӑкшӑмпа шыв ҫӗклесе пыракан ҫынна тӗл пулӑр. Вара ун хыҫӗнчен кайӑр та вӑл кӗрекен ҫурта кӗрӗр. Унтан кил хуҫине калӑр: „Вӗрентекен санран ыйтать: Манӑн Пасха апатне вӗренекенӗмсемпе пӗрле хӑш пӳлӗмре ҫиес?“ Вӑл сире тирпейлесе пуҫтарнӑ пысӑк та хӑтлӑ пӳлӗм кӑтартӗ, ҫавӑнта хатӗрлӗр». Вӗренекенӗсем кайнӑ. Пӗтӗмпех Иисус каланӑ пек пулса иртнӗ, вара вӗсем Пасха апатне хатӗрлесе хунӑ.

Вӑхӑт ҫитсен Иисус вун икӗ вӗренекенӗпе пӗрле сӗтел хушшине ларнӑ. Унтан Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Пасха апачӗ Турӑ Патшалӑхӗнче пулса ҫитмесӗр те Эпӗ ӑна урӑх ҫиеймӗп, ҫавӑнпа асап куриччен малтан Манӑн ӑна питӗ сирӗнпе ларса ҫиес килет». Вара курка илсе Турра тав тунӑ та каланӑ: «Ҫакна илӗр те кашниех ӗҫсе парӑр. Калатӑп сире: Эпӗ Турӑ Патшалӑхӗ килмесӗр те урӑх иҫӗм ҫырли эрехӗ ӗҫеймӗп».

Иисус ҫӑкӑр илсе Турра тав тунӑ. Ҫӑкӑра хуҫнӑ та, вӗренекенӗсене парса, ҫапла каланӑ: «Ҫакӑ – Манӑн Ӳтӗм. Эпӗ ӑна сирӗншӗн паратӑп. Малашне те Мана аса илсе ҫаплах тӑвӑр». Аслӑ каҫхи апат хыҫҫӑн татах курка илсе каланӑ: «Ҫак курка – сирӗншӗн юхакан Юнӑмпа ҫирӗплетнӗ Ҫӗнӗ Килӗшӳ».

*ЛУКА 22:8–20*



## АСЛӐ КАҪХИ АПАТ ВӐХӐТӖНЧИ КАЛАҪУ

Каҫхи апат ҫинӗ чухне Хуҫамӑр тӑнӑ та пилӗкне ал шӑлли ҫыхнӑ. Унтан савӑта шыв янӑ та вӗренекенӗсен урисене ҫуса ал шӑллипе шӑла пуҫланӑ. Петр текен Симон патне ҫитсен, лешӗ тӗлӗнсе кайнипе ҫапла каланӑ: «Хуҫамӑр! Эсӗ ман урана ҫӑвасшӑн-и?» «Эпӗ мӗн тунине эсӗ халӗ пӗлейместӗн-ха, кайран ӑнланса илӗн», – тесе хуравланӑ Иисус.

Вӗренекенӗсен урисене ҫусан Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Эпӗ сирӗншӗн мӗн тунине ӑнланатӑр-и? Эсир Мана Вӗрентекен тетӗр, Хуҫамӑр тетӗр. Тӗрӗсех калатӑр. Ҫапла вара, Эпӗ, сирӗн Хуҫӑр тата Вӗрентекенӗр, урӑрсене ҫурӑм пулсан, сирӗн те пӗр-пӗрин урисене ҫумалла. Эпӗ сире тӗслӗх кӑтартрӑм... Чӑн-чӑнах калатӑп сире: чура хӑй хуҫинчен аслӑ мар, чӗнме янӑ ҫын та хӑйне яраканнинчен аслӑ мар. Ҫаксене пӗлсе пурнӑҫласа тӑрсан, эсир телейлӗ пулӑр. Сирӗн ҫинчен пурин пирки те каламастӑп. Хам суйласа илнисене Эпӗ пӗлетӗп. Ҫырнинче „Манпа пӗрле ҫӑкӑр ҫиекенех Ман ҫине аллине ҫӗклерӗ“ тесе калани пурнӑҫлантӑр ӗнтӗ».

Ҫак сӑмахсене каласан Иисусӑн чунӗ пӑлханса кайнӑ. «Чӑн-чӑнах калатӑп сире, – тенӗ Вӑл, – сирӗнтен пӗри Мана сутаканӗ пулӗ». Ҫавӑн чухне вӗренекенӗсем, Вӑл кам ҫинчен каланине ӑнкараймасӑр, пӗр-пӗрин ҫине кӑн-кан пӑхса илнӗ. Иоанн вара Унӑн ҫумне тӗршӗнсе: «Хуҫамӑр! Сутаканӗ хӑшӗ пулӗ?» – тесе ыйтнӑ. «Ҫӑкӑр татӑкне кама пуҫса парӑп, ҫавӑ», – тавӑрать Иисус. Унтан Вӑл ҫӑкӑр татӑкне пуҫса Искариот ывӑлне Иудӑна парать. Ҫӑкӑр татӑкне илсенех Иуда тӑрса тухса кайнӑ. Тулта сӗм-тӗттӗм пулнӑ.

Иуда тухса кайсанах Иисус каланӑ: «Ачасем! Эпӗ сире ҫӗнӗ пил-хушу паратӑп: пӗрне-пӗри юратӑр. Пӗрне-пӗри Эпӗ сире юратнӑ пекех юратӑр. Эсир Ман вӗренекенӗмсем пулнине сирӗн хушшӑрти юратуран пӗлӗҫ».

Унтан Иисус вӗренекенӗсене: «Кӗҫӗр эсир Мана пӑрахса кайӑр», – тенӗ. «Сана пурте пӑрахса кайсан та, эпӗ нихӑҫан та пӑрахмӑп», – тавӑрнӑ Ӑна Петр. «Чӑн калатӑп сана, – тенӗ ӑна Иисус, – кӗҫӗр автан авӑтиччен эсӗ Мана виҫӗ хутчен пӗлмӗш пулӑн».

*МАТФЕЙ 26:33–34; ИОАНН 13:4–35*



## ГЕФСИМАНИ САДЁНЧЕ КĔЛТУНИ

Çав каçах, аслă апат хыççăн, Иисус вун пĕр вĕренекенĕпе Иерусалим хулинчен тухнă та Гефсимани текен вырăна пынă. Унтан вăл Хăйĕн вĕренекенĕсемпе пĕрле сада кĕнĕ. «Эпĕ çавăнта кайса кĕлтунă вăхăтра çакăнтах пулăр-ха», – тет вĕсене Иисус. Вăл Хăйпе пĕрле Петра, Иаковпа Иоана кăна илсе кайнă. Унтан Иисус пит тертленсе хуйхăра пуçланă. «Манăн чунăм вилесле хурланать, эсир çакăнта Манпа пĕрле пулăр-ха, ан çывăрăр», – тет вĕсене Иисус.

Унтан Вăл кăшт аяккарах пăрăннă та çĕре ӳксе, чĕркуçленсе çапла кĕлтума пуçланă: «Эй, Аттем, кăмăлу пулсан, çак асап куркине Манран ирттерсе ярсамччĕ! Анчах Ман ирĕк мар, Санăн ирĕкӳ пултăр». Вара тӳперен ангел курăнса Ăна вăй-хăват панă. Пăлхана-пăлхана Иисус тата хытăрах кĕлтунă. Унăн тарĕ çĕре юн пек тумланă.

Кĕлтунă хыççăн Вăл вĕренекенĕсем патне пырать те лешсем çывăрнине курать. «Манпа пĕрле эсир пĕр сехет те пулин çывăрмасăр тӳсеймерĕр-и? – тет Иисус вĕсене вăратса. – Илĕртӳпе улталанас мар тесен, ан çывăрăр, кĕлтăвăр: этемĕн чун-чĕмĕ çирĕп те ӳт-пĕвĕ хавшак».

Унтан Вăл каллех аяккарах пăрăннă та çак сăмахсене каласа кĕлтунă: «Эй, Аттем! Çак асап куркине Манран иртерме май çук пулсан, Манăн ăна ĕçмеллех пулсан, эппин Санăн ирĕкӳ пултăр». Асап курки тесе Христос пирĕн çылăхăмăрсемшĕн Хăй тӳсес асап пирки каланă.

*МАТФЕЙ 26:36–44; ЛУКА 22:39–46*



## ИИСУСА ТЫТНИ

Иисус ҫапла виҫӗ хутчен вӗренекенӗсем патне пынӑ, кашни хутӗнчех вӗренекенӗсем ҫывӑрнӑ тӗле пулнӑ. Виҫҫӗмӗш хут пырсан вара Иисус вӗсене ҫапла каланӑ: «Эсир ҫаплах ҫывӑратӑр-и? Ӗнтӗ Этем Ывӑлне ҫылӑхлӑ ҫынсен аллине тытса парас вӑхӑт ҫитрӗ. Тӑрӑр та каяр. Акӑ ӗнтӗ Мана сутакан та ҫывӑхрах».

Вӑл ҫапла каласа тӑнӑ вӑхӑтрах вун икӗ вӗренекенӗнчен пӗри, Иуда, пырса ҫитнӗ. Вӑл Иисуса аслӑ священниксене вӑтӑр кӗмӗл укҫалла тытса пама килӗшнӗ пулнӑ. Иудӑпа пӗрле чылай салтак тата фарисейсемпе аслӑ священниксем янӑ, ҫутаткӑҫсем ҫӗкленӗ, хӗҫсемпе шалҫасем йӑтнӑ ҫынсем те пырса ҫитнӗ. Сутӑнчӑк Иуда вӗсемпе малтанах ҫапла калаҫса татӑлнӑ пулнӑ: «Эпӗ Кама чуптӑвӑп, Ҫавӑ Иисус пулӗ, эсир вара Ӑна ярса тытӑр». Вӑл Иисус патне пынӑ та: «Сывлӑх сунатӑп Сана, Вӗрентекен!» – тесе Ӑна чуптунӑ. Иисус вара ӑна ҫапла каланӑ: «Тусӑм, мӗн тума килнине ту! Этем Ывӑлне чуптусах тытса паратӑн-и?» Унтан Иисус Иудӑпа пӗрле килнӗ салтаксенчен: «Кама шыратӑр?» – тесе ыйтнӑ. «Назаретри Иисуса», – тенӗ лешсем. «Эпӗ-ха Вӑл», – тенӗ вӗсене Иисус. Ҫакна илтсен вӗсем каялла чакнӑ та, ӳксе, ҫӗр ҫумне лӑпчӑннӑ. «Эсир Мана тытма, вӑрӑ-хураха хирӗҫ тухнӑ пек, хӗҫсемпе, шалҫасемпе килтӗр-и? Эпӗ кашни кун сирӗнпе пӗрле Турӑ Ҫуртӗнче пултӑм, эсир ун чух Мана тӗкӗнмерӗр. Халь ӗнтӗ – сирӗн вӑхӑтӑр, тӗттӗмлӗх хуҫаланнӑ вӑхӑт!» – тенӗ Иисус вӗсене.

Салтаксем Иисуса ярса тытнӑ та аслӑ священник ҫуртне илсе кайнӑ. Ҫавӑн чухне вӗренекенӗсем Ӑна пӑрахса тарнӑ.

*МАТФЕЙ 26:45–57; ЛУКА 22:45–53; ИОАНН 18:1–12*



# ИИСУСА СУД ТУНИ. ПЕТР ИИСУСА ПӖЛМӖШ ПУЛНИ

Аслă священник çурчĕ патне çитиччченех Петрпа тепĕр вĕренекен Иисус хыçĕнчен вăрттăн утса пынă. Вĕсем ĕç-пуç епле вĕçленессе курасшăн пулнă. Аслă священниксемпе халăх пуçлăхĕсем, синедрионра ларакансем Иисуса вĕлерттерме сăлтав тупас тесе суя айăплавçăсем шыранă. Суя айăплавçăсем нумаййăн пынă, анчах та вĕлермеллех айăплама сăлтав тупăнайман.

Юлашкинчен иккĕн пынă. Вĕсем çапла каланă: «„Эпĕ Турă Çуртне пăсса виçĕ кунра çĕнĕрен туса лартма пултаратăп“, – тетчĕ Вăл». Аслă священник ури çине тăнă та Иисуса каланă: «Вĕсем Сана айăплаççĕ, мĕншĕн Эсĕ хирĕç нимĕн те каламастăн?» Иисус чĕнмен. Вара аслă священник Ăна каланă: «Чĕрĕ Турă ячĕпе тархаслатăп Сана, каласамччĕ пире: Эсĕ Турă Ывăлĕ Христос-и?»

«Эсĕ хăвах çапла каларăн, – тет ăна Иисус. – Анчах та Эпĕ тата ытларах калама пултаратăп: часах эсир Этем Ывăлĕ, Хăватлă Туррăн сылтăм енче ларса, тӳпери пĕлĕтсем çинче килнине курăр».

Çакна илтсен священник хăй çиййĕнчи тумтирне çурса ярса каланă: «Вăл Турра хурларĕ! Тата мĕнле айăплавçăсем кирлĕ-ха пире? Вăл Турра хурланине хăвăрах илтрĕр! Мĕнле йышăну тăвас тетĕр?» «Айăплă, вĕлермелле», – тенĕ ыттисем. Вара Ăна питĕнчен сура-сура çапнă, теприсем Ăна çупса ярса: «Эй, Христос! Пророкла кала-ха: Хăвна кам çапрĕ?» – тенĕ.

Петр çав хушăра аслă священник картишĕнче кăвайт умĕнче тарçăсемпе пĕрле ăшăнса ларнă. Самаях сивĕ пулнă. Ун патне пĕр хĕрарăм тарçă пынă та: «Эсĕ те Галилейăри Иисуспа пĕрлеччĕ», – тенĕ. Петр пурин умĕнчех Иисуса пĕлмĕш пулнă: «Эсĕ мĕн каланине пĕлместĕп», – тенĕ. Вăл хапхаран тухнă чухне ăна тепĕр хĕрарăм тарçă асăрханă та унти çынсене каланă: «Çак çын та Назаретри Иисуспа пĕрлеччĕ». «Эпĕ вăл Çынна палламастăп та!» – тупа тусах туннă каллех Петр. Тепĕртакран çавăнта тăракансем Петр патне пырса: «Эсĕ чăнах та çав ушкăнри çынах, эсĕ пирĕн патри пек калаçмастăн»,– тенĕ. Вăл вара Турра асăнсах тупа тăва пуçланă: «Эпĕ вăл Çынна пĕлместĕпех», – тенĕ. Çав самантра автан авăтса янă.

Петр хăйне Иисус автан авăтиччен эсĕ Мана виçĕ хутчен пĕлмĕш пулăн тесе каланине аса илнĕ. Вара вăл картишĕнчен тухнă та татăлсах йĕнĕ.

*МАТФЕЙ 26:58–75*



# ИИСУС ПИЛАТ ПАТĔНЧЕ

Тепĕр кунне тул çутăлсанах аслă священниксемпе халăх пуçлăхĕсем пуçтарăннă та Иисуса вĕлерттерме йышăннă. Вара Ăна çыхтарнă та Иудея çĕрне тытса тăма Рим лартнă Понтий Пилат пуçлăх патне илсе кайнă. Иисуса сутнă Иуда, Ăна вĕлерме йышăннине пĕлсен, ӳкĕннипе вăтăр кĕмĕл укçине аслă священниксемпе халăх пуçлăхĕсене таврса панă. «Айăпсăр Çынна тытса парса çылăха кĕтĕм», – тенĕ вăл пуçлăхсене. Унтан Иуда кĕмĕл укçисене Турă Çуртĕнче пăрахнă та хăй кайса çакăнса вилнĕ.

Иисуса тытса пынă иудейсем, ирсĕрленес мар тесе, преторине, Пилатăн керменне, кĕмен, мĕншĕн тесен Пилат иудей пулман. Çавăнпа та Пилат хăй вĕсенчен тухса ыйтнă: «Эсир Ку Çынна мĕн пирки айăплатăр?» Вĕсем ăна хуравланă: «Вăл усал ĕç туман пулсан, эпир Ăна сана тытса памăттăмăр». Вара Иисуса çапла айăплама пуçланă: «Ку Çын пирĕн халăха пăлхатса çӳрет, Хăйне Христос Патша тесе императора налук тӳлеме хушмасть».

Пилат вара каллех преторине кĕнĕ те Иисуса чĕнсе илсе каланă: «Эсĕ иудейсен Патши-и?» Иисус çапла тавăрнă: «Манăн Патшалăхăм çак тĕнчерен мар. Манăн Патшалăхăм çак тĕнчерен пулсан, Мана пăхăнса тăракансем Манăн хӳтте кĕнĕ пулĕччĕç». «Эппин Эсĕ Патшах-и?» – тенĕ Ăна Пилат. «Эпĕ чăнлăх çинчен каласа пĕлтерме çуралнă, çавăншăн тĕнчене килнĕ. Чăнлăхлă кашни çын Ман сасса итлет», – тавăрнă Иисус. «Мĕн вăл чăнлăх?» – тенĕ Ăна Пилат. Иисус ăна хирĕç нимĕн те каламан.

Иисус Галилея çынни пулнине пĕлсен, Пилат Ăна çав çĕр-шыв патши Ирод патне янă. Ирод шăпах Иерусалима пынă пулнă. Ирод Иисуса нумай ыйту панă, анчах Иисус ăна нимĕн те каламан. Аслă священниксемпе саккун вĕрентӳçисем Иисуса çаплах айăпланă. Çавăн чух Ирод, салтакĕсемпе пĕрле, Унран тăраничченех мăшкăлласа кулнă, Иисуса патша тумне тăхăнтартса Пилат патне каялла янă. Малтан пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăннă Пилатпа Ирод çав кун туслашса кайнă.

Унтан Пилат аслă священниксене, пуçлăхсене, халăха пухнă та çапла каланă: «Ку Çынна эсир ман пата халăха пăтратакан тесе тытса килтĕр. Акă эпĕ сирĕн умăртах тĕпчерĕм, Ăна айăпламалли пĕр сăлтав та тупаймарăм». Иудейсен йăлипе уяв тĕлне пĕр çынна тĕрмерен кăларса ямалла пулнă. Пилат Иисуса ирĕке кăларас тенĕ, анчах пĕтĕм халăх: «Ăна вĕлерттер! Вараввăна кăларса яр!» – тесе кăшкăрма пуçланă. Вараввăна хула халăхне пăлхатнăшăн, çын вĕлернĕшĕн хупнă пулнă. Иисуса кăларса ярас тесе, Пилат тата хыттăнрах каланă, анчах та лешсем: «Пăталаттар Ăна! Пăталаттар!» – тесе кăшкăрнă. Пилатăн вара вĕсем ыйтнă пек тума тивнĕ.

*МАТФЕЙ 27:1–4; ЛУКА 23:2, 7–23; ИОАНН 18:28–30, 33–38*



## «ХĂЙĔН ХĔРЕСНЕ ÇĔКЛЕСЕ...»

Пилат вара Иисуса хурал аллине панă та хĕнеме хушнă. Салтаксем йĕплĕ хулăран пуçкăшăлĕ çыхса ăна Иисус пуçне тăхăнтартнă, çине патшалла хĕрлĕ тум уртса янă. «Сывă пултăр иудейсен Патши!» – тесе вĕсем Иисуса çупа-çупа янă. Пилат вĕсене каллех тухса каланă: «Вăл айăплă маррине пĕлтерме Ăна эпĕ сирĕн патăра илсе тухатăп».

Иисуса вара йĕплĕ пуçкăшăлĕпе, патшалла хĕрлĕ тумтирпе илсе тухнă. «Акă вăл Çын», – тенĕ вĕсене Пилат. Аслă священниксемпе хуралçăсем Ăна курсанах: «Пăталаттар Ăна, пăталаттар!» – тесе кăшкăра пуçланă. «Эпĕ Унра нимĕнле айăп та тупмастăп»,– тенĕ вĕсене Пилат. «Хăйне Турă Ывăлĕ тесе каланăшăн Ăна пирĕн саккунпа вĕлермелле», – тавăрнă ăна иудейсем. Çак сăмахсене илтсен Пилат тата ытларах хăраса ӳкнĕ. Вăл каллех керменне кĕнĕ те Иисусран ыйтнă: «Эсĕ ăçтисем пулатăн?» Иисус нимĕн те каламан. «Эсĕ манпа та калаçасшăн мар-и? – тет вара Ăна Пилат. – Эпĕ Сана пăталаттарма та, ирĕке яма та пултаратăп, çавна пĕлместĕн-им Эсĕ?» «Çӳлтен паман пулсан, санăн Манпа хуçаланма нимĕнле ирĕк те пулас çукчĕ, – тавăрнă Иисус, – çавăнпа Мана сан аллуна тытса параканăн çылăхĕ ытларах». Çак самантран пуçласа, Пилат Ăна ирĕке кăлармашкăн май шыранă.

Пилат Иисуса преторирен илсе тухса, суд тумалли вырăна ларнă. «Акă сирĕн Патшăр!» – тенĕ Пилат иудейсене. Анчах та вĕсем: «Пăталаттар Ăна!» – тесе кăшкăрма пуçланă. «Христос текен Иисуса манăн мĕн тумалла?» – тет вĕсене Пилат. «Пăталаттармалла!» – теççĕ пурте. «Мĕн усалли тунă вара Вăл?» – тенĕ пуçлăх. Анчах та халăх тата хытăрах: «Пăталаттар Ăна!» – тесе кăшкăрнă. Пилат вара, нимĕн тума çуккине кура, халăх ытларах та ытларах пăлханнине кура, шыв илсе халăх умĕнче аллине çунă та: «Çак Айăпсăрскерĕн юнĕ тăкăннишĕн эпĕ яваплă мар, хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр», – тенĕ. «Унăн юнĕ пирĕн çинче, пирĕн ачасем çинче пултăр!» – тавăрнă ăна хирĕç пĕтĕм халăх. Унтан Пилат Вараввăна кăларса янă, Иисуса, чĕн пушăпа хĕнеттерсе, пăталама хушнă.

Çавăнтах Иисуса салтаксем тытса илсе кайнă. Иисус, Хăйĕн хĕресне çĕклесе, «Пуç тӳпи», еврейла Голгофа, текен тĕле çитнĕ. Ун хыçĕнчен çынсем нумайăн пынă, хĕрарăмсем те Уншăн кăшкăрса йĕрсе утнă. Иисус вĕсен енне çавăрăнса каланă: «Эй, Иерусалим хĕрĕсем! Маншăн мар, хăвăршăн тата ачăрсемшĕн хуйхăрса макăрăр. Акă вăхăт çитĕ, ун чухне çынсем: „Ача туман арăмсем, çуратманнисем, кăкăр çитерменнисем телейлĕ!“ – тесе калĕç».

*МАТФЕЙ 27:20–26; ЛУКА 23:27–29; ИОАНН 19:1–14, 16–17*



## ИИСУСА ПĂТАЛАНИ

Иисуспа пĕрле тата икĕ вăрă-хураха вĕлерме илсе пынă. «Пуç тӳпи» текен вырăна çитсен Иисуса та, икĕ вăрă-хурахне те хĕрес çумне пăталанă: пĕрне – сылтăм енне, теприне – сулахай енне. Иисус каланă: «Эй, Аттем! Каçар вĕсене! Вĕсем хăйсем мĕн тунине те пĕлмеççĕ». Хĕрес хăми çине Пилат еврейла, грекла тата латинла çапла çыртарнă: «Иудея Патши – Назаретри Иисус».

Иисуса хĕрес çумне пăталасан, салтаксем Унăн çиелти тумтирне пĕр-пĕрин хушшинче пайланă, хитонне вара шăпа ярса уйăрнă. Халăх пăхса тănă. Пуçлăхсем те Иисуса йĕкĕлтенĕ: «Ыттисене çăлатчĕ! Вăл Туррăн суйласа илнĕ Христосĕ пулсан, Хăйне Хăй çăлтăр!» – тенĕ. Салтаксем те Унран мăшкăлласа кулнă, Ăна уксус парса каланă: «Эсĕ Иудея Патши пулсан, Хăвна Ху çăл ĕнтĕ!» Хĕрес çумне пăталанă вăрă-хурахсенчен пĕри Иисуса мăшкăлласа: «Эсĕ мар-и-ха Христос текенни? Эппин Хăвна та, пире те çăл!» – тенĕ. Тепри ăна чарса каланă: «Эсĕ Турăран хăрамастăн-и-мĕн? Хăвна та вĕлерме суд тунă-çке! Пире тĕрĕсех айăпланă, ирсĕр ĕçсем тунăшăн эпир вилме тивĕçлĕ. Вăл вара нимĕнле усал ĕç те туман». Унтан вăл Иисуса: «Хуçам, Хăвăн Патшалăху çитсен аса илсем мана», – тенĕ. Иисус каланă ăна: «Чăн калатăп сана, паянах эсĕ Манпа пĕрле райра пулăн». Кăнтăрларан пуçласа виçĕ сехетсенелле пĕтĕм çĕр çинче тĕттĕмленсе ларнă. Виçĕ сехет тĕлĕнче вара Иисус хыттăн кăшкăрса янă: «Или! Или! Лама савахфани?!» Çакă вăл: «Эй, Турăçăм! Турăçăм! Мĕншĕн Эсĕ Мана пăрахрăн?» – тени пулать. Çав самантрах унта тăракан пĕр салтакĕ чупса кайнă та, уксус сăхтарнă мунчалана патак çине тирсе, Иисуса ĕçме хистенĕ. Уксус тутанса пăхсан, Иисус çапла каланă: «Пурнăçланчĕ!» Унтан Иисус хыттăн кăшкăрса: «Эй, Аттем! Сывлăшăма Санăн аллуна паратăп!» – тенĕ. Çапла каласанах Унăн юлашки сывлăшĕ тухнă.

Çав вăхăтра Турă Çурчĕн чаршавĕ çӳлтен аяла çитиччен çурăлса аннă, çĕр чĕтреннĕ, чулсем те арканса кайнă. Тупăклăхсем уçăлнă та вилнĕ сăваплă çынсенчен нумайăшĕ чĕрĕлсе тăнă. Иисус чĕрĕлсе тăнă хыççăн, тупăклăхсенчен тухнисем сăваплă Иерусалим хулине кĕнĕ. Вĕсем нумайăшне курăннă. Рим çĕрпĕвĕпе Иисуса хуралласа кансем, çĕр чĕтреннине, тем те пĕр пулса иртнине курсан, сехрисем хăпнипе каланă: «Ку чăнах та Турă Ывăлĕ пулнă-мĕн!» Курма пуçтарăннă халăх та хĕрхеннипе пуçĕсене усса килĕсене тавăрăннă.

*МАТФЕЙ 27:45–49, 51–54; ЛУКА 23:35–43, 46, 48; ИОАНН 19:19–23, 30*


JESUS
NAZARENUS
REX

## ИИСУСА ПЫТАРНИ

Иисус вилнĕ кун эрне кун пулнă. Хăйсен аслă уявĕ шăмат куна килнĕрен иудейсем вилесене хĕрес çинче шăмат куна хăварасшăн пулман, çавăнпа вĕсем Пилатран вилнисене хĕрес çинчен антарма ыйтнă. Пилатран ирĕк илнĕ хыççăн салтаксем пынă та хĕрес çинчи икĕ вăрă-хурахăн ури тунисене çапса ватнă. Иисус тĕлне çитсен, салтаксем Вăл вилнине курнă та Унăн урисене ватас темен. Анчах та пĕр салтакĕ Ăна аякĕнчен сăнăпа чикнĕ, çавăнтах юнлă шыв юхса тухнă. Çак ĕçсем йăлтах Çырнинче малтанах каласа хунă пек пулса иртнĕ. «Унăн пĕр шăммине те çапса ватмĕç» *(Тухни 12:46)* тата «Хăйсем сăнăпа Чикни çине пăхĕç» *(Захария 12:10)*, – тенĕ Çырнинче.

Каярахпа Пилат патне Аримафея хулин çынни Иосиф пынă. Вăл йĕри-таврари паллă та пуян çын пулнă, синедрион канашĕнче ларнă. Хăй Иисусăн вĕренекенĕ пулнă пулин те, иудейсенчен хăранипе çакна Иосиф палăртман. Вăл Пилатран Иисус ӳтне пама тархасланă, лешĕ вара ирĕк панă.

Иосифпа пĕрле тата пĕррехинче Иисус патне çĕрле вăрттăн пынă Никодим та пулнă. Вăл та синедрион канашĕнче лараканскер пулнă. Никодим хăйпе пĕрле ырă шăршăллă çу тултарнă пысăк савăтсем илсе пынă. Çапла вара вĕсем Иисус ӳтне иудейсен йăлипе ырă шăршăллă çу сĕрнĕ таса пирпе чĕркенĕ. Иисуса пăталанă вырăнтан инçех те мар сад ӳснĕ. Çав садра нумаях та пулмасть ту хысакне алтса тунă виле пытармалли тупăклăх пулнă. Иосифпа Никодим Иисус ӳтне çавăнта хунă, унтан тупăклăха кĕмелли шăтăка пысăк чулпа хупласа хăварнă.

Тепĕр кунне, шăмат кун, аслă священниксемпе фарисейсем Пилат патне пухăннă. «Ырă çыннăмăр, – тенĕ вĕсем, – лешултавçă Хăй чĕрĕ чухне: „Виçĕ кунран чĕрĕлсе тăрăп“, – тенине аса илтĕмĕр-ха эпир. Çавăнпа Иисусăн тупăклăхне пĕр виçĕ кун хушши хураллама хушсам. Вĕренекенĕсем Унăн ӳтне вăрласа ан кайччăрччĕ, кайран халăха: „Вăл чĕрĕлсе тăнă!“ – тесе ан çӳреччĕрччĕ. Ĕç-пуç кунашкал кайсан вара çак юлашки ултав малтанхинчен те усалтарах пулĕ». Ирĕк илсен вĕсем тупăклăх умне хурал тăратнă, хупланă чулне пичетлесех паллă тунă.

*МАТФЕЙ 27:57–66; ИОАНН 19:31–42*



## ХРИСТОС ЧӖРӖЛСЕ ТĂНИ

Шăмат кун иртсессӗнех питӗ вăйлă çӗр чӗтренсе илнӗ, мӗншӗн тесен Турă ангелӗ тӳперен анса тупăклăх умӗнчи чула йăвантарса кусарнă. Ангел çиçӗм пек ялтăртатса тăнă, тумтирӗ юр пек шурă пулнă. Хурал тăракансем ăна курсан вилесле хăраса ӳкнӗ, çӗр çумне лăпчăннă. Тăна кӗрсен вара вӗсем хулана кайнă та аслă священниксене мӗн пулса иртни çинчен пӗтӗмпех каласа панă. Вара аслă священниксем, халăх пуçлăхӗсемпе калаçса татăлса, салтаксене нумай укçа панă та çапла сас-хура кăларма хушнă: «Çӗрле, эпир çывăрнă чухне, вӗренекенӗсем пынă та Унăн ӳтне вăрласа кайнă. Çак сас-хура Рим лартнă пуçлăхăн хăлхине кӗрес пулсан, – тенӗ вӗсем, – эпир хамăрах майлашăпăр, сире ят тивмӗ». Хуралçăсем вара укçине илнӗ те хăйсене аслă священниксем хушнă пек тунă.

Çав кунах тул çутăлнă вăхăтра Мария Магдалина, Иаковпа Иосия амăшӗ Мария тата Саломия Иисус ӳтне ырă шăршăллă çу сӗрес тесе садри тупăклăх патне кайнă. Çапла вӗсем: «Тупăклăх шăтăкӗ умӗнчи чула кам йăвантарса кусарса парӗ-ши пире?» – тесе пӗр-пӗринпе калаçкаласа пынă. Çитсессӗн пăхаççӗ те курах каяççӗ: хайхи пысăк чула кусарса та хунă иккен. Унтан, тупăклăха кӗрсен, вӗсем шап-шурă тум тăхăннă ангела асăрханă. Вара хӗрарăмсем питӗ хăраса ӳкнӗ. «Ан хăрăр, – тенӗ ангел вӗсене, – пăталанă Иисуса эсир шыранине эпӗ пӗлетӗп. Вăл кунта çук ӗнтӗ. Мӗншӗн тесен, Хăй каланă пекех, Вăл вилӗмрен чӗрӗлсе тăчӗ. Акă Хуçамăра хунă вырăн. Вăл вилӗмрен чӗрӗлсе тăни çинчен, сирӗнтен маларах Галилейăна çитсе кӗтсе тăрасси çинчен Унăн вӗренекенӗсене хăвăртрах кайса пӗлтерӗр».

Тупăклăхран тухсан, хӗрарăмсем, пӗр хăраса та пӗр савăнса, Иисусăн вӗренекенӗсене Вăл чӗрӗлсе тăни çинчен пӗлтерме чупнă.

*МАТФЕЙ 28:1–8, 11–15; МАРК 16:1–7, 9; ЛУКА 24:1–7*



## ИИСУС ЧĔРЕХ!

Хĕрарӑмсем Иисус вĕренекенĕсене Вӑл чĕрĕлсе тӑни ҫинчен хыпар пĕлтерме кайнӑ чухне ҫул ҫинче вĕсене Иисус Хӑй тĕл пулнӑ та: «Канӑҫлӑх пултӑр сире!» – тесе саламланӑ. Хĕрарӑмсем, Иисуса курсассӑн, хĕпĕртесе ӳкнĕ, патнерех пырса Ӑна пуҫ тайнӑ. Ҫавӑн чухне Иисус: «Ан хӑрӑр, кайӑр та ĕнененекен тӑванӑмсене Галилейӑна пыма калӑр. Мана вĕсем унта тĕл пулĕҫ», – тенĕ.

Хĕрарӑмсем Иисусӑн вун пĕр вĕренекенĕ патне пырса хӑйсем вилĕмрен чĕрĕлнĕ Хуҫамӑра курни ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Анчах хĕрарӑмсем каласа пани вĕренекенĕсене пустуй сӑмах пек туйӑннӑ, вĕсем хĕрарӑмсене ĕненмен.

Ҫапах та Петрпа Иоанн тупӑклӑх патне васканӑ. Иоанн Петртан хытӑрах чупнӑ, ту хӑвӑлĕ патне маларах ҫитнĕ. Вӑл шӑтӑкран пĕшкĕнсе пӑхать те пирсем выртнине асӑрхать. Ҫапах та хӑй шала кĕмест. Петр та ун хыҫҫӑн чупса ҫитет. Вӑл тупӑклӑха кĕрет те Иисус ӳтне чĕркенĕ пирсем выртнине курать. Тата вӑл Иисусӑн пуҫне витнĕ тутӑр выртнине асӑрхать. Тутӑрĕ пирсенчен уйрӑм выртнӑ. Вара Иоанн та тупӑклӑха кĕнĕ, ҫаксене курсассӑн вӑл Хуҫамӑр вилĕмрен чĕрĕлнине ĕненнĕ.

*МАТФЕЙ 28:8–10; ЛУКА 24:9–12; ИОАНН 20:3–8*



## ИИСУС ЕММАУСА КАЯКАН ВĔРЕНЕКЕНĔСЕНЕ КУРĂННИ

Çав кунах икĕ вĕренекенĕ Иерусалимран инçех мар ларакан Еммаус ятлă яла кайнă. Çул çинче вĕсем иртнĕ кунсенче мĕн пулни çинчен калаçса пынă. Çапла калаçса пынă чухне Иисус Хăй вĕсем патне çывхарнă та юнашар утнă, анчах вĕсем Ăна паллайман.

Иисус вĕренекенĕсенчен çапла ыйтнă: «Эсир мĕн çинчен калаçса пыратăр? Мĕншĕн питĕ салхуллă?» Пĕри, Клеопа ятли, Ăна каланă: «Иерусалима килнĕ çынсенчен пĕр Эсĕ çеç кунта мĕн пулса иртнине пĕлместĕн пулĕ». «Мĕн пирки вара?» – тесе ыйтнă Иисус. «Назаретри Иисус пирки, – хуравланă лешсем. – Вăл Пророкчĕ. Турăпа пĕтĕм халăх умĕнче ĕçĕпе те, сăмахĕпе те хăватлăччĕ. Аслă священниксемпе пуçлăхсем Ăна суд тума Пилата тытса пачĕç, пăталаттарса вĕлерчĕç. Эпир вара Израиле хăтараканни Çавă тесе ĕмĕтленеттĕмĕр! Çак ĕç пулнăранпа икĕ кун та иртрĕ ĕнтĕ. Çитменнине тата хамăр хĕрарăмсенчен хăшĕ-пĕрисем пире тĕлĕнтерчĕç! Паян ирхине ирех вĕсем тупăклăх патне кайнă, анчах та Унăн ӳтне тупайман. Таврăнсан вĕсем хăйсене ангелсем курăнни çинчен каласа пачĕç. Ангелсем вĕсене Иисус чĕрех пулни çинчен пĕлтернĕ. Вара хамăр çынсем те тупăклăх патне кайса пăхрĕç, хĕрарăмсем каласа пани тĕрĕсех пулнă. Вĕсем унта Иисуса Хăйне курман». Иисус вĕсене каланă: «Эх, тавçăрусăр та мăран чунлăскерсем! Пророксем малтанах каланине те ĕненме пултараймастăр-çке. Хăйĕн тулли мухтавне тивĕçме Христосăн çак асапа курмалла марччĕ-и вара?» Унтан Иисус вĕсене Моисейран пуçласа пур пророксем те Çырнинче Хăйĕн пирки мĕн каланисене ăнлантарса панă.

Вĕсем хăйсем çитес ял патне çывхарнă. «Кун каçалана сулăнчĕ ĕнтĕ, атя, пирĕнпе юл», – тенĕ Ăна вĕренекенĕсем. Вара Иисус вĕсемпе пĕр пӳрте кĕнĕ. Çиме ларсан Вăл çăкăр илсе пилленĕ те вĕренекенĕсене хуçса панă. Тинех вĕсен куçĕсем уçăлнă, тинех вĕсем ăна палласа илнĕ, анчах та Иисус вĕсен куçне курăнми пулнă. Вĕренекенĕсем пĕр-пĕрне каланă: «Вăл çул çинче пирĕнпе калаçса, Çырнине ăнлантарса пынă чух пирĕн чĕресем хавхаланса çунмарĕç-и вара?»

*ЛУКА 24:13–32*



## ИИСУС ЫТТИ ВĔРЕНЕКЕНĔСЕНЕ КУРĂННИ

Еммауса каякан çул çинче Иисус курăннă хыççăнах вĕренекенĕсем Иерусалима таврăннă. Вĕсем вун пĕр апостол тата ытти вĕренекенĕсем пуçтараннă çĕре пынă та хăйсемпе çул çинче мĕн пулса иртнине, Иисус çăкăр хуçсан хăйсем Ăна епле палласа илнине каласа кăтартнă.

Вĕсем çапла калаçса ларнă чух сасартăк Иисус Хăй вĕсем хушшине пырса тăнă та: «Канăçлăх пултăр сире», – тенĕ. Вĕренекенĕсем çав тери хăраса ӳкнипе куçа курăнать пулĕ тесе шухăшланă. «Эсир мĕншĕн аптăраса ӳкрĕр? – тенĕ вĕсене Иисус. – Хăвăр курнине мĕншĕн ĕненместĕр? Ман алăсене, урасене пăхăр-ха: Ку – Эпĕ! Эсир Мана хыпаласа пăхăр. Куратăр вĕт, Манăн ӳт те, шăмă та пур. Сывлăшăн çавсем çук». Çапла каласан Иисус вĕсене суран йĕрĕллĕ алли-урине кăтартнă. Вĕсем савăннипе ĕненеймесĕр тĕлĕнсе тăнă чух Иисус вĕсенчен: «Сирĕн кунта мĕн те пулин çимелли пур-и?» – тесе ыйтнă. Вĕренекенĕсем Ăна ăшаланă пулă тата караслă пыл панă, вара Иисус вĕсем умĕнчех çинĕ.

Унтан Вăл вĕренекенĕсене çапла каланă: «Ман çинчен Моисей саккунĕнче, пророксен кĕнекинче, псаломсенче çырни пурте пурнăçланмалла тесе Эпĕ сире малтанах каласа панăччĕ. Çавсем ĕнтĕ пĕтĕмпех пурнăçланчĕç. Çырнинчи пекех, Христосăн çапла асапланса вилмеллеччĕ, виççĕмĕш кунне вилĕмрен чĕрĕлсе тăмаллаччĕ. Ун ячĕпе çылăх каçарттарма Иерусалимран пуçласа мĕн пур халăхсене вĕрентсе çӳремелле. Эсир çавна курса çирĕплетекенсем пултăр. Мана Атте пама пулнине Эпĕ сире те паратăп, анчах та эсир çӳлтен хăват иличчен Иерусалимрах юлăр».

*ЛУКА 24:33–49*



## «ЭСĔ МАНА ЮРАТАТĂН-И?»

Çавăнтан кайран чĕрĕлсе тăнă Хуçамăр вĕренекенĕсене Галилейăра, Тивериада тинĕсĕ патĕнче, курăннă. Унта Петр текен Симон, Йĕкĕреш текен Фома, Галилейăри Кана çынни Нафанаил, Зеведей ывăлĕсем тата Иисусăн тепĕр икĕ вĕренекенĕ пĕрле пуçтараннă. «Эпĕ пулла каятăп», – тет вĕсене Петр текен Симон. «Эпир те пыратпăр», – теççĕ ăна ытти вĕренекенĕсем. Вара вĕсем кимĕ çине ларса тинĕсе тухнă. Анчах çав каç вĕсем нимĕн те тытайман.

Ирпе ирех Иисус вĕсене çыран хĕрринче кĕтсе тăнă, анчах вĕренекенĕсем Ăна палласа илеймен. «Ачасем, сирĕн çимелли мĕн те пулин пур-и?» – тет вĕсене Иисус. «Çук çав», – тавăрнă вĕренекенĕсем. «Сĕреке-тетелĕрсене кимĕрен сылтăмарах пăрахăр-ха, вара кĕрĕ», – тесе каланă вĕсене Иисус. Çапла тусан, туртса кăлараймиех пулă кĕнĕ. Иисусăн юратнă вĕренекенĕ вара Петра çапла калать: «Ку Вĕрентекен вĕт-ха!» Çавна илтсен Петр шыва сикнĕ те çырана ишсе тухнă. Ытти вĕренекенĕсем, тулли сĕреке-тетелĕсене сĕтĕрсе, çыран хĕррине киммипе ишсе пынă. Пуллине вĕсем çырантан инçех мар тытнă пулнă. Çыран хĕррине тухсан вĕсем кăвайт çуннине курнă, тĕлкĕшекен кăвар çине пулă хунă иккен. Унтах çăкăр та пулнă.

Çапла майпа, вилĕмĕнчен чĕрĕлсе тăнă хыççăн Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене виççĕмĕш хут курăннă.

Çисе ларнă чухне Иисус Петр текен Симона калать: «Иона ывăлĕ Симон! Эсĕ Мана вĕсенчен те ытларах юрататăн-и?» «Юрататăп, Хуçамăр! – тет Петр. – Эпĕ Сана юратнине Эсĕ Ху та пĕлетĕн». Иисус вара Ăна калать: «Манăн путекĕмсен кĕтӳçи пул». Иисус унран тата тепĕр хут ыйтать: «Иона ывăлĕ Симон! Эсĕ Мана юрататăн-и?» «Юрататăп, Хуçамăр! – тет Петр. – Эпĕ Сана юратнине Эсĕ Ху та пĕлетĕн». Иисус ăна калать: «Манăн сурăхăмсен кĕтӳçи пул». Çапла Хуçамăр унран виççĕмĕш хут ыйтнă. Хăйĕнчен виççĕмĕш хут ыйтнăшăн салхуланса Петр Ăна: «Хуçамăр! Эсĕ пĕтĕмпех пĕлетĕн. Эпĕ Сана юратнине те пĕлетĕн», – тенĕ. Иисус каллех калать: «Манăн сурăхăмсен кĕтӳçи пул».

Петр Иисуса виçĕ хутчен пĕлмĕш пулнăччĕ, халĕ вара вăл Иисуса юратнине çавнашкалах виçĕ хутчен калать. «Манăн сурăхăмсен кĕтӳçи пул» текен сăмахсемпе Иисус Петрпа ытти вĕренекенĕсене Хăйне ĕненекен çынсемшĕн тăрăшма хушса хăварнă.

*ИОАНН 21:1–17*



## ИИСУС ХРИСТОС ТӮПЕНЕ ҪӖКЛЕННИ

Вилӗмрен чӗрӗлсе тӑнӑ Христос хӑйӗн вӗренекенӗсене тата хӗрӗх кун хушши курӑннӑ, вӗсене Турӑ Патшалӑхӗ ҫинчен кала-кала кӑтартнӑ. Унтан, вӗренекенӗсене пӗрле пуҫтарса, Вӑл ҫапла хушса хӑварнӑ:

> Иерусалимран ан кайӑр, Аттем мӗн шантарнине кӗтӗр, ун пирки Эпӗ сире каланӑччӗ. Мӗншӗн тесен Иоанн шывпа тӗне кӗртнӗ, эсир вара тепӗр темиҫе кунран Турӑ Сывлӑшӗпе тӗне кӗрӗр.
>
> Турӑ Сывлӑшӗ сирӗн ҫине ансан эсир хӑват илӗр. Вара Ман ҫинчен Иеруслимра та, пӗтӗм Иудейӑра та, Самарире те – тӗнче хӗррине ҫитичченех – каласа ҫирӗплетекенсем пулӑр.

Ҫак сӑмахсене каласан Иисус Христос вӗренекенӗсен куҫӗ умӗнчех тӳпене ҫӗкленнӗ. Пӗлӗт хупланипе Вӑл вӗренекенӗсен куҫӗнчен ҫухалнӑ. Иисус тӳпене ҫӗкленнине вӗренекенӗсем пӑхса тӑнӑ чухне сасартӑк вӗсем патне шурӑ тумлӑ икӗ ҫын пырса тӑнӑ. «Эй, Галилея ҫыннисем! – тенӗ вӗсем. – Мӗн эсир тӳпенелле пӑхса тӑратӑр? Акӑ Иисус сирӗнтен уйӑрӑлса ҫӳле ҫӗкленчӗ. Вӑл тӳпене епле ҫӗкленнине эсир куртӑр, килессе те Иисус ҫавнашкалах килӗ».

*АПОСТОЛСЕН ӖҪӖ-ХӖЛӖ 1:3–11*



## «ÇУЛ ТА, ЧĂНЛĂХ ТА, ЧĔРĔЛĔХ ТЕ»

Иисус Христос çĕр çинче, Хăйне хĕрес çинче пăталичченех, виçĕ çула яхăн хăватсем кăтартнă. Хуçамăр çынсене çăлăнăç çинчен, Турă Патшалăхĕ çинчен калакан Ырă Хыпар вĕрентнĕ. Вăл каланисенчен паллăраххисем çаксем:

Çул та, чăнлăх та, чĕрĕлĕх те – Эпĕ. Ман урлă каймасан Аттем патне никам та çитеймĕ. *(Иоанн 14:6)*

Эпĕ – чĕрĕлӳ тата пурăнăç. Мана ĕненекен вилсен те чĕрĕлет. *(Иоанн 11:25)*

Çак тĕнчере чухне Эпĕ – тĕнче çути. *(Иоанн 9:5)*

Пурăнăç çăкăрĕ – Эпĕ. Ман патăма килекен нихăçан та выçăхмĕ, Мана ĕненекенĕн нихăçан та ăшĕ хыпмĕ. *(Иоанн 6:35)*

Этем Ывăлĕ çухалнă çынсене шыраса тупса çăлма килнĕ. *(Лука 19:10)*

Пуринчен малтан Турă Патшалăхне, Унăн чăнлăхне ăнтăлса шырăр. *(Матфей 6:33)*

Эпĕ сире канăçлăх парса хăваратăп, Хамăн канăçлăхăма сире паратăп. Анчах та вăл çак тĕнчери канăçлăх мар. Аптăраса ан ӳкĕр, ан хăрăр. *(Иоанн 14:27)*

Эй, эсир, ĕçпе тата йывăр çĕклемпе халтан кайнисем! Пурте Ман патăма килĕр, Эпĕ сире канлĕх парăп. Эпĕ йăваш та лăпкă кăмăллă, çавăнпа ман туртам хушшине тăрăр, Манран тĕслĕх илĕр, вара канлĕхĕре тупăр. Мĕншĕн тесен Ман лава туртма ырă, Ман çĕклемĕм çăмăл. *(Матфей 11:28–30)*

Ман сăмаха итлекен, Мана Яракана ĕненекен ĕмĕрлĕх пурăнăçлă. Вăл ĕнтĕ вилĕмрен чĕрĕлĕхе куçнă, унăн суда та пымалла мар. *(Иоанн 5:24)*

Ывăлне ĕненекен ĕмĕрлĕх пурăнăçлă. Турă Ывăлне ĕненмен çын пурăнăç кураяс çук, ун çинче Турă çилли тăрать. *(Иоанн 3:36)*

Кам Ман хыççăн пырас тет, çав хăй çинчен манса, хăй хĕресне йăтса Ман хыççăн пытăр. *(Лука 9:23)*

Этем, пĕтĕм тĕнчене илес тесе, хăйне сиен тусан е пĕтерсен, ăна мĕн усси пулĕ? *(Лука 9:25)*

Кам Ман çинчен халăха уççăн каласа пĕлтерет, Эпĕ те Çӳлти Аттем умĕнче çав çын хӳттине кĕрĕп. Кам халăх умĕнче Манран тунать, Эпĕ те Çӳлти Аттем умĕнче унран тунăп. *(Матфей 10:32–33)*

Çĕрпе пĕлĕт те пĕтет, Ман сăмахăм нихăçан та çухалмасть. *(Лука 21:33)*



## АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ

Ку таранччен пирĕн сăмахăмăр Иисус Христос Хуçамăр тӳпене çĕклениччченхи ĕç-пуç пирки пулчĕ. Çав тапхăра Матфей, Марк, Лука тата Иоанн пĕлтернĕ тăватă Евангелире сăнласа кăтартнă.

Çĕнĕ Килĕшĕвĕн пиллĕкмĕш кĕнеки Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ ятлă. Унта çав вăхăтри Рим империйĕн провинцийĕсенче христианлăх епле сарăлса пыни çинчен çырса кăтартнă. Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ кĕнекере Петрпа Павел апостолсен ĕçĕ-хĕлĕ тĕп вырăнта тăрать. Уйрăммăнах унта Павел апостолăн ют халăхсем хушшинчи тĕн сармалли ĕçне тĕплĕн çутатса панă.

Иисус Христос Хуçамăр Голгофăри хĕрес çинче вилни урлă, чĕрĕлсе тăни урлă Турă çынсене çăлăнăç панă. Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ кĕнекене вуласан, эпир çав çăлăнăç çинчен калакан хыпар ытти халăхсем хушшинче те сарăлма пуçланине куратпăр.

Лука пĕлтернĕ Ырă Хыпара тата Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ кĕнекене пĕр çынах – Лука евангелист çырнă пулĕ тесе шухăшлаççĕ. Ку кĕнекесене Христос Çуралнăранпа 60-мĕш çулсем тĕлнелле çырнă. Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕнче Христос чĕрĕлсе тăнинчен пуçласа 60-мĕш çулсемччченхи Евангели историйĕн тăсăмне çырса кăтартнă. Çакă вăл малтанхи христианлăх сарăлнин историйĕ пулса тăрать.



## ТУРĂ СЫВЛĂШĔ АННИ

Христос тӳпене çĕкленнĕ вырăнтан, Елеон тăвĕ çинчен, Иерусалима таврăнсассăн вĕренекенĕсем пĕр çуртри хăтлă пӳлĕмре пуçтаранса кĕлтунă. Вĕсемпе пĕрле унта темиçе хĕрарăм, çав шутрах Иисус Амăшĕ Мария та, пулнă. Иуда вырăнне вун иккĕмĕш апостол пулма Матфие суйланă.

Пасха хыççăн аллă кун иртсен паллă тумалли Аллăмĕш Кун уявĕнче вун икĕ апостол пĕрле пуçтараннă. Сасартăк тӳперен вăйлă çил-тăвăл кĕрлесе килнĕ чухнехи пек сасă илтĕннĕ, вĕренекенсем пухăннă çурт шăв-шавпа тулса ларнă. Унтан пайăркаланса тăракан вут чĕлхисем курăннă, вĕсем кашни апостол тĕлне пĕрер аннă. Апостолсен чун-чĕри Турă Сывлăшĕпе тулнă та вĕсем пурте хăйсем унччен пĕлмен чĕлхесемпе калаçа пуçланă.

Çав вăхăтра Иерусалимра тĕрлĕ çĕр-шывсенче пурăнакан, питĕ хытă ĕненекен иудейсем уява пуçтараннă пулнă. Вĕсем часрах сасă илтĕннĕ вырăна васканă. Кашниех, хайхи апостолсем хăйĕн тăван чĕлхипе калаçнине илтсен, аптăраса кайнă. «Çак тĕрлĕ чĕлхесемпе калаçакансем пурте Галилея çыннисем мар-и вара? – тĕлĕнмеллипех тĕлĕнсе ыйтнă вĕсем пĕр-пĕринчен. – Епле-ха эппин пирĕнтен кашниех харпăр хăй ачаран калаçнă чĕлхене илтеет? Эпир пурте Туррăн хăватлă ĕçĕсем çинчен апостолсем пирĕн тăван чĕлхесемпе каланине илтетпĕр!»

Ăнран каймалла тĕлĕннипе вĕсем пĕр-пĕринчен: «Мĕне пĕлтерет-ши ку?» – тесе ыйтнă. Хăшĕ-пĕри тата тăрăхласа çапла каланă: «Вĕсем пылак хĕрлĕ эрех ĕçсе лартнă».

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 1:12–26; 2:1–13*



## ПЕТР ВĔРЕНТСЕ КАЛАНИ

Петрпа вун пĕр апостол пухăннă халăх умне тухнă та, Петр пурне те илтмелле çапла каланă: «Иудейсемпе мĕн пур Иерусалим çыннисем! Çакна пĕлсе тăрăр, ман сăмахăма лайăх тăнлăр. Эсир вĕсене ӳсĕр тесе шухăшлатăр, вĕсем ӳсĕр мар, мĕншĕн тесен халь ир кăна. Ку – Иоиль пророк сăмахĕсем пурнăçланни: „Юлашки кунсенче, – тесе калать Турă, – Хамăн Сывлăшăма пур çын çине те ярăп. Сирĕн ывăлăрсемпе хĕрĕрсем пророкла калаçа пуçлĕç. Сирĕн çамрăкăрсем тĕрлĕрен курăнусем курĕç. Сирĕн ваттăрсене тĕлĕкре вăрттăнлăх уçăлĕ. Çав кунсенче Хамăн Сывлăшăма арçын тарçăсемпе хĕрарăм тарçăсем çине те ярăп, вара вĕсем те пророкла калаçĕç. Кам Хуçамăр ятне каласа чĕнĕ, çав çăлăнĕ“.

Эй, Израиль çыннисем! Çак сăмахсене тимлесе итлĕр: хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ, Турă Иисуса сирĕн хушшăрта хăватлă ĕçсем, тĕлĕнтермĕшсем, паллăсем кăтарттарса Ун çинчен каласа пĕлтернĕ. Турă малтанах пĕлсе, палăртса хунипе Иисусăн сутнă пулмаллаччĕ, эсир Ăна çылăхлисен аллине парса, пăталаттарса вĕлертĕр. Анчах та Турă Ăна вилĕм тыткăнĕнчен хăтарчĕ, Ăна вилĕм те чараймарĕ.

Ăна, Иисуса, Турă чĕртсе тăратнине эпир çирĕплетсех калатпăр. Турă хăватлă аллипе Иисуса тӳпене çĕкленĕ. Вăл Хăйне шантарнă Турă Сывлăшне Ашшĕнчен илнĕ. Çавăнпа та эсир халĕ курса-илтсе тăни пулса иртет. Çапла вара, пĕтĕм Израиль çыннисем, çакна çирĕп пĕлсе тăрăр: эсир пăталанă Иисуса Турă пирĕн Хуçамăр тата Çăлаканăмăр турĕ».

Çак сăмахсем итлекенсен чĕрисене пырса тивнĕ, вара вĕсем Петрпа ытти апостолсенчен ыйтнă: «Тăванăмăрсем, пирĕн халĕ мĕн тумалла-ши?» «Ӳкĕнĕр, çылăх каçарттарма сирĕнтен кашниех Иисус Христос ячĕпе тĕне кĕтĕр. Вара Турă Сывлăшĕн тивлетне илейĕр. Мĕншĕн тесен Хуçамăр сире те, ачăрсене те, аякра пурăнакансене те – Хуçа Турă чĕннисене пурне те – çăлма пулнă».

Нумайăшĕ унăн сăмахне хапăлласа йышăннă, çав кун тепĕр виçĕ пин çынна яхăн ĕненсе шыва кĕнĕ. Çав вăхăтран пуçласа Хуçамăр çăлăнакансен йышне – Хăйĕн Чиркĕвне – ӳстерсех пынă. Иисус Христос вилĕмĕпе тӳлесе илнĕ ĕненекенсен пухăвĕ Турă Чиркĕвĕ пулать те.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 2:14–47*



## УКСАХА СЫВАТНИ

Пёррехинче Петрпа Иоанн Турӑ Ҫуртне кӗлле кайнӑ. Турӑ Ҫурчӗн Илемлӗ Хапха текен мӑн алӑкӗ умӗнче пӗр уксах ҫын ларнӑ. Ӑна кашни кунах ҫавӑнта ҫӗклесе пырса ыйткаламашкӑн лартса хӑварнӑ. Петрпа Иоанн Турӑ Ҫуртне кӗнине курсан вӑл кӗлмӗҫленме пуҫланӑ.

Петрпа Иоанн ун ҫине тинкерсе пӑхнӑ та: «Пирӗн ҫине пӑх-ха», — тенӗ. Вӑл вара, кусем мӗн те пулин парӗҫ-и тесе, апостолсем ҫине кӗлмӗҫленсе пӑхнӑ. Анчах та Петр ҫапла каланӑ: «Ылтӑнӑм та, кӗмӗлӗм те ҫук манӑн, мӗн пуррине сана паратӑп: Иисус Христос ячӗпе тӑр та утса ҫӳре!» Вӑл уксах ҫынна сылтӑм аллинчен тытса тӑма пулӑшнӑ. Ҫав самантрах уксах-чӑлахӑн ури тупанӗсене, чӗркуҫҫийӗсене вӑй кӗнӗ, вӑл сиксе тӑнӑ та ута пуҫланӑ. Вӑл Турӑ Ҫуртне те апостолсемпе пӗрлех кӗнӗ, сиккелесе ҫӳресе Турра мухтанӑ. Турӑ Ҫуртӗнче пулнисем Илемлӗ Хапха умӗнчи ыйткаласа ларакан уксаха палласа илнӗ. Вӑл утакан пулнине тата Турра мухтанине курсан ҫынсем вӑл сывалнинчен питӗ хытӑ хӑраса кайса тӗлӗннӗ.

Уксах пулнӑ ҫын, сывалнӑскер, Петрпа Иоанран хӑпман. Ҫавӑнпа ҫынсем те Соломон притворӗ текен ҫӗрте вӗсем тавра пухӑннӑ. Ҫакна асӑрхасан Петр халӑха каланӑ: «Эй, Израиль ҫыннисем! Мӗн тӗлӗнсе пӑхатӑр эсир пирӗн ҫине? Эпир ӑна хамӑр хӑватпа тата тасалӑхпа утмалла туман вӗт-ха! Мӑн асаттемӗрсен Турри Хӑйӗн Ывӑлне Иисуса мухтава кӑларчӗ. Эсир вара Ӑна тытса патӑр. Ӑна Пилат хӑтарас тенӗччӗ, анчах эсир Унран пӑрӑнтӑр. Эсир пурӑнӑҫ Хуҫине вӗлертӗр, анчах та Турӑ Ӑна вилӗмрен чӗртсе тӑратрӗ, ҫавна куракансем эпир хамӑр. Иисус ятне ӗненни ҫак эсир куракан, пӗлекен ҫынна тӗреклӗх пачӗ. Иисус панӑ ӗненӳ ӑна сирӗн куҫӑр умӗнчех сыватрӗ. Тӑвансем! Ҫак ҫылӑха эсир, пуҫлӑхӑрсем пекех, пӗлменрен туса хунине ӑнланатӑп. Христосӑн асап тӳсмелле пулнине Турӑ Хӑйӗн мӗн пур пророкӗсем урлӑ малтанах пӗлтернӗ, Вӑл ҫавна пурнӑҫларӗ те. Хӑвӑр ҫылӑхӑрсене тӳрлетес тесе ӳкӗнӗр, Турӑ енне ҫавӑрӑнӑр. Турӑ парас ырӑ вӑхӑт ҫиттӗр, Турӑ Хӑй палӑртса хунӑ Иисус Христоса сирӗн патӑра ятӑр. Хальлӗхе, Турӑ Хӑйӗн авалхи сӑваплӑ пророкӗсем урлӑ калани пурнӑҫланас вӑхӑтчен, Иисусӑн тӳперех пулмалла. Сире усал ӗҫӗрсенчен сыхласа хӑварас тесе, Турӑ Хӑйӗн Ывӑлне Иисуса вилӗмрен чӗртсе тӑратса сире пиллеме чи малтан янӑ».

*АПОСТОЛСЕН ӖҪӖ-ХӖЛӖ 3:1–26*



## ПЕТРПА ИОАНА ТЫТНИ

Петр халăха вĕрентсе каланă хыççăн тата уксаха сыватнă хыççăн тепĕр пилĕк пин çынна яхăн Иисус Христоса ĕненме пуçланă. Анчах та Петр сăмахĕсем священниксемпе пуçлăхсене питĕ тарăхтарса янă, вара вĕсем Петрпа Иоана тытса хурал аллине пама хушнă. Тепĕр кунне Иерусалимра пуçлăхсемпе ятлă-сумлă çынсем, саккун вĕрентӳçисемпе аслă священниксем пухăннă. Вĕсем апостолсене илсе пыма хушнă та, синедрион умне тăратса, уксаха сыватни пирки ыйтнă: «Эсир çак ĕçе мĕнле хăватпа тата кам ячĕпе турăр?» Вара Петр, чун-чĕри Турă Сывлăшĕпе тулнăскер, вĕсене çапла хуравланă: «Эй, халăх пуçлăхĕсемпе Израилĕн сумлă çыннисем! Уксах-чăлаха ырă тунăшăн явап тыттаратăр пулсан, мĕнле сыватнине тĕпчетĕр пулсан, Израиль халăхĕ те, эсир те пĕлсе тăрăр: вăл Иисус Христос ячĕпе сывалчĕ. Эсир Иисуса пăталарăр, анчах Турă Ăна чĕртсе тăратрĕ. Эсир, çурт купалакансем, юрăхсăр тесе ывăтнă Чул хайхи çурт никĕсĕ пулса тăчĕ. Çав Чул вăл – Иисус. Урăх никам та çăлăнăç кӳреймĕ, мĕншĕн тесен çакă çутă тĕнчери ятсенчен пире çăлма пултаракан урăх ят çук».

Петрпа Иоанн хăюлăхне курса тата вĕсем вĕренмен ахаль çынсем çеç пулнине асăрхаса, вĕсен сăмахне итлекен пуçлăхсемпе сумлă çынсем тĕлĕнсех кайнă. Çавăнтах, кусем Иисуспа пĕрле çӳренине аса илсен, вĕсене палласа илнĕ. Анчах та Петрпа Иоанн çумĕнче уксах пулнă çын тăнине курсан, вĕсем ним калама та аптăранă. Вара аслă священниксемпе сумлă çынсем апостолсене вăхăтлăха тухма хушнă та канашлама пуçланă. «Мĕн тумалла ку çынсемпе? – калаçнă вĕсем. – Иерусалимра пурăнакансем ĕнтĕ пурте çакскерсем тĕлĕнмелле ĕç тунине пĕлеççĕ. Пулнă япалана эпир пулман тесе калаймăпăр. Çапах та халăхра тата ытларах сăмах сарăласран пирĕн вĕсене хăратсах Иисус ячĕ çинчен каласа çӳреме чармалла».

Вара апостолсене чĕнсе илсе Иисус ятне асăнма та, Унăн ячĕпе вĕрентме те чарнă. Анчах та Петрпа Иоанн çапла тавăрса каланă: «Хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха: сире Турăран та ытларах итлени Турă умĕнче тĕрĕс пулĕ-и? Хамăр курни-илтнине эпир каламасăр тăраймăпăр». Вара канашра ларакансем, апостолсене айăплама май тупаймасăр, вĕсене юна-юнах кăларса янă. Тата вĕсем халăхран хăранă, мĕншĕн тесен пулса иртнĕ тĕлĕнмелле ĕçшĕн пурте Турра мухтанă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 4:1–21*



## ЁНЕНЁВЁН ПИРВАЙХИ АСАПЛАНУÇИ СТЕФАН ВИЛЁМĔ

Апостолсем сĕннипе ĕненекенсен ушкăнĕ çичĕ диакона, урăхла каласан, пулăшакансене, суйланă. Вĕсене чухăнсемпе мĕскĕнсене пулăшас ĕçе шанса панă. Пирвайхи диакон пулма Турă Сывлăшĕллĕ, çирĕп ĕненӳллĕ те вăйлă чун хаваллĕ Стефана суйланă. Вăл халăх хушшинче тĕлĕнмелле ĕçсемпе хăватсем кăтартнă пулнă. Христоса ĕненекенсене хирĕççисем çавăншăн Стефана курайман, унпа тăтăшах тавлашнă, анчах Стефан ăслă калаçнăран вĕсем ăна çĕнтереймен. Мĕншĕн тесен Стефана Турă Сывлăшĕ Хăй мĕн каламаллине пĕлтерсех тăнă. Вара çакскерсем хăш-пĕр çынсене Стефан Турра та, Моисея та хурлать тесе айăплама ӳкĕте кĕртнĕ. Халăха Стефана хирĕç хĕтĕртсе, вĕсем ăна ярса тытнă та синедриона илсе пынă. Айăплавçăсем ун пирки суя сăмах кала пуçласассăнах иудейсен канашĕнче ларакансем Стефан çине тинкеререх пăхнă та – унăн сăнĕ ангелăнни пек çуталса тăнине асăрханă.

Айăплав сăмахĕсене итлесе пĕтернĕ хыççăн аслă священник Стефанран: «Сана тĕрĕсех айăплаççĕ-и?» – тесе ыйтнă. Стефан ăна Сăваплă Çырнинчи сăмахсемпе хуравланă. Вăл питлесе каланине илтсен иудейсен канашĕнче ларакансем урсах кайнă, шăлĕсене шатăртаттара пуçланă.

Чун-чĕри Турă Сывлăшĕпе тулнă Стефан вара çӳлелле пăхнă та Туррăн мухтавлăхне тата Туррăн сылтăм енче тăракан Иисуса курнă. Вăл вара каланă: «Авă, эпĕ тӳпе уçăлса кайнине тата Туррăн сылтăм енче тăракан Этем Ывăлне куратăп». Çакна илтсен пурте, тарăхса-кăшкăрашса, Стефан сăмахĕсене итлес мар тесе хăлхисене хупласа, ун çине сиксе ӳкнĕ. Унтан ăна хуларан илсе тухнă та чулпа персе вĕлерме пуçланă. «Эй, Иисус Хуçамăр! Ман чунăма йышăнсам!» – тесе кĕлтунă Стефан. Унтан, чĕркуçленсе ларса, кăшкăрса янă: «Эй, Турăçăм, çак çылăхшăн вĕсене каçарсам!» Çапла каласанах вăл вилсе кайнă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 6:2–15; 7:1–60*



## ФИЛИППА ЭФИОПИ УЛПУЧӖ

Стефанăн асаплă вилӗмӗ хыççăн Иерусалимра ӗненекенсен ушкăнӗсене хӗсӗрлеме пуçланă. Ушкăнри ӗненекенсем Иудейăпа Самарири тӗрлӗ хуласене тарса сапаланнă. Апостолсем пурпӗрех Турă сăмахне вӗрентсе çӳреме пăрахман.

Пӗррехинче Турă ангелӗ Филипп диакона каланă: «Кăнтăрлапа Иерусалимран Газăна каякан пушă çулпа кай». Филипп çапла тунă та. Çул çинче вăл пӗр Эфиопи улпутне, евнуха, тӗл пулнă. Çав улпут Эфиопири Кандакия ятлă хӗрарăм патшан пӗтӗм пуянлăхне тытса тăраканӗ пулнă. Вăл Иерусалима Турра пуççапма кайнă пулнă. Каялла вăл хăйӗн урапипех таврăннă. Ларса пынă çӗртех вăл Исаия пророк кӗнекине вуласа пынă. «Çак урапапа юнашар ут», – тенӗ ангел Филипа. Вăл урапа патне пынă та хайхи Эфиопи улпучӗ Исаия пророк кӗнекине сасăпах вуланине илтнӗ. «Ху мӗн вуланине ăнланатăн-и эсӗ?» – ыйтнă унран Филипп. «Никам та ăнлантарса памасăр епле ăнланаям?» – таврăннă лешӗ. Унтан вăл Филипа хăйпе юнашар урапа çине ларма сӗннӗ. Çырнинчи вăл вулакан вырăн çакă пулнă: «Ăна сурăха пусма илсе пынă пек илсе пынă. Вăл, çăмне касакан умӗнче сассăр выртакан путек пек, ним те шарламан. Ăна судсăр-мӗнсӗрех мӗскӗнлетнӗ. Халӗ вара Ăна ӗненекенсен шутне кам пӗлсе çитейӗ? Мӗншӗн тесен Унăн пурăнăçӗ çӗр çинчен илӗннӗ ӗнтӗ».

«Кала-ха, çакăнта пророк кам çинчен каланă: хăй çинчен-и е урăххи çинчен?» – ыйтнă Филипран евнух. Вара Филипп ăна Çырнинчи çак вырăна ăнлантарса пама пуçланă та Иисус çинчен Ырă Хыпар пӗлтернӗ.

Çапла малалла кайса вӗсем пӗр юхан шыв хӗррине çитнӗ. «Кур-ха, – тенӗ евнух, – акă шыв. Мана тӗне кӗме юрать-и?» «Пӗтӗм чун-чӗрӳнтен ӗненетӗн пулсан, юрать», – таврăннă ăна Филипп. Лешӗ вара каланă: «Иисус Христос Турă Ывăлӗ пулнине ӗненетӗп». Вара вăл чарăнма хушнă. Унтан иккӗшӗ те шыв хӗррине аннă та, Филипп ăна тӗне кӗртнӗ. Вӗсем шывран туханах евнух çине Турă Сывлăшӗ аннă. Филипа Турă ангелӗ çавăнтан илсе кайнă та вăл евнуха курăнми пулнă.

Унтан евнух савăна-савăна малалла çул тытнă.

*АПОСТОЛСЕН ӖÇӖ-ХӖЛӖ 8:26–39*



## ХРИСТИАНСЕНЕ ХĔСĔРЛЕКЕН САВЛ

Иерусалимри ĕненекенсен ушкăнне хĕсĕрлекенсенчен пĕри Савл ятлă çамрăк фарисей пулнă. Савл Турă йĕркине питĕ лайăх пĕлекен, Сăваплă Çырнине аван ăнланакан çын пулнă. Вăл ваттисен йăлисене çирĕп тытса пурăнакан, саккунра каланисемпе хушнисене тĕплĕ пурнăçласа тăракан çын пулнă. Анчах та чăнлăха пĕлмен пирки вăл Иисус Çăлакан пулнине ĕненмен, христиансене еретиксем тесе шутланă. Савл Иисус Христос вĕренекенĕсен кил-çурчĕсене çĕмĕрсе кĕрсех çыннисене тытса çыхса тĕрмене хуптарнă. Çапла майпа вăл христиансене асаппа вилĕм аллине панă.

Стефан диакона чулпа персе вĕлернĕ чухне те вăл çын вĕлеренсен хывса хунă тумтирне сыхланă. Çапла майпа Савл çын вĕлеренсем майлă пулнине палăртнă. Кăмăлĕпе Савл хаяр пулман пулин те, христиансене тĕрĕсех айăплаççĕ тесе шухăшланăран вăл ним чухлĕ те иккĕленмен.

Турра хирĕçле сиенлĕ шухăшсем ытти çĕрсенче те сарăлма пуçланине, Дамаск хулинче те Иисус вĕрентĕвĕ хыççăн каякансем нумаййине пĕлсен, Савл унта кайма шут тытнă. Хуçамăрăн вĕренекенĕсене чун-чĕререн курайманнипе вăл аслă священник патне пынă та Дамаскри синагогăсенче кăтартма çырусем ыйтса илнĕ. Çав çырусем Савла Христос вĕрентĕвĕ хыççăн каякансене йĕрлесе тупма, вĕсене сăнчăрласа Иерусалима асаплантарма илсе пыма ирĕк панă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 7:58; 8:1, 3; 9:1, 2*



## САВЛА ХУҪАМӐР КУРӐННИ

Дамаска ҫитесси инҫех те мар юлсан сасартӑк Савла тӳперен ҫутӑ ҫутатса янӑ. Вӑл ҫӗре ӳкнӗ. Унтан ӑна: «Эй, Савл, Савл! Эсӗ мӗншӗн Мана хӗсӗрлетӗн?» – текен сасӑ илтӗннӗ. «Хуҫам, кам эсӗ?» – тенӗ Савл. Сасӑ ӑна хирӗҫ тавӑрнӑ: «Эпӗ – эсӗ хӗсӗрлекен Иисус. Хирӗҫ ан пыр, хӑвнах йывӑр пулӗ». «Хуҫам, мӗн тума хушатӑн мана?» – ыйтнӑ чӗтресе-хӑраса ӳкнипе Савл. «Тӑр та хулана кай, мӗн тумаллине сана унта калӗҫ», – тенӗ ӑна Хуҫамӑр.

Савлпа пӗрле пыракан ҫынсем никам курӑнмасӑрах сасӑ илтӗннӗрен шак хытса кайнӑ. Унтан Савл ура ҫине тӑнӑ, анчах куҫӗсем уҫах пулин те, нимӗн те курман: тӳперен аннӑ ҫутӑ ӑна суккӑрлатнӑ. Вара юлташӗсем ӑна Дамаска аллинчен ҫавӑтса илсе кайнӑ.

Дамаскра Христоса чунтан парӑннӑ пӗр Анания ятлӑ ҫын пурӑннӑ. Хуҫамӑр унӑн куҫне курӑнса ҫапла каланӑ: «Анания! Тӑр та Тӳрӗ урама кай. Ҫав урамри Иуда килӗнче Савл ятлӑ Тарс ҫыннине ыйт. Вӑл халӗ кӗлтӑвать. Хӑй патне Анания ятлӑ пӗр ҫын пырасси, ҫав ҫын алӑ хурсассӑн тин куҫӗ куракан пуласси ӑна ӗнтӗ курӑнчӗ». «Хуҫам! – тенӗ Анания, – эпӗ Савл ҫинчен, вӑл Иерусалимри Санӑн сӑваплӑ ҫыннусене мӗн чухлӗ усал туни ҫинчен илтнӗ. Кунта та вӑл аслӑ священниксенчен ҫыру илсе килнӗ. Ҫав хут тӑрӑх, Санӑн ятна асӑнакансене тытса ҫыхмашкӑн унӑн ирӗк пур». Анчах та Хуҫамӑр ӑна каланӑ: «Каях, вӑл ҫын – Эпӗ суйласа илнӗскер. Вӑл Ман ятӑма ытти халӑхсене, патшасене, Израиль ҫыннисене пӗлтерекен пулӗ. Эпӗ ӑна Ман ятӑмшӑн мӗн чухлӗ асап тӳсмеллине те кӑтартӑп».

Анания хӑйне каланӑ ҫурта кайса шыраса тупнӑ. «Савл тӑванӑм! – тенӗ вӑл пӳрте кӗрсен, ун ҫине аллине хурса. – Куҫна уҫма тата чун-чӗрӳне Турӑ Сывлӑшӗпе тултарма сан патна мана Иисус Хуҫамӑр ячӗ. Вӑл сана та кунта килнӗ чухне ҫул ҫинче курӑннӑ». Ҫавӑнтах, темле каркӑҫ сирӗлнӗ пекех, Савл куҫӗсем куракан пулнӑ. Ҫав кун вара Савл Иисус ячӗпе тӗне кӗнӗ. Унтан синагогӑсенче Иисус вӑл – Турӑ Ывӑлӗ тесе вӗрентме пуҫланӑ.

*АПОСТОЛСЕН ӖҪӖ-ХӖЛӖ 9:3–20*



## САВЛ ДАМАСК ХУЛИНЧЕН ТАРНИ

Савл вӗрентсе каланисене итлекенсем вара пурте тӗлӗнмеллипех тӗлӗннӗ. «Иисус ятне асӑнакансене Иерусалимра хӗсӗрлекенни çак çын мар-и вара? Вӑл кунта та вӗсене тытса çыхса аслӑ священник патне илсе кайма килменччӗ-им?» – тенӗ вӗсем. Савлӑн ӗненӗвӗ çирӗпленнӗçемӗн çирӗпленсе пынӑ. Вӑл çине тӑрсах Иисус – Çӑлакан, Христос тесе вӗрентнӗ, Дамаскри иудейсем ӑна нимӗнпе те хирӗçлеме пултарайман.

Тепӗртакран вара иудейсем Савла Дамаскран тухнӑ чухне тытас тесе хулан пур хапхи умне те салтаксем тӑратнӑ. Анчах та Савл, вӗсен шухӑшне пӗлсе, хуларах юлнӑ. Иисус вӗренекенӗсем ӑна çӗрле хула хӳми тӑрӑх лӑпӑ çине лартса антарнӑ.

Дамаскран кайсан Савл Иерусалима пынӑ. Унта вӑл Иисус вӗренекенӗсемпе çывӑхланасшӑн тӑрӑшнӑ, анчах та пурте унран хӑранӑ, вӑл чӑнах та Христос вӗренекенӗ пулнине шанман. Вара апостолсенчен пӗри, Варнава, вӗсене Савла çул çинче Хуçамӑр курӑннине те, Хуçамӑр ӑна мӗн каланине те, Иисус ячӗпе Савл Дамаскра епле хӑюллӑн вӗрентнине те каласа кӑтартнӑ. Тинех апостолсемпе ӗненекенсен ушкӑнӗ Савла тӑванла йышӑннӑ. Каярахпа ӑна Павел апостол тесе чӗнме пуçланӑ. Ытти халӑхсене Христос çинчен вӗрентесси Павелӑн пурӑнӑç тӗллевӗ пулса тӑнӑ.

Павел апостол тӗрлӗ хулари чиркӳсене нумай çыру çырса янӑ. Пӗр çырӑвӗнче вӑл çапла çырнӑ: «Маларах маншӑн мӗн усӑллӑ пулнӑ, çавна пӗтӗмпех Христос умӗнче харам ӗç тесе шутларӑм. Халӗ ыттине те йӑлтах харам ӗç вырӑнне хуратӑп, мӗншӗн тесен Иисус Христоса, Хуçама, пӗлесшӗн çунни пуринчен те пахарах. Христоса ӑнтӑлса тупас тесе, хама та Унра тупас тесе, эпӗ ыттине пӗтӗмпех аяккалла сирсе хутӑм, пӗтӗмпех çӳпӗ вырӑнне çеç хуратӑп. Манӑн тек саккунран килекен тӳрӗлӗхӗм çук. Халӗ манӑн Христоса ӗненнӗрен тупӑннӑ тӳрӗлӗхӗм пур, ӗненӳри çав тӳрӗлӗхӗме мана Турӑ панӑ».

*АПОСТОЛСЕН ӖÇӖ-ХӖЛӖ 9:21–28;*
*ФИЛИППӐСЕМ ПАТНЕ ЯНӐ ÇЫРУ 3:7–9*



## ИОППИРЕ ТАВИФĂНА ВИЛĔМРЕН ЧĔРТНИ

Карапсем чарăнакан Иоппи хули, урăхла ăна Яффа хули теççĕ, Вăтаçĕр тинĕс хĕрринче вырнаçнă. Иоппире пĕр Тавифа ятлă Иисус Христос вĕренекенĕ пурăннă. Куçарсан, Тавифа тени «хир качаки» тени пулать. Çав хĕрарăм яланах ырă тума тăрăшнă, чухăнсене пулăшнă. Анчах пĕррехинче Тавифа хытă чирлесе ӳкнĕ те вилсе кайнă. Ăна вара çуса хătлă пӳлĕме хунă.

Петр апостол ун чухне Лиддăра пулнă. Лидда Иоппирен инçех пулман пирки Иоппири Христоса ĕненекенсем Петр патне икĕ çынна янă, вĕсем Петра: «Хăвăртрах пирĕн пата кил-ха», — текен хыпар пĕлтернĕ.

Петр пырса çитсессĕнех ăна хăтлă пӳлĕме илсе кĕнĕ. Куççульленнĕ тăлăх арăмсем Тавифа хăйсем валли çĕленĕ кĕпе-тумтире Петра кăтарта пуçланă. Петр пурне те пӳлĕмрен тухма хушнă та чĕркуçленсе ларса кĕлтунă. Унтан вăл вилнĕ хĕрарăм енне çаврăнса каланă: «Тавифа, тăр!» Вара хайхи хĕрарăм куçне уçнă та, Петра курсан, тăрса ларнă. Петр ăна аллинчен тытса ура çине тăма пулăшнă. Кайран вăл Иисус вĕренекенĕсемпе тăлăх арăмсене кĕме хушнă, лешсем кĕнĕ те чĕрĕ-сывă Тавифăна курнă.

Çакăн çинчен пĕтĕм Иоппире сăмах сарăлнă, çавăнпа чылайăшĕ Хуçамăра ĕненме пуçланă. Петр Иоппире, тир тăвакан Симон патĕнче, самаях пурăннă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 9:36–43*



## КОРНИЛИЙ ÇĔРПӰ

Иисус Христоспа Унăн апостолĕсем пурăннă вăхăтра Израиль çĕрĕ кăна мар, Вăтаçĕр тинĕс тăрăхĕнчи пур çĕр-шывсем те Рима пăхăнса тăнă. Çав çĕр-шывсенче Рим полкĕсем тăнă. Итали полкĕ текен полк Вăтаçĕр тинĕс хĕрринчи карапсем чарăнакан Кесарире тăнă. Çав полкри çар пуçĕсенчен пĕри Корнилий çĕрпӳ пулнă. Вăл хăй те, унăн кил-йышĕ те Турра хисеплесе, Турăран хăраса пурăннă. Корнилий халăхшăн нумай ырă ĕç тунă, тăтăшах Турра кĕлтунă. Пĕррехинче ăна Турă ангелĕ курăннă. Ангел ун патне пынă та çапла каланă: «Корнилий! Турă санăн кĕллӳне те, чухăнсене пулăшнине те аса илчĕ. Халĕ вара Иоппири Петр текен Симона чĕнме çынсем яр. Вăл сана та, кил-йышна та çăлăнăç сăмахĕсем калĕ». Хăйпе калаçнă ангел курăнми пулсан, Корнилий икĕ тарçипе шанчăклă, Турра хисеплекен пĕр салтакне чĕнсе илнĕ. Вара, мĕн пулса иртнине йăлтах каласа кăтартса, вĕсене Кесарирен кăнтăрарах вырнаçнă Иоппине янă.

Салтаксем Иоппине çитнĕ те Петра шыраса тупнă. Петр вĕсене хапăлласа йышăннă, хăйĕн патĕнче çĕр каçма хăварнă. Тепĕр кунне вара Петр çав çынсемпе Кесарине кайнă. Корнилий хăйĕн тăванĕ-хурăнташĕсене, тус-юлташĕсене пуçтарса вĕсене кĕтнĕ. Петр пухăннисене пурне те çапла каланă: «Турăшăн пур çын та пĕрех пулнине эпĕ халĕ тин ăнланса илтĕм. Турра хисеплекен, чăнлăхпа пурăнакан кирек мĕнле халăх çыннине те Турă кăмăллать. Турă Израиль ывăлĕсене Иисус Христос урлă канăçлăх çинчен Ырă Хыпар янă. Çав Иисус Христос – пуриншĕн те Хуçамăр. Эпир – Вăл Иудея çĕрĕнче тата Иерусалимра мĕн-мĕн тунине курса çирĕплетекенсем. Иудейсем Ăна хĕрес çине пăталаса вĕлерчĕç. Анчах Турă Ăна виççĕмĕш кунне чĕртсе тăратрĕ. Иисус пире Турă çинчен çынсене вĕрентсе çӳреме хушрĕ. Чĕррисене те, вилнисене те Турă хушнипе Суд тăваканĕ Хăй иккенне çирĕплетсе пĕлтерме каларĕ. Ăна ĕненекенсен Унăн ячĕпе çылăхĕсем каçарăнассине мĕн пур пророксем çирĕплетеççĕ». Петр вĕрентсе каланă сăмаха итленĕ хыççăн Корнилий, унăн пĕтĕм кил-йышĕ тата тусĕсем Турă Ывăлне Иисус Христоса ĕненме пуçланă, Ун ячĕпе шыва кĕнĕ.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 10*



## АНГЕЛ ПЕТРА ТĔРМЕРЕН ИРĔКЕ КĂЛАРНИ

Çав вăхăталла Ирод патша Христоса ĕненекенсене йĕрлеме пуçланă. Вăл хушнипех Иоанпа пĕртăван Иаков апостола вĕлернĕ. Çак ĕçсене иудейсем кăмăлласах йышăннине курсан, Петр апостола та патша тĕрмене хуптарнă. Пасха уявĕ иртсен Ирод ăна халăх умне илсе тухасшăн, айăпласа вĕлерттересшĕн пулнă. Петра тĕрмере вун ултă салтак хураллană. Ĕненекенсен ушкăнĕ çав вăхăтра Петршăн питĕ тăрăшса кĕлтунă.

Ирод Петра халăх умне илсе тухас кун умĕн, çĕрле, икĕ сăнчăрпа тимĕрленĕ апостол çывăрнă. Ăна икĕ салтак хураллană, тĕрме алăкĕсем умĕнчи хурал та сыхă тăнă. Çĕр варринче сасартăк Турă ангелĕ курăннă та, тĕрмере çап-çутă пулса кайнă. Ангел Петра аяккинчен тĕртсе вăратнă та: «Тăр хăвăртрах», – тенĕ. Çавăнтах Петр аллинчи сăнчăрсем хывăнса ӳкнĕ. «Тумлан та ман хыççăн пыр», – тенĕ унтан ангел ăна. Петр тăнă та ангел хыççăн утнă. Ку пĕтĕмпех чăн пулнине вăл ăнланайман, куçа курăнать пулĕ тесе шухăшланă. Икĕ хуралтан иртсен вĕсем хула çулĕ çинчи тимĕр хапха патне çитнĕ. Умĕнчи хапха хăй тĕллĕнех уçăлса кайсан вĕсем хапхаран тухнă. Çапла пĕр урампа утса тухсан ангел сасартăк куçран çухалнă.

Тăна кĕрсе çитсен Петр хăй ăшĕнче шухăшланă: «Хуçамăр Хăйĕн ангелне ярса мана Ирод аллинчен, иудейсем мĕн кĕтнинчен пуринчен те хăтарчĕ. Тинех çакна чăн-чăннипе ăнланса илтĕм». Йĕри-тавра пăхса çавăрăнсан вăл Иоанн амăшĕ Мария пурăнакан пӳрт умне пынă. Ĕненекенсенчен чылайăшĕ унта кĕлле пуçтарăннă пулнă. Пӳрте кĕрсессĕн вĕсене Петр хăйне Хуçамăр тĕрмерен епле кăларнине каласа панă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 12:1–17*



## ПАВЕЛ АПОСТОЛĂН ТĔН САРМАЛЛИ МАЛТАНХИ ÇУЛÇӲРЕВĔ

Павел апостол ют халăхсем хушшинче Ырă Хыпар пĕлтерес шухăш-кăмăлне улăштарман. Вăл Иисус Христос Хуçамăрăн пил-хушăвне пите хавхаланса пурнăçланă: «Çапла вара, кайăр та Ашшĕн, Ывăлĕн, Турă Сывлăшĕн ячĕпе шыва кĕртсе мĕн пур халăхсене вĕрентсе çӳрĕр. Вĕсене Эпĕ сире панă пил-хушусене пăхăнса пурăнма вĕрентĕр». Павел ун чухнехи Рим империйĕн тĕрлĕ хулисемпе çĕрĕсем тăрăх вăрах вăхăт хушши виçĕ хутчен çул çӳренĕ. Çулçӳреве вăл Антиохи хулинчен пуçланă.

Малтанхи çулçӳреве Павелпа пĕрле Варнава апостол та тухса кайнă. Карап вĕсене Антиохирен Кипра илсе çитернĕ. Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕнче çырнă тăрăх, çакăнта, Кипр утравĕ çинче, Турăшăн пысăк ĕç тăвакан Савла латинла ятпа Павел теме тытăннă. Кипртан вĕсем каллех Кĕçĕн Азие таврăннă, вара е çуран, е ашакпа Галати çĕрне çитнĕ. Унта вĕсем Икони хулинче вĕрентме пуçланă, вĕсене итлесе питĕ нумай халăх Христоса ĕненме пуçланă. Иконирен вĕсем Листра хулине кайнă. Листрăра Хуçа Туррăмăр Павел урлă пĕр уксаха сыватнă. Кунти çынсем Павелпа Варнавăна турăсем тесе йышăннă. Грексен Зевс туррине пуççапакан чӳк пуçĕ вĕсемшĕн чӳк тутарасшăн пулнă. Анчах та Варнавăпа Павел апостолсем, хăйсем ячĕпе чӳк тăвасси çинчен илтсен, тарăхнипе çийĕнчи тумтирĕсене çурса ярсах, çапла кăшкăрнă: «Эй, халăх! Мĕн хăтланатăр эсир? Эпир сирнешкел çынсемех! Эпир сире суя турăсене ан пуççапчăр тесе, чĕрĕ Турă енне çаврăнччăр тесе вĕрентетпĕр. Чĕрĕ Турă тӳпене те, çĕре те, тинĕсе те тата вĕсенче мĕн пуррине те пултарнă. Ĕлĕк-авал Турă кашни халăха харпăр хăй çулĕпе çӳреме ирĕк панă. Çапах та Вăл ырă ĕçĕсемпе пире Хăй çинчен астутарсах тăнă: çумăр çутарнă, тырă-пулăллă çулсем янă, апат-çимĕç панă, чуна савăнтарнă».

Апостолсем Листрăра та хăюллăн вĕрентнĕ. Анчах та Листрăна пынă хăш-пĕр иудейсем халăха хĕтĕртсе каланă: «Вĕсем чăн сăмах каламаççĕ, суяççĕ кăна!» Павела чулпа персе пĕтернĕ, анчах та Турă ăна упраса хăварнă. Вăл каллех çула тухнă. Листрăран Павел Дерви хулине çитнĕ. Вăл унта та Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳренĕ, нумай çын Хуçамăр енне çаврăннă. Кайран Павелпа Варнава Дервирен Антиохине таврăннă. Турă тивлечĕпе вĕсем çак хуларан тĕн сармашкăн тухса кайнă, ĕнтĕ вĕсем çав ĕçе пурнăçланă. Таврăнсассăн апостолсем ĕненекенсен ушкăнне пухнă. Вĕсем ĕненекенсене Турă епле хăйсем вĕрентни урлă ытти халăхсене те ĕненӳ алăкне уçса панине каласа кăтартнă.

Павел апостолăн тĕн сармалли малтанхи çулçӳревĕ виçĕ çула яхăн тăсăлнă.

*МАТФЕЙ 28:19–20; АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 13; 14*



# ПАВЕЛĂН ТĔН САРМАЛЛИ ИККĔМĔШ ÇУЛÇӲРЕВĔ

Тĕн сармалли иккĕмĕш çулçӳреве Павелпа пĕрле еврей христианĕ Сила та пынă. Антиохирен вĕсем каллех Дервипе Листра хулисене кайнă. (Шăпах Листра хулинче темиçе çул маларах Павела кăшт кăна чулпа персе вĕлермен.) Павел кунта Тимофей ятлă çамрăкпа паллашнă, Тимофей вара унăн шанчăклă пулăшаканĕ пулса тăнă.

Вĕсем Эгей тинĕсĕн Ази енчи çыранĕнче вырнаçнă Троада хулине пырса çитнĕ. Çĕрле вара Павела хăйпе юнашар пĕр Македони çынни пырса тăнă пек курăннă. «Македонине пырса пире пулăшсам», – тесе йăлăннă çав çын. «Çакнашкал курăну хыççăн эпир тӳрех Македонине кайма шухăшларăмăр, Турă пире унта Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳреме чĕнет пулĕ терĕмĕр», – çырать Апостолсен Ĕçĕ-хĕлĕ кĕнеке авторĕ Лука евангелист. Хăй вăл Павелпа пĕрле Троада хулинчен çула тухнă пулас. Македони çурçĕр-хĕвел тухăç Грецири Рим çĕрĕ пулнă. Эгей тинĕсĕ урлă караппа ишсе каçса, вĕсем Филиппы хулине çитнĕ. Европăра христиансен чи малтанхи ушкăнĕ шăпах Филиппăра йĕркеленнĕ пулмалла. Филиппы хулинче Павелпа Силăна тĕрмене тытса хупнă, ун пирки тепĕр калавра çырса кăтартăпăр. Филиппăран Павел Эгей тинĕсĕ хĕрринчи карапсем чарăнакан Фессалоники ятлă пысăк хулана пынă. Кунти нумай-нумай грек çынни, çав шутрах хăш-пĕр еврейсем те, Христоса ĕненме пуçланă. Анчах та еврейсем хушшинче Павелпа Силăна курайман çынсем те пулнă. Çавсем халăха Павелпа Силăна хирĕç тăратнă пирки вĕсен Вери хулине тухса кайма тивнĕ. Верирен Павел Грецин тĕп хулине Афинăна çитнĕ. Вăл вăхăтра Греци Рима пăхăнса тăнă. Греци ятне ун чухне Ахаия ятпа ылмаштарнă. Афинăра Павел философсемпе хура халăха Турă Сăмахне вĕрентнĕ. Кун пирки те эпир тепĕр калавра вуласа пĕлĕпĕр. Афинăран Павел Рим империйĕн чи паллă хулисенчен пĕрне, Коринфа, çитнĕ. Коринфра вăл çулталăк çурă хушши пурăннă, çав хушăра кунта христиансен пысăк ушкăнне (чиркĕвне) никĕсленĕ. Коринфран Павел тинĕспе Кĕçĕн Азие таврăннă та Ефес ятлă пысăк хулана пырса çитнĕ. Çулне малалла тăсса, вăл Иерусалим урлă Антиохине таврăннă.

Павелăн иккĕмĕш çулçӳревĕ те, темиçе пин çухрăмлă çулçӳрев, виçĕ çула яхăн тăсăлнă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 15:36 – 18:22*



## ПАВЕЛПА СИЛА ТĔРМЕРЕ

Пĕррехинче Павел апостол хăйĕн юлташĕпе Силăпа пĕрле Рима пăхăнса тăракан Филиппы хулине пынă. Иисус Христос ячĕпе унта вĕсем малашне мĕн пуласса пĕлтерекен, усал ернĕ пĕр хĕрарăм тарçăна сыватнă. Çак хĕрарăм, малашне мĕн пулассине пĕлтерсе, хуçисене чылай тупăш кӳнĕ пулнă. Хăйсен илес тупăшĕ пĕтнине туйса илнĕ хуçисем вара Павелпа Силăна ярса тытнă та хула варрине, пуçлăхсем патне, сĕтĕрсе кайнă. «Çак çынсем – иудейсем, вĕсем хула халăхне пăтратса çӳреççĕ. Вĕсем вĕрентекен йăласене пирĕн, Рим çыннисен, йышăнма та, тытса пыма та юрамасть», – тенĕ вĕсем пуçлăхсене. Халăх та Павелпа Силăна хирĕçле пулнă. Вара çар пуçĕсем апостолсене вăйпа хывăнтарса патакпа çаптарнă. Унтан вĕсене тĕрмене хупса, хуралçăна тĕрмене хытă сыхлама хушса хăварнă. Хушнине пурнăçласа, хуралçă вĕсене тĕрмен шалти пӳлĕмне хупнă, урисене йывăç тăлă тăхăнтартнă. Çапах та Павелпа Сила хуйха ӳкмен. Çур çĕр тĕлнелле вĕсем кĕлтунă, Турра мухтаса юрланă, тĕрмере ларакан ытти çынсем вĕсен юрри-кĕллине итленĕ.

Сасартăк тĕрме никĕсĕ те хускалмалла питĕ вăйлăн çĕр чĕтренсе кайнă. Çавăнтах алăксем яри уçăлнă, тĕрмере ларакансен сăнчăрĕсем татăлса ӳкнĕ. Тĕрме хуралçи вăраннă та, мĕн пулса иртнине курсан, тĕрмере ларакансем пурте тарса пĕтнĕ пулĕ тесе, хăйне хăй вĕлересшĕн пулнă. Анчах та Павел ăна çапла каланă: «Хăвна ан пĕтерех! Эпир пурсăмăр та кунтах!» Хуралçă хăранипе чĕтресе Павелпа Сила умне чĕркуçленнĕ: «Эй, ырă çыннăмăрсем! Çăлăнас тесен манăн мĕн тумалла ĕнтĕ?» – тесе ыйтнă вĕсенчен. «Иисус Христос Хуçамăра ĕнен, вара ху та, кил-йышу та çăлăнĕ», – тавăрнă вĕсем. Унтан хуралçă вĕсене тĕрмерен илсе тухнă та вĕсен суранĕсене çуса тасатнă, вара тӳрех хăй те, пĕтĕм кил-йышĕ те тĕне кĕнĕ.

Тепĕр кунне çар пуçĕсем, хăйсем хуптарнă Павелпа Силăна ирĕке кăларма хушса, хула хуралçисене тĕрме хуралçи патне янă. Анчах та Павел çапла каланă: «Пире, Рим гражданĕсене, пĕтĕм халăх умĕнче судсăр-мĕнсĕр патакпа çаптарчĕç, унтан тĕрмене хупрĕç. Халĕ вара вăрттăн кăларса ярасшăн-и? Çук, хăйсем килсе хăйсемех кăларса ячăр пире». Хула хуралçисем çак сăмахсене кайса çар пуçĕсене каласа панă. Апостолсем Рим гражданĕсем пулнине пĕлсен хайхисен сехри хăпнă. Вара вĕсем тĕрмене пырсах каçару ыйтнă. Тĕрмерен илсе тухсан вĕсем Павелпа Силăна хуларан кайма тархасланă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 16:16–39*



## ПАВЕЛ АФИНĂРА

Каланăччĕ ĕнтĕ, тĕн сармалли иккĕмĕш çулçӳревĕнче Павел Афинăра та пулса курнă. Афины хули хăй вăхăтĕнче тĕнче культурин центрĕ, чаплă философсем – Сократ, Платон, Аристотель тата ыттисем те – çуралнă хула пулнă. Пуççапмалли кĕлеткесем хулипех тăнине курсан Павелăн чунĕ тăвăлсах çитнĕ. Вăл кашни кунах иудейсемпе тата Турра хисеплекен ытти çынсемпе синагогăра калаçнă, пасар вырăнĕнчи çынсемпе те тĕл пулса сăмахланă. Хăш-пĕр философсем – эпикурсемпе стоиксем – унпа тавлашнă. «Çак пуш параппан мĕн каласшăн ара?» – тенĕ пĕрисем. «Вăл темле ют турăсем çинчен вĕрентет пулас», – тенĕ тата теприсем. Вĕсем Иисус Христос чĕрĕлсе тăни çинчен Павел каланине илтнĕ пулнă.

Унтан вĕсем Павела ареопага* илсе кайнă. «Пире те каласа парсамччĕ, – тенĕ вĕсем, – мĕнле çĕнĕ вĕрентӳ çинчен калаçатăн эсĕ? Итлетпĕр те – эсĕ темле ăнланмалла мар япаласем çинчен калаçатăн». Павел пуху умне тухса каланă: «Эй, Афины çыннисем! Сăнатăп та сире – эсир Турра питĕ хисепленине куратăп. Сирĕн сăваплă вырăнăрсене пăхса çӳренĕ чухне эпĕ пĕр чӳк вырăнĕ асăрхарăм. Çавăнта „пĕлмен Турă валли“ тесе çырса хунăччĕ. Эпĕ сире шăпах хăвăр пĕлмесĕр пуççапакан çав Турă çинчен вĕрентетĕп те: тĕнчене тата мĕн пуррине пĕтĕмпех пултарнă Турă – çĕрпе пĕлĕт Хуçи. Вăл этем лартнă кĕлĕ çурчĕсенче пурăнмасть, этем аллипе туни нимĕн те Ăна кирлĕ мар. Вăл Хăй пурне те пурăнăçпа сывлăш тата тем те пĕр парса тăрать. Пĕтĕм çĕр çинче пурăнччăр тесе, Вăл пĕр этемрен пĕтĕм этемлĕхе пултарнă. Турă пирĕнтен кашнинчен инçех мар пулин те, çынсем Хăйне шыраччăр тенĕ, чун-чĕрепе туйса Мана тупчăр тенĕ. Эпир Вăл пуртан пурăнатпăр, çӳретпĕр, хамăр та пур. Сирĕн хăш-пĕр сăвăçăрсем калашле: „Эпир – Унăн йăхĕнчен“. Çапла ĕнтĕ, эпир хамăр Турă йăхĕнчен пулнине пĕлетпĕр. Эппин, Турă этем шухăшласа кăларнă, ылтăнран та кĕмĕлтен, чултан ăсталаса тунă кĕлеткесем евĕрлĕ тесе шухăшлани тĕрĕс мар. Эпир ĕлĕк ним пĕлменнине каçарса, Турă халĕ пур çынсене те, пур çĕрте те ӳкĕнме хушать. Хăй малтанах суйласа илнĕ Çын урлă пĕтĕм тĕнчене тĕрĕс суд тумалли куна Турă палăртса хунă ĕнтĕ. Çавна çынсене пурне те ĕнентерес тесе, Турă Ăна вилĕмрен чĕртсе тăратнă».

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 17:16–31*

* *Ареопаг – пуçлăхсен пухăвĕ.*



## ПАВЕЛĂН ТĔН САРМАЛЛИ ВИÇÇĔМĔШ ÇУЛÇŸРЕВĔ

Тепĕртакран Павел тĕн сармалли виççĕмĕш çулçÿревне тухать. Антиохирен вăл каллех çурçĕрелле çул тытать. Фриги çĕрĕ витĕр тухсан, вăл Эгей тинĕсĕн Аси енчи çыранĕнче вырнаçнă, Ефес портне пырать. Ефес пысăк хула пулнă, унта чĕрĕк миллион çын пурăннă. Ку хулара Павел икĕ çула яхăн ĕçленĕ. Çавна пула пĕтĕм Аси çĕрĕнчи çынсем – иудейсем те, грексем те – Иисус Хуçамăр çинчен вĕрентнине илтнĕ (Вăл вăхăтра Аси тесе хальхи Кĕçĕн Азин пĕр пайне каланă). Турă вара Павел урлă нумай хăват кăтартнă.

Ефесра тĕнчери çичĕ тĕлĕнтермĕшрен пĕри – Артемида хĕрарăм туррăн мрамортан тунă чаплă кĕлĕ çурчĕ – пулнă. Ăна 220 çул хушши купаланă. Кĕмĕл ăстисемпе ÿкерÿçĕсем Артемидăна кĕлтумалли çуртăн пĕчĕк ĕлкине кĕмĕлтен туса сутса пурăннă. Вĕсем Павела тата Христос вĕрентĕвĕн ытти ертÿçисене хирĕç хулара пысăк пăлхав çĕкленĕ. Мĕншĕн тесен Артемидăна пуççапакансем чылайăшĕ чĕрĕ Турă енне çавăрăннă. Пăлхава пула Павелăн Ефесран кайма тивнĕ. Эгей тинĕсĕ урлă карапра ишсе каçса вăл Македонипе Грецири малтан вĕрентсе çÿренĕ вырăнсене, çав шутрах Филиппы тата Коринф хулисене, çитсе курнă. Кайран вăл Асие тавăрăннă та Троадăра иккĕмĕш хут вĕрентнĕ. Троадăран Павел Асс хулине çитнĕ, унтан вара карапра Митилина, Самос, Трогилли, Милет тăрăхĕсемпе иртнĕ. Павел Милета Ефесри ĕненекенсем йышлă çÿрекен чиркÿ пресвитерĕсене чĕнтернĕ, урăх вĕсене кураймасса пĕлсе, вĕсемпе сывпуллашнă. Унтан вăл, Кос тата Родос утравĕн порчĕсене, Кĕçĕн Азири Патару тата Тир ятлă портсене çитсе курнă хыççăн, Птолемаидăна пынă. Птолемаидăран çулçÿревçĕ çуранах Кесари çĕрĕ витĕр тухса Иерусалима çитнĕ. Павела Иерусалимра тытса хупаççĕ. Виççĕмĕш çулçÿревĕнче Павел виçĕ çул ытла – Христос Çуралнăранпа 54-мĕш çултан пуçласа 57-мĕш çулччен – пулнă.

Тĕн сармалли çулçÿревĕсенче, Иисус Христос çинчен Ырă Хыпар пĕлтерсе çÿренĕ чухне Павелăн нумай асап курма тивнĕ. Павел хăй ун пирки çапла çырать: «Эпĕ нумай тăрмашса ĕçлерĕм, аманса пĕтрĕм, тĕрмесенче чылай лартăм, темиçе хут вилес патне çитрĕм. Иудейсем мана чĕн пушăпа пилĕк хутчен вăтăр тăхăршар çаптарчĕç, виçĕ хутчен патакпа хĕнерĕç, пĕррехинче тата чулпа персе вĕлересшĕн пулчĕç. Виçĕ хутчен эпĕ карап путнине тÿссе ирттертĕм; тинĕс шывĕнче пĕр кун та пĕр каç пулма тиврĕ. Нумай çул çÿрерĕм, нумай хăрушлăх куртăм: юхан шывсем çинче те, вăрă-хурахсенчен те, хамăр халăх çыннисенчен те, ют халăх çыннисенчен те, хулара та, пуш хирте те, тинĕсре те, суя ĕненÿллĕ тăвансенчен те...»

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 18:23 – 21:34; КОРИНФСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ 2-МĔШ ÇЫРУ 11:23–26*



# АСАМЛАСА ÇЫЛĂХА КĔНИ

Турă хăйĕн халăхне кирек епле ăрăмпа та, юмпа та, тухатупа та, вĕрӳ-сурупа та аппаланма çирĕппĕн чарни çинчен эпир Авалхи Килĕшĕве вуласа пĕлетпĕр. «Ан тухатăр, ан юмлăр» *(Левит 19:26)* текен чарăва пăхăнманнисене Турă вĕлерме те ирĕк панă. «Сирĕн хушшăрта ывăлне е хĕрне вут урлă сиктерекен ан пултăр. Çапла тата малашнехине пĕлтерекенсем, юмăçсем, тухатмăшсем, ăрăмçăсем, асамçăсем, усал сывлăшсемпе вилнисен чунĕсене чĕнекенсем ан пулччăр. Мĕншĕн тесен çакна тăвакансенчен кашниех Турă умĕнче ирсĕр. Çакнашкал ирсĕрлĕхшĕн Хуçамăр, санăн Турру, вĕсене сирĕнтен хӳтерет» *(Саккуна астутарни 18:10–12)*. «Кам та кам вилнисен чунне чĕнет е тухатать, арçын-и е хĕрарăм, çавă вилĕме тивĕç; вĕсене чулпа персе вĕлермелле, хăйсен вилĕмĕшĕн вĕсем хăйсемех яваплă» *(Левит 20:27)*.

Акă Павел апостолăн тĕн сармалли виççĕмĕш çулçӳревĕнче Ефес хулинче пулса иртнĕ пĕр тĕслĕх. Турă унта Павел урлă тĕлĕнмелле ĕçсем нумай тунă. Çынсем чирлисене Павел тутăрĕпе е саппунĕпе витсен, лешсем сывалнă. Вĕсем ăшĕнчи усал сывлăшсем те туха-туха тарнă, çавăнпа та ялтан яла çӳрекен хăш-пĕр тухатмăш иудейсем те Иисус Христос Хуçамăр ятне асăна пуçланă. Усал сывлăш ернĕ çынсене вĕсем: «Павел каласа пĕлтерекен Иисус Хуçамăр ячĕпе тухататпăр!» – тенĕ. Тĕслĕхрен, иудейсен Скева ятлă аслă священникăн çичĕ ывăлĕ çапла хăтланса çӳренĕ. Анчах та пĕррехинче усал сывлăш вĕсене çапла каланă: «Иисуса та пĕлетĕп, Павела та пĕлетĕп, эсир вара кам пулатăр?» Унтан усал ернĕ çын Скева ывăлĕсем çине сиксе ӳкнĕ те вĕсене çĕнтерсе парăнтарнă. Вара вĕсем, хĕнесе пĕтернĕскерсем, çав çуртран çарамасах тухса тарнă. Ефесра пурăнакан иудейсемпе грексем çак ĕç çинчен пĕлсен хăраса ӳкнĕ. Çавăнтанпа пурте Иисус Христос ятне хисеплеме пуçланă. Вара Хуçамăра ĕненекен нумай çын пыра-пыра хăйсен ĕçĕсем пирки пĕр пытармасăр каласа кăтартнă. Чылай тухатмăш-юмăç та, хăйсен ăрăм кĕнекисене пĕр çĕре пуххса, пĕтĕм халăх умĕнче çунтарса янă. Унтан çунтарса янă кĕнекесен хакне шутласа пăхнă, вĕсен хакĕ аллă пин кĕмĕл укçана яхăн пулнă. Хуçамăр сăмахĕ çапла сарăлнăçемĕн сарăлсах, хăватланнăçемĕн хăватлансах пынă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 19:11–20*



## ПАВЕЛ АПОСТОЛ ЕФЕС ЧИРКĔВĔН ПРЕСВИТЕРĔСЕМПЕ СЫВПУЛЛАШНИ

Ефесри чиркĕвĕн пресвитерĕсем Павел патне Милета унпа сывпуллашма пырсан, Павел вĕсене çапла каланă: «Асие килнĕренпех, малтанхи кунран пуçласах, эпĕ яланах сирĕнпе пулнине эсир пĕлетĕр. Иудейсен каварлă шухăшне пула нумай куççуль тăкма лекрĕ пулин те, эпĕ пĕтĕм йăвашлăхăмпа Хуçамăршăн ĕçлерĕм. Усă çăнах, пĕтĕм халăх умĕнче те, килрен киле çӳресе те, сире усса кайтăрччĕ тесе, ним пытармасăр вĕрентрĕм. Иудейсене те, грексене те эпĕ ӳкĕнсе Турă енне çавăрăнмалли çинчен, Иисус Христос Хуçамăра ĕненмелли çинчен кала-кала кăтартрăм. Халĕ ĕнтĕ, Турă Сывлăшĕн туртăмне пăхăнса, манăн Иерусалима каймалла. Эпĕ унта хама мĕн кĕтнине те пĕлместĕп. Хама асаппа тĕрме кĕтни çинчен мана Турă Сывлăшĕ кашни хуларах асăрхаттарать. Анчах та эпĕ пурăнăçăма нимĕн чухлĕ те шеллеместĕп, ниме пăхмасăр хамăн çул-йĕрĕме вĕçне çити савăнса утса тухаясчĕ кăна. Иисус Хуçамăр хама шанса панă ĕçе – Турă тивлечĕллĕ Ырă Хыпара вĕрентессине – вĕçне çити хавасланса туса тăраясчĕ кăна. Эпĕ сирĕн хушшăрта Турă Патшалăхĕ çинчен вĕрентсе çӳрерĕм. Ĕнтĕ тек эсир мана кураяс çуккине пĕлетĕп. Эпĕ кайнă хыççăн кĕтĕве хĕрхенмен тискер кашкăрсем сирĕн патăра пырасса пĕлетĕп. Вĕренекенсене хăйсем хыççăн илсе каяс тесе ултавлă калаçакансем те хăвăр хушшăртанах тупăнĕç. Эй, тăванăмсем! Халĕ ĕнтĕ эпĕ сире Турă аллине, Унăн тивлетлĕ сăмахĕн хӳттине шанса парса хăваратăп. Турă сăмахĕ сире ӳкĕтлесех тăрĕ, Турă суйланă мĕн пур халăхпа пĕрле сире те еткерне парĕ. Эпĕ никамран та ылтăн-кĕмĕл те, çи-пуç та илесшĕн пулмарăм. Хама тата юлташăмсене кирлине хамăн çак аллăмсемпе ĕçлесе илнине эсир пĕлетĕр. Çапла тăрăшса халсăррисене пулăшмаллине, Иисус Хуçамăр сăмахне асра тытмаллине эпĕ сире хамăн тĕслĕхĕмпе кăтартса патăм. Мĕншĕн тесен Вăл Хăй çапла каланă: „Парасси илессинчен пахарах“». Çак сăмахсене каласан Павел чĕркуçленсе ларнă та ыттисемпе пĕрле кĕлтунă. Çавăн чухне пурте йĕрсех янă, Павела ытала-ытала чуптунă. Тек эсир мана кураяс çук тесе каланă Павелăн сăмахĕсем вĕсен чунĕсене уйрăммăнах хытă пырса тивнĕ. Кайран вĕсем ăна карап патне çитичченех ăсатса янă.

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 20:17–38*



## ПАВЕЛ – ФЕСТ АСЛĂ ПУÇЛĂХ ПАТĔНЧЕ

Павела Иерусалимра тытсан тепĕр куннех ăна синедриона илсе пынă. Апостол судра сăмах каланă хыççăн иудейсем пĕр-пĕринпе тавлашса кайнă. Тавлашу хĕрнĕçемĕн хĕрсе пынă, Павела вилеслех хĕнеме пуçланă. Çавăнпа пинпӳ салтаксене Павела крепоçе илсе кайма хушнă.

Çав каçах крепоçри Павела Хуçамăр курăннă. «Хастар пул! – тенĕ Вăл. – Эсĕ Ман пирки Иерусалимра мĕнле каласа пĕлтертĕн, Римра та çавнашкалах пĕлтерĕн-ха». Тепĕр кунне хĕрĕхе яхăн иудей Павела вĕлермесĕр ĕçместпĕр те, çиместпĕр те тесе тупа тунă. Çакна пĕлсен Павела синедрионра çăлса хăварнă пинпӳ ăна Кесарине леçме хушнă. Çул çинче Павела хураллама вăл ик çĕр салтак, çитмĕл юланут тата ик çĕр ухăçă уйăрса панă. Кесарире вăл вăхăтра Иудейăри Рим лартнă пуçлăхсем пурăннă. Павела Кесарире тĕпчесе ыйтса пĕлмешкĕн Рим лартнă Феликс аслă пуçлăх патне илсе пынă. Павела айăпласа каланине итлесе пĕтерсен Феликс ăна айăплама нимле сăлтав та тупайман. Çапах та вăл Павела икĕ çуллăха тĕрмене хупма хушнă.

Икĕ çул иртсен Феликс вырăнне аслă пуçлăха Порций Фест лартнă. Тепĕр темиçе кунран Феста аслă пуçлăха лартнă ятпа саламлама Кесарине Иудея патши Агриппа тата унăн арăмĕ Вереника пырса çитнĕ. Фест йĕркеленипе вĕсен иккĕшĕн те Павел сăмахне итлеме тӳр килнĕ. Агриппа патшапа Вереника суд çуртне питĕ чаплăн, хăйсемпе пĕрле пинпӳсемпе ятлă-сумлă çынсене илсе, пырса кĕнĕ. Павела та унта илсе пынă. Вăл хăйĕн пурăнăçĕ çинчен, Хуçамăра епле ĕненме пуçлани çинчен, Христос çинчен каласа пĕлтернĕ. «Турă пулăшнипе эпĕ паян кунччենех пурне те, пĕчĕккисенчен пуçласа аслисем таранах, çакна каласа çирĕплететĕп: Христосăн асап тӳсмеллеччĕ, вилнисенчен чăн малтан чĕрĕлсе тăрса иудей халăхне те, ытти халăхсене те çутă çинчен пĕлтермеллеччĕ», – тенĕ Павел.

Вара Фест Павела пӳлсех хыттăн çапла каланă: «Павел! Эсĕ ăсран тайăлнă! Нумай пĕлни сана ухмаха ертет». «Аслăран та аслă Фест, – тавăрнă ăна Павел, – эпĕ ухмаха ермен, ăслă-тăнлă пуçăмпах чăнлăх çинчен калатăп. Паян хама итлекенсем пурте манашкал пулччăр тесе, Турра кĕлтăвăттăм, анчах та вĕсем манашкал сăнчăрта ан пулччăр».

*АПОСТОЛСЕН ĔÇĔ-ХĔЛĔ 23 – 26*



## ПАВЕЛ РИМА ÇУЛА ТУХНИ

Чӗрӗ Турӑпа Иисус Христос Çӑлаканӑмӑр çинчен çирӗплетсе каланӑшӑн Павел апостола тӗрмене хупнӑ. Анчах та Павел, хӑй айӑпа кӗмелли нимӗн те туманнине пӗлсе, хӑйне император сучӗ умне тӑратма ыйтнӑ. Хӑй Рим гражданинӗ пулнӑ май Павелӑн çапла ыйтма тивӗçӗ пулнӑ. Çавӑнпа та ӑна тӗрмене хупнӑ ытти çынсемпе пӗрле Рима карапппа янӑ, Юлий çӗрпӗве Павела хуралллама хушнӑ.

Тинӗспе ишсе пынӑ чухне вӑйлӑ çил-тӑвӑл тухса кайнӑ, карапа хумсем тӑрӑх хӑвала пуçланӑ. Виççӗмӗш кунне çынсем карап çине тиенӗ япалисене пӗтӗмпех тинӗсе ывӑтса пӗтернӗ. Çил-тӑвӑл темиçе кун хушши лӑпланманран карап çинчисен çӑлӑнас шанчӑкӗ те пӗтнӗ. Çынсем выçса çитнӗ. Вара Павел пурне те çапла каланӑ: «Тархаслатӑп, хӑюллӑрах пулӑр! Карапӗ пӗтӗ, эсир пурте хӑтӑлӑр. Мана кӗçӗр чун-чӗремпе Ӑна çеç парӑнса, Уншӑн çеç ӗçлесе тӑракан Туррӑмӑн ангелӗ курӑнчӗ. „Ан хӑра, – терӗ мана çав ангел. – Санӑн император сучӗ умне тӑмалла, çавӑнпа та Турӑ, сана çӑлас тесе, карап çинчисене пурне те хӑтарӗ“. Эппин, арçын пек пулса, хастарланӑр! Йӑлтах Турӑ каланӑ пек пуласса эпӗ ӗненетӗп. Пирӗн пӗр утрав çине тухса ӳкмелле пулӗ».

Тинӗсе тухни вун тӑватӑ кун иртсен матроссем сӗвек çыранлӑ пӗр тинӗс пырне асӑрхарӗç, май пулсан, çавӑнта чарӑнма шут тытрӗç. Вара, якорьсене çӗклесе, пӗчӗк парӑссене карӑнтарса, карапа çыран еннелле тытрӗç. Анчах та карап ӑшӑха ларчӗ: карап пуçӗ шыва путрӗ, хыçне хум çапса арката пуçларӗ. Ишме пӗлекенсене çӗрпӳ çыраналла ишме хушрӗ, ыттисене вара хӑмасенчен е карап çӗмрӗкӗсенчен тыткаласа хӑтӑлма каларӗ. Çапла майпа карап çинчи ик çӗр çитмӗлултӑ çын пурте çӑлӑнса юлчӗç. Утрав çинче пурӑнакансем вӗсене хапӑл тусах йышӑннӑ. Хуçамӑр çав утрав çинче Павел апостол урлӑ нумай хӑват кӑтартнӑ. Тепӗр виçӗ уйӑхран вӗсем пӗр Александри карапӗпе малалла Рима çул тытнӑ. Павел апостол çав утрав çинче чирлисене нумай сыватнӑ. Çавӑнпа та унта пурӑнакансем вӗсене чылайччен тав туса, çул çине мӗн кирлине пӗтӗмпех парса ӑсатнӑ.

Павел апостол Хуçамӑршӑн кайран та нумай тӑрӑшнӑ, хура-шурне те чылай курнӑ. Хӑйӗн кашни утӑмне пуринчен те хӑватлӑ, ырӑ кӑмӑллӑ Турӑ тутарнине Павел çирӗп ӗненнӗ. Римсем патне янӑ çырура вӑл çапла çырнӑ: «Турра юратакансене, Турӑ ирӗкӗпе суйласа илнисене кирек мӗн те ырӑлӑх кӳрет».

*АПОСТОЛСЕН ӖÇӖ-ХӖЛӖ 25:1–12; 27:14–44; 28:1–11;*
*РИМСЕМ ПАТНЕ ЯНӐ ÇЫРУ 8:28*



# ПАВЕЛ РИМРА

Апостолсен Ĕҫĕ-хĕлĕ кĕнеке авторĕ Лука евангелист ҫапла ҫырать:

«Рима ҫитсен ҫĕрпӳ тĕрме ҫыннисене ҫар пуҫĕн аллине пачĕ. Павела вара, хăйне хураллакан салтакпа пĕрле, уйрăммăн пурăнмашкăн ирĕк пачĕ. Тепĕр виҫĕ кунран Павел Римра пурăнакан ятлă-сумлă иудейсене чĕнтерчĕ. Палăртнă кун вĕсем ун патне, хăна ҫуртне, пынă. Павел вĕсене иртен пуҫласа каҫченех Турă Патшалăхĕ ҫинчен вĕрентнĕ. Хăйĕн сăмахĕсене вăл Моисей саккунĕнче тата пророксен кĕнекинче Иисус ҫинчен пĕлтерекен вырăнсемпе ҫирĕплетсе панă. Хăш-пĕрисене вăл ӳкĕте кĕртнĕ, хăшĕсем вара ĕненмен. Вĕсем пĕр чĕлхе тупаймасăрах кайма пуҫтарăнсан, Павел ҫапла каланă: «Мăн асаттемĕрсене Турă Сывлăшĕ Исаия пророк сăмахĕсемпе аван каланă иккен: „Ҫак халăха ҫапла кайса кала: ‘Хăлхапа илтсессĕн те ăнланаймăр, куҫпа пăхсассăн та кураймăр’. Мĕншĕн тесен ҫак ҫынсен чун-чĕри хытса ларнă, хăлхисем те аран илтеҫҫĕ, куҫĕсем те хупă. Вĕсем куҫ ан куртăр, хăлха ан илттĕр, чун-чĕре ан туйтăр теҫҫĕ. Сываттăрччĕ тесе, Ман патăма пымаҫҫĕ“. Ҫапла ĕнтĕ пĕлсех тăрăр: Туррăн ҫăлăнăҫне ытти халăхсене панă, итлекенĕсем те вĕсемех пулĕҫ». Ҫакна илтсен иудейсем пĕр-пĕринпе тавлаша-тавлаша тухса кайнă.

Павел Римра икĕ ҫула яхăн пулнă. Унта вăл хăй ĕҫлесе-тăранса пурăннă, хăйĕн патне пыракансене пурне те хапăл тунă. Павел Турă Патшалăхĕ ҫинчен, Иисус Христос Хуҫамăр ҫинчен хăюллăн та пĕр чăрмавсăр вĕрентнĕ».

Ҫак сăмахсемпе вĕҫленет Апостолсен Ĕҫĕ-хĕлĕ кĕнеке.

Вулакансене Павел апостолăн малашнехи шăпи кăсăклантарать пулĕ. Библире ун пирки нимĕн те каламан. Анчах та Павел апостолăн ĕненекенсен ушкăнĕсем патне, уйрăм ҫынсем патне ҫырнă ҫырăвĕсенчен ҫакă курăнать: Павел икĕ ҫул тĕрмере ларса тухнă хыҫҫăн – ун пирки пĕрре асăннăччĕ ĕнтĕ – Италире, Грецире, Кĕҫĕн Азире Ырă Хыпар пĕлтерсе, Турăшăн ĕҫлесе пурăннă. Халап тăрăх, Рим императорĕ Нерон христиансене хаярррăн хĕсĕрленĕ чухне Павел апостола асаплантарса вĕлернĕ.

*АПОСТОЛСЕН ĔҪĔ-ХĔЛĔ 28:23–31*



## АПОСТОЛСЕН ÇЫРĂВĔСЕМ

Иисус Христос Хуçамăр вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă хыççăнах Унăн вĕрентĕвĕ – Ырă Хыпар – Палестинăра, пĕтĕм Рим империйĕнче, Çывăх Хĕвел тухăçĕнчи çĕр-шывсенче, унтан вара пĕтĕм тĕнчипех хăвăрт сарăлма пуçлать. Апостолсем – урăхла каласан, Иисус Христос Хăй суйласа илнĕ вĕренекенĕсем – тата Ун хыççăн пынă ытти хăш-пĕр вĕренекенĕсем тĕрлĕ хуласемпе çĕр-шывсенче Турă сăмахне вĕрентсе çӳренĕ. Хуçамăр вĕсен сăмахĕсене тĕлĕнмелле ĕçсемпе çирĕплетсех тăнă. Вĕсем Иисус Христос ячĕпе Турра кĕлтусан, чирлисем тасалнă, чăлахсем сывалнă, вилнисем чĕрĕлсе тăни те пулнă. Çакна куракансем, Турă сăмахне чĕререн йышăнса, çылăхлă çул-йĕртен пăраннă. Христиансене йĕрленĕ, хĕсĕрленĕ пулин те, Турă Ывăлне Иисус Христоса ĕненни хĕсĕрлеврен хăранинчен вăйлăрах пулнă.

Христоса анчахрах ĕненме пуçланисен ĕненĕвне çирĕплетме апостолсем чиркӳсене çырусем çырса янă. Çырусенчен хăшĕсем питĕ кĕске, пĕр листа кăна пулнă, теприсем вара, калăпăр, Римсем патне янă Çыру, питĕ вăрăм. Иаков, Петр, Иоанн тата Иуда хăйсен çырăвĕсене мĕн пур христиансем валли çырнă, çавăнпа та вĕсене пĕтĕмĕшле çырусем теççĕ. Павел апостол вара хăйĕн çырăвĕсене уйрăм çынсем е чиркӳсем валли çырнă.

Павел апостол хăш-пĕр çырăвĕсене тĕрмере çырнă. «Вăрă-хураха сăнчăрланă пек, мана Ырă Хыпар пĕлтернĕшĕн сăнчăрларĕç. Анчах та Турă сăмахне сăнчăрлаймăн», – тесе çырнă Павел хăйĕн Тимофей тусĕ патне *(Тимофей патне янă 2-мĕш Çыру 2:9)*.

Апостолсем çак çырусене Турă Сывлăшĕ хавхалантарнипе çырнă. Çавăнпа та, Библин ытти пайĕсем пекех, çырусем те çынсене пĕлтернĕ Турă сăмахĕ пулса тăраççĕ. Малтанхи христиансем çак çырусене пĕр-пĕринчен тăрăшса çыра-çыра илнĕ; чиркӳсенче те, килте те вуланă, тусĕсене кăтартнă, парнеленĕ. Çапла вĕсем Турă сăмахне сарăлма май килтернĕ. Ун чухне хут пулман, çырасса вĕсем ӳсен-тăранран хатĕрленĕ папирус çине е ятарласа тутарнă тир çине – пергамент çине – çырнă.



## АПОСТОЛСЕН ÇЫРĂВĔСЕМ
### *(малалли)*

Апостолсен çырăвĕсем çинчен кĕскен каласа кăтартма çук. Кашни çыру авторнех Турă аслă чăнлăхсем уçса парса çыртарать. Апостолсен çырăвĕсенчи çак хăш-пĕр тĕп шухăшсене палăртма пулать:

Ĕненӳпе ĕçсем. *(Иаков янă Çыру)*

Асапсене пирĕн чăтăмлăн тӳссе ирттермелле. *(Петр янă 1-мĕш Çыру)*

Йĕркесĕр саманара, Турăран пăрăннă саманара тасалăхпа шанчăклăха епле упраса хăвармалла. *(Петр янă 2-мĕш Çыру)*

Савăнăçпа çĕнтерӳ. *(Иоанн янă 1-мĕш Çыру)*

Юрату. *(Иоанн янă 2-мĕш Çыру)*

Тараватлăх. *(Иоанн янă 3-мĕш Çыру)*

Ĕненĕве епле упраса хăвармалла тата çылăха кĕресрен мĕнле асăрханмалла. *(Иуда янă Çыру)*

Ĕненӳпе тӳрре тухасси. *(Римсем патне янă Çыру)*

Христос вăл — Хуçамăр. *(Коринфсем патне янă 1-мĕш Çыру)*

Турă лăплантарни, Турăшăн ĕçлесси. *(Коринфсем патне янă 2-мĕш Çыру)*

Çăлăнăçа саккуна пурнăçлани урлă мар, Христос урлă кăна тупма пулать. *(Галатсем патне янă Çыру)*

Чиркӳ — Христос ӳт-пĕвĕ. *(Ефессем патне янă Çыру)*

Христиансен пĕрлĕхĕ. *(Филиппăсем патне янă Çыру)*

Христосăн мухтавĕпе аслăлăхĕ. *(Колоссăсем патне янă Çыру)*

Иисус Христос Хуçамăр çĕр çине каллех килет. *(Фессалоникисем патне янă 1-мĕшпе 2-мĕш Çырусем)*

Хуçа Туррăмăршăн шанчăклă ĕçлесе тăрасси тата Ăна чунтан парăнасси. *(Тимофей патне янă 1-мĕшпе 2-мĕш Çырусем)*

Чиркӳре ĕçлесе тăракансен таса пурăнăç тĕслĕхĕ пулмалла. *(Тит патне янă Çыру)*

Пĕр-пĕрне каçармалла. *(Филимон патне янă Çыру)*

Чиркӳ — Çĕнĕ Израиль; Христос Хăй пурăнăçне парнене кӳнин туллилĕхĕ. *(Еврейсем патне янă Çыру)*

Çырусем Библин пысăк пĕлтерĕшлĕ пайĕ пулса тăраççĕ. Вĕсенчен нумайăшне ăнланма йывăр, çавăнпа та вĕсеневаскамасăр, тĕплĕн вуламалла.



# ИАКОВ ЯНӐ ҪЫРУ

Иаков янӑ Ҫырура эпир кӗске те тарӑн шухӑшлӑ каларӑшсемпе тата ӳкӗтсемпе тӗл пулатпӑр. Тӗслӗхрен, **вӑхӑтлӑх, пӗтме пӳрнӗ пуянлӑх ҫинчен:** «Хӗвел тухать те шӑрӑх ҫитет, курӑка ӗнтсе ярать. Курӑкӗ типет те, чечекӗ тӑкӑнать, унӑн илемӗ ҫухалать. Пуян ҫын та, мулшӑн ҫунсах, ҫавӑн пекех ҫухалать»; **илӗртӳ ҫинчен:** «Илӗртсе тӗрӗсленине тӳссе ирттерекен ҫын телейлӗ. Тивӗҫ пулсассан, вӑл пурӑнӑҫ пуҫкӑшӑлне илӗ. Турӑ ӑна Хӑйне юратакансене пама пулнӑ»; **ҫилӗ ҫинчен:** «Ҫапла вара, савнӑ тӑвансем, калаҫнинчен ытларах итлеме тӑрӑшӑр, ҫилленме ан васкӑр. Мӗншӗн тесен ҫилӗ этеме Турӑ умӗнчи тӳрӗлӗхрен пӑрса ярать»; **Туррӑн пил-хушӑвӗсене пурнӑҫласси ҫинчен:** «Сӑмаха итлекенсем ҫеҫ ан пулӑр, вӗсем хӑйсене хӑйсем улталаҫҫӗ кӑна. Эсир вара ҫав сӑмаха пурнӑҫлакансем пулӑр»; **ӗненӳ ҫинчен:** «Ӗненӳ те ҫавнашкалах, ӗҫпе ҫирӗплетмесен, хӑй халлӗн кӑна – вилӗ. Ҫапла ӗнтӗ, чун-чӗмсӗр кӗлетке вилӗ пекех, ӗҫсӗр ӗненӳ те вилӗ»; **чӗлхе ҫылӑхӗсем ҫинчен:** «Чӗлхе те ҫавнашкалах – ӳт-пӗвӗн пӗчӗк пайӗ ҫеҫ пулин те, нумай тӑвать. Кур-ха, пӗчӗкҫӗ ҫулӑм чӗлхиех мӗн пысӑкӑш вӑрмана хыптарса яма пултарать... Пӗр ҫӑлкуҫранах тӑварсӑр тата тӑварлӑ шыв тапса тӑни пур-и?»; **тупа туни ҫинчен:** «Эй, тӑвансемӗр! Чӑн малтанах эсир тупа тума пӑрахӑр: ҫӗрпе те, пӗлӗтпе те – нимӗнпе те тупа ан тӑвӑр. Айӑпланмалла пулас мар тесессӗн сирӗн сӑмахӑр: „Ҫапла, ҫапла“ тата „Ҫук, ҫук“, – тени кӑна пултӑр»; **чирлисем ҫинчен:** «Кам та пулин чирлӗ-и? Хӑй патне Чиркӳ ертӳҫисене (пресвитерсене) чӗнтӗр. Вӗсем уншӑн кӗлтуччӑр, Хуҫамӑр ячӗпе чирлин пуҫне олив ҫӑвӗ сӗрччӗр. Ҫирӗп ӗненсе кӗлтуни вара чирлӗ ҫынна сыватӗ, Турӑ ӑна ура ҫине тӑратӗ. Ҫав ҫын ҫылӑха кӗнӗ пулсан, ҫылӑхӗсем каҫарӑнӗҫ»; **ӳкӗнӳпе кӗлӗ ҫинчен:** «Хӑвӑр ҫылӑхӑрсене пӗр-пӗрне уҫса парӑр. Сывалас тесессӗн, пӗр-пӗриншӗн кӗлтӑвӑр. Тӳрӗ ҫын хӗрӳллӗн кӗлтуни тем тума та пултарать»; **чӑнлӑхран пӑрӑнса кайнисене юратасси ҫинчен:** «Эй, тӑвансем! Сирӗнтен пӗри-пӗри чӑнлӑхран пӑрӑнса кайсан, тепри ӑна чӑнлӑх ҫулӗ ҫине тавӑртӑр. Ҫакна пӗлсе тӑрӑр: суя ҫултан чӑнлӑх ҫулӗ ҫине тавӑраканӗ ҫылӑха кӗнин чунне вилӗмрен ҫӑлса хӑварать, хӑйӗн те нумай-нумай ҫылӑхӗсем каҫарӑнаҫҫӗ».



## ПЕТР АПОСТОЛĂН ИКĔ ÇЫРĂВĔ

Петр, Иисус Христосăн вун икĕ апостолĕнчен пĕри, Кĕçĕн Азири христиан чиркĕвĕсене икĕ çыру янă. Пĕрремĕш Çырăвне Петр хаяр хĕсĕрлевсем вăхăтĕнче çырнă тесе шутлаççĕ. Ун чухне Нерон император Рим империйĕнчи христианлăха тĕппипех пĕтересшĕн пулнă, çавăнпа та христиансене асаплантарнă, вĕлернĕ. Петр апостол, Христоса ĕненекен тăванĕсене хастарлатас тесе, çапла çырать:

Сире аçăрсенченех юлнă хĕвĕшӳллĕ пурăнăçран ылтăн-кĕмĕл тӳлесе илмен, айăпсăр та таса Путекĕн хаклă Юнĕпе – Христос Юнĕпе – тӳлесе илнĕ. Мĕншĕн тесен кирек епле ӳт-пӳ те курăк пек, этемĕн кирек епле чапĕ те курăк çинчи çеçке пек. Курăкĕ типет те, çеçки тăкăнать. Хуçа Турă сăмахĕ вара ĕмĕрлĕх. Çав сăмах вăл – сире вĕрентсе каланă сăмах.

Эй, савнă тăванăмсем! Тархаслатăп сире: чуна тыткăнлакан ӳт-пӳ аскăнлăхĕнчен пăрăнăр, ытти халăхсем хушшинче ырă туса пурăнăр... Пире çылăхран хăтарса чăнлăхшăн пурăнтарасшăн Иисус Христос Хăйĕн Ӳчĕпе çылăхăмăрсене хĕрес çине çĕкленĕ: эсир Унăн суранĕсемпе сывалнă. Эсир кĕтӳçĕсĕр, çĕтсе кайнă сурăхсем пекчĕ, халĕ вара Кĕтӳçĕ патне, хăвăр чунăрсен Сыхлавçи патне тавăрăнтăр.

Усала хирĕç усалпа, кӳрентерĕве хирĕç кӳрентерӳпе ан тавăрăр, унтан та ытла, хăвăра Турă ырăлăх пама пулнине пĕлсе тăрса, ырăлăхлă пулăр... Хуçа Туррăмăра чĕререн хисеплĕр.

Турă патне илсе пырас тесе пирĕн çылăхăмăрсемшĕн пĕрре Христос асап тӳснĕ. Унăнне, çылăхлисемшĕн Тӳрĕскерĕнне, ӳт-пĕвне вĕлернĕ, анчах Вăл чун-чĕмĕпе чĕрĕлсе тăнă... Христос ячĕшĕн сире хурлаççĕ пулсан, эсир телейлĕ, эппин сире мухтав Сывлăшĕ, Турă Сывлăшĕ витсе тăрать... Сирĕнтен камăн та пулин çын вĕлерсе, вăрласа е усал туса асапланмалла ан пултăрччĕ çеç. Христианин пулнăшăн асапланатăн пулсан вара ан вăтан, çапла шăпа пӳрнĕшĕн Турра мухта.

Халап тăрăх, Петра вĕлермелле айăпланă. Анчах та, Петр хăй тархасласа ыйтнипе, ăна хĕрес çине пуçхĕрлĕн пăталанă. Мĕншĕн тесен Петр хăйне Иисус Христос Хуçамăра пăталанă пек пăталаттарма тивĕççĕр тесе шутланă.

*ПЕТР ЯНĂ 1-МĔШ ÇЫРУ 1:18, 19, 24–25; 2:11–12, 24–25; 3:9, 15, 18; 4:14–16*



# ИОАНН АПОСТОЛĂН ВИÇĔ ÇЫРĂВĔ

Авалхи халапсем тăрăх, турсăмахçăсем шухăшланă тăрăх, çак виçĕ çырăва Иоанн Турсăмахçă апостол тата евангелист çырнă. Иоанн пĕлтернĕ Ырă Хыпарти тата çак виçĕ çырури тĕп сăмах – юрату.

Иоанн янă Пĕрремĕш Çырăвăн тĕп шухăшĕсем çаксем: юрату, Турăпа пурăнасси, савăнăç, ĕненĕвĕн çĕнтерекен вăй-хăвачĕ, пурăнăç тупсăмĕ. Акă çак Çырури хăш-пĕр ӳкĕтсем: **сутăра пурăнасси çинчен**: «Енчен те эпир, Турă çутăра çӳренĕ евĕрлех, çутăра çӳретпĕр пулсан, эппин пĕр-пĕринпе хутшăнса пурăнатпăр. Эппин Унăн Ывăлĕн, Иисус Христосăн, Юнĕ пире тĕрлĕ çылăхран тасатать. Кам хăйне çутăра çӳретĕп тет, анчах ĕненекен тăванне юратмасть, çав тĕттĕмрен тухман-ха»; **çак тĕнчене хакласси çинчен**: «Тĕнчене те, тĕнчере пуррине те ан юратăр. Тĕнчене юратакан çын Атте Турра юратмасть. Мĕншĕн тесен тĕнчере пурри йăлтах: ӳт-пӳ хистени те, куç илĕртни те, пурăнан пурăнăçри мăнкăмăллăх та – Атте Турăран мар, çак тĕнчерен. Тĕнче те пĕтет, тĕнче илĕртĕвĕсем те пĕтеççĕ, Турă ирĕкне пурнăçлакан вара ĕмĕр-ĕмĕр пурăнать»; **антихрист çинчен**: «Иисус вăл Çăлакан пулнине йышăнман çын та суеçĕ пулмасан, тата кам суеçĕ пулĕ? Çавнашкал çын – антихрист. Вăл Атте Турра та, Ывăлне те йышăнмасть. Ывăлне йышăнман çыннăн Ашшĕ те çук. Ывăлне ĕненекенĕн вара Ашшĕ пур»; **Çăлаканăмăр Иисус çинчен**: «Христос çылăхăмăрсене Хăй çине илмешкĕн килнине, Унра çылăх çуккине эсир пĕлетĕр ĕнтĕ. Ăна ĕненсе пурăнакан кирек кам та çылăха кĕмест»; **юрату çинчен**: «Турă пире юратни çакăнтан палăрать: Ывăлĕ урлă пирĕн чĕрĕлĕх илмелле пултăр тесе, Турă тĕнчене Хăйĕн пĕртен-пĕр Тăван Ывăлне янă. Турă вăл – юрату; юратуллă пурăнакан Турăра пурăнать, Турă та унра пурăнать. Турă пире маларах юратма пуçланă, çавăнпа та Ăна юратар. Иисус вăл Çăлакан тесе ĕненекен кашни çын Турă ачи пулать, Турă пил-хушăвĕсене пурнăçлани вара Ăна юратни пулать; Унăн пил-хушăвĕсене пурнăçлама йывăр мар»; **суя пророксем çинчен**: «Турă Сывлăшне ааштаракан сывлăшран çапла уйăрса илĕр: Иисус вăл ӳтленсе килнĕ Çăлакан пулнине йышăнакан кирек епле Сывлăш та – Турăран. Иисус вăл çĕр çине ӳтленсе килнĕ Çăлакан пулнине йышăнман кирек епле сывлăш та – Турăран мар, вăл антихрист сывлăшĕ»; **ĕмĕрлĕх пурăнăç çинчен**: «Эпĕ сирĕн патăра, Турă Ывăлне ĕненекенсем патне, çакна çырса яратăп: Турă Ывăлне ĕненсен ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пуласса пĕлсе тăрăр».

*ИОАНН ЯНĂ 1-мĕш ÇЫРУ*



## ИУДА ЯНӐ ҪЫРУ

Ку ҫырӑва Матфей пӗлтернӗ Ырӑ Хыпарта *(13:55)* асӑннӑ Иуда апостол ҫырни пирки никам та иккӗленмест.

Иуда христиансене «Турра хисеплекен ҫынсене пӗрре панӑ ӗненӳшӗн кӗрешме» ӳкӗтлет. Авалхи Килӗшӳрен илнӗ тӗслӗхсемпе Иуда ӗненекенсене ҫылӑхлисем пек пулмалла марри пирки асӑрхаттарать: «Ҫакна эсир пӗлетӗр пулин те, сире татах асилтерес тетӗп: Турӑ Хӑйӗн халӑхне Египет ҫӗрӗнчен илсе тухса ҫӑлса хӑварнӑ, анчах та ӗненес теменнисене кайран пӗтернӗ. Тата хӑйсен тивӗҫлӗхне упраса хӑварайман, хӑйсен вырӑнӗнчен пӑрахса кайнӑ ангелсем ҫинчен асилтерес тетӗп: Турӑ вӗсене аслӑ суд кунӗ ҫитиччен сӗм тӗттӗмлӗхре сӑнчӑрласа усрать. Тата эпӗ сире Содомпа Гоморра ҫинчен, вӗсем ҫывӑхӗнчи ытти хуласем ҫинчен асилтерес тетӗп. Турӑ вӗсем ҫине, ыттисемшӗн тӗслӗх пултӑр тесе, юттисемпе аскӑнланса-ясарланса пурӑннӑшӑн сӳнми вут асапне янӑ. Ӳт-пӗве ирсӗрлетекен, ҫӳлти ангелсене хурлакан ҫынсемпе те ҫавнашкалах пулӗ. Вӗсем хӑйсем пӗлменнине хурлаҫҫӗ; ӑссӑр выльӑхла, ӳт-пӳ хистенине кӑна пӗлеҫҫӗ, ҫавӑ вӗсене тӗп тӑвать те».

Ҫакнашкал Турӑсӑр ҫулпа кайнине хирӗҫлесе, Иуда апостол ӗненӳпе пурӑнма ҫапла ӳкӗтлет: «Эсир вара, савнӑ тӑванӑмсем, сӑваплӑ ӗненӳре хӑвӑра ҫирӗплетӗр, Турӑ Сывлӑшӗпе килӗшӳллӗн кӗлтӑвӑр. Хӑвӑра Турӑ юратнине астуса пурӑнӑр, ырӑлӑхлӑ Иисус Христос Хуҫамӑр ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ парасса кӗтӗр. Пӗрисене, ӗненӳ пирки иккӗленекенсене, хӗрхенсе ӳкӗтлӗр. Теприсене, ӗмӗрлӗх вутпа хӑратса, вутран туртса кӑларӑр, ҫӑлса хӑварӑр. Тата теприсене вара асӑрханса питлемелли кӑна юлать. Вӗсен ҫылӑхлӑ ӳт-пӗвӗпе вараланнӑ тумтирӗнчен те йӗрӗнӗр».

Ҫыру Турра мухтаса каланӑ чаплӑ сӑмахсемпе вӗҫленет: «Сире ӳкесрен упраса хӑварма, таса та савӑнӑҫлӑскерсене Хӑйӗн мухтавӗ умне тӑратма пултаракан Иисус Христос Хуҫамӑр урлӑ хамӑра ҫӑлнӑ Пӗртен-пӗр Ӑслӑран та Ӑслӑ Турӑ ӗмӗрсемччен те, халӗ те, ӗмӗр-ӗмӗрех мухтавлӑ, аслӑ, хӑватлӑ, вӑйлӑ пултӑр. Аминь».



## ПАВЕЛ АПОСТОЛ ÇЫРĂВĔСЕМ

Çĕнĕ Килĕшĕве Павел апостолăн 13 çырăвĕ кĕнĕ. Ку çырусене вăл Рим, Коринф, Ефес, Филиппы, Колоссы, Фессалоники хулисенче, Галати тăрăхĕнче пурăнакан христиансем патне янă. Тата Тимофей, Тит, Филимон ятлă юлташĕсем патне янă çырусем те пур. (Йăлана кĕнĕ тăрăх, Еврейсем патне янă Çырăва та Павел çырнă тесе шутлаççĕ.)

Павел çырăвĕсем Çĕнĕ Килĕшĕвĕн тăваттăмĕш пайĕ чухлĕ. Паллах, апостол çырăвĕсен Турă уçса панă пĕтĕм пуянлăхне темиçе листара çырса кăтартма çук. Ку кĕнекере эпир Павел апостолăн хăш-пĕр çырăвĕсене кăна пăхса тухатпăр.

### ЮРАТУ

«Турă вăл – юрату», – тесе вĕрентет Библи. Коринфсем патне янă Пĕрремĕш Çырăвĕнче Павел апостол юрату пирки çапла çырать:

> «Эпĕ этем чĕлхипе калаççан та, ангел чĕлхипе калаççан та, хам юратусăр пулсан, эппин эпĕ – янăракан чан, чăнкăртатакан кимвал çеç.
>
> Манăн пророк пултарулăхĕ пур пулсан та, пĕтĕм вăрттăннине тата пытарăнса тăраканнине пĕлетĕп пулсан та, тусене вырăнтан куçармалăх çирĕп ĕненӳллĕ пулсан та, хам юратусăр пулсан, эппин эпĕ ним тĕшне те тăмастăп.
>
> Хамăн мĕн пуррине йăлтах валеçсе пĕтерсен те, ӳт-пĕвĕме вута пăрахма парсан та, хам юратусăр пулсан, эппин мана çавăнтан ним усси те пулас çук...»

Юрату вăл – Иисус Христос вĕрентĕвĕн тĕшши. Иисус çапла каланă: «„Хăвăн Турруна пĕтĕм чĕререн, пĕтĕм чунран, пĕтĕм ăс-халтан юрат“. Çакă – чи малтанхи, чи аслă пил-хушу. Иккĕмĕш пил-хушăвĕ те çавăн евĕрлех: „Çывăх çыннуна хăвна юратнă пек юрат“. Моисей саккунĕпе пророксен вĕрентĕвĕ пĕтĕмпех çак икĕ пил-хушу çинче никĕсленсе тăрать» *(Матфей 22:37–40)*.

Акă Турă юратăвĕ çинчен Иисус каланă сăмахсем: «Тĕнчене питĕ юратнăран Турă Хăйĕн пĕртен-пĕр Тăван Ывăлне панă. Çакна Вăл ĕненекенĕсем ан пĕтчĕр тесе, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулччăр тесе тунă» *(Иоанн 3:16)*.

# ЮРАТУ

*«Юрату ҫирӗп тӳсӗмлӗ,*
*хӗрхенӳллӗ;*
*юрату кӗвӗҫмест,*
*вӗҫкӗнленмест, мӑнкӑмӑлланмасть,*
*сӗмсӗрленмест, хӑйшӗн кӑна тӑрӑшмасть,*
*тарӑхмасть, усаллине асра тытмасть,*
*суяшӑн мар,*
*чӑнлӑхшӑн савӑнать.*
*Юрату йӑлтах каҫарать, пурне те ӗненет,*
*яланах шанать, теме те тӳссе ирттерет.*
*Юрату нихҫан та пӗтмӗ...*
*Ӗнтӗ ҫаксем виҫҫӗшӗ:*
*ӗненӳ, шанчӑк, юрату –*
*ӗмӗр-ӗмӗр пулӗҫ,*
*анчах та аслӑрӑххи – юрату».*

**Коринфсем патне янӑ 1-мӗш Ҫыру 13:4–13**

## «ӲТ-ПӲ ӖҪӖСЕМ» ТАТА «ЧУН-ЧӖМ ҪИМӖҪӖСЕМ»

Иисус Христос Хуҫамӑр Хӑйӗн вӗренекенӗсене ҫапла каланӑ: «Эпӗ – иҫӗм ҫырли авӑрӗ, эсир – туратсем. Эпӗ сирӗнте пулнӑ пекех, кам та кам Манра, ҫавӑ нумай ҫимӗҫ парӗ. Мансӑр эсир нимӗн те тӑваймӑр». Ту ҫинче вӗрентсе каланӑ чухне Иисус ҫакнашкал тӗслӗх илсе панӑ: «Суя пророксенчен асӑрханӑр. Вӗсем сирӗн патӑра сурӑх тирӗ витӗнсе пыраҫҫӗ, анчах ӑшӗсенче хӑйсем – тискер кашкӑрсем. Вӗсене эсир ӗҫӗсенчен пӗлӗр. Кӳкен йывӑҫҫи ҫинчен – иҫӗм ҫырли, куршанак ҫинчен смоква татни пур-и? Лайӑх йывӑҫ ырӑ ҫимӗҫех тӑвать, начар йывӑҫӑн ҫимӗҫӗ те япӑх».

Галатсем патне янӑ Ҫырура Павел апостол «ӳт-пӳ ӗҫӗсем» тата «чун-чӗм ҫимӗҫӗсем» ҫинчен ҫырать: «Ӳт-пӳ ӗҫӗсем паллӑ ӗнтӗ. Вӗсем ҫаксем: упӑшкипе арӑмӗ пӗр-пӗрне улталани, ҫилленни, аскӑнлӑх, ирсӗрлӗх, намӑссӑрлӑх, кӗлеткесене пуҫҫапни, тухату, вӑрҫу-хирӗҫӳ, харкашу, кӗвӗҫӳ, кӑра ҫилӗлӗх, ятлаҫу, тавлашу, (илӗртӳ), ӗненӳ тӗлӗшӗнчен пайланса кайни, курайманлӑх, ҫынна вӗлерни, ӗҫке ерни, ӳсӗрле хӑтланкаларӑшсем тата ҫавнашкал тем те пӗр. Эпӗ сире малтан та асӑрхаттарнӑччӗ, халӗ татах калам: ҫавнашкал пурӑнакансем Турӑ Патшалӑхӗн еткерне илеймӗҫ. Чун-чӗм ҫимӗҫӗсем вара ҫаксем: юрату, савӑнӑҫ, канӑҫлӑх, чӑтӑмлӑх, тивлетлӗх, ыркӑмӑллӑх, ӗненӳ, йӑвашлӑх, чараклӑх».

*ГАЛАТСЕМ ПАТНЕ ЯНӐ ҪЫРУ 5:19–23; МАТФЕЙ 7:15–17; ИОАНН 15:5–6*



# ТИМОФЕЙ ЯТЛĂ ÇАМРĂК

Павел тĕн сармалли иккĕмĕш çулçӳревĕнче Дервипе Листрăна çитсен, унта Тимофей ятлă çамрăк христианина тĕл пулнă. Унăн амăшĕ, Евника, Христоса ĕненекен еврей хĕрарăмĕ пулнă, ашшĕ – грек. Унăн Лоида асламăшĕ те Христоса ĕненекенскер пулнă. Лука евангелист пекех, Тимофей Павел апостолăн яланхи юлташĕ пулса тăнă. Вăл Павелпа пĕрле Македонине, Грецине, Кĕçĕн Азине тата Рима та çитнĕ. Халап тăрăх, Павела Римра вĕлернĕ хыççăн Тимофей Ефесри ĕненекенсен пысăк ушкăнне ертсе пынă. Рим императорĕсенчен пĕри христиансене хĕсĕрленĕ чухне вара Тимофея та асаплантарса вĕлернĕ.

Павел апостол Тимофей патне икĕ çыру янă. Çырусенчи хăш-пĕр паллăрах шухăшсем çаксем: **мĕн пур çынсемшĕн кĕлтăвасси**: «Чи малтанах эпĕ сана çакна каласшăн: мĕн пур çынсемшĕн Турра кĕлтăвăр, тархаслăр, йăлăнăр, тав тăвăр. Хамăрăн лăпкăн та канăçлăн, Турра хисеплесе, тасан пурăнмалла пултăрччĕ тесе, патшасемшĕн те, мĕн пур пуçлăхсемшĕн те кĕлтăвăр. Çапла туни Турăшăн, Çăлаканăмăршăн аван, юрăхлă». **Шуйттан вĕрентĕвĕсем çинчен**: «Юлашки вăхăтсенче хăшĕ-пĕрисем ĕненме пăрахасси çинчен Сывлăш уççăнах калать. Вĕсем аташтаракан сывлăшсене итлĕç, усалсен вĕрентĕвĕсем хыççăн кайĕç». **Пуянлăх çинчен**: «Пĕтĕм инкек-синкек сăлтавĕ – мула юратни. Хăшĕ-пĕри, мул хыççăн хăваласа, ĕненĕвĕн тĕрĕс çулĕнчен пăрăнса кайрĕç те хăйсене валли хăйсемех нумай хуйхă тупрĕç. Эсĕ вара, Туррăн çынни, унашкаллинчен пăрăнса çӳре; тӳрĕлĕх, Турра хисеплени, ĕненӳ, юрату, чăтăмлăх, йăвашлăх патне ăнтăл». **Ĕненӳшĕн чыслăн кĕрешесси çинчен**: «Эсĕ ĕненӳшĕн чыслăн кĕреш. Христоса ĕненнине эсĕ нумай çын умĕнче каласа çирĕплетнĕччĕ, сана ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пулма ун чухнех суйласа илнĕ. Çавăнпа та ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пуласчĕ тесе тăрăш». **Турăшăн тĕрĕс ĕçлесе тăрасси çинчен**: «Турра хисеплессине аталантар. Ĕненекенсем санăн сăмахна, пурăнăçна, юратăвна, чун-чĕмне, ĕненĕвне, тасалăхна тĕслĕх вырăнне хуччăр. Эсĕ çынсене Çырнине вуласа пар, ӳкĕтле, вĕрент».

Тимофей патне янă Иккĕмĕш Çырăвне Павел тĕрмере, вĕлерес умĕн çырнă тесе шутлаççĕ: «Паттăррăн кĕрешрĕм, пурăнăç çулне вĕçлерĕм, ĕненĕве упраса хăвартăм. Халĕ мана валли çĕнтерӳçĕн сăваплă пуçкăшăлне хатĕрлеççĕ, тӳрĕ Суд тăвакан Турă мана ăна тăхăнтартĕ. Пуçкăшăлне Вăл мана кăна мар, Хăй тепре килессе савăнса кĕтекенсене пурне те парĕ».

*ТИМОФЕЙ ПАТНЕ ЯНĂ 1-МĔШПЕ 2-МĔШ ÇЫРУСЕМ*



## «ХУÇАМĂР ПĔРРЕ, ЁНЕНӲ ПĔРРЕ, ШЫВА КĔНИ ТЕ ПĔРРЕ...» ÇЫРУСЕНЧИ ЙĔРКЕСЕМ

Пурте çылăха кĕнĕ, Турă мухтавне пĕри те тивĕçлĕ мар. *(Римсем патне янă Çыру 3:23)*

Çылăхшăн вилĕмпе тӳлес пулать, хамăр Хуçамăр Иисус Христосри ĕмĕрлĕх пурăнăç вара – Турă парни. *(Римсем патне янă Çыру 6:23)*

Турă пĕрре, этемпе Турă хушшинче Тăраканни те – Иисус Христос çын – пĕрре. *(Тимофей патне янă 1-мĕш Çыру 2:5)*

Христос пирĕн çылăхсемшĕн вилнĕ. *(Коринфсем патне янă Çыру 15:3)*

Енчен те эсĕ чĕлхӳ-çăварупа Иисуса Çăлакан тесе йышăнатăн пулсан, чĕрӳпе Турă Ăна вилĕмрен чĕртсе тăратнине ĕненетĕн пулсан – çăлăнăн. *(Римсем патне янă Çыру 10:9)*

Хĕрес пирки вĕрентни вăл пĕтекеннисемшĕн – ăссăрлăх, пирĕншĕн вара, çăлăнаканнисемшĕн – Турă хăвачĕ. *(Коринфсем патне янă 1-мĕш Çыру 1:18)*

Сыхă пулăр, ĕненӳре çирĕп пулăр, хастар та тĕреклĕ пулăр. *(Коринфсем патне янă 1-мĕш Çыру 16:13)*

Эпĕ Христосăн Ырă Хыпарне вĕрентме вăтанмастăп; мĕншĕн тесен Ырă Хыпар – мĕн пур ĕненекенсене çăлăнăç кӳмелли Турă вăй-хăвачĕ. *(Римсем патне янă Çыру 1:16)*

Ан улталанăр: Турра хур тума çук. Çын мĕн акĕ, çавна вырса илĕ. *(Галатсем патне янă Çыру 6:7)*

Кирек епле ӳт-пӳ те – курăк пек, çыннăн кирек епле чапĕ те – курăк çинчи çеçке пек; курăкĕ типет те, çеçки тăкăнать. *(Петр янă 1-мĕш Çыру 1:24)*

Пирĕн пурин те Христос сучĕ умне тăмалла; ӳтпе пурăннă чух хамăр мĕн тунă: ырă тунă-и, усал тунă-и, пурсăмăрăн та çавна кура тивĕçлине илмелле. *(Коринфсем патне янă 2-мĕш Çыру 5:10)*

Çапла вара, пирĕнтен кашниех харпăр хăйшĕн Турă умĕнче явап тытĕ. *(Римсем патне янă Çыру 14:12)*

Эсир паян Турă сассине илтес пулсан, еврейсем Ăна пуш хирте ӳпкелешнĕ чухнехи пек чĕрĕрсене ан хытарăр. *(Еврейсем патне янă Çыру 3:15)*

Хуçамăр пĕрре, ĕненӳ пĕрре, шыва кĕни те пĕрре. *(Ефессем патне янă Çыру 4:5)*



# ИОАНН ТУРСĂМАХÇĂНА МАЛАШНЕХИ УÇĂЛНИ (АПОКАЛИПСИС)

Эпир пурăнакан Çĕр яланах пулмĕ. Библире, тĕрлĕ тĕлте, вăхăт вĕçленесси çинчен пророкла каланисене вулама пулать. Уйрăмах ун пирки Библин юлашки кĕнекинче, Иоанн Турсăмахçăна Малашнехи Уçăлни (Апокалипсис) ятлăскерĕнче, çырса кăтартнă.

Иоанн вăл Иисус Христосăн вун икĕ апостолĕнчен пĕри пулнă. Авалхи халап тăрăх, Иоансăр пуçне ытти апостолсене пурне те асаплантарса вĕлернĕ. Анчах Иоанăн та Христосшăн асап тӳсме тивнĕ, ăна Патмос ятлă Греци утравĕ çине пуç янă. Унта ăна Хуçамăр курăнса çапла каланă: «Эпĕ – Альфа тата Омега, Малтанхи тата Кайранхи, хăвна мĕн курăннине кĕнекелесе çыр та чиркӳсене ярса пар» *(Малашнехи Уçăлни 1:10–11)*.

Малашнехи Уçăлни кĕнекере вăхăт вĕçленнĕ чухнехи пулăмсем çинчен пророкла каланине ытарлă паллăсемпе çырса кăтартнă: çичĕ чиркĕве янă çырусем, çичĕ пичет, тăватă юланут, çичĕ труба, Турă çиллин çичĕ курки, Армагеддон, пурăнăç кĕнеки, тискер кайăк хисепĕ – 666, Вавилон – аскăнран та аскăн хĕрарăм, çичĕ пуçлă та вунă мăйракаллă тискер кайăк, вунă патша, пинçуллăх патшалăх, Çĕнĕ Иерусалим, хаклă йышши чулсем, пурăнăç йывăççи...

Апокалипсис кĕнекинче ăнлантарса пама çук вăрттăнлăхсем тăп-туллиех. Анчах та пĕр япала çинчен уççăнах калама пулать: Иисус Христос Хуçамăр çĕр çине каллех килĕ те тĕнчене суд тăвĕ. Вăл Иккĕмĕш хут килессе малтанхи христиансем кĕтнĕ, эпир те кĕтетпĕр.

Çичĕ чиркĕве янă çыруран пĕрне вуласа пăхар-ха. Çак çичĕ чиркӳ Апокалипсиса çырнă чухнех пулнă, анчах та унта янă çырусем – Чиркӳ пуласлăхĕ пирки те. Çак çырури хăш-пĕр сăмахсем, тен, пире те пырса тивеççĕ.



## «АЛĂК УМĔНЧЕ ШАККАСА ТĂРАТĂП»

Малашнехи Уçăлни кĕнекинче Иоанн Турсăмахçă çапла çырать:

Шанчăклă та чăн çирĕплетсе калакан Аминь, Турă пултарнин Пуçламăшĕ, çапла калать: «Санăн ĕçӳсене пĕлетĕп; эсĕ сивĕ те мар, вĕри те мар. Ах, эсĕ сивĕ е вĕри пулинччĕ! Анчах та эсĕ сивĕ те мар, вĕри те мар, лĕп пулнăран Эпĕ сана Хамăн чĕлхе-çăварăмран кăларса пăрахăп. „Çитменни ман нимĕн те çук, эпĕ пуйрăм, эпĕ пуян“, – тетĕн эсĕ. Ху вара телейсĕр те мĕскĕн, кĕлмĕç, суккăр, çаппа-çарамас пулнине те пĕлместĕн. Эпĕ сана акă мĕнле канаш паратăп: пуяс тетĕн пулсан, Манран вутпа тасалнă ылтăн туян. Хăвăн намăсна, çарамаслăхна пытармашкăн вара Манран шурă тумтир туянса тăхăн. Куçна вара, куракан пултăр тесе, куç эмелĕ сĕр. Эпĕ кама кăмăллатăп, çавна питлетĕп, айăплатăп. Çавăнпа чунна çунтар, ӳкĕн.

Акă, Эпĕ алăк умĕнче шаккаса тăратăп. Кам Манăн сассăма илтсе алăкне уçĕ, Эпĕ ун патне кĕрĕп те унпа пĕрле тăванлăх апачĕ çийĕп, Манпа пĕрле вăл та çийĕ.

Çĕнтерекене Эпĕ Хампа юнашар престолăм çине ларма ирĕк парăп. Эпĕ Хам та, çавнашкалах çĕнтерсе, Аттемпе юнашар Унăн престолĕ çине лартăм. Турă Сывлăшĕ чиркӳсене мĕн каланине илтме хăлха пурри илттĕр».

*МАЛАШНЕХИ УÇĂЛНИ 3:14–22*



## «ÇĔНĔ ТӐ́ПЕПЕ ÇĔНĔ ÇĔР»

Апокалипсис вĕçнелли темиçе сыпăкра юлашки суд çинчен, çĕнĕ тӳпепе çĕнĕ çĕр çинчен ытарлăн çырса кăтартнă.

Унтан эпĕ пысăк шурă престол тата ун çинче Ларакана куртăм. Вăл пуртан çĕрпе пĕлĕт те çухалчĕ: вĕсем валли вырăн юлмарĕ. Вара эпĕ вилнисем, аслисемпе кĕçĕннисем те, Турă умĕнче тăнине куртăм. Çавăнтах уçса хунă кĕнекесем пурччĕ. Пурăнăç кĕнеки те уçăччĕ. Вара вилнисене кĕнекесенче çырнине кура, кашнинех харпăр хăй ĕçне кура, суд турĕç. Тинĕс хăй ăшĕнчи вилнисене пачĕ, вилĕмпе тамăк та вилнисене пачĕç, кашнинех ĕçĕсене кура суд турĕç.

Унтан эпĕ çĕнĕ тӳпепе çĕнĕ çĕре куртăм, мĕншĕн тесен ĕлĕкхи тӳпепе çĕр те, тинĕс те çукчĕ ĕнтĕ. Вара эпĕ, Иоанн, сăваплă хулана – çĕнĕ Иерусалима – куртăм. Вăл çӳлтен, Турă патĕнчен анатчĕ. Хăйне, çураçнă хĕре тирпейлесе тумлантарнă пек, хатĕрленĕ. Çав самантрах тӳперен çапла калакан вăйлă сасă илтрĕм: «Акă, кĕлĕ чатăрĕ, Туррăн çынсем хушшинче пурăнмалли вырăнĕ. Малашне Вăл çынсемпе пурăнĕ, вĕсем Унăн халăхĕ пулĕç, Вăл вара вĕсен Турри пулĕ. Турă вĕсен куçĕнчи кирек епле куççульне те шăлса ярĕ. Текех ĕнтĕ вилĕм те, йĕрӳ-макăру та, чир-чĕр те пулмĕ, мĕншĕн тесен ĕлĕкхи йăлтах иртсе кайнă».

Вара престол çинче Ларакан: «Акă, пĕтĕмпех çĕнни пултаратăп!» – терĕ. Унтан Вăл мана: «Çак сăмахсем тĕрĕссине, чăннине çырса хур!» – терĕ. «Пурнăçланчĕ! – терĕ Вăл Мана. – Эпĕ – Альфа тата Омега, пуçламăшĕ тата вĕçĕ. Ăшĕ хыпнине çăлкуçăмри чĕрĕлĕх шывне ахалех ĕçме ирĕк парăп. Çĕнтерекен пĕтĕмпех еткерлĕхе илĕ, Эпĕ унăн Турри пулăп, вăл Манăн ывăлăм пулĕ. Анчах та хăракансем, шанчăксăррисем, ирсĕрсем, çын вĕлерекенсем, аскăнсем, асамçăсем, кĕлеткесене пуççапакансемпе мĕн пур суеç таврашĕ те хăйсен вырăнне кӳкĕрт çунакан вутлă кӳлĕре тупĕç. Ку – иккĕмĕш вилĕм пулĕ».

Хулана çутатмашкăн хĕвел те, уйăх та кирлĕ мар, ăна Турă мухтавĕн çути çутатать, унăн çутаткăçĕ – Путек.

Хулана таса марри нимĕн те кĕреймĕ, ирсĕрлĕхпе суялăха парăннисем те нихăшĕ те кĕреймĕç. Путекĕн пурăнăç кĕнекине çырса хунисем кăна унта кĕрейĕç.

*МАЛАШНЕХИ УÇĂЛНИ 20:11–13; 21:1–8, 23, 27*



## БИБЛИН ЮЛАШКИ ЛИСТИ

Сăваплă Çырни, Библи, Турă Ывăлĕ Иисус Христос Иккĕмĕш хут килесси çинчен пророкла каланипе вĕçленет. Иоанн Турсăмахçăна Малашнехи Уçăлни вĕçне – Библин юлашки листине вулар-ха:

Вара ангел мана çапла каларĕ: «Çак кĕнекери пророкла сăмахсене пытарса, пичет хурса ан усра, мĕншĕн тесен вăхăт çывăх ĕнтĕ. Усал тăвакан усал тусах пурăнтăр, ирсĕрри татах ирсĕрлентĕр. Сăваплă пурăнакан сăваплах пурăнтăр. Акă, Эпĕ часах пырăп. Кашнинех харпăр хăй ĕçĕшĕн тавăрса памашкăн тавăрăвăм Хампа пĕрлех.

Эпĕ – Альфа тата Омега, пуçламăшĕ тата вĕçĕ, малтанхи тата кайранхи. Унăн пил-хушăвĕсене тытса пыракансем телейлĕ. Вĕсем пурăнăç йывăççине те, хулана хапхаран кĕме те тивĕçлĕ пулĕç. Усал йытăсемпе тухатмăшсем, аскăнсемпе çын вĕлерекенсем, кĕлеткесене пуççапакансем, тĕрĕсмарлăха юратса тĕрĕс мар пурăнакансем вара тулашĕнче юлĕç.

Эпĕ, Иисус, сире çакна чиркӳсенче каласа пĕлтермешкĕн Хамăн ангелăма ятăм. Эпĕ – Давид йăрăвĕн никĕсĕ тата тăхăмĕ, ирхи çутă çăлтăр.

„Килсем!“ – теççĕ Турă Сывлăшĕ те, Путекĕн çураçнă хĕрĕ те. „Килсем!“ – тетĕр çакна итлекенĕ те. Ăш хыпни те, кăмăл тăваканни те килтĕр те чĕрĕлĕх шывне ахалех илтĕр».

Çак кĕнекери пророкла сăмахсене итлекен кашни çыннах эпĕ те çирĕплетсе калатăп: кам та кам çак сăмахсем çумне урăххи хушать, Турă ун çине çак кĕнекере çырса кăтартнă инкексене ярать. Кам та кам çак кĕнекери пророкла сăмахсенчен хăшне те пулин кăларса пăрахать, Турă ăна пурăнăç кĕнекине те, сăваплă хулана та (вĕсем пирки çак кĕнекере çырнă) кĕртмĕ. Çакăн çинчен Иисус çирĕплетсе пĕлтерет. «Ĕнтĕ часах пырăп! Аминь», – тет Вăл.

Килсемччĕ, Иисус Хуçамăр! Сире пурсăра та Иисус Христос Хуçамăрăн тивлечĕ пултăр. Аминь.

*МАЛАШНЕХИ УÇĂЛНИ 22:10–21*

Καὶ λέγει μοι, Μὴ σφραγίσῃς τοὺς λόγους τῆς προφητείας τοῦ βιβλίου τούτου, ὁ καιρὸς γὰρ ἐγγύς ἐστιν. ὁ ἀδικῶν ἀδικησάτω ἔτι καὶ ὁ ῥυπαρὸς ῥυπανθήτω ἔτι καὶ ὁ δίκαιος δικαιοσύνην ποιησάτω ἔτι, καὶ ὁ ἅγιος ἁγιασθήτω ἔτι.

Ἰδοὺ ἔρχομαι ταχύ, καὶ ὁ μισθός μου μετ᾽ ἐμοῦ ἀποδοῦναι ἑκάστῳ ὡς τὸ ἔργον ἐστὶν αὐτοῦ. ἐγὼ τὸ Ἄλφα καὶ τὸ Ὦ, ὁ πρῶτος καὶ ὁ ἔσχατος, ἡ ἀρχὴ καὶ τὸ τέλος.

Μακάριοι οἱ πλύνοντες τὰς στολὰς αὐτῶν, ἵνα ἔσται ἡ ἐξουσία αὐτῶν ἐπὶ τὸ ξύλον τῆς ζωῆς καὶ τοῖς πυλῶσιν εἰσέλθωσιν εἰς τὴν πόλιν. ἔξω οἱ κύνες καὶ οἱ φάρμακοι καὶ οἱ πόρνοι καὶ οἱ φονεῖς καὶ οἱ εἰδωλολάτραι καὶ πᾶς φιλῶν καὶ ποιῶν ψεῦδος.

Ἐγὼ Ἰησοῦς ἔπεμψα τὸν ἄγγελόν μου μαρτυρῆσαι ὑμῖν ταῦτα ἐπὶ ταῖς ἐκκλησίαις. ἐγώ εἰμι ἡ ῥίζα καὶ τὸ γένος Δαυίδ, ὁ ἀστὴρ ὁ λαμπρὸς ὁ πρωϊνός.

Καὶ τὸ πνεῦμα καὶ ἡ νύμφη λέγουσιν, Ἔρχου. καὶ ὁ ἀκούων εἰπάτω, Ἔρχου. καὶ ὁ διψῶν ἐρχέσθω, ὁ θέλων λαβέτω ὕδωρ ζωῆς δωρεάν.

Μαρτυρῶ ἐγὼ παντὶ τῷ ἀκούοντι τοὺς λόγους τῆς προφητείας τοῦ βιβλίου τούτου· ἐάν τις ἐπιθῇ ἐπ᾽ αὐτά, ἐπιθήσει ὁ θεὸς ἐπ᾽ αὐτὸν τὰς πληγὰς τὰς γεγραμμένας ἐν τῷ βιβλίῳ τούτῳ,

καὶ ἐάν τις ἀφέλῃ ἀπὸ τῶν λόγων τοῦ βιβλίου τῆς προφητείας ταύτης, ἀφελεῖ ὁ θεὸς τὸ μέρος αὐτοῦ ἀπὸ τοῦ ξύλου τῆς ζωῆς καὶ ἐκ τῆς πόλεως τῆς ἁγίας τῶν γεγραμμένων ἐν τῷ βιβλίῳ τούτῳ.

Λέγει ὁ μαρτυρῶν ταῦτα, Ναί, ἔρχομαι ταχύ. Ἀμήν, ἔρχου κύριε Ἰησοῦ.

Ἡ χάρις τοῦ κυρίου Ἰησοῦ μετὰ πάντων.

Ἀποκάλυψις 22:10–21



ИЕРУСАЛИМ. ЕЛЕОН ТĂВĔ ÇИНЧЕН ПĂХСАН (хĕвел тухăç енчен)
Соломонăн Турă Çурчĕ пулнă вырăн. Халĕ кунта Омар мечечĕ.



ИЕРУСАЛИМ ТАТА ЕЛЕОН ТĂВĔ (хĕвел анăç енчен)
*Хула патне çывхарсан Иисус хула шăпишĕн хурланса йĕрсе янă. (Лк 19:41)*



СИНАЙ ТĂВĔ

*Вара Хуçа Турă Синай тăвĕ çине, ту тăррине, аннă. Хуçа Турă Моисея ту тăррине чĕнсе илнĕ, Моисей унта хăпарнă. (Тухни 19:20)*



ТĂВАРЛĂ (ВИЛĔ) ТИНĔС

*Вĕсем пурте хальхи Тăварлă тинĕс вырăнĕнче, Сиддим айлăмĕнче, пĕр çĕре пуçтарăннă. (Пултарни 14:3)*



ФАВОР ТĂВĔ

*Çурçĕр енĕпе кăнтăр енне Эсĕ пултарнă; Фаворпа Ермон Санăн ятушăн савăнаççĕ.*
*(Пс 88:13)*



НАЗАРЕТ

*Ултă уйăх çитсен Турă татах Гавриил ангела Галилейăри Назарет хулине,*
*Давид йăхĕнчи Иосиф валли çураçнă Хĕр патне янă. Çав Хĕр Мария ятлă пулнă.*
*(Лк 1:26 – 27)*



ВИФЛЕЕМ

*"Эсӗ те, Вифлеем, Иуда ҫӗрӗ, Иудейӑн пысӑк хулисенчен нимӗнпе те кая марскер! Мӗншӗн тесен санӑн ҫыннусенчен Ҫулпуҫӗ тухӗ, Вӑл Манӑн Израиль халӑхӗн Кӗтӳҫи пулӗ". (Мф 2:6)*



ИОРДАН

*Ҫавӑн чухне, Хӑйне Иоанн шыва кӗрттӗр тесе, Иисус Галилейӑран Иордан шывӗ хӗррине пырать. (Мф 3:13)*



КАПЕРНАУМ

*Вăл Завулонпа Неффалим çĕрне, Галилея тинĕсĕ хĕрринчи Капернаум хулине, Назаретран пурăнма куçнă. (Мф 4:13)*



ГАЛИЛЕЙĂРИ КАНА

*Тепĕр икĕ кунран Галилейăри Кана хулинче туй пулнă. Унта Иисусăн Амăшĕ те пынă. (Ин 2:1)*



ИУДЕЙĂРАН САМАРИНЕ КАЯКАН ÇУЛ
*...Иисус каллех Иудейăран Галилейăна кайнă. Унăн Самари çĕрĕпе иртмелле пулнă. (Ин 4:3–4)*



ГЕННИСАРЕТ КӲЛЛИ (ГАЛИЛЕЯ ТИНĔСĔ)
*Пĕррехинче Иисус Геннисарет кӳлли хĕрринче чарăнса тăнă. Турă сăмахне итлесшĕн Ун патне халăх кĕпĕрленсе пухăннă. (Лк 5:1)*



ВИФАНИ

*Пасха çитесси ултă кун юлсан Иисус Хăй вилĕмрен чĕртсе тăратнă Лазарь пурăнакан Вифани ялне пынă. (Ин 12:1)*



РИМРИ КОЛИЗЕЙ

ÇАК ВЫРĂНТА НУМАЙ ХРИСТИАНА АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРНĔ

*Унтан эпĕ... Иисус çинчен, Турă сăмахĕ çинчен каласа пĕлтернĕшĕн пуçĕсене каснă çынсен чунĕсене куртăм. Вĕсем тискер кайăка та, унăн сăнарне те пуççапман; çамкисемпе аллисем çине çыру палли ларттарман.*

*(Малашнехи Уçăлни 20:4)*